РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТӲ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТӲ АГЕНТСТВИ
Профессиллĕ аслă пĕлӳ паракан федераллă патшалăх учрежденийĕ
«И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»

И.В. Мукина

# ЯКОВЛЕВОВЕДЕНИ
## (ăс-хакăл культурипе кăмăл-сипет урокĕсем)

## Вĕренӳ пособийĕ

Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви вĕрентӳ учрежденийĕсенче усă курма ирĕк панă

Шупашкар 2009

ББК Ч33 (2 Рос. Чув) 5-8 Яковлев. я7
М 90

Р е ц е н з е н т ы:
д-р пед. наук, профессор кафедры истории образования,
этнопедагогики и яковлевоведения Чувашского государственного
педагогического университета имени И.Я.Яковлева ***А.Е. Земляков***;
д-р пед. наук, профессор кафедры иностранных языков для технических
специальностей, директор Научно-исследовательского института
И.Н. Ульянова и И.Я.Яковлева Чувашского государственного
университета имени И.Н.Ульянова ***Н.Г. Краснов***

**Мукина И.В.**
**М90** Яковлевоведение: уроки духовной культуры и нравственного воспитания: учеб. пособие. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2009. – 236 с.

ISBN 978-5-7677-1344-8

Приводятся материалы по изучению просветительской деятельности И.Я. Яковлева и творческого использования его опыта в современной системе образования. Рассматриваются проблемы воспитания учащейся молодёжи в духе патриотизма и осмысления гражданского долга во взаимосвязи с нравственным образом жизни и формирования личности в истории и культуре чувашского народа.

Для студентов II курса факультета чувашской филологии и культуры, учителей чувашского языка и литературы, а также учащихся учебных заведений и широкого круга читателей.

Отв. редактор д-р филол. наук, профессор **В.Г. Родионов**

Утверждено Редакционно-издательским советом университета
в качестве учебного пособия

ISBN 978-5-7677-1344-8 ББК Ч33 (2 Рос. Чув) 5-8 Яковлев. я7
© Мукина И.В., 2009

# УМĔН КАЛАНИ

И.Я. Яковлев XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Раççейри паллă культура тата çут ĕç деятелĕсенчен пĕри пулнă. Вăл чăваш çырулăхĕшĕн, наци чĕлхи аталанăвĕшĕн, халăха çутта кăларассишĕн, халăх культуришĕн калама çук пысăк ĕç тунă. И.Я. Яковлевăн нумай енлĕ еткерлĕхне тĕпчекенсем хакланă тăрăх, Аслă Вĕрентекенĕмĕр чăваш халăхне ăс-хакăл, культура, экономика енĕпе вырăссемпе, Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемпе çывăхлатас тĕллевпе тунă ĕçĕсем калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăн пекех унăн халăха çутта кăларас енĕпе пурнăçа кĕртсе пынă идейисемпе нумай çулхи педагогика опытне пур енлĕн тишкерни те паянхи вĕрентӳ ĕçĕн актуаллă задачисене ăнăçлă татса пама, вĕрентекенсемпе воспитательсене теорипе практика тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ пĕлӳ илме май парать.

И.Я. Яковлевăн педагогика идейисем тата вĕрентӳ системи пирки тĕплĕнрех ăнлантарса вĕрентни, чăваш халăхĕ çутта тухасси мĕнле лару-тăрура пулса пынине тапхăрăн-тапхăрăн ăнлантарса тишкерни унăн еткерлĕхне творчествăлла хак пама хăнăхтарать, ăслăлăх тавракурăмне ӳстерме тата пулас учительсемпе воспитательсен вĕрентӳ ĕçĕнчи ăсталăхне аталантарма май парать.

Иртнĕ ĕмĕрсен пултарулăх еткерлĕхне паянхи куçпа хакласа усă курас проблема та паянхи куншăн актуаллă. Халăхăн культура еткерлĕхне тишкерни унăн ăс-хакăл аталанăвĕн историне куç умне кăларса тăратать, çавăн пекех унăн культурине, литературине, ăслăлăхне малалла аталантарма пулăшать.

И.Я. Яковлев чăвашсене çутта кăларас енĕпе ĕçлесе тăван халăхĕшĕн çакăн пек историлле пĕлтерĕшлĕ улшăнусем тунă: 1) чăвашсене çутта кăлармалли тытăма

(чăваш наци шкулĕн концепцине) йĕркеленĕ, педагогикăра тĕлĕнмелле çĕнĕлĕхсем шыраса тупса шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне пысăк пахалăхпа туса пынă, вĕренекенсене пурнăçра кирлĕ, тĕрлĕ енлĕ çирĕп пĕлӳ парса пынă, чăваш шкулĕсенче ĕçлеме чăвашран пин ытла вĕрентекен хатĕрленĕ; 2) чăвашсене ислам тĕнне йышăнса, тутарланса çухалассинчен сыхласа хăварнă, 3) çур ĕмĕр хушшинче чăваш халăхĕн наци çĕкленĕвĕ чылай çӳллĕ шая çĕкленнĕ, чăваш çырулăхĕ аталаннă, çĕнĕ литература чĕлхи никĕсленнĕ, халăх хутла пĕлесси 12 процента яхăн çитнĕ, наци интеллигенцийĕ чăмăртаннă, чăвашсен хуçалăх ĕçĕпе хăнăхăвĕ лайăхланса пынă, вĕсен йăлари культури лайăхланнă, чăваш чĕлхиллĕ литературăн тĕрлĕ енĕсен, çав шутра халăх кăмăл-сипетне тивĕçлĕ шайра тытса тăрас тĕллеве пăхăнтарнă илемлĕ литература, кĕнеке кăларас ĕç, професиллĕ наци искусствин – музыка, театр, ӳнер искусствин – пуçламăшĕ çуралнă, халăхăн наци ăнланулăхĕ çирĕпленнĕ; 4) чăваш халăхĕ ăс-хакăл, культура, экономика енĕпе вырăссемпе, Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемпе çывăхланас, Христос тĕнĕн вĕрентĕвĕсене тата вырăс культурине, вырăс чĕлхине алла илес тĕлĕшпе паллă улшăнусем пулса иртнĕ, чăваш халăхĕн обществăпа политикăри хастарлăхĕ ӳснĕ. Çавна май И.Я. Яковлевăн çулĕ халăхăн ăнĕпе пĕр шайра çураçăнса пынă.

Çапла вара Иван Яковлевич Яковлев ĕмĕр тăршшĕпех чăваш халăхĕн ертӳçи пулнине хăйĕн пархатарлă ĕçĕсемпе кăтартса панă, халăх ырлăхĕшĕн пĕтĕм чунне парса тăрăшнă, савнă, тăван чăвашĕсене пуринчен ытла юратса тăнă, пур çĕрте те хăй ертӳçĕ, вĕрентекен пулнă.

«Яковлевоведени» курсĕ шăпах çак ыйтусене тишкерсе уçса пама тивĕçлĕ. Вĕренӳ пособийĕнче палăртнă темăсене чăваш халăхĕн историйĕпе культуринче ӳссе çитĕнекен ăрăва воспитани парса Çын тăвас проблемăсемпе çыхăнтарнă. И.Я. Яковлевăн çутă сăнарĕ тăван халăх, çĕр-шыв умĕнчи яваплă тивĕçе ăнланса ĕçлемеллине кăтартса парать. Пĕтĕм çĕр-шыв исто-

рийӗнче паллӑ йӗр хӑварнӑ Аслӑ Вӗрентекенӗмӗрӗн нумай енлӗ еткерлӗхне паянхи кунччен те тивӗçлипе тишкерсе çитерейммен. Унӑн пархатарлӑ ӗçӗсем хӑй пурӑннӑ тапхӑрта паллӑ пӗлтерӗшлӗ пулнине, çавӑн пекех вӗсем хальхи вӑхӑтра пулса иртекен пулӑмсене те пысӑк витӗм кӳнине никам та хирӗçлеме пултараймасть. И.Я. Яковлевпа унӑн вӗренекенӗсем тунӑ çитӗнӳсем педагогикӑра та, шкул уçас, çырулӑха аталантарас ӗçре те пӗлтерӗшлӗ, курӑмлӑ. Эпир пӑхса тухакан темӑсене, тӗпрен илсен, çамрӑксене воспитани парас ӗçре патриотизмпа гражданла тивӗçе ӑс-хакӑлпа кӑмӑл-сипетӗн чи çӳллӗ шайӗнче аталантарма кирлине шута илсе палӑртнӑ. Вӗсен актуаллӑхӗ вӗрентӳ ӗçӗн кулленхи çивӗч ыйтӑвӗсемпе, ӳссе çитӗнекен ӑрӑва ӑс-хакӑл культурипе кӑмӑл-сипетӗн чи паха пурлӑхне тӗпе хурса воспитани парассипе çыхӑннӑ. Ку чухнехи тарӑн улшӑнусем пулса иртекен обществӑра ӑс-хакӑл культурипе, чун-чӗре пуянлӑхӗпе çыхӑннӑ пахалӑхсем хисепрен тухса пынӑ условисенче мӗн пур шайри вӗренӳпе педагогика учрежденийӗсенче вӗрентӳ программине çакӑн пек курссем кӗртни уйрӑмах кирлӗ тесе шутлатпӑр.

«Яковлевоведени» курса чӑваш филологийӗпе культура факультечӗн студенчӗсем валли туса хатӗрленӗ. Вӑл чӑваш халӑхӗн вӗрентӳ ӗçӗн историйӗпе, этнопедагогика ыйтӑвӗсемпе, чӑваш литература чӗлхин историйӗпе, вырӑс тата чӑваш чӗлхисене шайлаштарса вӗрентессипе, чӑваш чӗлхине шкулта вӗрентмелли методика дисциплинисемпе тачӑ çыхӑнса тӑрать. Пулас педагогсемпе чӑваш культура ӗçченӗсене эпир пур енлӗ тарӑн пӗлӳ пама тата пур çӗрте те творчествӑлла ӗçлемешкӗн хатӗрлеме тивӗçлӗ. Вӗсем хӑйсен ӑраскаллӑ шӑпин чӑн-чӑн хуçисем пулмалла, паянхи рынок экономикин условийӗсенче çитӗнӳ тӑвас тата халӑх историйӗнче мӗнле те пулин йӗр хӑварас тесен анлӑ тавракурӑмлӑ, аслӑ пӗлӳ илнӗ, хастар та пултаруллӑ çынсем пулмалла.

Çак вӗрентӳ пособийӗ хальхи условисенче И.Я. Яковлевӑн опычӗпе усӑ курмалли пӗрлӗхлӗ теорипе меслетлӗх палӑртса хатӗрлес ӗçре те кирлӗ пулӑшу пама тивӗçлӗ.

1 сыпăк

# И.Я. ЯКОВЛЕВĂН ЧУН ХАЛАЛĔ – ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ĂС–ХАКĂЛНЕ ТАТА КĂМĂЛ–СИПЕТНЕ АТАЛАНТАРАКАН ПИЛ

## 1.1. Халала çырнă вăхăт пирки

Халал – араб сăмахĕ. Чăвашла вăл «пехил», «ырă сĕнӳ», «ырă пил», ытти тĕрĕк чĕлхисенче «саккунлă», «таса» пĕлтерĕшсемпе çӳрет. Чăваш чĕлхинче *халал* тата *пехил* сăмахсем синонимсем пулса тăраççĕ.

***Чун халалĕ*** тенине В. Далĕн ăнлантару словарĕнче çапларах ăнлантаранă: “*Духовное завещание* или *грамота* стар. отказная, либо завещанье или *духовная* ж. письменное, законно составленное распоряжение о добре, имуществе своем на случай смерти; последняя воля” (Даль 1, 504). Ĕлĕк пуян çынсем пурте тенĕ пекех вилес умĕн чун халалĕ çыртарнă, çапла тăвиччен малтан вĕсем священника чĕнсе илнĕ, ун умĕнче чунне уçса калаçса çылăх каçарттарнă хыççăн халал çыртарнă.

И.Я. Яковлевăн Халалĕ пурлăха пайлассипе çыхăннă документ мар. Пачах урăхла, ăс-хакăл, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайра тăракан пысăк пĕлтерĕшлĕ Чун халалĕ, тăван халăхшăн хыпса çунакан çыннăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ. Чăваш халăхне çутта кăларассишĕн ырми-канми ĕçленĕ çын, хăйĕн тивлетне Турă ирĕкĕ пек ăнланса, ăруташсене таса чунлă та мал ĕмĕтлĕ пулма чĕнет, сĕнет, пиллет, ӳкĕтлет тата асăрхаттарать.

Халал çине 1921 çулхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче алă пуснă. Анчах çакă вăл Халала И.Я. Яковлев шăп çак вăхăтра çырнине пĕлтермест. Савнă чăвашсем валли чун халалĕ çырса хăварас шухăш Иван Яковлевичăн пуçĕнче 1921 çулччен чылай малтан тĕвĕленнĕ. Акă, И.Я. Яковлевăн “Манăн пурăнăç” ятпа 1997 çулта пичетленсе тухнă аса илĕвĕсен тулли кăларăмĕнче вăл çапла каланă: “Анчах халĕ шкул та, чăваш халăхĕ хăй те революци вăхăтĕнче тата ун хыççăн пулса иртнĕ пысăк улшăнусен тапхăрĕнче

христианство идеалĕсен шайĕнче тытăнса тăрайманнине куратăп. Çавăнпа та хам вилес пулсан асра тытмашкăн вунă çул каярах чăваш халăхне пехил парса çырнă халалăма хальхи саманара пичетлеме май та çук тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен эпĕ унта православи çинчен тата халĕ хисепрен тухнă, ним вырăнне хумасăр тиркекен çавнашкал ăнлавсем çинчен калатăп”. Малалла пурпĕрех çапла хушса хурать: “Çапах та хамăн тăван чăвашсен пулас ăрăвĕсене çак ĕмĕтри ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртме пехиллесе хăваратăп”.

Аса илӳсен çак йĕркисене 1918 çулта çырса хунă тесе çирĕплетме пулать. Мĕншĕн тесен аса илӳсен кĕнекинчи “Юлашки йĕркесем” текен сыпăкра (çӳлерех илсе кăтартнă сăмахсем шăпах çав сыпăкран. – *И.М.*) И.Я. Яковлев 1917 çулта пулса иртнĕ ĕçсене “пĕлтĕр” тесе аса илет: “Пĕлтĕр, 1917 çулта, манăн ырă пĕлĕш, эпĕ тахçантанпах лайăх пĕлекен Сергей Степанович Мед-ведков вилсе кайрĕ...” е тата, “Кăçалхи авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче, большевиксем Чĕмпĕре чехословаксемпе Халăх çарĕн аллинчен туртса илнĕ хыççăн, ман патма, хваттере, офицерпа темиçе салтак ухтарас тĕллевпе килсе кĕчĕç...”. Çапла вара 1918 çулта каласа кăтартнă аса илӳсенче И.Я. Яковлев чăваш халăхне вунă çул каяллах халал-пехил çырса хăварнăччĕ тесе асăнать пулсан, эпир пăхса тухакан Чун халалне пирĕн Вĕрентекенĕмĕр 1908 çултах çырнă пулса тухать. Ку вăл шăпах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнă тата Библин Çĕнĕ Сăмахне йăлтах чăвашла куçарса пĕтернĕ вăхăта ӳкет. Паллах, çав историллĕ самантра И.Я. Яковлевăн пĕтĕм чăваш халăхне, унăн пулас ăрăвĕсене ырă сунса пехиллес ĕмĕт çуралма пултарнă.

Хăйне яланах Н.И. Ильминский ĕçне малалла тăсаканĕ вырăнне хурса пурăннăскер, Николай Иванович вилес умĕн Иван Яковлевича хăй çумне чĕнсе илсе шала кайнă сассипе пехиллесе хăварнă сăмахсене пĕр самантлăха та манман: "Пĕлетĕп, Хăвăр халăхăра юрататăр эсир, вăл пуррипе мăнаçланатăр... Эсир – националист... Вырăс халăхĕ сире мĕн пуррине

йӑлтах парӗ... Турра кӗлтумаллине те хӑвӑрӑн тӑван чӗлхӗрпе парӗ, литература та парӗ. Анчах пӗртен пӗр условипе, эсир хӑвӑр та, халӑхӑр та сирӗн православи тӗнне ан пӑрахтӑр..." (Манӑн пурӑнӑç, 226). Çакна, хӑйне кура тепӗр халал-пехиле, Иван Яковлевич нихçан та асран кӑларман.

Н.И. Ильминский çапла пехилленӗ чухне парнеленӗ турӑша Иван Яковлевич мӗн куçне хупичченех чи сӑваплӑ парне вырӑнне хурса упранӑ. Кунсӑр пуçне тата Атӑлпа Урал хушшинчи йышлӑ халӑхсене Христос тӗнне вӗрентсе çутӑлтарас ӗçре çул уçса тата кӑтартса пынӑ паллӑ миссионер Н.И. Ильминский Хусанта ӗçленӗ Гурий святителӗн Тӑванлӑх канашӗ çумӗнчи Куçару комиссийӗ ячӗпе те халал çырса хӑварнӑ.

Çакӑн хыççӑн хӑйне çутӑ çӑлтӑр пек çул кӑтартса пынӑ вӗрентекенне асӗнчен ямасӑр, вилес умӗн тӑван халӑхне юлшки пил сӑмахӗсем каласа хӑварас шухӑш И.Я. Яковлева канӑç паман. 1908-1910 çулсенче вӑл хӑйне лайӑхах туйман, çакна Иван Яковлевич хӑйӗн чи çывӑх та шанчӑклӑ юлташӗ А.В. Рекеев тата чунтан юратнӑ ывӑлӗ Алексей патне çырнӑ çырусенчен те курма пулать. “Эпӗ хам та иртнӗ икӗ çул хушшинче тӑтӑшах чирлекелесе тӑтӑм, пит хӑвӑрт ывӑнатӑп, вӑйӑм-халӑм чакрӗ, хавшанине туятӑп. Вилӗм çывхарса килет пулӗ, тен, вӑл манпа юнашарах та-и... Анчах та пирӗн тепӗр виçӗ çул пурӑнсан юрӗччӗ-ха”, – çырнӑ вӑл А.В. Рекеев патне 1910 çулхи чӳк уйӑхӗн 30-мӗшӗнче. Шӑпах çавӑн пек йывӑр шухӑшсем пуснӑ вӑхӑтра çырса хума пултарнӑ та И.Я. Яковлев хӑйӗн Чун халалне.

1917 çулхи октябрьти революци хыççӑн, И.Я. Яковлев Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче пулса иртекен юрӑхсӑр ӗçсене курса чун-чӗререн пӑшӑрханнипе сывлӑхӗ чылай хавшанине, вӑйӗ пӗтсе пынине туйса, халал пирки çӗнӗрен шухӑшлама пуçланӑ. Çав тапхӑрта И.Я. Яковлевпа çывӑх туслӑ пулнӑ, ӑна çыру ӗçӗсене туса пыма пулӑшнӑ, çав хушӑрах пирӗн "чӑваш туррин" аса илӗвӗсене çырма пикеннӗ А.В.

Жиркевич хӑйӗн кун кӗнекинче ҫапла ҫырса хунӑ: "1919 ҫул. Ака уйӑхӗн 5-мӗшӗ. Тинтерех ҫеҫ ман патӑмра И.Я. Яковлев пулчӗ. Вилес умӗн чун халалӗ ҫырса хӑварас, тет. Пулӑшу ыйтма килнӗ. Ват ҫын хӑйне япӑх туять. Ӑна Чӑваш шкулӗнчен пуҫӗпех хӑваласа кӑларса ярасшӑн. Уйрӑмах Дормидонтов пуп иртӗхет... Халала ҫырас шутпа тӗл пулмалли кун пирки калаҫса татӑлтӑмӑр".

Ҫакӑн хыҫҫӑн кун кӗнекинче ҫапла ҫырни пур: "Ака уйӑхӗн 8-мӗшӗ. Яковлевсем патне кайса килтӗм, Иван Яковлевич манпа халал тексчӗ пирки канашласа пӑхасшӑнччӗ... Ватӑлсах ларнӑ вӑл, хӑйне хӑй юхӑнтарса янӑ. Телее, ун патне Питӗртен Николай ятлӑ ывӑлӗ килнӗ... Йывӑр пулчӗ паян Яковлевсем патӗнче пулма... Пӗтӗм пурнӑҫӗн ӗҫӗ куҫ умӗнче арканни йӑлтах ҫапса хуҫнӑ ватӑ ҫынна".

Анчах кӗҫӗн ывӑлӗ юнашар пулни тата Мускавра пурӑнакан аслӑ ывӑлӗ ашшӗн шӑпи пирки Раҫҫейӗн ҫӗнӗ правительствин пуҫлӑхӗпе В.И. Ленинпа курса калаҫни ватӑ Иван Яковлевича кӑштах лӑплантарнӑ. Шурсухалӑн кӑмӑлӗ улшӑннӑ, халал пирки те сӑмах хускатман-ха вӑл. Ҫапах та Чӑваш шкулӗнче ӗҫлекенсене пӑлхатакан хӑш-пӗр учительсем тата "революци тивлечӗпе" пуҫӗсене каҫӑртма пӑхакан чӑваш ачисем (вӗсен шутӗнче вӗренӳ ҫине ҫиелтен пӑхакан ҫӑмӑлттайсем ытларах пулнӑ) хӑйне кашни кунах сӗмсӗр ӗҫсемпе кӳрентернипе чунӗ кӳтсе ҫитнӗ Иван Яковлевич пархатарсӑрсене тарӑхса ылханнӑ. Хӗрсе кайнӑ самантсенче вилсессӗн те хӑйне хирӗҫ тӑнӑ чӑваш пупӗсене (Чӑваш шкулӗ ҫумӗнчи чиркӳре ӗҫленӗ И.Д. Дормидонтовпа В.Н. Никифорова) тата шкулта вӗренекен чӑваш ачисене «тупӑк патне те ан ҫывхарччӑр, панихидӑна та ан хутшӑнччӑр, ку ҫеҫ те мар – вӗсенчен, пархатарсӑрсенчен, чечек кӑшӑлӗсем те ан йышӑнӑр», тенӗ.

А.В. Жиркевичӑн аса илӳ дневникӗнче ҫырнӑ тӑрӑх, Иван Яковлевичпа кашни кун тенӗ пекех темиҫешер сехет калаҫса ларнӑ хушӑра ватӑ юрист ылхану христианла пулманни, ҫӑлаканӑмӑр Христос

темле асап тӳссен те хӑйӗн тӑшманӗсене каҫарни, ҫавна май мӗнле пурӑнса, мӗнле вилмеллине кӑтартса пани ҫинчен каланӑ. Кирек мӗнле пулсан та ӗмӗрне чӑвашсемшӗн ӗҫлесе ирттернӗ Иван Яковлевич пек ӑслӑ-тӑнлӑ шурсухалӑн апла тума юраманнине ӑнлантарнӑ, ҫавӑн пекех тӑван халӑха ылханни хӑйӗн вӗрентекенӗн Н.И. Ильминскин юлашки пехилне хирӗҫ кайнине пӗлтерни пулӗччӗ тесе ӳкӗтленӗ. Паллах, ват ҫын хирӗҫлемен, А.В. Жиркевича вӑл чунтан хисепленӗ, ун сӑмахӗсемпе килӗшнӗ.

Ҫавна май А.В. Жиркевичӑн И.Я. Яковлевпа тӗл пулнисем пирки ҫырса пынӑ кун кӗнекинче текех Халалпа ҫыхӑннӑ йӗркесем куҫ тӗлне пулмарӗҫ. Ывӑлӗсем ашшӗ патне килни ҫинчен 1921 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 19-мӗш кунӗнче ҫырса хуни пур: "Яковлевсен – пысӑк савӑнӑҫ, ывӑлӗсем, Алексей Ивановичпа Николай Иванович иккӗшӗ те килнӗ...". Анчах “Манӑн пурӑнӑҫ” ятлӑ аса илӳсен кӗнекинче 597 страницӑри сноскӑра А.В. Жиркевич ҫапла ӑнлантарнӑ: “И.Я. Яковлев, эпӗ ыйтнипе, маларах ҫырнӑ халалӑн копине ӳкерме пачӗ, ҫав копине эпӗ вӑл ирӗк панипе ҫак аса илӳсем ҫумне хушса паратӑп”. Сӑмахӗ кунта шӑпах “вунӑ ҫул каярах ҫырнӑ халал” пирки пырать.

## 1.2. Чун халалӗ ҫырма кам пулӑшнӑ

"Чӑваш халӑхне панӑ халала" чӑвашла тата вырӑсла ҫырнӑ. 1955 ҫулччен Халал И.Я. Яковлевӑн архивӗнче упраннӑ. Ҫак архива вара 1922 ҫулта СССР Наукӑсен академийӗн член-корреспонденчӗ, А.И. Яковлев профессор хӑй хваттерне илсе килнӗ. Анчах коммунизм саманин синкерлӗ ҫулӗсенче ӑслӑ-тӑнлӑ Алексей Иванович, тен, сыхлӑх шучӗпе-тӗр, ашшӗ Халалӗ пирки сӑмах-юмах хускатни паллӑ мар.

Иван Яковлевичӑн мӑнукӗ – Ольга Алексеевна Яковлева – ашшӗ ҫӗре кӗнӗ хыҫҫӑн тата ҫӗр-шыв политики те улшӑннӑ май 1955 ҫулта аслашшӗ архивӗн чылай пысӑк пайне ССР Союзӗн В.И. Ленин ячӗллӗ Патшалӑх библиотекин Ал ҫырусен пайне леҫсе панӑ. Ҫав материалсен шутӗнче И.Я. Яковлевӑн

"Чăваш халăхне панă халалĕн" экземплярĕсем те пулнă, икĕ экземпляр – вырăсла текст, икĕ экземпляр – чăвашла.

И.Я. Яковлевпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсем аса илнĕ тăрăх, ватăлнăçемĕн вăл хут ĕçне туса пыма пăрахнă, çырусене каласа çыртарнă. Ку ĕçре ăна ятарлă çыруçă-чăваш пулăшса тăнă. Халала та И.Я. Яковлев каласа çыртарнă курăнать. Вырăсла текстăн пĕрремĕш вариантне хура тушьпа çырнă, ун хыççăн вара унта Иван Яковлевич хăйĕн аллипе тӳрлетӳсем кĕртнĕ. Таса экземплярне икке хутлатнă лайăх пахалăхлă хулăн шурă хут çине илемлĕ те уçă почеркпа çырса хунă. Кунти почерк тӳрлетнĕ экземплярти почеркран уйрăлса тăрать. Çак таса экземпляра лайăх хутранах туса хатĕрленĕ конверт ăшне чикнĕ, шал енчен ăна ятарлă марлĕ хăюпа çирĕплетнĕ. Конвертăн пиччĕн енне сулахайра хура тушьпе "Чун халалĕ" ("Духовное завещание") тесе кукăр-макăр саспаллисемпе çырса хунă. Çав енчех кăранташпа тепĕр хут, "Духовная И.Я." тесе çырни пур. Конвертăн уçăлакан енне хĕрлĕ кăранташпа вырăсла "Духовное завещание И.Я. Яковлева, обращение к чувашам" тесе çырнă.

Халалăн текстĕнче ятарласа уйăрнă ят çук. Вăл мĕн пур чун халалĕсене е пилсене çырнă чух усă куракан: "Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн ячĕпе!" сăмахсемпе пуçланать. Ăнланмалла ĕнтĕ, Турра таса чĕререн ĕненсе пурăннă Иван Яковлевич тăван халăха чĕнсе калакан халал-пехиле кĕл тунă чухне пуçласа калакан тата пĕтĕм чун-хавала таса та пархатарлă туйăмсемпе çеç çыхăнтаракан сăваплă сăмахсемсĕр пуçлама пултарайман. "Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн” ячĕсене асăнни Халалта калас тенĕ сăмахсем И.Я. Яковлевшăн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса парать.

Вырăсла текстăн таса экземплярĕнче те хĕррине хăварнă вырăнсенче ахаль кăранташпа çичĕ çĕрте паллă лартнă, çав паллăсем тĕлĕнчи йĕркесенче çыруçă тунă грамматика йăнăшĕсене Иван Яковлевич хăй

аллипе тӳрлетнӗ вырӑнсем пур. Текст вӗҫӗнче вара хӑех хура тушьпе "Иван Яковлев" тесе алӑ пуснӑ. "Чӗмпӗр хули. 1921 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 4-мӗшӗ" тенине симӗс чернилпа ҫырнӑ.

Вырӑсла халалӑн тӳрлетнӗ пӗрремӗш экземплярӗпе пӗрлех чӑвашла ҫырнӑ текстӑн икӗ экземплярӗ упранать. Вӗсене иккӗшне те пӗр алӑпа ҫырнӑ. Пӗрне икке хутлатнӑ, сарӑхма пуҫланӑ хулӑнтарах шурӑ хут ҫине шӗвелнӗ хура тушьпе ҫырнӑ. Теприне – каллех икке хутлатнӑ, йӑлтах сарӑхса кайнӑ кивӗ хут ҫине шӗп-шӗвӗ кӑвак чернилпа шӑрҫаланӑ. Ҫавна пула чернил тӗсӗ кайма пуҫланӑ. Чӑвашла экземплярсем ҫине алӑ пусман.

Содержанийӗ тӑрӑх хаклас пулсан, вырӑслипе чӑвашла текстсем пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑмаҫҫӗ, пӗтӗмӗшле илсен, вӗсем пӗр евӗрлех. Анчах вырӑсла текстри "... помните о великом завете Спасителя, любите и ненавидящих вас" тенине чӑвашла пачах куҫарман теме пулать. Анчах та кунта ак ҫакна манмалла мар, И.Я. Яковлев "и твердо надейтесь на жизненную силу уступчивости и снисхождения" тенӗ вырӑсла предложенири тӗп шухӑша чӑваш чунне ак мӗнле вӗрсе кӗртет: *"Пӗр-пӗринпе сапӑр пулӑр, ҫукшӑн-пуршӑн чашкӑрса ҫӳресрен, харкашасран аякка тӑрӑр. Ҫӑлаканӑн аслӑ сӑмахне асра тытӑр. Вӑл каланӑ, хӑвӑр тӑшманӑрсене те юратӑр, тенӗ. Чӑваш хушшинче пӗр-пӗр килӗшӳсӗр ӗҫ час-час пулкалать. Эпӗ ҫавна пӗрре анчах курман. Ҫапла акӑ чӑвашран хӑшӗ те пулин мала туха пуҫласан ыттисем ӑна такӑнтарма пӑхаҫҫӗ, ҫулне пӳлеҫҫӗ. Вара унӑн та ырӑ ӗмӗчӗ татӑлать, ҫине пыракансем хӑйсем те тип-типӗ тӑрса юлаҫҫӗ. Эсир апла ан пулӑр. Ҫӳле ҫӗкленекене мӗн хал ҫитнӗ таран ҫӗклеме пулӑшӑр. Хӑпарса ҫитсе тӗрек илсен, вӑл вара хӑй сире аялтан ҫӳле турта-турта кӑларӗ. Пӗр-пӗрин сӑмахне тӑнласа пурӑнни, пӗрне-пӗри ырӑлӑх туса тӑни пурнӑҫа хӑват парать. Ҫакна хытӑ шанса тӑрӑр".*

Ҫак абзацри сӑмахсене И.Я. Яковлев тӑван чӑваш халӑхне ҫеҫ чи ҫывӑх ҫын пек, хӑйӗн чун тӗпне

вырнаçнă вăрттăн шухăшне пĕлтернĕ пек каласа хăварасшăн пулнă. Паллах, пире вăтантарасшăн çырман вĕсене, пире, юратнă ачисем пек курса, ăса вĕрентес тесе çырнă. Святой апостолсем хăйсен вĕренекенĕсене каланă пек, хушса е вăрçса каламасть, ăс парса анчах калать: «Усала ырăпа парăнтарса тăр», – тет. Чăвашсăр пуçне нихăш халăх та çав сăмахсен чăн пĕлтерĕшне кирлĕ пек ăнланаймĕ.

## 1.3. Халал сюжечĕ тата çичĕ пилĕн юрату философийĕ

Ватăлăх пуснă кунĕсенче чунĕ кӳтсе килнĕ чухне хăш-пĕр пархатарсăр чăвашсенчен темĕн тĕрлĕ хур курнă Иван Яковлевич чăваш халăхĕн кăмăл-сипетĕнчи çитменлĕхсемпе çыхăннă йывăр шухăшсенчен çӳлти аслă Тӳре умне кайма хатĕрленсе пурăннă самантсенче те хăтăлайман. Вĕреннĕ чăвашсем хушшинче те пӳтсĕрсем пĕтменни чунне хĕскĕч пек хĕстерсе ыраттарнă. Анчах пулас ăру ăслăрах, кăмăл-сипечĕпе çирĕпрех пуласса шаннă вăл. Çӳлерех асăннă абзацри сăмахсене вара пулас ăрусем ăнланса йышăнасса хыт шаннипе çеç каласа хăварнă.

Халал сюжечĕ пирки. Чи малтанах ăна çветтуй апостолсем мĕн пур ĕненекенсене, хăйсен ывăлĕсем вырăнне хурса йышăннă вĕренекенĕсене тата тĕрлĕ халăх çыннисем – чиркӳ çыннисем – патне янă çырусемпе (посланисемпе) танлаштарма юрать. Тĕрĕссипе, çавнашкал çыру (послани) çырса ярасси христианство литературинче тĕп форма шутланнă. Апостолсем ĕçлесе пурăннă тапхăрта çакă Иисус Христос Туррӑмăра пĕр иккĕленмесĕр ĕненме, чăн тĕне ĕненекенсен таса йăли-йĕркине тытса тăма, пĕр-пĕрин хушшинче тăвансем пек килĕштерсе пурăнма вĕрентсе каланине пĕлтермелли пĕртен пĕр меслет пулнă. Вырăссен пĕрремĕш митрополичĕсем те чиркӳ çыннисем патне апостолсем пекех вĕрентсе калакан çырусем сахал мар çырнă.

И.Я. Яковлевăн халалĕнчи хăш-пĕр шухăшсене Иисус Христосăн Турă ирĕкĕпе чĕнсе илнĕ апостолĕсен

çырăвĕсенчи шухăшсемпе танлаштарма пулать. Тĕслĕхрен, апостолсем хăйсен çырăвĕсенчи пĕр-пĕр çĕнĕ шухăша *"Эй, савнă çыннăмсем"* е *"Эй, тăвансем, эй, тусăмсем, эй, савнă тăвансем!"* тесе пуçланă: «*Эй тăвансем, хамăра Çăлакан Иисус Христос ячĕпе тархаслатăп сире, эсир пурăр та пĕр сăмахра тăрăр, пĕрпĕринчен уйăрăлмалла ан пулăр, пĕр кăмăллă, пĕр шухăшлă пулса пĕрле тăрăр*» (Павел апостол Коринф çыннисем патне янă малтанхи çырăвĕ, I, 10) е тата «*Эй тăвансем, ача ăслă ан пулăр; усал тăвас тĕлĕшрен эсир ача ăслă пулăр, ăс кирлĕ çĕрте çитĕннĕ çын пек пулăр... хăвăр мĕн пĕлнипе ыттисене усă кӳме тăрăшăр*» (Павел, XIV, 20, 26).

И.Я. Яковлев та халала *«Эй тусăмсем, хамăн тăван çыннăмсем, чăвашсем!»* текен сăмахсемпе пуçласа ярать. *«Пуринчен малтан эпĕ сире чĕнсе калатăп. Манăн чунăм пĕрмаях сирĕншĕн çунатчĕ, халь те акă манăн мĕнпур шухăшăм сирĕн çийĕре куçрĕ. Юлашки тертĕме пуринчен маларах татах сире каласа хăварас тетĕп».*

Çветтуй апостолсен çырăвĕсенчи тĕп шухăш йăлтах çăлаканăмăр Иисус Христос Турра пĕр иккĕленмесĕр, таса чунпа ĕненсе тăма чĕнсе каланипе çыхăннă. "... иккĕленекен çын вăл çил çĕклентерсе, çилех салатса яракан тинĕс хумĕ евĕрлĕ... Иккĕллĕ шухăшлакан çын пур тĕлĕшрен те тĕрексĕр", – тет çветтуй Иаков апостол мĕн пур ĕненекенсене янă çырăвĕнче (Иаков, 6, 8).

И.Я. Яковлев та халалĕнче *«Турра ĕненсе пурăнасси калама çук пысăк япала – пуринчен ытла эсир çавна хытă тытса тăрăр. Ĕненӳ этеммĕн ăсне, кăмăлне çунатлăлантарса çăмăллатать, чун пурнăçне канаçлăх парать, лăплантарать; инкек-синкек, хуйхă-мĕн курнă вăхăтра чуна хăват парать; ĕçсем ăнса телейлĕ пурăннă чух ĕненӳ чуна тасатать, ăна çутатса тăрать. Турра ĕненсе пурăнсан, пурнăç хытти этемшĕн хăрушă мар; ăна ĕненсе тăмасан, çĕр çинчи пирĕн пурнăç сивĕ пулать, тĕттĕм пулать. Тĕнчене пултарнă çӳлти Турра ĕненсе тăрăр. Ырă ĕçе те, усал ĕçе те чăн аслă*

*тӳрĕлĕх татĕ, – Турă сут тăвĕ, – вăл сут тӳрĕ, вăл сут пит хăрушă,»* – тесе чăвашсене юратса йăваш кăмăлпа тархаслать.

Петр апостол мĕн пур ĕненекенсене янă малтанхи çырăвĕнче çак шухăша ак çапла каласа хăварнă: «Ăна ĕненсе тăратăр, пит мухтавлă, калама çук пысăк савăнăçпа савăнатăр; хăвăр ĕненнĕ тăрăх юлашкинчен чунăрсемшĕн çăлăнăç тупатăр» (Петр 1, 8-9).

Апостолсем хăйсен çырăвĕсенче тĕрлĕ япаласемпе ыйтусем тавра сăмах хускатса калаçнă пекех Иван Яковлевич та «Чăваш халăхне панă Халалра» е тăван халăхĕн пурнăçĕнчи, малашлăхĕнчи тĕп ыйтусене хускатса, пире, юратнă ачисем пек курса, ăс парать. Апостолсем хăйсен вĕренекенĕсене туса çитерейменн ĕçĕсене малалла тăсма тархасланă пек: «*Эпĕ туса пĕтерейменн ĕçсене эсир туса пĕтерĕр*», – тесе ӳкĕтлет. Çапла вара И.Я. Яковлев хăйĕн пурнăçĕ тăршшĕпех туса пынă чыслă та сăваплă ĕçĕсемпе тата çакнашкал халал çырса хăварнипе те "Чăваш Апостолĕ" ята чăнласах тивĕçлĕ.

И.Я. Яковлев хăйĕн Халалĕнче аслă вырăс халăхĕпе килĕштерсе пурăнма, çак аслă халăха Анне вырăнне хурса, юратса-хисеплесе тăма чĕнсе калать:

*Вырăс халăхĕ пит пысăк халăх. Вăл ырă кăмăллă, ăслă: эсир ăна итлĕр, юратса пурăнăр. Унăн ăсийĕн вăйĕ, ырă кăмăлĕ, пурнăçа малалла ярас шухăшĕ хисепсĕр нумай, нихăçан та пĕтес çук. Çак халăх сире тăван вырăнне хурса йышăннă, хăй çемйи тунă. Вăл сире пусмăрламарĕ, сире аяла хăвармарĕ. Малашнехине курса тăракан Турă вырăссене эпир курми, сисми аслă ĕç тума ертсе пырать. Эсир малалла каяс ĕçре çак халăх сире çавăтса ертсе пыракан пултăр, ун хыççăн пырăр, ăна шанса тăтăр. Çак халăхăн пурнăçĕ пит йывăр пулнă. Хăйĕн вăрăм ĕмĕринче, йывăр пурнăçĕнче вăл нумай хуйхă курнă, йывăр кунсем курмалла пулнă, çапах та вăл хăйĕн чунийĕн çуттине сӳнтермен; хăйĕнчен аслă халăх тухса каймаллине пĕррте асĕнчен яман. Вырăс халăхийĕн савăнăçĕпе эсир те савăнмалла пулăр; вăл хуйхă тӳсмелле пулсан, ăна*

*эсир те тӳсӗр. Çапла вара малашне вӑл курас çутӑ пурнӑçа унпа пӗрле эсир те курӑр; вӑл малашне чаплӑлӑнса кайсан, унпа пӗрле эсир те чаплӑланӑр. Иртнӗ ӗмӗрсенче вырӑс халӑхӗ сире хӗсӗрлемен, ӳлӗмрен те вӑл сире хӗсӗрлес çук. Ӑна эсир юратса пурӑнӑр, унпа тачӑ пурӑнма тӑрӑршӑр. Кирек мӗнле хир те пукрасӑр пулмасть, çапах та эсир вырӑс халӑхӗ хушшинче ырӑ кӑмӑллӑ ӑслӑ çынсене кирек хӑçан та тупӑр. Тӳрӗ ӗç тума вӗсем сире пулӑшӗç: çапла пулассине ман пурнӑçра пулнӑ ӗçсем шантарса тӑраççӗ. Хӑйӗн тӳрӗ ӗçӗсене вырӑс халӑхӗ нумай асап курса çиеле кӑларнӑ, çавӑнпа пӗртте иккӗленме кирлӗ мар, вӑл сирӗн тӗлӗшпе те ялан тӳрӗрен пырӗ. Вырӑс патшалӑхӗ çине шанса пурӑнӑр, ӑна юратӑр, вара вӑл сирӗн аннӗр пулӗ.*

Çак сӑмахсем Раççей патшалӑхне хӑйсен ирӗкӗпе кӗнӗ ытти халӑхсене те пырса тивеççӗ. Çавӑн пекех вӗсене вырӑс халӑхӗ те шута илмесӗр тӑма пултараймасть. Витӗмлӗ сӑмахсем вырӑс халӑхӗн историри чӑн вырӑнне, хӑйӗн пысӑк çемйине пӗрлешнӗ халӑхсем умӗнчи аслӑ тивӗçне туллин палӑртаççӗ.

Раççее Яковлев тӗнче цивилизацийӗн хӑй тӗллӗн аталанса пурӑнма пултаракан çӗр-шыв пек, икӗ тӗнчене Анӑçпа Тухӑçа çыхӑнтарса тӑракан сыпӑк пек курса хакланӑ. Истори тӗлӗшӗнчен илес пулсан та унӑн тӗп халӑхӗ – вырӑс халӑхӗ – Раççейри пӗчӗк йышлӑ халӑхсен культурипе наци интересӗсене хӳтӗлеме тивӗçлӗ, тесе шутланӑ вӑл. Çак халӑха пула вӗсем ку таранччен те харпӑр хӑй этносне сыхласа хӑварма пултарнӑ, тенӗ.

«Нумай миллионлӑ халӑх нихӑçан та пӗтес çуккине çирӗп шанса тӑратӑп,– тенӗ вӑл. Манӑн шанӑç тӳрре тухас пулсан, хӑйӗн пӗрлехи Тӑван çӗр-шывӗпе, Раççейпе тачӑ пӗрлешнӗ чӑваш йӑхӗ те пӗтес çук.

Халалӑн виççӗмӗш пайӗнче вӗренсе çутӑлма телей тупнӑ чӑвашсене уйрӑмах хытӑ шаннине палӑртать, халӑхӑн пуласлӑхӗ вӗсен аллинче пулнине ӑнланса, вӑл çӗнӗ самана çыннисене, урӑхла каласан пире пурсӑмӑра та çапла чӗнсе калать, ӳкӗтлет: *Пайсӑр тӑрса юлнӑ*

*хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра эсир пулăшса пурăнмалла; вĕсене ăçтан та пулсан катаран пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар. Ан манăр! Вĕсене вĕрентсе çутăлтарас ĕç пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла. Эсир вĕсен хушшинчен тухса çутăлнă çынсем. Вĕренӳлĕх пĕлсе тăракан пурлăха пуçтарса, эсир хăвăрăн тăван халăхăр патне таврăнăр, вара патшалăхра чăн лайăх этем мĕнле пулмалли çинчен вĕсене каласа ăнлантарăр; закон çинчен тата халăх хушшинче мĕнле пулмалли тӳрĕлĕх çинчен вĕрентĕр.* Чăваш халăхĕн малашнехи ырă пурнăçĕ, телейĕ, чысĕ, сумĕ пĕтĕмпех халăх шучĕпе вĕренсе ăс пухнă çынсенчен килнине ас тутатарать.

*... эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхине тирĕç тăмасан, халăх кăмăлне пĕтĕмпех хăвăр аллăрта тытса тăрăр.*

*Ху чĕлхӳне пăрахманни вырăс халăхĕн ĕçне ултавлă туса сутни пулмасть вăл; аннĕрсенчен вĕренсе юлнă хăвăн тĕп чĕлхӳне пăрахмасăрах вырăсăн аслă патшалăхĕшĕн ĕçлесе тăма пулать.*

И.Я. Яковлев çырса хăварнисенче тăван чĕлхене патшалăх шайĕнче тивĕçлĕ вырăн парасси калама çук паллă вырăн йышăннине курма пулать. «Пĕтĕм тĕллевĕм: шкулта тăван чĕлхепе вĕрентесси, тăван чĕлхепе кĕл тума хăнăхтарасси, Евангелие кашни чăваш ăнлантăр тесе тăван чĕлхепе вулама май парасси, вĕрентекен тата священник хресчен йăхĕнчен тухнă чăн чăваш пултăр, чунĕпе те, чĕлхипе те йăлари пурнăçра та вĕсенчен уйрăлса ан тăтăр тесе тăрăшасси». Тăван чĕлхене çĕклессине шăпах çак асăннă шайран пуçлама кирлине ăнланнă вăл, ку тĕлĕшпе хăйĕнчен мĕн килнине йăлтах тума тăрăшнă. Чĕмпĕр шкулĕнче пĕлӳ пухнă пулас учительсене (халăха çутта кăларас ĕçе хутшăнакансене) чи малтан çапларах ăс панă: «Анне чĕлхи – халăхăн чи пуян ăс-хакăлпа кăмăл-сипет хăвачĕ, унăн тĕп тĕрекĕ». «Ачисене тăван чĕлхене вĕрентмен амăшĕ вĕсене ĕмĕрлĕхех хăйĕнчен пистерет, пĕр-пĕрин хушшинчи чун çыхăнăвне татать. Вĕсене юта, урăх халăх аллине парать». «Хăйĕн ачисене тăван чĕлхене вĕрентмен амăшĕ хăй çын шайне, наци шайне

çĕкленейменнине кăтартса парать». Халăхăмăрăн чĕлхи упранса юлтăр тесе пирĕн хамăрăн, чăваш хĕрарăмĕсен, хăюллăнрах тăрăшмалла.

*Эпĕ туса пĕтереймен ĕççене эсир туса пĕтерĕр. Турă çыруне çырнă кĕнекесене пĕтĕмпех чăваш халăхне па-рăр – этемсен Турăпа пĕрлешсе пурăнасси çинчен каланă Авал хунă Сăмах кĕнекисене чăвашла куçарса пĕтерĕр.* Хăй пурăннă чухне И.Я. Яковлев Библири Çĕнĕ Сăмах кĕнекине йăлтăх куçарса пĕтерсе 1908 çулта Чĕмпĕрте 20 пин экземплярпа пичетлесе кăларнă. Унсăр пуçне вăл Авал хунă Сăмах кĕнекисене йăлтах чăвашла куçарса пĕтерме ĕмĕтленнĕ. Вăй-халĕ пур чухне вĕсем Чĕмпĕрти тăлмачăсен ушкăнĕпе Авал хунă Сăмахран 13 кĕнекине чăвашла куçарнă пулнă, анчах çав кĕнекесем самана улшăнса кайнине пула кун çути курайман. Хальхи вăхăтра пирĕн чăвашсем Яковлевăн Халалне тĕпе хурса тата ăна тивĕçлĕ пулма тăрăшса Библин мĕнпур кĕнекисене йăлтах чăвашла куçарса пĕтерчĕç. Моисейĕн Пилĕк кĕнекине, Кĕçĕн пророксене, Ăслăлăх кĕнекисене тĕплĕн редакцилесе уйрăмшарăн халăха паллаштармалла пичетлесе кăларнă ĕнтĕ. Пĕтĕм Библие чăвашла çывăх вăхăтра туллин пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ.

Çемье юратупа ыркăмăллăх патшалăхĕ пултăр. Çав патшалăхра кашниййĕн хăйĕн юратупа ăшăтнă кĕтес пулмалла,– тесе вĕрентнĕ педагогика урокĕсенче И.Я. Яковлев. Халалта çемье ыйтăвĕ паллă вырăн йышăнать, мĕншĕн тесен *«...çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан та хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьенĕн лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа ан варалăр, ӳсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан, килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр валли тĕреклĕ чарак лартса хурăр.* «Амăшне çын вырăнне хуман çемьере ырă кăмăллă ачасем çитĕнеймĕç», «Ачисем

умĕнче ашшĕне хисеплемен çемьере ырă çынсем ӳсеймĕç» – халăх педагогикин ĕмĕрхи традицийĕсемпе çыхăннă çак сăмахсен пĕлтерĕшне И.Я. Яковлев хăйĕн пехилĕнче чуна витермелле аса илтерет.

Юратман ĕçе те юратса тăвакан çынна çеç ĕçчен теме пулать, теççĕ ватăсем. Чăваш е ытти халăхăн пулас ăрусене вĕрентсе ӳстерессипе çыхăннă тĕллевĕсем чи малтанах ĕçпе воспитани парасси çинче никĕсленсе тăнă: *Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă – çакна пĕлсе тăрăр, ун пек ĕçе юратăр. Чăн пĕчĕккĕ ĕçе те пит пикенсе, юратса ĕçлĕр. Пурнăçра курма тӳрĕ килнĕ йывăрлăхшăн ан кулянăр. Юратса тусан чи пĕчĕкçĕ ĕçе те чаплăлантарса яма, усă паракан тума пулать; ӳркенсе ытахальтен анчах ĕçлесен, чăн пысăк ĕç те пăрахăçа тухать. Лăпкă чунпа килĕшсе ĕçленĕ пур ĕç те телейлĕ пулать, ăнса малалла пырать. Кукăр çулпа çӳресрен, улталпа тăвас ĕçрен хăраса тăрăр: тӳрĕлĕхсĕр курнă усă, улталпа тупнă телей – тĕреклĕ мар, вăл вăраха пымасть.*

Яковлев пурне те асăрхатарать: хаярлăх, ултав хуçаланакан вырăнта тĕрĕслĕхе шырама кирлĕ те мар. Тӳрĕ кăмăлпа тăвакан ĕç кăна çынна çӳле çĕклет. Халалта халăх педагогикипе çыхăннă мĕнпур задачăсем тухса тăраççĕ. Чăвашсен воспитани тĕллевĕ икĕ сăмахран çеç тăрать: ÇЫН ПУЛ!

Юратнă чăвашсене шанни, вĕсен ырă пуласлăхне ĕненни Иван Яковлевичăн христианла таса кăмăлсипетне, пуян ăс-тăнне кăтартса парать. Халала вĕçленĕ май чăваш патриархĕ Тăван çыннисенчен каçару ыйтать:

*Ирĕклĕ е ирĕксĕр эпĕ кама та пулин кӳрентерсе, вăл ман çине çилĕ хывса çӳренĕ пулсан, пурсăра та тархаслатăп: çиллĕре манăр, каçарăр мана, маншăн Турра кĕл тăвăр. Эй тăван çыннăмсем! Чăн кăмăлтан тав тăватăп сире. Эсир маншăн ялан та ăшă пултăр, кăмăллă пултăр. Сиртен çакна курма эпĕ тивĕçлĕ те пулман. Хампа пĕрле ĕçленĕ юлташăмсене, мана пулăшса пурăннă мĕнпур çынна пурне те чунтан каласа тав тăватăп: нимĕне хапсăнмасăр вĕсем мĕнпур*

*халĕсемпе ĕçлерĕç, вĕсемсĕр пуçне ман ĕçĕм те палăрман пулĕ- ччĕ,* – тесе вĕçлет Аслă Вĕрентекенĕмĕр хăйĕн сăмахне.

Халалта пурĕ çичĕ пай, çичĕ пил: вĕсенчи тĕп шухăш йăлтах юрату философийĕпе çыхăннă. Çичĕ хут юрату: 1) Турра юратни; 2) Раççее юратни; 3) тăван халăха; 4) тăван чĕлхене; 5) атте-аннене тата ачасене; 6) ĕçе; 7) тĕрĕслĕхпе тӳрĕлĕхе. Юрату кунта этемĕн чунĕпе, кăмăл-сипечĕпе çыхăннă хăватлă вăй пулса тăрать. Чунра юрату пуррипе çеç этем хăйĕн пурнăçĕн тĕллевне тупать, чăн-чăн Çын пулса тăрать. Юратура çын пур енлĕ лайăхланать, маттурланать, çунатланать. Çак хăватлă вăй этемме Çын шайне çĕклесе унăн пĕтĕм пурнăçне пуянлатать. Юрату чăннишĕн савăнать, пурне те ыррăн курать, пурне те ĕненет, ялан шанса тăрать, пурне те тӳссе ирттерет. Юрату кашни этемĕн пурнăçĕнче чăнлăх, илемлĕх, килĕшӳлĕх патне çул хывакан вăй, вăл ирĕклĕх, пултарулăх, телей çул-йĕрĕ. Çакăнта – И.Я. Яковлевăн пурнăç тĕллевĕпе çыхăннă ăнлавĕ, обществăшăн, патшалăхшăн, халăхшăн ĕçлесе пурăнас, тăван халăхăн кăмăл-сипетне, чун хавалне пуянлатас тата унăн культурăпа пĕлӳ шайне çĕклес ăнтăлăвĕ. Кашни çын чунĕнчи юрату философийĕ – унăн ăс-хакăл культурин уйрăлми пайĕ, халала вуланă май эпир патриархăмăрăн чун-чĕрипе ăс-хакăл культурин шайне куратпăр.

Çапла вара И.Я. Яковлевăн чăваш халăхне панă Халалĕ – наци ăнланулăхне çакăн пек çӳллĕ шая çĕклекен хăватлă Чун халалĕ – вăл чĕререн чĕнсе калани те, сунни те, ӳкĕтлени те, хушни те, пехиллени те, асăрхаттарса ĕнентерсе çирĕплетни те, пире, юратнă ачисем пек курса ăс пани те. Çынлăха, тăван халăха юратнипе çыхăннă чăн-чăн патриотизмпа гуманизм хăватне, этемлĕхĕн ĕмĕрхи чун ăшăлăхне çав таранччен витĕр курса ăнланнине хаклас пулсан, Чăваш халăхне панă халал кирек хăш халăхăн пулас ăрăвĕсене ăнлантарса вĕрентмелли ĕмĕр сӳнми литература палăкĕ пулса тăма тивĕçлĕ.

## Тӗп литература

1. Димитриев В.Д. О завещании И.Я. Яковлева чувашскому народу / В.Д. Димитриев. Просветитель чувашского народа И.Я.Яковлев: сб. ст. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. – С. 71-82.

2. Кураков Л.П. Прометей из чуваш: Размышления о выполнении Завещания И.Я. Яковлева / предисл. И.А. Яковлева. 3-е изд., доп./ Л.П. Кураков. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1999. – 223 с.

3. Мукина И.В. И.Я.Яковлев ҫинчен хунӑ чӑн сӑмах / И.В. Мукина. – Шупашкар: Руссика, 1998. – 250 с.

4. И.Я.Яковлев. Чӑваш халӑхне панӑ Халал. – 5 чӗлхепе / М.Р. Федотов пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар: Чӑваш Республикин Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи чӗлхе, литература, истори тата экономика наука-тӗпчев институтчӗ, 1992. – 30 с.

5. И.Я. Яковлев. Моя жизнь: Воспоминания / вступ. статья Л.П.Куракова, археогр. предисл. Г.Н. Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г. Краснова. – М.: Республика, 1997. – 696 с.

## Хушма литература

1. Викторов О.Н. И.Я. Яковлевӑн чӑваш халӑхне панӑ Халалӗ – ӳсекен ӑрӑва вӗрентсе ҫитӗнтермелли ӳкӗт / О.Н. Викторов // Тӑван Атӑл. Литература, культура, искусство журналӗ. – 2 (478) №, нарӑс, 1998. – С. 43.

2. Жиркевич А.В. Мои встречи с И.Я. Яковлевым. Из днев-ника за 1916-1924 годы / сост. и коммент. Г.А. Александрова. – Чебоксары: Руссика, 1998. – 467 с.

3. Мукина И.В. Завещание И.Я. Яковлева как кодекс поведения и смысла жизни / И.В. Мукина // Проблемы воспитания, исторический опыт и современность: сб. науч. ст. – Чебоксары: Изд-во Чуваш ун-та, 2006.

4. Мукина И.В. Духовные ориентиры чувашского народа в Завещании И.Я. Яковлева / И.В. Мукина // Духовно-нравственное просвещение и воспитание молодежи. История и современность: сб. ст. междунар. науч.-практ. конф. 22 июня 2006 г. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2006.

5. Сергеев В.И. И.Я. Яковлевӑн чӑваш халӑхне панӑ Халалӗн чӗлхипе стилӗ / В.И.Сергеев // Тӑван Атӑл.

Литература, культура, искусство журналĕ. – 2 (478) №, нарăс, 1998. – С. 56-57.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. И.Я. Яковлев хăйĕн аса илĕвĕсен «Манăн пурнăç» кĕнекинчи XIX сыпăка вуласа тухăр. Унта чăваш халăхне Халал çырса хăварасси пирки мĕн каланă?
2. Халал çырнă вăхăт пирки тĕпчевçĕсем мĕн шутлаççĕ?
3. Халала композици тĕлĕшĕнчен сыпăксем çине пайласа тухăр.
4. Халал чĕлхинче мĕнлерех ăнлав е логика категорийĕсем палăраççĕ?
5. Халал текстĕнче сайра усă куракан сăмахсене тупăр тата вĕсен пĕлтерĕшне уçса парăр.
6. Чăваш халăхĕн кăмăл-сипетне тивĕçлĕ шайра тытасси, çынна усал тăвасран упрасси пирки каланă сăмахсене мĕнлерех хаклатăр?
7. «И.Я. Яковлевăн «Чăваш халăхне панă чун Халалне» эпĕ мĕнле ăнланатăп тата йышăнатăп» темăпа сочинени-шухăшлав çырса килĕр.

# 2 сыпăк
# АСЛĂ ВĔРЕНТЕКЕНĔН ĂС–ТĂНĔПЕ ÇЫНЛĂХĔ ТУПТАННĂ ТАПХĂР

*Хама эпĕ 8 çултан пуçласа*
*ас тума тытăнатăп...*
(И.Я. Яковлев).

## 2.1. Ачалăх

И.Я. Яковлев 1848 çулхи ака уйăхĕн 13 (25)-мĕшĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Жуковка прихучĕн Пӳркел приказне (халĕ Тутар Республикин Теччĕ районĕ) кĕрекен Кăнна Кушки ялĕнче çуралнă. 1848 çулта Яковлевăн тăван ялĕнче 60 яхăн кил пулнă. Кăнна Кушкипе юнашар мĕн авалтанах вырăс, мордва, тутар ялĕсем ларнă. Яковлевăн ашшĕ-амăшĕн йăхтăванĕсем ĕмĕртенпех çак ялта пурăннă. Амăшĕн тăхăмĕсене XIX ĕмĕр пуçламăшĕнченех çырса пыма пуçланă. Яковлевăн тăван амăшĕ 1848 çулта вилнĕ. Иван Яковлев гимназист 1868 çулхи çурлан 26-мĕшĕнче хăйĕн автобиографийĕнче çапла çырса хăварнă: «Эпĕ 1848 çулхи ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче çуралнă, эпĕ çуралнă кун чи телейлĕ кун шутланать. Çав çулхине вăл кун мăнкун хыççăнхи виççĕмĕш кун пулнă. Тăвансем каланă тăрăх, эпĕ акан 18-мĕшĕнче çуралнă... Анчах чăн-чăннипе апла мар пулас. Çывăх тăванăмсем каланинех шанас килет манăн. Аннем (Настасья Васильевна Васильева. – *И.М.*) мана çуратсан виçĕ кунтан вилнĕ, çакăншăн эпĕ айăплă пулнă.

Эпĕ çуралнă кун чăвашсемшĕн чи телейли шутланнă, апла пулин те шăпа мана çуралнă-çуралманах тĕрĕслеме пуçланă. Çемьере эпĕ кĕтнĕ ачах пулман, пĕчĕкçĕ пепкене пăхма аппамçăм ытла та çамрăк пулнă (И.Я. Яковлев çураличчен амăшĕн тата виçĕ ача: Павел – 18 çулта, Иван – 15-ре, Алена – 8-та пулнă).

Эпĕ çуралнă çемье тахçан пуян тата ялти чи лайăххисенчен пĕри пулнă пулсан, калама çук пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ, тете 15-ре, аппа 8-та тăр тăлăха

юлнӑ. Ҫемьере хӗрарӑмсӑр, аннесӗр пӗчӗк ачана пӑхса ӳстерме май килмен.

Аннене пӗлекенсем каланӑ тӑрӑх, вӑл тӗлӗнмелле ӑслӑ хӗрарӑм, чӑвашсем хушшинче уйрӑмах палӑрса тӑракан илемлӗ сӑн-питлӗ ҫын пулнӑ. Сакӑр ҫул хушши тӑлӑх арӑм пурнӑҫӗпе пурӑннӑ пулин те килҫурчӗпе хуҫалӑхне лайӑх тытса пынӑ. Ун чухне пирӗн хуҫалӑх ялти чи лайӑх та тӗреклӗ хуҫалӑхсенчен пӗри шутланнӑ; хӑйӗн ачисемсӗр пуҫне вӑл упӑшкин шӑллӗн пӗчӗк ачисене пӑхса пурӑннӑ. Хресчен ӗҫне йӑлтах хӑй тунӑ, хӑех сухаланӑ, хула пасарне тырӑ, ытти ӑпӑр-тапӑр сутма ҫӳренӗ, тӑванӗсенчен пӗри унӑн ҫуртне туртса илме тӑрсан, вӑл кунта та ҫухалса кайман, хӑйне тӗрӗс тытма пӗлнӗ...» – юратса аса илет вӑл амӑшне «Манӑн пурнӑҫ» ятпа тухнӑ аса илӳсен кӗнекинче.

Шел, Яковлев кунта хӑйӗн ашшӗ пирки нимӗн те ҫырмасть. Ун ҫинчен вӑл нихҫан та калаҫма юратман, анчах тепӗр чух: «Ман атте удельни хресченӗ пулнӑ»,– тенӗ. Пурӑнасса вӑл 69 ҫул пурӑннӑ.

Крепостла Раҫҫейре хресченсем удельни, патшалӑх тата ҫӗр улпучӗсен хресченӗсем ҫине пайланнӑ. Удельнисен патшалӑх службинче тӑмалла тата патша ҫемйине тытса тӑмашкӑн хырҫӑ тӳлемелле пулнӑ. 1797 ҫулта удел ҫӗрӗсене, ялӗсене, салтака илмелли ҫамрӑксене шута илсе тӑма Уделсен департаментне туса хунӑ, Вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнче Хусан удельни экспедицийӗ ӗҫленӗ, вӑл Хусан, Чӗмпӗр, Пенза, тата Чулхула кӗпӗрнисене кӗрекен ҫӗрсене тӗрӗслесе тӑнӑ. 1826 ҫулта Уделсен департаменчӗ Император Дворӗн министерствине кӗнӗ.

1808 ҫулта удел экспедицийӗсем вырӑнне удел кантурӗсене йӗркеленӗ, Раҫҫейре вӗсем пурӗ 21 пулнӑ. Чӗмпӗр удел кантурне Улатӑр, Сызрань, Самар ҫӗрӗсем кӗнӗ. 1866 ҫулта Улатӑрпа Сызрань кантурӗсене пӗтернӗ. Удел кантурӗн именийӗсенче полици тивӗҫӗсемпе ҫыхӑннӑ приказсем хатӗрленӗ. Удел хресченӗсем ял пухӑвӗсене пуҫтарӑнса староста, ҫӗрпӳсемпе

вунпӳсене суйланӑ, кусем вара хырҫӑ-марҫӑ мӗнлерех тӳленине тӗрӗслекенсем пулнӑ.

Тӑван амӑшӗ вилнӗ хыҫҫӑн Яковлева Кӑнна Кушкинче пурӑнакан удельни хресченӗ Пахом Кириллов усрава илнӗ. 1837 ҫулта унӑн икӗ ывӑлӗ Ехремпе Ёлӗксантӑр халера чирӗпе чирлесе вилнӗ. Иван Яковлев ку ҫемьере Унтрипе Хӗлип хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш ывӑл шутланнӑ. Пӗчӗк ачана Унтри хӗрӗ, 8 ҫулхи Наҫтук пӑхнӑ, чӗрҫи ҫинче канлӗн сиктерсе ачашлаканни, йӑпатаканни те вӑлах пулнӑ. Кӑкӑр ачи ҫак ҫемьене леккин сӑлтавӗ чи малтанах Пахом Кирилловӑн мӑшӑрӗ Авдотья Васильева Иван Яковлев амӑшӗн тӑван аппӑшӗ пулнипе ҫыхӑннӑ пулас.

И.Я. Яковлевӑн пурнӑҫӗпе ӗҫ-хӗлне пур енлӗн тишкернӗ паллӑ тӗпчевҫӗ Н.Г. Краснов «И.Я. Яковлев и его потомки» кӗнекере ҫырса панӑ тӑрӑх, 1904 ҫулта Пахом Кирилловӑн аслӑ ывӑлӗ патне – Унтри ҫемйине – Раҫҫейри паллӑ публицистка С.В. Чичерина килсе курнӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл И.Я. Яковлева тата унӑн Чӗмпӗрти чӑваш шкулне хӑюллӑн хӳтӗленӗ. Вӑтам Атӑл тата Урал тӑрӑхӗнче пурӑнакан вырӑс мар халӑхсене вӗрентсе ҫутта кӑларас ӗҫ мӗнле пынине тӗпчесе пӗлме вӑл нумай-нумай кӗпӗрнесем тӑрӑх курса ҫӳренӗ, ялти учительсемпе, чиркӳ ҫыннисемпе, пупсемпе, ҫавӑн пекех хресченсемпе те тӗл пулнӑ. Акӑ мӗн вулатпӑр унӑн кун кӗнекинче: «Иван Яковлев ача чухне пурӑннӑ ҫемьене ҫитсе куртӑм. Сак ҫинче ларакан суккӑр карчӑк пӗчӗк ачашӑн уйрӑмах хӑй тӑрӑшни ҫинчен каласа пачӗ. Ку ҫемье питӗ аван пурӑнать, пӳрчӗ вӗсен пысӑк та таса, темиҫе пӳлӗмлӗ, вӗсен килӗнчен ҫавӑн пек чаплӑ ҫын тухнипе мухтанаҫҫӗ пулас вӗсем». Чичерина калаҫнӑ суккӑр карчӑк Унтри арӑмӗ пулнӑ, Унтри амӑшӗ ку вӑхӑт тӗлне ҫӗре кӗнӗ пулнӑ ӗнтӗ. Кирилловсен ҫак пысӑк пӳртне туса лартма Иван Яковлевич нумай пулӑшнине те палӑртса хӑвармалла.

Ҫӑмӑлах пулман удельни хресченӗсен пурнӑҫӗ, ҫуралнӑ-ҫуралманах вӗсем пусмӑрти тискер пурнӑҫ ытамне, тӳсме ҫук асаплӑ чухӑнлӑх, тӗттӗмлӗх,

тĕшмĕшлĕх, таса марлăх ытамне кĕрсе ӳкнĕ. Йывăр та тертлĕ пурнăçа пула хресченсен сывлăхĕ те хавшак пулнă, нумайăшĕ çамрăклах суккăрланнă, вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ. Пăва уесĕнче час-часах халера текен мур алхаснă, сахал мар çын пурнăçĕ татăлнă ăна пула. Кирилловсен çемйи лайăх пăхнипе тата ялти тăлăха шеллекен арăмсем пулăшнипе пĕчĕк Ивана çав чир-чĕртен упраса хăварма пултарнă.

Кирилловсен çемйине хуйхă-суйхă час-часах силленĕ. 1849 çулта Пахомăн иккĕмĕш ывăлне Хĕлипе салтака илсе каяççĕ. Ку – çемьешĕн пысăк хурлăх, салтака илсе кайни чăвашсемшĕн вилĕмрен те хăрушăрах пулнă. Хĕлип килне Крым вăрçи (1853-1856) хыççăн 1863 çулта кăна таврăннă.

Иван Яковлев ӳссе çитĕннĕ çуртра икĕ çемье пурăннă: Пахом Кирилловăн тата унăн Унтри ывăлĕн çемйисем. Унтрин 1856 çулта Петĕр ятлă ывăлĕ çуралнă, каярахпа Иван Яковлев гимназист ăна вĕрентсе çын тăвас тесе нумай тăрăшнă. Çак çемьере пĕчĕк Иван нихçан та ют пулман, ăна пурте юратнă, ачашланă. Кирек мĕнле ĕçе те пĕрле, килĕштерсе туни вĕсене пĕрлештернĕ. Çак çемьере хăй мĕнле пурăнни çинчен Яковлев çапла çырнă: «Мана кӳрентерсе курман, тăван ачине пăхнă пек пăхатчĕç. Пахомовсем (кунта сăмахĕ – Пахом Кирилловсен çемйи çинченех – *И.М.*) маншăн ют çемье пулнине эпĕ, кăштах тĕмшĕртеттĕм пулин те, чылайччен пĕлмесĕр пурăннă. Пахомовсем эпĕ кам ачи пулнине нихçан та каламан. 17 тултарсан кăна, урăхла каласан, гимназире вĕреннĕ чухне тин, хамăн çурални тата шыва кĕртни çинчен калакан метрикăна курсан, вĕсем манăн тăван çемье пулманнине пĕлтĕм» – çырать хăйĕн аса илĕвĕсенче И.Я. Яковлев.

Пурнăçĕ кирек мĕнле пулсан та ача-пăчан хăйĕн тĕнчи, хăйĕн савăнăçĕ, хуйхи-сухи. Нимĕне пăхмасăр тенĕ пек, ачапча хăйĕн вăхăтне вăй çитнĕ таран тăвакан ĕçре, çав хушăрах вăйă-кулăра ирттерет. Шкула кайиччен пĕчĕк Ванюшка килĕнчи ĕçсене тыткаланă, уйри ĕçсенчен те юлман, тырă вырма тухсан пысăкки-

семпе тан каçалăк илсе, аслă аппăшĕпе ăмăртса тыră вырнă. Çавăн пекех Хаким тутарпа кĕтӳçре çӳренĕ, лешĕ ăна флейтăпа калама, саламат (чăпăркка) эрешлесе-хитрелетсе явма, çăпата тума вĕрентнĕ. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче, кĕтӳ каннă чухне пĕчĕкçĕ кĕтӳçĕ çийĕнчи кĕпи-йĕмне çуса Кильна шывĕ хĕрринче ӳсекен йăмрасем çине çакса типĕтнĕ, юхан шывра час-часах пулă тытма юратнă. Тепĕр чухне вара хăй кĕтӳçĕ пулнине манса кайсах, Хаким тутар кăшкăрма пуçличченех пулăра ларнă. Хуйхă-суйхăсăр ачалăх нумая пыман: 1856 çулта Ивана Пăва уесĕнчи удел училищине вĕренме илсе кайнă.

## 2.2. Удел училищинче

Чĕмпĕр кĕпĕрни Уделсен департаментне кĕнĕ. Вырăнти ĕçсене тытса тăма тата хресченсен хырçă-марçă пуçтарма хут пĕлекен çынсем: çыруçăсем, приказсен пуçлăхĕсем, çĕр виçевçисем т. ыт. те кирлĕ пулнă. Ялсенчи тĕп удел училищисен уставĕнче 1828 çулта удел ведомствин кашни ял приказĕ çумĕнче пĕрер приход училищине уçма хушнă. Çав вĕренӳ заведенийĕсене тытса тăмашкăн хресченсенчен кашни чун пуçне 93-шер пус хырçă пуçтарнă. Училищĕсенчи учительсем пур çĕрте те тенĕ пекех пупсем пулнă. Приказ пуçлăхĕпе приход пупĕ çулсерен училищĕре вĕренекенсене пуçтарнă, малтан вĕсем ялсем тăрăх списоксем тунă, унта кашни хутĕнчех кирлинчен ытларах ача илме палăртнă. Хресченсем ачисене вĕренме ярассине хăйсемшĕн ытла та йывăр тивĕç вырăнне хунă, çавăнпа ачисене çак йывăрлăхран укçа тӳлесе хăтарма тăрăшнă. Вĕренекенсене пухнă хыççăн приказ пуçĕпе пуп ялсемпе саласенчен кӳмми-кӳммипе е лавĕ-лавĕпе апат-çимĕç, тыră-пулă, кĕсье тулли укçа пуçтарса таврăннă. Священник-учительсем хресченсене хăратса укçа илме е вĕсенчен мĕн кирлине пуçтарма вăтанса тăман. Ачисене вĕрентесси ашшĕ-амăшĕшĕн йӳне ларман, çитменнине чиркӳллĕ ялсенче çеç ĕçленĕ училищĕсенче вĕреннĕ чухне пурăнма хваттерĕ те кирлĕ пулнă. Ку çеç те мар, удел училищисен уставĕпе килĕшӳллĕн

вĕренекенсене йĕркеллĕ кĕпе-тумтирпе, атă-пушмакпа çӳретме хушнă, çăпатапа çӳреме юраман. Чăнах та, Уделсен департаменчĕ ирĕк панипе приказсем арçын ачасене удел училищинче вĕрентмешкĕн халăхран пухнă хырçă укçипе усă курма, юрлă çемьесенчен тухнă ачасене 4 тенкĕрен пуçласа 30 тенкĕ таран пособисем парса тăма пултарнă. Анчах приказсен пуçĕсем çавнашкал пулăшу укçине ячĕшĕн тенĕ пек çеç уйăркаланă, тĕпрен илсен, ачисене училищĕсенче вĕрентмелли тăкаксене удел хресченĕсен хăйсенех тӳссе ирттермелле тивнĕ. Ачасене вĕренме пухакан список рекрут списокĕпе танах пулнă. Пуянтараххисем укçа «тĕксе» хăтăлма пултарнă пулсан, чухăннисем нимех те тăвайман.

1856 çулхи çулла Пăрантăк удел училищин заведующийĕ А.И. Баратынский священник Кăнна Кушкине çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли ачасем пуçтарма килнĕ. Ял старостине Питнова вăл 8 ача (ун чухлех кирлĕ те пулман) пухма, кам-кам ачине илессине палăртма хушнă. Çиччĕшĕн ашшĕ-амăшĕ укçа парса ачисене хăтарма пултарнă. Священник вара пĕрне кăна, Иван Яковлев ятлине çырса хунă, Ивана хиртен тӳрех Баратынский патне илсе пынă. Баратынский ачана вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле Пăрантăка илсе пырăр, тесе хăварнă. Çулсерен сехĕрлентерекен «шкул ыйтăвĕпе» пухăннă ял халăхĕ кăмăллă пулнă: священник вĕсене пĕрне те тĕкĕнмен, тăлăх Иваншăн пулсан, тенĕ вĕсем, пур пĕрех, пирĕн ачасене çăлса хăвартăр та амăшĕсен чĕрине лăплантартăр.

Шкулта ирĕксĕрлесе, хĕне-хĕне вĕрентни ачасене вĕренӳрен пистернĕ. «Шкул» тени ашшĕ-амăшне вăйпиттиленнĕ ывăлĕсемсĕр тăратса хăварнă тата çемьене усăсăр нумай тăкак кӳнĕ. Приказ пуçĕпе священник яла ачасене пуçтарма килни хресченсемшĕн чăн-чăн инкек пулнă.

Хăйне пăхса ӳстерекенсем килĕшмесĕрех Иван Яковлева удел училищине илсе каяççĕ. Кирилловсен çемйишĕн ку уяр кун аça çапнă пекех пулнă, уйрăмах суккăр Пахом пăшăрханнă. Иван ăна çавăтса

çӳрекенни пулнă-çке, çитменнине хуçалăхра та чылай пысăк пулăшу паракан пулса çитнĕ. Халĕ ĕнтĕ Пахом утара та, вăрмана та çӳрейми пулнă. Усрав ачине шкулран хăтарас тесе Кирилловсем тем те туса пăхнă, анчах ĕç тухман. Яковлев çапла аса илет: «Мана Пăрăнтăк училищине илсе кайни суккăра, Пахом асаттене, хурлантарнă, ват çын Баратынские мĕнпе те пулин илĕртсе мана тавăрасшăн пулнă. Училищĕрен кăларччăр тесе вăл пĕр кĕренкке чечек чейĕ (Теччĕре 1 тенкĕ те 50 пуслăх е 1 тенкĕ те 20 пуслăх туяннă чей) взятка вырăнне парса янă. Тĕрлĕ чире пула (чечек чирĕ, ӳксе пуçа амантни) пирвайхи çулĕнче вĕренни-мĕнĕ пулман пулин те Баратынский «кучченеçе» йышăнман, вĕсен ыйтăвне тивĕçтермен».

Паллах, Баратынский Иван Яковлева лайăх пултăр тесе мар, Кирилловсем «кучченеçне» ытла та сахал панипе шкулта хăварнă ĕнтĕ. Ялтан-яла çӳренĕ священниксем училищĕне кирлинчен чылай ытларах ача пуçтарнă, ытларахăшне – пуянтарах çемьесенчен. Кайран лешсен ашшĕ-амăшĕ чупкала пуçланă: приказ пуçĕ вĕсене – учитель патне, учитель – священник патне, пачăшкă каялла приказ пуçĕ патне хăваланă. Аларан тыттармалли укçа 10-25 тенке çитиччен çапла ăшталаннă мĕскĕн ашшĕ-амăшĕ. Çавна май Чĕмпĕр кĕпĕрниинчи удел училищисен вĕрентекенĕсем хушшинче пĕр ачашăн çавăн чухлĕ укçа «сăптăрасси» хăнăхнă йĕрке пулса тăнă. Кунсăр пуçне вĕсем вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕ кӳрекен тĕрлĕ парнесене те хапăл туса йышăннă. Паллах, Кирилловсем хăйсен Ванюшкишĕн çавăн чухлĕ укçа тупса парайман ĕнтĕ, çапла вара вăл Пăрăнтăк училищин вĕренекенĕ пулса тăнă. Анчах усаллипе юнашарах лайăххи те çӳрет, теççĕ. Çакă унăн пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ утăм пулнă – пулас педагог-просветителĕн вĕренӳпе çыхăннă пысăк ĕçĕ-хĕлĕ, çĕнĕ пурнăç çулĕ çакăнтан пуçланнă.

Яковлевăн тăватă çул хушши Кивĕ Пăрăнтăкри училищĕре вĕренсе пурăнмалла пулнă. Мĕнлерех пулнăши ун чухне çак ял. Сĕве шывĕ хĕрринче вырнаçнă, тахçан ĕлĕк унта чăваш кăна пурăннă, теççĕ. Атăл тă-

рӑхне дворянсем килсе тулсан, мӑнастирсем умлӑ-хыҫлӑ уҫӑлма пуҫласан унта вырӑссем нумай куҫса килнӗ. 1771 ҫулта Пӑрӑнтӑкра чиркӳ хӑпартса лартнӑ, удел училищи 1841 ҫулта уҫӑлнӑ.

Удел училищинче вырӑсла кӑна вӗрентнӗ, ҫавӑнпа та вырӑс мар ҫынсен ачисемшӗн унта вӗренесси чӗр нуша пулнӑ. Ҫитменнине кунта Белл-Ланкастер меслечӗпе вӗрентнӗ. Аслӑраххисен, учитель кӑштах ӑнлантарнӑ хыҫҫӑн, кӗҫӗнрех класрисене вӗрентмелле пулнӑ. Ку система вӗрентӳпе воспитани ӗҫне сиен ҫеҫ кӳнӗ, учитель вӗренӳпе ҫыхӑннӑ тивӗҫӗсене пачах пурнӑҫламан. Кӗҫӗннисемпе мар, аслисемпе те ӗҫлемен кунти вӗрентекенсем.

Удел училищин программине турӑ законӗ, кӗске катехизиспа сӑваплӑ истори, чиркӳ кӗнекисемпе гражданла кӗнекесем вуласси, таса ҫырасси, арифметикӑн тӑватӑ правили кӗнӗ. Вырӑсла пӗлмен ачасем вулама мар, пӑхмасӑр калама ҫеҫ вӗреннӗ. Ун чухне Раҫҫейре шкулсенче пуринче те пӑхмасӑр калама вӗрентесси вӗрентӗвӗн тӗп меслечӗ пулнӑ.

Удел училищисенче учительсем, учебниксемпе вӗренӳ пособийӗсем ҫитмен. 1829 ҫулта удел ведомстви Мускавра пуҫламӑш училищӗсем валли учительсем вӗрентсе хатӗрлекен Тӗп удел училищине те йӗркеленӗ пулнӑ, анчах ку та пулӑшайман. Ирӗксӗрех ҫӳлерех асӑннӑ Белл-Ланкастер меслечӗпе усӑ курма тивнӗ. Тӗп учебникӗсем вӑрах вӑхӑт хушши вырӑс педагогӗ В.А. Золотов (1804-1882) кӑларнӑ «Арифметика» тата «Русская азбука» пулнӑ.

1828 ҫулта йышӑннӑ уставра вӗренекенсене чӗрӗ хулӑпа ҫаптарма ирӗк панӑ. «Кирек епле тӑрӑшсан та, – тенӗ унта, – тепӗр чухне ҫирӗп наказани памасӑр е чӗрӗ хулӑпа ҫаптармасӑр та май килмест, вӗренекенсене йӗркене кӗртес тесе учитель тепӗр чухне ҫак мерӑсемпе те усӑ курма пултарать». Виҫӗ сӑлтавпа ҫаптарма пултарнӑ: ача япӑх вӗренсен, учитель ним пӗлми ӗҫсе лартсан, вӗренекенсенчен мӗн те пулин илме шут тытсан. Удел училищинчи ҫакӑн пек вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗ ача чун-чӗринче тарӑн суран йӗрӗ хӑ-

варнӑ. Учебниксене тата шкулти дисциплинӑсене вӗрентмелли меслетсем ачасемшӗн ӑнланма йывӑр пулнӑ. Тӑван чӗлхепе вӗрентменнипе вӗсем ӑс та пухайман, вӗренӳ программисене те ӑнланса ҫитереймен.

Пӑрӑнтӑк училищинче уйрӑмах вырӑс мар халӑх ачисене курайман, вӗсене ним вырӑнне те хуман, пӗр айӑпсӑрах вӗҫӗмсӗр нуша кӑтартнӑ. Каярахпа Яковлев хӑй училищӗре вӗреннӗ вӑхӑт ҫинчен, аслӑ классенче вӗренекен намӑссӑр, культурӑсӑр ачасем иртӗхни, кӗҫӗннисенчен мӗнлерех мӑшкӑллани ҫинчен йывӑр туйӑмпа кулянса аса илнӗ. Училище заведующийӗ А.И. Баратынский вӗрентӳ ӗҫне йӗркелесси, вӗренекенсене ырӑ кӑмӑллӑ, таса чун чӗреллӗ пулма вӗрентесси ҫинчен пӗрре те шутламан, вӗренекенсем ытларах чухне хӑйсем мӗн тӑвас тенӗ, ҫавна тунӑ. Яковлев ҫапла аса илет: «Баратынский священник училищӗре хӑш-пӗр чухне ҫеҫ килсе курӑнатчӗ, хӑҫан килессине вӗренекенсем пӗлетчӗҫ. Училище тӑрӑх утса ҫаврӑнатчӗ, хӑш-пӗр уроксене кӗрсе ларатчӗ, ытти вӑхӑта кӗнеке е хаҫат вуласа ирттеретчӗ. Уроксем ҫук чухне хутран-ситрен ҫеҫ курӑнкалатчӗ. Аслӑрах классенче вӗренекенсем хӑйсем иртӗхнӗ, кӗҫӗннисенчен мӑшкӑлласа кулнӑ тӗле килсе ан кӗтӗр тесе хапха умне е крыльца ҫине черетпе хуралҫӑ кӑларса тӑрататчӗҫ. Уйрӑм систермелли паллӑ та шухӑшласа кӑларнӑччӗ»,– тет И.Я. Яковлев хӑйӗн аса илӗвӗсенче. Заведующи ҫук чухне аслисем, уйрӑмах тунтикунсенче, кӗҫӗннисене пӗр шеллемесӗр хӗненӗ, тискеррӗн мӑшкӑлланӑ (чӗрнисем ӑшне тутӑхнӑ перосем чике-чике асаплантарнӑ), мӗскӗнсенчен ялтан илсе килнӗ апат-ҫимӗҫне турта-турта илнӗ. Кӗҫӗннисем Баратынские каласа пама хӑранӑ, мӗншӗн тесен каярахпа ҫакӑншӑн вӗсене тата хытӑрах лекме пултарнӑ.

Пӑрӑнтӑкра вӗреннӗ ҫулсенче Иван Яковлев икӗ хутчен йывӑр чирленӗ, 1859 ҫулхи ҫуркунне унӑн шӑпи пурнӑҫпа вилӗм хушшинче тӑнӑ. Анчах ҫамрӑклӑх ҫӗнтернӗ, йывӑр чир парӑннӑ. Ҫакӑн пирки вӑл 1867 ҫулхи акан 18-мӗшӗнче «19 ҫулта» ятлӑ ал ҫырӑвӗнче тӗплӗн каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ паян 19 ҫул тултартӑм, ҫавна май ҫак хушӑра пурнӑҫӑмра пулса иртнӗ паллӑ-

рах самантсене çырса парас шухăшăм пур. Эпĕ 1848 çулхи мăнкунта çуралнă. Хама 8 çултан пуçласа ас тума тытăннă. А(лексей) И(ванович) Ан(на) Алексеевнăпа мăшăрланнине хальхи пекех ас тăватăп. Туйне мĕнле туни асрах юлман, анчах вăл мăшăрланичченхи хăш-пĕр самантсем асрах. Туй хыççăн пирĕн пата А(лексей) И(вановичăн) çамрăк мăшăрĕн тăванĕсем килчĕç тата çĕнĕ çын мана мĕнле ачашланине ас тăватăп. 10 çул тултараспа эпĕ Алексей Баратынский священникĕн шкулне çӳреме пуçларăм, унта 1860 çулхи июньччченех пулнă. Ун чухне эпĕ икĕ хутчен йывăр чирленине ас тăватăп. Тăрăшса вĕренме кăна пуçланăччĕ, чечек чирĕпе аптраса ӳксе виçĕ уйăх таран выртрăм. Иккĕмĕш çулхине те çавăн пекех тăрăшса вĕренме пуçланăччĕ, юлташсене хăваласа çитес тесе шутланăччĕ. Анчах та каллех кĕтмен инкек сиксе тухрĕ. Ку çапла пулчĕ: каçсерен мана çӳлти сентре çине çывăрма вырттаратчĕç. Сентрепе кăмака хушшинче пушă вырăнччĕ. Эпĕ яланах пуринчен иртерех выртаттăмччĕ.

Пĕррехинче эпĕ, тарăн ыйха путнăскер, пĕр енчен тепĕр енне çаврăнса выртас тесе пулĕ, сентре çинчен персе аннă. Эпĕ урайĕнче вилнĕ пек юн юхтарса выртнине курсан пурте хăраса ӳкнĕ, тĕлĕнсе хытса кайнă. Мана пурте вилсех кайнă е халь-халь чунĕ тухать пулĕ тесе шутланă.

Сентре çинчен ӳкнĕ чухне эпĕ пуçа (пуç мими тапранмаллах) шăтарнă тата сылтăм хулпуççине вăйлă амантнă. Малтанласа пурте эпĕ вилнĕ пек выртнине курсан пурте шак хытса тăнă. Унтан салтак мана, тăна çухатнăскере, йăтса илсе мĕн ирчченех хăй чĕрçи çинче тытса ларнă, ирпе 6 сехетсенче тин эпĕ тăна кĕме пуçланă, анчах хам çакна пĕртте ас тумастăп. 9 сехет тĕлне пирĕн пата Алексей Иванович хăй килнĕ. Вăл тӳрех Пӳркеле фельдшера чĕнме янă. Çывăхра тухтăрсем пулман. Кăнтăрла, 12-сенче тин фельдшер килсе çитнĕ. Ку вăхăт тĕлне Алексей Иванович тухса кайнипе кайманнине ас тумастăп. Фельдшер ман патма çывхарчĕ те сурансене пăхма пуçларĕ. Тăна кĕнĕ чухне

пӳрт тулли халӑхчӗ, Алексей Ивановичӑн мӑшӑрӗ куҫ тӗлне пулчӗ. Алексей Иванович хӑй те питӗ салхуллӑччӗ.

Ҫакна эпӗ лайӑххах та ас тумастӑп: шӑнтса пӑрахрӗ, вара мана кӑмака ҫине йӑтса хучӗҫ. Ыратни туйӑнсах каймарӗ, анчах хускалаймарӑм, пурпӗрех тӑма хӑтлантӑм та пултараймарӑм, пуҫа алӑпа ярса тытрӑм. Ҫавӑн чухне ӑнсӑртран сурана лексе питӗ хытӑ ыраттартӑм, пуҫӑм каллех ҫатӑрах касса ыратса кайрӗ, чӑтма ҫук ыратрӗ. Кӑмака ҫумӗнче манпа мӗн пулса иртнине халӗ те аса илейместӗп, ӑнланса та ҫитерейместӗп.

Унтан мана ҫума пуҫларӗҫ, урӑх кӗпе тӑхӑнтартрӗҫ. Фельдшер часах юн кайнине чарчӗ те сурана темӗскерпе пӗҫертме пуҫларӗ. Ҫак чиртен эпӗ 1859 ҫулхи утӑ уйӑхӗнче тин сывалса ҫитрӗм.

Шухӑшласа пӑхӑр-ха, мӗн тери пысӑк инкек килсе ҫапнӑ мана. Ҫуллахи шӑрӑх кунсенче сурана пӗрмаях ҫуса тасатса тӑмаллаччӗ, унсӑрӑн вӑл ҫӗрме пултарнӑ... Хальхи пекех ас тӑватӑп, фельдшер пирӗн пата часчасах килсе ҫӳретчӗ, вӑл тӑрӑшнипе ҫеҫ сыватрӗҫ мана. Алексей Ивановичӑн шкулӗнчи виҫҫӗмӗш ҫул маншӑн телейлӗрех пулчӗ. Эпӗ хӑнӑхнӑ йӑлапа каллех тӑрӑшса вӗренме пуҫларӑм, хӗл варринелле юлташӑмсене хӑваласа ҫитрӗм, ҫуркунне тӗлне вара чи малтисенчен пӗри пулса тӑтӑм. Ҫуллен тытакан экзаменсем ҫывхарса ҫитрӗҫ, эпир Чӗмпӗр удел кантурӗн управляющине Н.А. Плотникова тата Алексей Иванович чӗннӗ ытти хӑнасене кӗтеттӗмӗр. Эпӗ хамӑн пуласлӑх ҫинчен нумай шухӑшлакан пултӑм, мӗншӗн тесен ларутӑру улшӑнчӗ. Экзаменсем тытнӑ хыҫҫӑн эпӗ хам мӗн тӑвас тенине тума пултарнӑ, анчах Алексей Иванович та манман иккен ман пирки. Экзаменсем пӗтсен эпӗ чи лайӑххи пулнине пӗлтерчӗҫ, мана ку лӑплантарчӗ, анчах тата ытларах пӑшӑрхантарчӗ. Икӗ уйӑха яхӑн чунтан куллянса ҫӳрерӗм, пӗрмаях: малашне ӑҫта кайса кӗмелле, мӗн туса пурӑнмалла. Вӗренес килетчӗ, анчах укҫа ҫук. Пӗррехинче Алексей Ивановичсен ҫемйинче калаҫса ларттӑмӑрччӗ. Мана мӗн кулянтарнине итлесе ларчӗ те хӗрхенсе калаҫа пуҫларӗ: «Ҫапла, чухӑнлӑх. Сана тем пекех гимназие вӗренме ярас килет, вара

тинех ҫулу уҫӑлӗччӗ, укҫа ҫукки чарса тӑма пултараймасть ҫакна».

Ун чухнехи хуйхӑм-суйхӑм ҫинчен халӗ калама та хал ҫитмест. Ӗмӗтӗме пурнӑҫа кӗртес шанӑҫ ҫуккине ӑнланнипе хампа хам нимӗн тума пӗлместӗмччӗ.

Алексей Иванович ҫав хушӑра мана Чӗмпӗрти арҫын ачасен гимназийӗ ҫумӗнчи ҫӗр ӗҫӗсен шкулне тӳлевсӗрех вырнаҫтарас тесе тӑрӑшса ҫӳренӗ. 1860 ҫулхи ҫурла уйӑхӗнче Н.А. Плотников Пӑваран Алексей Иванович патне ҫыру янӑ, мана Чӗмпӗре илсе пыма хушнӑ. Ҫапла турӑмӑр та. Чӗмпӗре ҫитсен тепӗр кунне Белокрысенко патне кайрӑмӑр, анчах вӑл пире йышӑнмарӗ» – вулатпӑр «Манӑн пурӑнӑҫ» кӗнекере.

Малалла Яковлев удел кантурӗнчен ҫула май лав тупса килне таврӑнни, авӑн уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче каллех Чӗмпӗре малалла вӗренме пырса ҫитни ҫинчен ҫырать.

Ҫак ал ҫырӑвӗ удел училищинче вӗренекенӗн пурнӑҫне тӗрлӗ енчен кӑтартса парать. Пӗлӳ енчен унта нимех те парайман, тӗн вӗрентӗвӗн пуҫламӑш пӗлӗвӗсемпе кӑна паллаштаркаланӑ. Анчах ытларах та ытларах пӗлесшӗн ҫунакан Иван Яковлев нумай ярпалана хӑй тӗллӗн вӗренме тӑрӑшнӑ. Икӗ ҫула яхӑн Мушкеевсен ҫемйинче пурӑннӑ. Вӗсенчен пӗри 1823–1856 ҫ.ҫ. Крым вӑрҫине хутшӑннӑ. Ҫав салтак аманнӑ Яковлевӑн пурнӑҫне ҫӑлса хӑварас тесе тӑрӑшнӑ та ӗнтӗ.

Мушкеевсен ҫемйинче Яковлев вырӑс халӑхне, унӑн культурине тата православи тӗнне хисеплеме вӗреннӗ. Ҫемье пуҫӗ Г.И. Мушкеев ҫинчен каярахпа Яковлев ҫапла каласа панӑ: «Ман асӑма вӑл тӗлӗнмелле ӗҫчен, хастар, ӗҫсӗр ларма юратман е кӗрӗк аркине йӑваласа ларма пултарайман пур енлӗ талантлӑ вырӑс хресченӗ пек кӗрсе юлнӑ. Ҫак ҫын тума пултарайман е вӑй ҫитереймен ӗҫ ҫук пек туйӑнатчӗ. Сӑмахран, унӑн хурт-хӑмӑр ҫукчӗ, туянма шутларӗ, хурт-хӑмӑр ӗҫне вӗренчӗ, часах вӗсен пӗтӗм халӑхшӑн кӑтартуллӑ тӗлӗнмелла чаплӑ утар пулса тӑчӗ».

Иван Яковлев Мушкеевсен ҫемйинче те ют ача пек пулман, ҫавӑнпа ҫемьери пӗр ӗҫрен те пӑрӑнман.

Вĕсем ăна ĕç хатĕрĕсем, тĕрлĕ инструментсем тума вĕрентнĕ. Çакă ăна удел училищинче вĕренме пĕртте чăрмантарман.

Юлашки вĕренӳ çулĕнче Иван Яковлев шкулта чи малта пыраканни пулнă. Çавăнпа та Баратынский ăна класс старостине лартнă, çакăн хыççăн вара кĕçĕн классенче йĕркесĕрлĕхсем пĕтнĕ, аслисем кĕçĕннисене кӳрентерме пăрахнă. Баратынский час-часах ăна хăйĕн килне чĕннĕ, Чĕмпĕр удел кантурĕнче ĕçлекен пысăк пуçлăхсемпе те паллаштарнă.

1860 çулхи çулла Иван Яковлев удел училищине чи лайăх паллăсемпе пĕтернĕ. Лайăх вĕренекенсем курс программине 4 çулта пурнăçланă, япăхраххисем вара – 5-10 çулта.

Яковлев хăй тăрăшулăхне кура тата тĕлĕнмелле ăслă пулнипе вĕренӳ материалне, йăлтах ăнланса пĕтереймен пулин те, ăнăçлă пурнăçласа пынă. Вырăс мар халăхсен ачисене шкулта вĕрентмелли политикăна ырланă «Русская школа» журнал ун йышши вĕренекенсем çинчен çапла çырнă: «Экзаменсенче ревизорсем чăваш ачисем тăнлă пулнинчен питĕ тĕлĕннĕ, ку ачасем пĕр ăнланмасăр темиçе учебника пăхмасăр калама вĕренсе çитеççĕ». Ăнланмасăр вĕренни, паллах, Белл-Ланкастер меслечĕпе çыхăннă, мĕскĕн вĕренекенсем вĕрентекенĕн чĕрĕ калаçăвне илтсе курмасăрах шкултан вĕренсе тухса кайнă. «Пăрăнтăк училищинчен вĕренсе тухнă чухне эпĕ вырăсла йĕркеллĕ калаçма та, çырма та вĕренсе çитеймерĕм, калаçнă чухне вырăсла кĕске предложенисем çеç йĕркелеме пултараттăм. Вырăсла кĕнекесене каярахпа тин, 1864 çулсенче, авантарах вулама вĕренсе çитрĕм. Апла пулин те училищĕрен вĕренсе тухнă чухне мана Крыловăн «Шăрчăкпа кăткă» юптарăвне пăхмасăр калаттарчĕç, унта сăмах мĕн çинчен пынине эпĕ ăнлансах та пĕтереймен ĕнтĕ. Филарет катехизисне ытти вĕренекенсем пекех пăхмасăр пĕлеттĕм, уроксенче те, экзаменра та пĕр такăнмасăр каласа панăччĕ. Анчах катехизиза эпĕ пĕртте ăнланман», – тесе аса илет И.Я. Яковлев.

## 2.3. Уезд училищинче тата ҫӗр виҫевҫисен класӗ

1860 ҫулхи авӑнӑн 5-мӗшӗнче Чӗмпӗр удел кантурӗ Уезд училищине пӗтӗм кӗпӗрнерен пухнӑ 18 ачана (ун чухне кӗпӗрнере пуҫламӑш пӗлӳ паракан 28 удел училищи пулнӑ) экзамен тыттарасси пирки хушу янӑ. Йышӑну экзаменӗсене ҫав кунах irттернӗ. Чӗмпӗр уесӗн училищине вӗренме кӗме экзаменсем тыттарнӑ ведомость сыхланса юлнӑ, списокра Яковлев хушамачӗ 8-мӗш тӑнӑ: «Пюркел приказне кӗрекен Кӑнна Кушки ялӗнчи Иван Яковлев (чӑваш) экзаменсене ҫак паллӑсемпе тытнӑ: сӑваплӑ истори 4, катехизис 4, арифметика 2, шутласси 2, гражданла пичете вуласси 4, славянла пичете вуласси 4, таса ҫырасси 3, диктант 2. Вӑтам балл – 3, йышӑнас». (Ун чухнехи правилӑсемпе «2» паллӑ хальхи «3»-пе танлашнӑ).

Йышӑннисен шутӗнче Яковлевсӑр пуҫне тата виҫӗ чӑваш ачи Афанасий Тихонов, Степан Федоров, Константин Андриянов пулнӑ. Вӗсенчен чи ҫамрӑкки – Иван Яковлев. Вӗсем пурте ялти пуҫламӑш училищӗсенче ӗҫлеме тивӗҫлӗ учительсем пулма хатӗрленнӗ. Анчах лару-тӑру урӑхларах килсе тухнӑ. 1860 ҫулхи кӗркунне Патшалӑх Совечӗ Чӗмпӗрти арҫын ачасен гимназийӗ ҫумӗнче ҫӗр виҫевҫӗ-таксаторсен класне уҫма йышӑннӑ. 1860 ҫулхи чӳкӗн 12-мӗшӗнче «Симбирские губернские ведомости» хаҫат ҫак классем уҫӑласси ҫинчен пӗлтерӳ пичетленӗ, анчах вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнине кура ҫӗнӗ классем йӗркелес ӗҫ тӑсӑлса кайнӑ. Гимнази дирекцийӗ Уезд училищине йышӑннӑ ачасенчен хӑшне-пӗрне ҫав классене куҫарма палӑртнӑ. Яковлев, ҫулӗпе ҫамрӑк пулин те, хӑй сисмесӗрех ҫӗр виҫевҫӗ-таксатор класне лекет.

Ҫӗнӗрен йӗркеленӗ классенче таксаторсене, ҫӗр виҫевҫисемпе чертежниксене вӗрентсе хатӗрленӗ. Ҫӗр улпучӗсем тытса тӑнӑ именисен карттисене тума, ҫӗр лаптӑкӗсен планӗсене ӳкерме, ҫӗр касса чикӗ палӑртма пӗлмелле пулнӑ вӗсен. Ачасем топографи, нивелировка, черчени, иллюминовка, планиметри, таксаци предмечӗсене, естествӑлла наукӑсене тата ҫӗрпе ҫыхӑннӑ законсене вӗреннӗ. Икӗ ҫул хушши ҫуллахи вӑхӑтра

уй-хирте практика ирттермелле пулнӑ. Ҫак классенче вӗрентессипе, ачасене пӑхса усрассипе ҫыхӑннӑ тӑкаксене шайлаштарма хресченсенчен кашни чунран 6-шар пус ҫӗнӗ йышши хырҫӑ пуҫтарнӑ.

Кунта тӗрлӗ ҫынсен, хресченсен, ремесленниксен, пӗчӗк чиновниксен, ачисем вӗреннӗ. Иккӗмӗш ҫулхине Яковлевпа пӗрле сахал мар чӑваш вӗреннӗ. Вӑл Афанасий Никитинпа, Прохор Акимовпа, Александр Егоровпа ҫывӑх туслашса ҫитнӗ. Ҫавӑн пекех пӗрле вӗреннӗ Чӗмпӗр вырӑсӗпе Ф.И. Альдинпа Яковлев вырӑсла лайӑхрах калаҫма хӑнӑхнӑ.

1861 ҫулхи ҫулла тӗлне ҫӗр виҫевҫӗ-таксатор класӗсенче – 34, 1862 ҫулта – 23, 1863 ҫулта 20 ача вӗреннӗ. Мӗн вӗрентни пӗтӗмпех вырӑсла пулнипе пурте ӑнлансах вӗренеймен. Ҫавӑнпа чылайӑшӗ ирӗксӗрех пӑраха-пӑраха кайнӑ. Анчах Яковлевӑн вӗренӗве пӑрахас шут пулман, пачах урӑхла, Баратынский сӗннипе 1861 ҫулхи ҫулла пушӑ вӑхӑтра вырӑсла лайӑхрах калаҫма вӗренес тесе хӗмленнӗ, хӑйпе хӑй вырӑсла калаҫнӑ, вырӑсла шухӑшлама тӑрӑшнӑ, вырӑсла кӗл тунӑ.

Яковлев хӑй аса илнӗ тӑрӑх, ҫӗр виҫевҫисен класӗнче вӗренӳ те, ытти енӗпе те лару-тӑру удел училищинчен авантарах пулнӑ. Хӑш чухне тӗрлӗ халӑх ачисем хушшинче тавлашусем пулкаланӑ, анчах пӗр-пӗрин ҫине алӑ ҫӗклесси патнех ҫитмен. Ҫапах та чӑваш ачисем туслӑ пулнӑ, пӗр-пӗриншӗн ҫирӗп тӑнӑ.

Ҫак хушӑра И. Яковлев Чӗмпӗр ҫӗр улпучӗпе, отставкӑна тухнӑ полковникпа С.Д. Раевскипе (1803-1868) паллашнӑ. Самсон Дмитриевич Раевский пултаруллӑ чӑваш ачине ҫивӗч ӑсӗшӗн, ырӑ та тӳрӗ кӑмӑлӗшӗн килӗштернӗ, каярахпа Яковлева хӑйне вӗренме те, чӑваш шкулӗнчи ачасене тытса тӑма та пӗрре мар укҫа парса пулӑшнӑ.

Раевскисен ҫемйи Яковлева пысӑк витӗм кӳнӗ, ӑна вырӑс культурине тимлӗрех тӗпчесе пӗлме хавхалантарнӑ. А.С. Пушкин ҫинчен каласа панисене нумай итленӗ ҫамрӑк каччӑ. Раевскисем пулӑшнипех вырӑс чӗлхипе литературине тӗплӗнрех вӗренме пуҫланӑ, пурнӑҫра ҫакӑ калама ҫук пысӑк пӗлтершлӗ пулнине ӑн-

ланнă. Каярахпа Яковлев çак çемье пирки чĕререн тав туса ăшшăн аса илнĕ, вĕсем унăн шăпине пархатарлă витĕм кӳнине палăртнă. Хусан вĕренӳ округне, Çутĕç министерствине тăратнă документсемпе отчетсенче вăл хăй çинчен çапла пĕлтернĕ: «Эпĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи удел хресченĕсен çемйинче çуралнă, чăваш, анчах вырăс çемйинче воспитани илнĕ, вырăс шкулĕ витĕр тухнă». Паллах, Мушкеевсемпе Раевскисен çемйисене шута илнĕ ĕнтĕ вăл.

1964 çулхи ака уйăхĕнче Иван Яковлев çĕр виçĕвçĕ-таксатор класĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă, çĕр виçевçĕ тата таксатор ятне илнĕ. Вĕреннĕ чухне, паллах, чи лайăххисен шутĕнче пулнă. Вĕренсе тухакансем пурте икĕ çул хушши опытлă çĕр виçевçисем çумĕнче стажировкăра, çĕр пайлакан пулса ĕçлеме тивĕçлĕ пулнă. Вĕренекенсемпе вĕсен ертӳçисем мĕнле ĕçлени çинчен çулсерен Уделсен департаментне тĕплĕ отчет тăратнă. Çав отчетсенчен Яковлев пултаруллă стажер пулни курăнать. Икĕ çул вырăнне вăл темиçе уйăх çеç практикант пулнă, кĕпĕрнере специалистсем çитменнипе пултаруллăраххисене вăхăт çитиччене хчĕр виçевçине куçарнă. Çавсен шутне Яковлев та кĕнĕ. 1864 çулхи çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче ăна Уделсен департаменчĕ ялти çĕр виçевçи пулма çирĕплетнĕ, çулталăкне 120 тенкĕ шалу уйăрса, Сызране янă. Кунта вăл çав çулхи утă уйăхĕнче Григорий Александров мордвинпа пĕрле пырса çитнĕ, вырăнти удел кантурне вырнаçнă.

Уй-хирте çĕр виçсе çӳренисĕр пуçне çамрăк специалистсен куллен журнал çырса пыма, уйăхсерен отчетсем тăратма тивнĕ. Паллах, çуллахи вăхăтра çĕр виçевçисен ĕç кунĕ тул çутăлсан пуçланнă та мĕн хĕвел аниччен пынă, яра куна уй-хирте ирттернĕ, тĕрлĕрен хут ĕçĕпе ларма вăхăт та çитмен. Кĕпĕрнери чи аслă çĕр виçевçи Сегедий капитан вара кирек хăш вăхăтра та отчетсем ыйтса илме, журналсене мĕнле çырса пынине тĕрĕслеме пултарнă. Анчах Яковлев пирки нихăçан та нимĕнле ӳпкев те пулман. Ачаран ĕçре пиçĕхсе ӳснĕскер, хăйне хушнă пур ĕçе те тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама хăнăхнă. Аслă пуçлăхсем хăйсен

отчечёсенче Яковлева çакăншăн яланах ырăпа асăннă, И. Яковлевпа Г. Александрова пĕрре мар укçан преми парса чысланă. Сызрань удел кантурĕн пуçлăхĕ А.А. Панчулидзе 1865 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче Уделсен департаментне хăйсен тӳрĕ кăмăллă ĕçĕпе палăрнă çĕр виçевçисен пĕр ушкăнне укçапа хавхалантарма ыйтса хут тăратнă. Списокра И. Яковлев хушамачĕ 1-мĕш тăнă. Çавна май Яковлев 20 тенкĕ преми илнĕ. Çав çулхи пуш уйăхĕн вĕçĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн тата патшалăхшăн усăллă ĕç тунăшăн тепĕр хут Иван Яковлева – 40 тенкĕ, Григорий Александрова 25 тенкĕ преми панă.

Вырăсла лайăх калаçма тата вулама вĕренсе çитнĕ Яковлев Раççейĕн тĕрлĕ хулисенчен нумай кĕнеке, хаçат-журнал çырăнса илнĕ. Ĕçлесе илекен укça-тенкĕн ытларах пайĕ тăтăшах кĕнекесемпе пĕтсе пынă.

Юр ирĕлме пуçласан уессем тăрăх тухса кайнă та хура кĕркуннеччен тĕрлĕ ялсенче ĕçлесе çӳренĕ. Вырăссем, чăвашсем, тутарсемпе ирçесем хушшинче пурăнма тивнĕ. Тем те курнă, тем те тӳснĕ. Çын хĕннетертне курсан кашнинчех пултарнă таран пулăшма тăрăшнă: «Мĕн пĕчĕкрен эпĕ çынсен чухăнлăхне, вĕсем тертленнине чуна ыраттармасăр курса тăма пултарайман, вĕсене пулăшас тесе яланах мĕн те пулин тăвас килетчĕ. Акă, пĕррехинче Паньшино ялне (Сызрань уесĕнче ĕçленĕ чухне) пĕрре мар Георги хĕресне тивĕçнĕ вырăс салтакĕ таврăнчĕ. Урисене аран-аран куçаркаласа утнипе ăна ялан пĕр ача çавăтса çӳретчĕ. Аса илейместĕп, çак мĕскĕн инвалида эпĕ мĕн чухлĕ укçа патăм-ши, анчах тăван çĕршывшăн юн юхтарнă салтакăн пурнăçĕ çавăн пек сумсăр пулни мана чунчĕререн тарăхтарнине ас тăватăп. Паттăрсене çапла сумран кăларма юрать-и вара»,– тесе аса илет И.Я. Яковлев.

Çĕр виçевçĕре ĕçленĕ малтанхи çулсенчех Яковлева чăвашсен çырулăхĕ çукки, тĕн кĕнекисене те пулин чăвашла кăларманни хытă шухăшлаттарнă. Мĕншĕн, мĕншĕн чăвашсем хăйсен чĕлхипе вулама-çырма пултараймаççĕ? Анчах ку ыйтусем çине хурав пама унăн

пĕлӳ çитсех кайман. Çавăн пек ыйтусемпе «аташнăшăн», пĕрмаях чăвашсен çырулăхĕ пирки калаçма юратнăшăн юлташĕсем Яковлева «фантазер», «нигилист» ят панă. Ялан пĕр евĕрлĕ ĕç Яковлевăн чунне тивĕçтереймен. Хăйпе юнашар вăл культурăллă, нумай вĕреннĕ, нумай пĕлекен çынсене шыранă, çавăнпах Чĕмпĕре куçасси килнĕ. 1862 çулта уй-хир практики вăхăтĕнче вăл ӳксе урине сиктернĕ, вăхăтра сиплемен-нине пула ури пĕрмаях сурнă. Вăраха кайнă чире Чĕмпĕр тухтăрĕсем патĕнче сиплес тесе вăл хăйне Чĕмпĕре куçарма ыйтать. 1865 çул вĕçнелле унăн ыйтăвне тивĕçтереççĕ. Яковлев Сызраньтен Чĕмпĕре куçать, кунта та çĕр виçевçи пулса ĕçлеме тытăнать. Çав хушăра каллех Раевскисем патне çӳреме тытăнать, малалла вĕренесси пирки шухăшлать, гимназие вĕренме кĕрес ĕмĕт канăç памасть.

1866 çулхи пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче вăл хăйне службăран хăтарма ыйтса Чĕмпĕр удел кантурне хут çырать, анчах унта хăй малалла вĕренме ĕмĕтленнине пĕлтермест. Кантур управляющийĕ А.Ф. Белокрысенко çакăн пек ыйтусене илтесшĕн те пулман. Яковлев Петербурга Уделсен департамент совечĕн председателĕ Ю.Н. Стенбек граф ячĕпе прошени çырать, хăйĕн сывлăхĕ пирки медицина справки тăратать. Император дворĕн министерствин Уделсен департамент совечĕн членĕ Ананьев генерал Петербургран хурав ярать, Иван Яковлева чире пула службăран хăтарма май паракан документсем хатĕрлесе тăратма сĕнет. Анчах Удел кантурĕ çакна Яковлевран пытарать. Белокрысенко хăйне пĕлтермесĕр аслăрах пуçлăхсем патне çыру çырнăшăн Яковлева хытă çиленнĕ, çакăншăн ăна ниепле те каçарма пултарайман. Тăватă уйăх иртнĕ, Яковлев Петербургран нимĕнле хурав та кĕтсе илеймен, тата тепĕр çыру, ку хутĕнче Император дворĕн министрĕ В.Ф. Адельберг ячĕпе çырать. 1866 çулхи утă уйăхĕнче Чĕмпĕртен каллех хурав ыйтаççĕ. Генерал ыйтăвĕсем Белокрысенкăна кашни хутĕнчех тарăхтарнă, вара вăл Яковлевран хăтăлас тесе ăна Чĕмпĕртен Улатăра куçарма хушать. Ун чухне Улатăр кантурне халь-

халь хупма тивӗҫлӗ пулнӑ, ҫапла вара Яковлев пачах ӗҫсӗр тӑрса юлма пултарнӑ.

1866 ҫулхи раштав пуҫламӑшӗнче Белокрысенко Улатӑра хӑй пырса ҫитнӗ. Яковлев каллех хӑйне ӗҫрен хӑтарма ыйтнӑ, гимназие вӗренме кӗме шут тытни ҫинчен пӗлтернӗ. Пулӑшас вырӑнне Белокрысенко: «Эсӗ нихӑҫан та гимназие лекеймӗн!» – тесе хӑтӑрса пӑрахнӑ. Управляющи тем пекех хирӗҫ тӑнӑ пулин те Раевскипе Баратынский чӑваш каччин хутне кӗнӗ, удел кантурӗпе кӗпӗрнаттӑртан темиҫе хутчен те ҫамрӑк ҫынна пулӑшма ыйтнӑ.

Баратынский патне янӑ ҫырусенчен пӗринче Яковлев Белокрысенко пирки ҫапла ҫырать: «Вӑл манпа сиввӗн калаҫрӗ, ӗҫрен хӑтарма шутламанни ҫинчен пӗлтерчӗ, хӑтарасан та ырӑпа пулас ҫуккине, ҫапла вара маншӑн гимнази ҫулӗ хупӑнассине систерчӗ. Белокрысенко г. мана япӑх ӗҫлет тесе хӑтарасшӑн пулас».

Баратынский сӗннипе чӑваш каччи Чӗмпӗр кӗпӗрнаттӑрӗ Велио барон патне ҫитет. Барон ӑна ӑшшӑн кӗтсе илнӗ, анчах пулӑшайман, хӑй Белокрысенкӑпа калаҫса пӑхни, лешӗ вара Яковлева тем парсан та ӗҫрен яманни ҫинчен пӗлтернӗ. Ун чухне ҫӗр виҫевҫисен ытларах пайӗ патшалӑх ӗҫне пӑрахса харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлеме пуҫланӑ. Ҫак ӗҫ тупӑшлӑрах пулнӑ. Ҫавна пулах Белокрысенко та Яковлев пирки иккӗленнӗ, вӑл та ыттисен ҫулӗпех кайӗ, тесе шутланӑ. Ҫапах та ҫамрӑк ҫын хӑйӗн ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртме майне тупатех.

С.Д. Раевскин тӗп хулара пысӑк вырӑнта ӗҫлекен ҫывӑх пӗлӗшсем сахал мар пулнӑ, вӑл ятарласа Ананьев генералпа тӗл пулса Яковлев пирки калаҫнӑ, чӑваш каччи тупӑшлӑрах вырӑн шыраса мар, гимназие вӗренме кӗрес ӗмӗтпе пурӑннине ӗнентернӗ. Ананьев генерал 1866 ҫулхи юпан 26-мӗшӗнче Чӗмпӗр удел кантурне чӑваш каччи пирки виҫҫӗмӗш хут ыйту тӑратать, ҫӗр виҫевҫинче ӗҫленӗ Брюханов депутат хальхи вӑхӑтра управляющи енчен нимӗнле чару та пулма пултарайманни ҫинчен пӗлтерме хушать. Анчах Яковлевӑн ҫакӑн хыҫҫӑн та тӳрех ӗҫ тухайман-ха. Тепӗр

уйăхран тин удел кантурĕ тĕп хулари Департамента Яковлева ĕçрен хăтарма хирĕç пулманни çинчен тивĕçлĕ хутсем ăсатнă.

Удел ведомствин законĕсемпе килĕшӳллĕн тӳлевсĕр вĕренсе пĕлӳ илнĕ çамрăк специалистсен патшалăх ĕçĕнче 10 çултан кая мар ĕçлеме тивĕçлĕ, маларах ĕçрен тухас пулсан, удел ведомствин вĕренӳ заведенийĕнче вĕреннипе çыхăннă тăкаксене саплаштармалла пулнă. Çак тĕллевпе Яковлев уйрăм çынсен çĕр виçĕвĕпе çыхăннă ыйтăвĕсене тивĕçтернипе пухнă 200 тенкине упранă. Анчах çамрăк çынна çак йывăрлăхран хăтарнă.

Яковлев гимназин пиллĕкмĕш класне вĕренме кĕме ĕмĕтленнĕ. Аслăрах класа кĕме май пулман, мĕншĕн тесен çĕр виçевçĕ-таксатор класĕ гимназири тăвата класпа çеç танлашма пултарнă. Аслăрах классенчен пĕрне кĕрес тесен ятарлă экзаменсем тытмалла пулнă, çав шутра ют чĕлхесемпе те, вĕсене вара çĕр виçевçисене пачах та вĕрентмен; Улатăрта ĕçленĕ чухне Яковлев вырăс, нимĕç, француз тата латин чĕлхисене вĕреннĕ, математикăпа, историпе хатĕрленнĕ. Ăна Улатăрти уес училищинче ĕçлекенсем пулăшнă. Математикăпа Чулхулари дворянсен институтĕнчен «нигилизмшăн» кăларса янă А.А. Мукосеев хушаматлă учитель патне хатĕрленме çӳренĕ.

Яковлев Чĕмпĕрте Раевскисем патĕнчех хваттерте тăнă, ун чухне вĕсен пĕр тăванĕ аслă вĕренӳ заведение вĕренме кĕме хатĕрленнĕ, ун валли ятарласа ирттерекен уроксенче Яковлева та вĕренсе ларма ирĕк панă. Çавăн пекех вăл гимназири уроксене те кайса çӳренĕ. Вырăс сăмахлăхĕпе ăна «Симбирские губернские ведомости» хаçатăн редакторĕсенчен пĕри М.В. Арнольдов хатĕрленме пулăшнă.

1867 çулхи пушăн 31-мĕшĕнче И.Я. Яковлев гимнази директорĕ ячĕпе прошени çырса панă тата кирлĕ документсем хатĕрлесе тăратнă. Çавăн пекех хăй тăлăх ача пулнине шута илсе ăна вĕреннĕшĕн тӳлессинчен хăтарма ыйтнă.

Гимнази директорӗ И.В. Вишневский Яковлевӑн докуменчӗсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн 1867 ҫулхи ака уйӑхӗн 5-мӗшӗнче Хусан вӗренӳ округӗн попечителӗ патне официаллӑ ҫыру янӑ: «Пӑва уесӗн Пӳркел вулӑс правленине кӗрекен Кӑнна Кушки ялӗн хресченӗ Иван Яковлев эпӗ ертсе пыракан гимназие вӗренме кӗме ирӗк ыйтса ман патма тивӗҫлӗ хутсем тӑратрӗ. Докуменчӗсем тӑрӑх, вӑл 19 ҫулта. Иван Яковлев, эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, чӑваш, вӗренес тесе чунтан тӑрӑшакан ҫамрӑк вулама, ҫырма пӗлет, ҫӗр виҫевҫинче ӗҫленӗ май арифметикӑна лайӑх ӑнланать. Асӑннӑ ӗҫре сахал мар тӳлеҫҫӗ пулин те хальхи вӑхӑтра вӑл малалла вӗренес тӗллевпе ку ӗҫрен тухнӑ.

Ку ҫеҫ те мар, Яковлев гимназире илнӗ пӗлӳсемпе те ҫырлахса ларасшӑн мар, аслӑ пӗлӳ илесси пирки ӗмӗтленет. Чӑваш ҫынни ҫапла вӗренесшӗн ҫунни, ман шутӑмпа, пысӑк пӗлтерӗшлӗ, мӗншӗн тесен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн вӑл хӑйӗн йӑх ҫыннисене те вӗренме кирлине ӑнлантарма пултарӗ, унсӑрӑн чӑвашсем халлӗхе вӗренӳ ӗҫӗнчен ҫав тери ютшӑнаҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра Пӑва уесӗн училищинче виҫӗ чӑваш ачи вӗренет, эпӗ шутланӑ тӑрӑх, Яковлева курса, вӗсем те каярахпа малалла вӗренес тесе шутлӗҫ».

1867 ҫулхи акан 24-мӗшӗнче Вӗренӳ округӗн попечителӗ П.Д. Шестаков гимнази директорне ҫапла хыпарланӑ: «Сире шанса панӑ гимназин пиллӗкмӗш класне кӗме экзаменсем тытнӑ хыҫҫӑн Иван Яковлев хресчене вӗренме илме ирӗк паратӑп», – ҫапларах ҫырса кӑтартать Н.Г. Краснов ҫакӑн пирки хӑйӗн «И.Я.Яковлев и его потомки» кӗнекинче.

Яковлев ҫырупа ҫав кунах паллашнӑ. Юлнӑ вӑхӑтпа пӗлсе усӑ курмалла, ҫывӑх вӑхӑтра унӑн 17 экзамен тытмалла пулнӑ. И.В. Вишневский чӑваш ачи вӗренме тӑрӑшнине ырланисӗр пуҫне ӑна пур енӗпе те пулӑшма тӑрӑшнӑ. Маларах ӑна пиллӗкмӗш класа экзаменсемсӗрех вӗренме илме ирӗк те ыйтса пӑхнӑ, анчах вӗренӳ округӗ килӗшмен. Яковлев экзаменсене пурне те ӑнӑҫлӑ тытаймасран хӑранӑ, ҫавӑнпа Вишневский ӑна малтанласа ирӗклӗ слушатель пек те илме хатӗр тӑнӑ.

Экзаменсене хĕрсех хатĕрленнĕ вăхăтра, 1867 çулхи çулла, О.Л.Косинский çамрăк çынна пысăк укçаллă ĕç сĕнсе пăхнă. Пĕр имени карттине ӳкерсе парсан 6 пин текнĕ таран тӳлеме шантарнă. Анчах çак тапхăрта малалла вĕренме çирĕп тĕллев тытнă чăваш каччине нимĕнле укçапа та илĕртме май пулман.

Яковлев кунĕн-çĕрĕн вĕреннĕ, анчах инкеке, тифпа чирлесе ӳкнĕ. 1867 çулхи çурлан 7-мĕшĕнче вăл С.Д. Раевские çапла çырса пĕлтернĕ: «Ку çырăва аран-аран çыратăп, виçĕ кун ĕнтĕ тифпа чирлесе выртатăп. Ĕнер кунĕпех пысăк температура пулнипе иртен пуçласа каçчен аташса вырнă, вĕрилентерсех тăнипе пуç хытă ыратать».

Телее, экзаменсем тытнă вăхăта вăл сывалса çитет, анчах пурне те ăнăçлах тытайман, çитменнине çамрăк çын вырăс грамматикине лайăхах пĕлмен. Вăл тăлăх çын пулнине шута илсе директор Яковлева 5-мĕш класс гимназисчĕсен списокне кĕртет. Паллах, ку Яковлева хавхалантарнă, часах вăл ытти экзаменсене ăнăçлах парса пĕтерет: «Алексей Иванович сире çак хыпара пĕлтерме васкатăп: авăнăн 1-мĕшĕнче гимназин 5-мĕш класне вĕренме кĕтĕм, тĕрĕссипе паянхи кун тĕлне çеç пуçĕпех йышăнчĕç теме юрать. Экзаменсем йышăннă чухне историпе, турă законĕпе тата географипе лайăхах параймарăм, ытти 12 предметпа лайăх тата вăтам тытрăм, халĕ ĕнтĕ эпĕ ыттисемпе те лайăх тытса пĕтертĕм.

Кулленхи оценкăсем аван (çакă маншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ). Предметсем нумайййипе тата вăхăт çитменнипе вĕренме питĕ йывăр; чи пысăк йывăрлăх – француз тата нимĕç чĕлхисемпе, вĕсемпе манăн хăнăхусем сахалтарах, халĕ те вĕсемпе ăнăçлăрах хатĕрленсе ларма май çук, тĕрĕссипе, мана пулăшакан учитель кирлĕ пулать» – тет вăл А.И. Баратынский патне авăнăн 23-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче.

Çапла И.Я. Яковлевăн тахçантанпах ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитет, вăл Чĕмпĕрти арçын ачасен гимназийĕнче вĕренме пуçлать.

## 2.4. Гимназире

Яковлев гимназире вĕреннĕ çулсем Раççейри ирĕклĕх юхăмĕпе пĕр вăхăталла килнĕ, çавна май патша правительстви хăш-пĕр либераллă реформăсем туса ирттернĕ. Çав улшăнусем вĕренÿ системине те пырса тивнĕ.

1864 çулхи чÿкĕн 19-мĕшĕнче гимназисен çĕнĕ уставне йышăннă. Ун тăрăх гимназисем икĕ тĕслĕ пулнă: классикăлла гимнази – авалхи икĕ чĕлхене (латин тата грек чĕлхисене) вĕрентекеннисем тата реальнăй гимназисем – авалхи чĕлхесене вĕрентменнисем. Гимназисене пурне те ячĕшĕн мĕнпур халăхсен тата мĕнпур сословисен ачисене вĕрентме тивĕçлĕ тесе пĕлтернĕ. Анчах, тĕрĕссипе, апла пулман, вĕсенче ахаль çынсен ачисем вĕренеймен, мĕншĕн тесен вĕренÿшĕн нумай тÿлемелле пулнă. 1864 çулччен Чĕмпĕр гимназийĕнче вĕреннĕшĕн çулталăкне 10 тенкĕ тÿлемелле пулнă пулсан, çĕнĕ уставпа – 20 тенкĕ. 1864 çулхи устав вĕренÿ заведенийĕсенче ачасене хĕнеме чарнă. Общественость, уйрăмах либерал-демократсен юхăмĕн паллă деятелĕ Н.И. Пирогов майлă çынсем çине тăнипе гимназисен педагогика совечĕсен тивĕçĕсемпе прависене анлăлатнă. Çĕнĕ уставпа директор педсовет йышăнăвĕсене улăштарма пултарайман, вĕсем пирки вĕренÿ округне çеç çырса пĕлтерме пултарнă. Çĕнĕ уставпа килĕшÿллĕн Халăха вĕрентес ĕç министерстви 1865 çулхи авăнăн 27-мĕшĕнче пĕрлехи расписани туса хатĕрленĕ: уроксен вăхăчĕ 60 минут, занятисене ирхине 9 сехетрен пуçласа 15 сехет те 15 минутчен, виççĕмĕш урок хыççăн – (12.30–13.00) вăтăр минут хушши апат çимелли тăхтав. Кунсерен пилĕкшер урок ирттермелле.

Анчах кашни вĕренÿ заведенийĕ, çав шутра Чĕмпĕрти 1809 çулта уçăлнă арçын ачасен гимназийĕ те, хăйĕн уйрăмлăхĕсемпе традицийĕсемпе палăрса тăнă. 1864 çулхи уставпа классикăлла гимназире грек тата латин чĕлхисене вĕренмелле пулнă. Анчах Чĕмпĕр гимназийĕнче грек чĕлхине вĕрентессине майĕпен, учительсем вĕрентсе хатĕрленĕ май кĕртсе пынă. Çав вăхăтрах естествоведени программине чылай чакарнă. 1864-1870

çулсенче гимназире грек чĕлхипе вĕрентекен пулманнипе латин чĕлхине çеç вĕрентнĕ. Анчах гимназистсен икĕ çĕнĕ ют чĕлхе – нимĕç тата француз чĕлхисене вĕренме тивнĕ. Чĕмпĕрти арçын ачасен гимназийĕн уйрăмлăхĕсенчен пĕри çакă пулнă. Тепри – ачасем законоведени курсĕ программăна кĕмен пулсан та Раççей законĕсен никĕсĕсене вĕреннĕ.

1867 çулта гимнази çумĕнче икĕ çуллăх хатĕрлев класне уçнă, вĕреннĕшĕн çулталăкне 20 тенкĕ тӳленĕ. Гимназистсен пурин те пĕр формăпа çӳремелле пулнă. Шăпах çавăн чухне Яковлева ĕçленĕ чухне пухса пынă укçи-тенки кирлĕ пулнă.

Гимнази çумĕнче çулталăкне 180 тенкĕ тӳлесе тăмалли пансион пулнă, анчах Яковлев унпа усă курман, Раевскисем патĕнче вăл 1868 çулхи кĕркуннечченех пурăннă.

Яковлева, чухăн çын пулнине шута илсе, гимназире вĕреннĕшĕн укçа тӳлессинчен хăтарма тивĕçлĕ пулнă. Анчах V класшăн экзаменсене пурне тӳрех ăнăçлă парса пĕтерейменнипе унăн 1867/1868 вĕренӳ çулĕн пирвайхи çур çулĕшĕн тӳлеме тивнĕ.

Гимназин пиллĕкмĕш класс программине çак предметсем кĕнĕ: турă законĕ, вырăс чĕлхи, латин, француз, нимĕç чĕлхисем, алгебра, геометри, истори тата физика. Паллах, вырăс мар çамрăксемшĕн вырăс чĕлхине тата ытти чĕлхесене те вĕренесси çăмăлах пулман. Апла пулин те Халăха вĕрентес ĕç министерстви Вăтам Атăл тăрăхĕнче пурăнакан вырăс мар халăхсен ачисене нимĕнле çăмăллăх та паман. Çав хушăрах министерство Астраханьти арçын ачасен гимназийĕнче вĕренекен калмăк ачисене чиркӳ-славян чĕлхине вĕренессинчен хăтарма тата ун вырăнне калмăк е тутар чĕлхине вĕренме ирĕк панине кăтартса паракан документсем те пур.

Пуринчен те ытларах Яковлева математика дисциплинисемпе истори килĕшнĕ, анчах ют чĕлхесем çăмăллăнах «парăнасшăн» пулман. Вĕренӳ çулĕн пирвайхи уйăхĕсенчех гимнази преподавателĕсем вăл вĕренес тĕлĕшпе çав тери ĕçчен пулнине асăрханă. Вăл

чăвашсенчен гимназие вĕренме кĕнĕ пĕрремĕш çын пулнă. Чăваш каччине уйрăмах вырăс чĕлхин преподавателĕ А.И. Виноградов килĕштернĕ, ун валли ятарласа хушма занятисем ирттернĕ, хăй тĕллĕн вĕренмелли уйрăм заданисем панă. Çапла майпа Яковлев кĕске вăхăт хушшинчех пысăк çитĕнӳсем тунă, çакăншăн ăна А.И. Виноградов нимĕçле çырнă кĕнеке парнелесе хавхалантарнă. Гимназире вĕреннĕ чухне Яковлев чăвашсене, хăйĕн тăванĕсемпе çывăх çыннисене те манмасть. 1867 çулхи авăнăн 23-мĕшĕнче А.И. Баратынский патне çапла çырать: «Çывăх вăхăтра эпĕ тăванăмсене 10 тенкĕ ярса пама шутлатăп. Паллах, çав ачана (эпĕ ун пирки сирĕнпе калаçнăччĕ) малалла училищĕне вĕренме ячччĕр тесе тăватăп. Ăна ку тарнччен те вĕренме яман пулсан, Алексей Иванович, эпĕ сире тархаслатăп, пулăшсамăр эсир вĕсене çак пысăк ĕçре». Кунта Яковлев хăй ӳссе çитĕннĕ çемьери Унтри ывăлĕ Петĕр пирки сăмах пырать. Баратынский хайĕн вĕренекенĕн ыйтăвне пурнăçланă. Çавăн пекех вăл Яковлев валли латин чĕлхипе тӳлевсĕрех вĕрентекен учитель те тупса панă, гимназист унпа уйрăм занятисем ирттернĕ.

Яковлева ытти предметсемпе те, уйрăмах ют чĕлхесемпе, тӳлевсĕр вĕрентекен ырă çынсем татах тупăннă. Çапла вара V класăн пĕрремĕш çур çулне вăл ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ, лайăх вĕреннĕшĕн ăна иккĕмĕш çур çулта укçа тӳлессинчен хăтарнă. Гимназин педагогика совечĕн 1868 çулхи пушăн 4-мĕшĕнчи протоколĕнче çапла çырса хунă: «V класс вĕренекенне Иван Яковлева, чухăн пулсан та чи лайăх паллăсемпе вĕренсе пынăшăн тата занятисене пур енĕпе те йĕркеллĕ çӳренĕшĕн укçа тӳлессинчен хăтарас».

Гимназин пиллĕкмĕш класне Иван Яковлев пуян ачисенчен нимĕн чухлĕ кая юлмасăр пĕтернĕ. Хăйсен тăрăшулăхĕпе вăл Атăл тăрăхĕнче пурăнакан ытти вырăс мар халăхсен ачисем те вырăссем пекех лайăх вĕренме пултарнине кăтартса панă. Çакăн пек фактсене общественность асăрхамасăр тăма пултарайман. 1868 çулта «Симбирские губернские ведомости» хаçат çапла пĕлтернĕ: «Çапла, пĕр 2 е 3 çул каялла Чĕмпĕрти

арçын ачасен гимназийĕнчен пĕр мордвин ылтăн медальпе вĕренсе тухнăччĕ, хальхи вăхăтра вара çав гимназирех чăваш каччи питĕ лайăх вĕренсе пырать». Сăмахĕ, паллах, И.Я. Яковлев пирки. Вырăс мар халăхсен ачисем училищĕсенче çеç мар, гимназире те лайăх вĕренме пултарнине курса, гимнази директорĕ И.В. Вишневский уес училищисем çумĕнче гимназие вĕренме кĕме хатĕрлекен курссем йĕркелеме сĕннĕ.

Яковлева та вырăс мар ачасене вĕрентес шухăш ярса илет. Çав шухăш унăн пуçĕнче 1868 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче тухнă «Симбирские губернские ведомости» хаçата вуласан çуралать, унта ялти училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн малалла хулара вĕренме ĕмĕтленнĕ çармăс ачисем пирки çырнă. Ĕпхĕве çапла миссионер училищисенчен 10 ачана илсе пыни, вĕсене вĕрентме 200 тенкĕ уйăрса пани çинчен хыпарланă хаçат. 1868 çулхи çĕртме уйăхĕнче Яковлев Чĕмпĕр тата Пăва уесĕсене тухса кайнă, ачасене хулана вĕренме пыма йыхăрнă, анчах пĕрне çеç ўкĕте кĕртейнĕ. Ку вăл Яковлевăн тăван ялĕнчи юлташĕ, Кăнна Кушки ачи Алексей Рекеев пулнă. Çапла вара гимназире вĕреннĕ хушăрах Иван Яковлевич Яковлев хăй те учитель пулса тăрать. Рекеева вĕрентме хăйпе пĕр класра вĕренекенсем А.Л. Панаевпа Н.П. Соколов пулăшаççĕ (ун чухне вĕсем пĕр хваттерте тăнă пулнă).

Çак çулсенче Иван Яковлев Чĕмпĕр дворянинĕпе, отставкăна тухнă полковникпа Ардалион Иванович Глазовпа çывăх паллашнă, чăваш каччи унăн Михаил ятлă ывăлĕпе пĕрле вĕреннĕ. Вĕсен çуртĕнче Яковлев хулари интеллигенци çыннисемпе паллашнă, 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче çак çынсем Чĕмпĕрте пирвайхи хут вырсарни кунхи шкул ĕçне йĕркелесе янă пулнă. Глазовсен килĕнче спектакльсем кăтартнă, кулленхи çивĕч ыйтусемпе тавлашнă, вырăс классикĕсен произведенийĕсене вуланă. Çамрăксене ертсе тата хавхалантарса пыраканĕ Чĕмпĕрти хĕрсен гимназийĕнче вĕренекен Александра Ардалионовна Глазова пулнă, вăл Европăри нумай чĕлхепе калаçнă. Çавăн пекех вырăс демократ-революционерĕсен Белинский, Герцен, Писарев,

Чернышевский, Добролюбов произведенийӗсене вуланӑ, анчах хӑй, вӗсен шухӑшӗсемпе пур чухне килӗшме пултарайман. Вырӑс хӗрӗ «инородецсене» вӗрентсе ҫутта кӑларас шухӑша хӗрӳллӗн ырланӑ. Яковлев ҫапла аса илет: «Эпӗ хам Глазовсем патӗнчи спектакльсене тата ытти савӑнӑҫлӑ вӑйӑсене ытлашшиех хутшӑнмастӑмччӗ. Анчах Александра Глазовапа чӑваш ачисене вӗрентесси ҫинчен, ҫак ӗмӗте мӗнле пурнӑҫа кӗртме май тупасси ҫинчен калаҫаттӑмӑрччӗ, вӑл мана ӑнланатчӗ».

Гимназире вӗреннӗ иккӗмӗш ҫулхине Яковлев хӑйне уйрӑм шкул уҫса ӗҫлеме пултарас пек туйнӑ.

Ҫав хушӑрах вырӑс демокрачӗсен кӗнекисене, вырӑс тата ют ҫӗр-шыври педагогика классикӗсен ӗҫӗсене вуланӑ.

1868/1869 вӗренӳ ҫулӗн иккӗмӗш ҫур ҫулӗнче Яковлева питӗ лайӑх вӗреннӗшӗн тата хӑйне йӗркеллӗ тытнӑшӑн укҫа тӳлессинчен хӑтараҫҫӗ, экзаменсене ӑнӑҫлӑ тытнӑшӑн мухтав хучӗпе тата кӗнекепе наградӑлаҫҫӗ. «Чӗмпӗр гимназийӗн педагогика канашӗ VI класра вӗренекен Иван Яковлева питӗ лайӑх вӗреннӗшӗн тата йӗркеллӗ пулнӑшӑн хисеплесе 1869 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 22-мӗш кунӗнче Чӗмпӗрте савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура ҫак мухтав хучӗпе чыслать», – тесе ҫырнӑ мухтав хучӗ ҫине. Ун чухне Яковлев гимназире вӗреннисӗр пуҫне Левашов купцапа Чӗмпӗр уесӗнчи земствӑсен гласнӑйӗ пулнӑ И.А. Горбунов ҫемйисенче репетиторта ӗҫленӗ, уйӑхне 15 тенкӗ таран ӗҫлесе илнӗ. 1869 ҫулхи ҫурла уйӑхӗнче гимнази дирекцийӗ ӑна ятарлӑ экзамен тытнӑ хыҫҫӑн уйрӑм ҫемьесенче вӗрентме ирӗк паракан официаллӑ хут панӑ. Кӗркунне Яковлев аслӑ класа куҫнӑ, гимназин юлашки класӗнчен вӗренсе тухсан малалла университетра вӗренме ӗмӗтленнӗ, ҫавӑнпа питӗ хытӑ тӑрӑшнӑ, ытларах та ытларах пӗлесшӗн ҫуннӑ, учебниксемпе ҫеҫ ҫырлахман, тӗрлӗ кӗнеке вуласа пӗлӗвне аталантарнӑ. Тӗлӗнмелле пултаруллӑ гимназист пулнӑ вӑл, ҫавӑнпа пӗрлех хӑй йӗркеленӗ шкула та ертсе пыма пӗлнӗ, вӗренӳпе педагогика ӗҫӗ те ҫулсерен аталанса пынӑ, ӑслӑлӑх предмечӗсене хавхаланса тиш-

кернĕ, хăйпе пĕрле унăн «ачи» те – чăваш ачисен шкулĕ – ӳссе аталаннă. 1870 çулхи çĕртме уйăхĕнче Иван Яковлев гимназирен вĕренсе тухать. Гимназин педагогика канашĕ тăвату гимназиста ылтăн медальпе наградăлама йышăнать, вĕсенчен Рачинский Порфирий – дворянин ывăлĕ, Артизанов Павел – чиновник ывăлĕ, Панаев Александр – мещанин ывăлĕ, Иван Яковлев – чăваш хресченĕн ывăлĕ пулнă. Çапла вара И.Я. Яковлев гимназире пĕлӳ илнĕ пĕрремĕш чăваш пулнă. Ку таранччен Вăтам Атăл тăрăхĕнче гимназисем уçнă хыççăн 100 çул хушшинче чăвашсенчен пĕр çын та гимназире вĕренме пултарайман.

## 2.5. Университетра

Гимназирен вĕренсе тухса аттестат илнĕ хыççăн Яковлев хăйĕн юлташĕсемпе А. Панаевпа тата Н. Соколовпа Хусан университетне вĕренме кĕрет.

Гимнази директорĕ И.В. Вишневский Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕнчен çапла ыйтса çырать: «Чĕмпĕр кĕпĕрнин удельни хресченĕ пулнă, удельнирех çĕр виçевçинче ĕçленĕ чăваш Иван Яковлев хăй тĕллĕн хатĕрленсе 1867 çулта эпĕ ертсе пыракан гимназин пиллĕкмĕш класне вĕренме кĕчĕ. Гимназире вĕреннĕ çулсенче вăл хăйне пур енчен те пултаруллă ача пек кăтартса пачĕ, кăçал гимназирен мĕнпур экзаменсене ăнăçлă тытса ылтăн медальпе вĕренсе тухрĕ. Çĕртмен 5-мĕшĕнче Иван Яковлев малалла Хусан университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕренме ĕмĕтленни çинчен прошени çырса пачĕ, анчах та вăл лекцисем итленĕшĕн тата Хусанта пурăннăшăн тӳлеме пултараймасть. Çавăнпа та стипенди, май килсен Карамзин стипендине илмешкĕн пулăшма ыйтатăп. Иван Яковлевăн çак ыйтăвне Сирĕн пата çитерессине хамăн тивĕçĕм тесе шутларăм тата вырăс мар халăх ачине малалла пĕлӳ илме майсем туса парас тесе ăна пособи тӳлесе тăма тархасласа ыйтатăп».

Паллах, Хусан вĕренӳ округĕн управленийĕнче И.Я. Яковлева лайăх пĕлнĕ. Округ попечителĕ П.Д. Шес-

таков утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче университет канашне официаллă çыру янă, унта И.Я. Яковлева историпе филологи факультетне вĕренме илме ыйтнă. Попечитель çырăвĕ хыççăн Яковлева университета вĕренме илеççĕ тата стипенди парса тăма йышăнаççĕ. Хусан университечĕ Атăл тăрăхĕнчи хăйне евĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕ шутланнă, патша правительстви ăна аслă вырăс халăхĕпе «инородецсене» çывăхланма пулăшакан сыпăк пек хакланă. Çак тĕллевпех вырăс мар халăхсен ачисене çăмăллăхсем туса панă. 1863 çултан пуçласа Хусан университетне магометансене (вĕсем гимназирен вĕренсе тухнă пулсан) тата çавăн пекех Оренбургри çар батальонĕ çумĕнчи шкултан вĕренсе тухакан пушкăрт ачисене йышăнма ирĕк панă. 70-мĕш çулсен тĕлне университетра çамрăксене вĕренме илĕртес тата вĕсенчен Çĕпĕр кĕпĕрнинче тĕрлĕ халăхсем хушшинче ĕçлеме учительсем, врачсем хатĕрлес тĕллевпе патшалăх 50 яхăн тĕрлĕ йышши стипенди çирĕплетнĕ. Анчах çавнашкал çăмăллăхсем пулнă пулин те вырăс мар халăхсен ачисем университетра вĕренессишĕн питех çунман. Хусан вĕренӳ окургĕн попечителĕ йышăннă тăрăх, 1870 çулта университетра пĕр тутар та вĕренмен. Чăвашсене илес пулсан та Хусан университечĕ уçăлнăранпа (1804 ç.) унта Иван Яковлевчен пĕр çын та вĕренмен. Христиан-«инородецсене» университета вĕренме кĕме ирĕк панă, анчах вĕсен магоматансенни пек çăмăллăхсем пулман. Çавăнпа та Яковлевăн ытти студентсемпе пĕр тан укçа тӳлесе вĕренмелле пулнă. Хусан университечĕн студенчĕсен Правилисенчи 109-мĕш параграфпа килĕшӳллĕн студент «...Университетри лекцисене итленĕшĕн çулталăкра икĕ хутчен: авăнăн 1-мĕшĕнче тата нарăсăн 1-мĕшĕнче пурĕ 40 тенкĕ тӳлеме тивĕçлĕ. Эрне хушшинче палăртнă хака тӳлеймесен студента университет списокĕнчен кăларса пăрахнă. Тӳленĕ хыççăн тепĕр эрнерен çав студента каялла йышăннă». Хăр тăлăх Яковлев тӳлевсĕрех вĕренме пултарнă, анчах çакна валли ятарлă йышăну кирлĕ пулнă. Стипенди илессине тата вĕреннĕшĕн укçа

тӳлессине коллоквиум результачӗсем хыççăн тин палăртнă.

Раççей империйӗнчи университетсен 1863 çулхи уставӗпе килӗшӳллӗн филологи факультетӗнче студентсен тăватă çул хушшинче философи, логика, психологи, философи историне, грек сăмахлăхне, грек чӗлхине, грек литературин историне, Рим сăмахлăхне, индоевропа чӗлхисен танлаштаруллă грамматикине, вырăс чӗлхипе литературин историне, пӗтӗмӗмшле литература историне, славян филологине, пӗтӗмӗшле историе, чиркӳ историне, искусствăсен теорийӗпе историне вӗренмелле пулнă.

Программăра ют чӗлхесем паллă вырăн йышăннă, Яковлева пуринчен те ытларах грек чӗлхи хăратнă, мӗншӗн тесен предметсенчен ытларахăшӗ çак чӗлхепе çыхăннă пулнă. Çавăнпа та унăн филологи факультетӗнчен математика факультетне куçас шухăш çуралнă. Чӗмпӗртен килнӗ ытти çамрăксем – гимназирен ылтăн медальпе вӗренсе тухнă А. Панаевпа Н. Соколов – коллоквиумра Яковлев пекех япăх паллăсем илнӗ, вӗсене те стипенди паман. Малалла вӗсем вӗренӳшӗн тӳлессинчен хăтарма ыйтнă. Яковлев хăй чухăн çемьерен тухни çинчен кирлӗ хут тăратнă. Çакна шута илсе историпе филологи факультечӗн деканӗ чăваш каччине укçа тӳлессинчен хăтарма йышăнать. Апла пулин те Яковлевшăн малтанласа çак факультетра вӗренме питӗ йывăр пулнă, вăл çав-çавах иккӗленнӗ: филолог пулмалла е çийӗнчех урăх факультета куçмалла. Çавна май медицина, юридици, математика факультечӗсем пирки шухăшланă. 1870 çулхи авăнăн 29-мӗшӗнче университет ректорӗ ячӗпе Яковлев хăйне историпе филологи факультетӗнчен физика-математика факультетне куçарма ыйтса çырать. Мӗншӗн тесен филологи предмечӗсем Яковлева тӳрех парăнасшăн пулман тата пӗрремӗш курсра стипенди илес шанăç та юлман. Хăй Чӗмпӗре, гимнази преподавателӗ пулнă И.Я. Христофоров патне çырса пӗлтернӗ тăрăх, çав çулхине стипендисене чылай (300 тенкӗ таран) ӳстернӗ, анчах вӗсен шутне чакарнă, чи лайăх паллăсемпе

вěренекенсем çеç стипенди илме пултарнă. Физика-математика факультетне куçнă хыççăн вěренӳ округěн попечителě П.Д. Шестаков çине тăнипе Яковлева çулталăкне 200 тенкě стипенди парса тăма йышăнаççě, паллах, чи малтан вăл миссионерла тěллевпе халăха çутта кăларассишěн тăрăшнине шута илнě. Стипенди уйăрса пани Яковлева çав тери хавхалантарнă, малашне вăл çуллахи икě уйăхсăр пуçне кашни уйăхра 20-шер тенкě илсе тăма тата çав укçан пěр пайне Чěмпěрти чăваш шкулěнче вěренекенсене уйăрса пама пултарнă. Анчах министерство вырăс мар халăхсен ачисене çакăн пек условисем туса панипе пěрлех вěсен вěренěвне те çирěп тěрěслесе тăнă, енчен те сессисем вăхăтěнче япăх е вăтам паллăпа экзаменсем тытас пулсан, стипендисěр хăварнă.

Паллах, И. Яковлев питě тăрăшнă, 1-мěш курс вěçěнче унăн 6 предметпа экзамен тытмалла пулнă. Занятисене пěр сиктермесěр çӳремелле, пěр вăхăтрах Н.И.Ильминский патěнче чăвашла куçарусем тумалла, чăвашсен çырулăхне йěркелес тěлěшпе экспериментсем ирттермелле пулнă тата ытти нумай-нумай йывăрлăх тиеннě çамрăк каччăн пуçě çине. Унсăр пуçне пěр вěçěмсěр Чěмпěрти чăваш шкулě пирки шухăшлама тивнě, çитменнине 1871 çул пуçламăшěнче нарăс уйăхěнче шкул ěçне йěркелесе ертсе пынă А. Рекеева çара илнě. Яковлев укçалла салтака кайма килěшекен çын тупса Рекеева çартан хăтарас тесе чупма пуçлать, тěрлě пуçлăх патне çитет. Çапла чупса çӳресе йывăр чирлесе ӳкет, шăпах экзаменсене хатěрленмелли тапхăрта университет больницинче выртать. Ирěксěрех унăн 1-мěш курсшăн тытмалли экзаменсене кěркуннене куçарма тивет. Çуллахи вăхăта вăл ытларах чěлхе, сăмахлăх ыйтăвěсемпе ěçлесе ирттерет: В.А. Белилинпа, С.Н. Тимрясовпа тата Чěмпěрте вěренекен ытти чăваш ачисемпе пěрле чăваш халăх сăмахлăхне пуçтарать, чăвашсен çěнě çырулăхне йěркелес тěллевпе ěçлет, чăваш ачисене çырăва вěренмелли букварь хатěрлет, Чěмпěрти чăваш шкулне малалла аталантарассишěн, унта вěренекенсен йышне ӳстерессишěн тата вěсене вěренме

тата пурăнма кирлĕ ятарлă çурт тупса парассишĕн çунать. Çавна май физика-математика предмечĕсемпе ларма вăхăт çитмест, малашне хăйне мĕнлерех йывăрлăхсем кĕтме пултарнине ăнланса илнĕ хыççăн вăл, шел пулин те, каялла филологи факультетне куçасси пирки шутлама тытăнать. Ку тĕлĕшпе ăна Н.И. Ильминский профессор паха сĕнӳсем парса хавхалантарса тăрать. Каникул хыççăн 2-мĕш курса вĕренме килсен И. Яковлев авăнăн 1-мĕшĕнчен пуçласах историпе филологи факультетне занятисене çӳреме тытăнать. Çак факультета каялла куçарас ыйту юпа уйăхĕнче тин татăлса пĕтет. Çапла вара унăн каллех 1-мĕш курс студенчĕ пулса тăма тивет.

Яковлев питĕ тăрăшса вĕреннĕ. Факультет программи кăткăсланнăçĕмĕн кăткăсланса пынă. Тăвата ют чĕлхе, нимĕç, француз, акăлчан тата итальян чĕлхисене вĕренмелле пулнă. Унсăр пуçне латин тата грек чĕлхисем авалхи Римпа Греци, çавăн пекех вăтам ĕмĕрсен историне вĕренме кирлĕ тĕп хатĕрсем шутланнă. Чăваш студенчĕшĕн чи йывăрри грек чĕлхи пулнă, çапах та вăл çуркунне тĕлне ыттисемпе пĕр шайра ĕлкĕрсе пыма пултарнă, экзаменсене «лайăх» тата «питĕ лайăх» паллăсемпе тытса тухнă. Иккĕмĕш курсран пуçласа студентсем курс ĕçĕ çырнă. Иван Яковлев пĕтĕмĕшле историпе çырнă курс ĕçне профессорсем «5» паллăпа хакланă. Яланхи пекех вăл репетитор ĕçне те туса пынă, тутар ачисене гимназие вĕренме кĕме хатĕрленĕ. Тĕслĕхрен, 1872/1873 вĕренӳ çулĕнче вăл Хусан вĕренӳ округĕнчи тутар, пушкăрт, кăркăс (казах) шкулĕсен инспекторĕн В.В. Радловăн (нимĕç çынни, каярахпа тĕнчипе паллă чĕлхеçĕ пулса тăнă ăсчах) хĕрне вырăс чĕлхи вĕрентнĕ.

Ăслăлăхпа çыхăннă тĕпчев ĕçĕ нумай пĕлесшĕн çунакан Яковлева илĕртнĕ, курс ĕçне вăл пĕр предметпа çеç мар, пĕр харăсах темиçе предметпа çырнă. Калăпăр, виççĕмĕш курсра вăл виçĕ профессор патĕнче курс ĕçĕсем çырать. Пирвайхи икĕ ĕçне «тăваттă» паллăсемпе хакланă пулсан, «Чăваш халăх сăмахлăхĕн хăш-пĕр палăкĕсем» темăпа çырнă ĕçĕ сăмахлăхпа кă-

сăкланакан ăсчахсене уйрăмах тĕлĕнтернĕ, унăн ăслăлăх ертӳçи Н.А. Фирсов профессор çак ĕçе çĕнĕ материалсемпе хушса пуянлатнă хыççăн университетăн «Ученые записки» сборникĕнче пичетлесе кăларма сĕннĕ. И.Я. Яковлев унта чăваш халăхĕн тата унпа кӳршĕллĕ пуրăннă халăхсен XIV-XIX ĕмĕрсенчи историйĕпе çыхăннă халап-юмахсене тишкернĕ. Чăвашсем, çармăссем, ирçемăкшăсем Иван Грозный патша çарĕсемпе Хусана тытса илессишĕн пынă çапăçусене хутшăнни, Атăл тăрăхне колонизациленĕ тапхăрта вырăнти халăхсем çĕкленĕ пăлхавсем çинчен, чăвашсем Турцие тарса кайнисем çинчен халăх хушшинче çӳрекен сăмах-юмахсене чăвашларан вырăсла куçарса панă. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çак тĕпчеве И.Я. Яковлев виçĕ вариантпа çырса хатĕрленĕ пулнă, анчах, шел пулин те, юлашки вариантĕ ăçта упранни паллă мар. И. Яковлевăн хăйĕн тĕпчев ĕçне пичете хатĕрлесе пама вăхăт çитмен, ун чухне чăваш çырулăхне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе тата чăвашла куçарусем хатĕрлесе кăларас енĕпе нумай ĕçленĕ. 1872/1873 вĕренӳ çулĕнче çеç вăл чăваш букварьне виçĕ кăларăмпа хатĕрлесе кăларнă, «Матфей çырнă Евангелие», чиркӳре службăсем ирттермелли кĕлĕсене тата ытти тĕн литературине чăвашла пичетлесе кăларнă, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн ĕçне (çав вăхăтра унта пурĕ 45 ача вĕреннĕ) йĕркелесе тăнă. Чăваш шкулĕсем валли вĕренӳпе педагогика литератури, чăваш ялĕсенчи чиркӳсенче усă курма тĕн литератури хатĕрлесе кăларасси уншăн курс ĕçне пичетлесе кăларассинчен чылай пысăкрах пĕлтерĕшлĕ пулнă.

«Чăваш халăх сăмахлăхĕн хăш-пĕр палăкĕсем» темăпа çырнă тĕпчев ĕçне вăл тăваттăмĕш курсра малалла тăснă. Университетран вĕренсе тухнă хыççăн Н.А. Фирсов профессор ăна кандидат диссертацийĕ пек хӳтĕлеве тăратма та сĕннĕ. Диссертацие çырса тăратма ултă уйăх панă, Яковлевшăн ку – 1875 çулхи утă уйăхĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа 1876 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕчченхи тапхăр пулнă. Анчах Яковлев чăваш халăхне çутта кăларас тĕллевпе шкул ĕçне чунтан парăннă хыççăн вăхăчĕ çитменнипе диссертацие вĕçне çитереймен. Халăха çутта

кăларас ĕçе аталантарасси малти вырăнта тăнă. Çавăнпах ĕнтĕ унăн университетра тăватă çул вырăнне пилĕк çул вĕренме тивнĕ, пĕр çулталăкĕ унăн историшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсене пурнăçласа иртнĕ: çак хушăра вăл чăвашсен çĕнĕ çырулăхне йĕркеленĕ, чăваш ачисене çырăва вĕренмелли букварьсем хатĕрлесе кăларнă тата наци шкулне йĕркелесе ура çине тăратас тĕллевпе нумай вăй хунă.

## Тĕп литература


1. Волков Г.Н. И.Я. Яковлев – чăваш халăх педагогĕ / Г.Н. Волков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1959. – 70 с.

2. Краснов Н.Г. Иван Яковлев и его потомки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 352 с.

3. Яковлев И.Я. Письма / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1985. – 366 с.

4. Яковлев И.Я. Из переписки. Ч. 1 / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1989. – 320 с.

5. Яковлев И.Я. Моя жизнь: Воспоминания / Вступ. статья Л.П.Куракова, археогр. предисл. Г.Н. Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г.Краснова. – М.: Республика, 1997. – 696 с.

6. Яковлев И.Я. С думой о народном просвещении. Из переписки. Ч. 2 / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1998. – 438 с.


## Ыйтусемпе ĕçсем

1. И.Я. Яковлев çуралса ӳснĕ тапхăра сăнласа парăр.

2. И.Я. Яковлевăн амăшĕпе ăна усрава илнĕ çемье хушшинче мĕнлерех çыхăну пулнă.

3. Пĕр-пĕрне вĕрентмелли Белл-Ланкастер системине тата XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчи шкулти вĕрентӳ ĕçне хак парăр.

4. И.Я. Яковлевăн вĕренӳ тапхăрĕсем унăн характерне туптани çинчен каласа кăтартăр.

5. И.Я. Яковлевăн пирвайхи тĕпчев ĕçĕсене мĕнлерех хак паратăр.

## 3 сыпăк
# ЧĂВАШ КУЛЬТУРИНЕ ЧЁРТСЕ ТĂРАТАКАН ÇĂЛ КУÇ

### 3.1. Шкул аталанăвĕн çул-йĕрĕ

«Чăваш халăхĕн кăмăл-туйăмĕ çутлăх, пĕлӳлĕх патне туртăнасси, тӳрех мар пулин те, шăпах Чĕмпĕрти чăваш шкулне никĕсленĕ хыççăн пуçланчĕ», – тенĕ И.Я. Яковлев хăйĕн аса илĕвĕсенче.

Обществăна, пĕтĕм халăха аталанма пулăшакан тĕп сыпăксенчен пĕри яланах шкул пулнă. Сĕм авалтанпах вăл пĕлӳлĕх, ăслăлăх çăлкуçĕ, пĕтĕм культура управçи пулса тăнă. Истори аталанăвĕнче кашни халăх хăйĕн пурлăх, ăс-хакăл ыйтăвĕсене тивĕçтерме шкул системине йĕркелет. Чăвашсен шкул ĕçĕ XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа И.Я. Яковлев ячĕпе çыхăннă, анчах та çакă вĕсен шкул пулманнине тата халăх пачах та вĕренменнине пĕлтермест.

Истори çăл куçĕсем кăтартса панă тăрăх, чăвашсен мăн аслашшĕсене шкулта вĕрентес ĕç пирĕн эрăн пирвайхи пин çуллăхĕнчех пуçланнă. Патшалăх тытăмĕ йĕркеленнĕ хыççăнах тĕрлĕ шкулсем – тĕн, ремесла, çар, сиплев шкулĕсем уçăлма тытăнаççĕ. Х ĕмĕрте йĕркеленнĕ Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнче те çавнашкал шкулсем пулнă.

Атăлçи пăлхарсем араб çĕр-шывĕсемпе, чи малтанах Сирипе культурăпа экономика тĕлĕшĕнчен тачă çыхăну тытнă. Араб культури вăйлă витĕм кӳнипе Атăлçи Пăлхарăн пуç пулса тăракан çыннисем ислам тĕнне йышăннă тата араб çырулăхĕпе усă курма тытăннă. Ислам патшалăх тĕнĕ пулса тăнă хыççăн халăх хушшинче тĕн вĕрентĕвне сарас тĕллевпе мечĕтсем çумĕнче – училищĕсем, ремесла мастерскойĕсем çумĕнче шкулсем уçма пуçланă. Çав шкулсенче, паллах, хула çыннисен ачисем çеç вĕренме пултарнă, ял халăхĕ хăйĕн авалхи чĕлхе тĕннех тытса пынă, руна çырулăхĕпе усă курнă, ĕмĕрхи традицийĕсемпе йăли-йĕркине, чăваш чĕлхине çывăх пăлхар чĕлхине упраса пурăннă. Хресченсен ачисене çемье, çут çанталăк –

пурнӑҫ хӑй вӗрентсе ӳстернӗ. Пысӑкрах ялсенче ватӑ ӑстаҫӑсем пурнӑҫра куллен кирлӗ ремесла ӗҫӗсене хӑнӑхтаракан шкулсем йӗркеленӗ, вӗсенче тӑван чӗлхепе ҫеҫ калаҫнӑ, ҫырнӑ чухне руна ҫырулӑхӗпе, авалхи чӑвашсен шутлав системипе усӑ курнӑ. Ачасем платник, тимӗрҫ ӑсталӑхне алла илнӗ, ҫӑм атӑ йӑвалама вӗреннӗ. Ҫапла вара ялсенче пурӑнакан халӑхӑн мӑсӑльман культури тӗкӗнмен пайӗ ҫеҫ чӑвашсем пек сыхланса юлнӑ.

Пӑлхарсен вӑйлӑ аталаннӑ культура пулнӑ. Пӑлхар, Пӳлер, Сӑвар пек пысӑк хуласенче ятарлӑ укҫа кӑларнӑ, тӑм савӑт-сапа, тимӗр плугсем, тӗрлӗ хӗҫ-пӑшал, ӗҫ хатӗрӗсем, ювелир изделийӗсем хатӗрленӗ, карапсем тунӑ, чул ҫуртсем лартнӑ. Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗн 50 пин ҫынлӑ ҫарӗ ҫав тапхӑрти хӗҫ-пӑшалпа хӑватлӑ пулнӑ. Анчах 1237 ҫулта ӑна монгол-тутарсем ҫапса аркатнӑ хыҫҫӑн вӑл пӗтӗмпех Ылтӑн Урта йышне кӗнӗ. Вӑрӑ-хурахсенчен хӑтӑлас тесе пӑлхарсен хӑш-пӗр пайӗсем ҫурҫӗрелле тарнӑ, хӑшӗсем Сӑр шывӗ хӗррине ҫитсе тухнӑ, хӑшӗсем вырӑссем енне куҫнӑ. Тытса илнӗ территорире многолсем колони режимӗ туса хунӑ, ял хуҫалӑхне вӑйлӑ аталантарнӑ пӑлхарсем Ылтӑн Уртана тӑрантарса пурӑннӑ, апат-ҫимӗҫпе, выльӑх-чӗрлӗхпе, ҫар ҫыннисене ӑратлӑ урхамахсемпе тивӗҫтернӗ. Лашасене ҫӗр ӗҫӗнче усӑ курма та хӑварма пултарайманнипе чӑвашсем ирӗксӗрех ӗне выльӑха кӳлсе ҫӳренӗ. Анчах нимӗнле ӗне е вӑкӑр та йывӑр ӗҫе лаша пек тума пултарайман. Ҫавна май чӑваш чӗлхинче «Ӗне ҫинче йӗнер килӗшмест» текен каларӑш сыхланса юлнӑ. «Санӑн уру ҫине ӗне пусман-ха» тени вара кашни ҫемье хырҫӑ-марҫӑ тӳлеме нумай ӗне выльӑх усранипе, ҫакӑ калама ҫук йывӑр ӗҫ пулнипе сыхӑннӑ. «Ӗнесем шыв ӗҫнӗ чух пӑрушӗсем пӑр ҫуласан та юрать» тени чӑваш хресченӗсен хуҫалӑхӗсенче шутсӑр нумай мӑйракаллӑ шултра выльӑх усранине пӗлтерет. Шыв ӗҫме анакан ӗнесен йышӗ пысӑк чухне пӑрушӗсем ҫыран хӗррине ҫывхарма та пултарайман, вӗсем ҫыран хӗрринче ирӗлмесӗр выртакан пӑра ҫеҫ ҫулама пултарайнӑ. Каярахпа ҫак каларӑш ытарлӑ пӗлтерӗшлӗ пул-

са тăнă: пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва пĕчĕккинчен уйăрмалла чухне ваттисене хисеплеме кирлине пĕлтернĕ. Ылтăн Уртари пысăк хуласенче ремесла мастерскойĕсем, шкулсем, мечĕтсем ĕçленĕ, вĕсенче тутар чĕлхине çывăх кыпчак чĕлхипе калаçнă, тăван чĕлхе çемьери чĕлхе шутланнă. Ылтăн Уртана çапса салатнă хыççăн чăвашсем Хусан ханствине кĕнĕ. Çак феодаллă патшалăхра та Ылтăн Уртари пекех шкулсем малалла ĕçленĕ, вĕсенче пуç пулса тăракан çынсен ачисем çеç вĕренейнĕ. Ислама малалла сарас тĕллевпе миссионерсен шкулĕсем нумай уçăлнă. Миссионерсем тĕлĕрсе ларман, ислам тĕнне сарассине пысăк хĕрӳлĕхпе туса пынă. Тутар культури мĕн пур халăхсене вăйлă витĕм кӳнĕ, икĕ чĕлхепе – тутарла тата тăван чĕлхепе – калаçасси çирĕп йĕрке пулнă. Çапла вара чĕлхе тĕнне (язычествăн. – *И.М.*) тытса пурăнакан халăхсене, уйрăмах чăвашсене, тутара кăларма лайăх условисем пулса тăнă. Мĕншĕн тесен чăваш ачисем тутар чĕлхине хăвăрт вĕреннĕ, шкулсенче вара пур çĕрте те тутарла вĕрентнĕ. Çавнашкал шкулсенчен вĕренсе тухакан чăвашсем урăх наци культурине аталантаракансем пулса тăнă, тăван чĕлхепе хăйсем калаçкаланă пулсан, ачисене тутарла çеç вĕрентнĕ. Çак тапхăрта каллех хуласенче пурăнакан чăвашсем тутара тухса пĕтме пуçланă, тăван халăх культурине упракансем ял çыннисем пулнă.

Хусан ханствинче те чăваш хресченĕсен пурнăçĕ синкерлĕ те тертлĕ пулнă, малтанхи пекех вĕсем тĕрлĕ йышши хырçă тӳленĕ, çакна валли ирĕксĕрех выльăхчĕрлĕх нумай усрама тивнĕ. Чăвашсем ытти халăхсем пекех ислам патшалăхĕн пусмăрĕнчен хăтăлма ĕмĕтленнĕ. 1551 çулта чăвашсен тӳрисемпе çармăссен тӳрисем пĕрле пуçтарăнса Мускава кайнă та пĕтĕм халăх ячĕпе хут тутарса, М.П. Петров историк палăртнă тăрăх, вырăс патшине хăйсем ирĕккĕн парăннă. Çапла вырăссемшĕн Хусан çулĕ уçăлнă: вĕсем ăна тепĕр çултанах туртса илнĕ, тепĕр пилĕк çултан пĕтĕм Хусан çĕрĕ вырăс патши аллине куçнă, вырăс провинцийĕ пулса тăнă. Çĕнĕ патшалăхра пурăнакан вырăс мар халăхсене хăвăртрах православи тĕнне йышăнтарас

тĕллевпе вырăс тӳре-шарисемпе пупсем пысăк хуласемпе ялсенче мăнастирсем, чиркӳсем лартма пуçланă, вĕсенче шкулсем уçнă. Халăх хушшинче вĕсене «шкуллă мăнастирсемпе» «шкуллă чиркӳсем» тенĕ. 1556 çулта Шупашкарта Троица мăнастирне хăпартса лартнă. Çапла чăвашсемшĕн çĕнĕрен çутлăх тапхăрĕ, шкул вĕрентĕвĕн тапхăрĕ пуçланнă. Анчах XVI-XVII ĕмĕрсенче мăнастир шкулĕсем ĕçлени халăх пурнăçĕнче паллă йĕр хăварайман.

XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче 1-мĕш Петĕр патшапа унăн правительстви тĕрлĕ тĕнпе пурăнакан халăхсене пурне те православи тĕнне йышăнтарса вырăссемпе пĕрлештересшĕн пулнă. Çак тĕллевпе вăл Атăл тăрăхĕнче пурăнакан тĕрлĕ халăхсен çĕр улпучĕсене тĕне кĕртме тытăнать, 1713 çулта кăларнă ятарлă указпа килĕшӳллĕн çур çул хушшинче суя тĕнпе пурăнакан çĕр улпучĕсен пурин те тĕне кĕмелле пулнă. Тĕне кĕменнисенне çĕрĕсене туртса илмелле тунă. Çак указ хыççăн чăваш улпучĕсенчен пурте тенĕ пекех тĕне кĕрсе вырăс дворянĕсем пулса тăнă, тĕне кĕменнисем хресчене тухнă. Çапла чăвашсен хутла пĕлекен культурăллă класĕ пĕтнĕ, пĕр хура халăх анчах тăрса юлнă. Вĕсен хушшинче çак вăхăтра тĕне кĕнĕ çынсем çукпа пĕрех пулнă, пурте авалхи аслашшĕсен тĕнне тытса пынă.

Анчах хăратса çеç тĕне кĕртме е тĕн ăнлавĕсене халăх хушшинче çирĕплетме май пулман. Çавăнпа вырăссенчен нумайăшĕ чăвашсене Христос тĕнне кĕртес тесен, вĕсене хăйсен чĕлхипе вĕрентме тытăнмалла тесе ĕнентерме тытăнаççĕ, шкулта вĕрентекенсем те чăвашсен йышĕнченех пулмаллине палăртаççĕ, çак тĕллевпе вĕсен йышĕнчен пупсем вĕрентсе хатĕрлеме кирли çинчен калаççĕ. 1707 çулта Хусан митрополичĕ 3-мĕш Тихон шкул уçнă, унта çĕнĕрен тĕне кĕнĕ 32 ача вĕренме пуçланă, анчах çамрăк ачасем ашшĕ-амăшĕсĕр аптранипе чирле-чирле виле пуçлаççĕ, 32 ачаран 7-шĕ вилет, ыттисем пурте чире кайнă. Хусан кĕпĕрнаттăрĕ А.М. Апраксин хушнипе ку шкула хуптараççĕ. Тепĕр 10 çултан шкула тепĕр хут уçаççĕ, унта тутар, чăваш

тата ытти халăх ачисене вĕренме илсе пынă. Шкултан вĕренсе тухсан вĕсен харпăр хăйĕн халăхне православи тĕнĕ майлă çавăрас енĕпе ĕçлемелле пулнă.

1731 çулта Сĕве хулинче çакăн йышши тепĕр шкул уçнă. Вĕсенче вĕрентекенсем отставкăна тухнă салтаксем пулнă, славянла çырнă чиркӳ кĕнекисене вулама вĕрентнĕ. Урăхла пĕлӳ парасси пирки сăмах та пулма пултарайман. Шкулта ĕçлеме пултаракан çынсем çукки те пысăк йывăрлăх шутланнă, ачасене пăхма та, вĕрентме те пĕлеймен, пĕлесшĕн те пулман. Çавăнпа «шкул» сăмах чăваш ачисемшĕн чи хăрушă сăмах пек туйăннă.

Акă мĕн çырать çав тапхăрти шкул ĕçĕ пирки М.П. Петров (Тинехпи) «Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев çинчен» кĕскен каласа кăтартнинче (1928 ç., Шупашкар): «Нимĕн тума аптранипе правительство тĕне кĕмен халăхсене тĕрлĕ çăмăллăхсемпе илĕртсе астара пуçланă: тĕне кĕрсен, çын вĕлерекене те каçармалла тунă, 3 çул хушши нимĕнле хырçă та илмен, салтака илесрен хăтарнă, хăйсем çине хĕрес тăхăнакансене çавăн пекех тенкĕ çуршар укçан тата кĕпе-йĕм памалла тунă. Вĕсене каçарнине тĕне кĕменнисенчен шыраса илнĕ.

1742 çулта чăвашсем хушшине иеромонахсене 5-шер салтакпа пĕрле янă та кусем вĕсене штыкпа хăратса пĕр-ик çултах вырăс тĕнне кĕртсе пĕтернĕ. Анчах чăваш ырăлăхшăн ирĕксĕрех кăкărĕ çине хĕрес çакнă пулин те авалхи аслашшĕсен тĕнне пăрахасшăн пулман, шухăшламан та: пур чӳклемесене, авалхи йăласене шăпах туса пынă. Вара вырăс пупĕсем тарăхса вĕсен кĕлĕ çурчĕсене, киремет картисене, чӳклеме вырăнĕсене йăлтах çĕмĕрсе çӳреме пуçланă. Çапах та ĕç ăнман: чăвашсем вырăс чиркĕвĕсене çӳремен, хăйсен йăлисене вăрттăн та пулсан туса пурăннă.

Ирĕксĕрех шкул ĕçне вăйлатмалла пулнă. Çавăнпа 1745 çулта чăвашсем валли Çĕрпӳре тепĕр шкул уçнă. Унта кĕркунне 10-15 çулхисене 50 ача вăйпа пуçтарнă. Ку шкулта та ачасене пуринчен ытла чиркӳ кĕнекисене вĕрентсе асаплантаранă, мĕншĕн тесен çав

ачасене кайран пуп таврашне кĕртмелле пулнă. Вĕрентессе ачасем пĕлмен вырăс е славян чĕлхипе вĕрентнĕ. Ачасен тăван чĕлхине, чăваш чĕлхине асăнман та. Ачисене тата пурне те пĕр пек пăхман: лайăхрах вĕренекеннисене хăйсене уйрăм пахарах тумтирпе çӳретнĕ, ытти енчен те тасарах, ачашрах тытнă. Ун пеккисем пит сахал пулнă. Начартарах вĕренекенсенĕн пурнăçĕ ытла та тискер пулнă: вĕсем выçăллă-тутăллă, пылчăклă-пăрахлă пурнăçпа пурăннă. Çавăнпа пурте трахома чирĕпе чирле пуçланă. Пĕр авалхи çырура каланă тăрăх, вĕсенчен нумайăшĕ пачах суккăр тăрса юлнă. Çавăнпа «вĕренни – çутă» теес вырăнне вĕсем «вĕренни – тĕттĕм» теме пуçланă.

1745 çулта Çĕрпӳри шкула та, Сĕверине те пĕрлештерсе Хусана пĕр çĕре куçарнă. Анчах кунта та ĕç ăнман. Шкула пăхакансем пăсăк çăнăх, шăршланса кайнă аш-пăш, çĕрĕшсе юрăхсăра тухнă пулă иле-иле ачасене çитернĕ. Çавăнпа ачисем чирле-чирле виле пуçланă:

1756 çулта 193 ачаран 23 вилнĕ, вĕсенчен 12-шĕ чăваш пулнă;

1757 çулта 220 ачаран 25 вилнĕ, вĕсенчен 12-шĕ – чăваш;

1758 çулта 205 ачаран 48 вилнĕ, вĕсенчен 27-шĕ – чăваш.

Вĕрентни те, пурнăçĕ те ним латсăр усал пулнă пирки ачасем нимĕскере те ăша хывайман. Чăваш ачисене журналсем çине калама çук хурласа çырнă: «глупы» – ухмахсем, «тупы» – тĕнккемсем, «вялы» – мĕшĕлтисем, «нерадивы» – тăрăшманскерсем, «непонятливы» – тăна кĕменскерсем, «совсем плохи» – пачах начарсем, «хуже чего нельзя быть» – унтан начар пулас та çук, тенĕ. Çапла шкулсенче ачасем ăслăланас вырăнне ухмаха тухса пынă. Çавăнпа авалхи чăвашсем шкултан эсрелтен хăранă пек хăранă: «шкул çурчĕ – вилĕм çурчĕ» тенĕ».

Кирек мĕнле пулсан та çак шкул XIX ĕмĕре çитичченех пурăннă. Унтан пурĕ 400 чăваш ачи вĕренсе тухнă. Нумайăшĕ вĕсенчен пупа тухнă пулас.

Хăш-пĕрисем вулăс правленийĕсенче ĕçлекен тиексем е тăлмачсем пулма пултарнă, чылайăшĕ вырăса тухнă, чăваш халăхне вĕсенчен ним усă та пулайман.

1789 çулта Шупашкарта пĕрремĕш вĕренӳ заведенийĕ – хула училищи уçăлнă. 1807 çулта Буртасы ялĕнче чăвашсем валли Халăх çут ĕç министерствин пĕрремĕш ял училищи ĕçлеме тытăнать. Чиркӳ прихучĕн, удел çĕрĕсен, земство, тăванлăх шкулĕсем уçăлма пуçлаççĕ. Гурий святитель тăванлăхĕн шкулĕсем ыттисенчен уйрăлса тăнă, вĕсенче ачасен тăван чĕлхипе вĕрентме тытăнаççĕ. Ытти шкулсенче 1870 çулчченех вĕренӳпе воспитани ĕçне вырăсла туса пынă. Хусан вĕренӳ округĕнчи тăванлăх шкулĕсем Халăх çут ĕçĕн министерствишĕн сăнав шкулĕсем пек шутланнă. Пуçламăш шкулсенче вырăс мар халăхсен ачисене хăйсен тăван чĕлхипе ăнăçлă вĕрентме майсем пуррине шăпах вĕсем кăтартса панă. Халăх çут ĕç министерстви çакна 1870 çулта çеç йышăннă. Çав çулах правительство Раççейре пурăнакан вырăс мар халăхсене вĕрентесси çинчен калакан Правилăсем йышăнать, унта кирек мĕнле ведомствăна пăхăнса тăракан пуçламăш шкулта та ачасен тăван чĕлхипе вĕрентме ирĕк панă.

## 3.2. Чăваш наци шкулĕн никĕсĕ

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ халăхăмăр историйĕнче пĕрремĕш наци шкулĕ пулса тăнă, çав йывăр тапхăрта вăл чăвашсен хăйне евĕрлĕ культурипе тăван чĕлхине сыхласа хăварассишĕн тăрăшма тивĕçлĕ пулнă. А.В. Луначарский ăна «пĕтĕм чăваш культурине чĕртсе тăратакан çăл куç» тесе хак панă. Кунта наци çырулăхĕ çуралнă, пирвайхи букварь чăваш ачисен ăшне кĕнĕ, чăваш литература чĕлхи никĕсленнĕ. Вăл вырăс халăхĕпе çывăхланма, унăн аслă культури патне çывхарма тата Атăл тăрăхĕнчи мĕнпур халăхсемпе туслăха çирĕплетме пулăшакан центр пулса тăнă.

И.Я. Яковлевăн шкулне мĕнлерех йĕркеленсе кайнине, мĕнлерех аталанса пынине тата мĕнлерех тĕллевсемпе ĕçленине кура хаклас пулсан, вăл паянхи,

эпир пĕлекен шкул пек пулман. Унта çамрăксем çеç мар, ачисем патне килсе çӳрекен ашшĕ-амăшĕ те вĕреннĕ. Хресченсене уроксене кĕрсе ларма, мастерскойсенче ачасемпе пĕрле ĕçлеме, çывăрмалли пӳлĕмсенче пĕрле канма ирĕк панă. Вĕсемпе калаçусем ирттернĕ, хăш-пĕр чухне ятарласа трахома çинчен, гигена çинчен, ял хуçалăхĕ çинчен кĕнекесем вуласа панă, ку тĕлĕшпе И.Я. Яковлев ятарласа уйăрнă дежурнăй учительсем ĕçленĕ.

Шкул аталанăвĕн çул-йĕрĕ йывăр та тумхахлă пулнă. Анчах унăн никĕслевçи тата ертӳçи И.Я. Яковлев тĕрлĕ вырăнта ĕçлекен вырăс çыннисем пулăшнипе ăна сыхласа хăварма пултарнă, хăйĕн ĕмĕрĕнче вăл пин ытла вĕрентекен хатĕрлесе кăларнă, вĕсем пурте халăх хушшине пĕлӳлĕх çутине сапаланă.

Чăваш шкулĕ Раççейĕн нумай нациллĕ чи пысăк кĕпĕрнисенчен пĕрин центрĕнче – Чĕмпĕрте йĕркеленнĕ. Кунта мĕн авалтанпа чăвашсемпе мордвасем, тутарсем, вырăссем тата ытти халăхсем юнашар пурăннă. XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен вĕçĕнче кĕпĕрнере пурĕ 305 чăваш ялĕ пулнă, вĕсенче 100 пине яхăн çын пурăннă. Ку таранччен Чĕмпĕр кĕпĕрнинче вырăс мар халăхсем хăйсем тĕллĕн йĕркеленĕ пĕр шкул та пулман. Чăвашран тухнă И.Я. Яковлев тăван халăхĕ валли ятарласа йĕркеленĕ шкул пĕрремĕш пулнă.

Чĕмпĕр кĕпĕрнинче XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнчех «инородецсем» валли чиркӳпе çыхăнман шкулсем уçса пама хăтланса пăхнă. 1866 çулта çут ĕç министрĕ Д.А. Толстой хушнипе Н.И. Ильминские Чĕмпĕр кĕпĕрнаттăрĕ Велио патне командировкăна янă, вĕсен кĕпĕрнере тĕне кĕнĕ инородецсем валли шкул уçас ыйтăва сӳтсе явмалла пулнă. Анчах палăртса хунă ĕçсем хут çинчех тăрса юлнă. Каярахпа 1868 çулта Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков Пăва уесĕнче чăвашсем валли Хусанти çĕнĕрен тĕне кĕнĕ тутар ачисен шкулĕ евĕрлĕ училище уçма палăртса хунă. Пăва земствипе училищĕсен совечĕ унăн сĕнĕвне йышăнман.

Тӑван чӑваш халӑхӗ чухӑнлӑхпа мӗскӗнлӗхре тертленсе пурӑнни И.Я. Яковлевӑн чунне хӗскӗч пек хӗссе ыраттарнӑ. Çак йывӑрлӑхран хӑтӑлас тесен вӗсене чи малтан шкулсем уçса пама тата вӗсенче тӑван чӗлхепе вӗрентме кирлине ӑнланнӑ вӑл, анчах çакна мӗнрен пуçӑнмалла, камран пулӑшу ыйтмалла. Хайӗн пӗрремӗш вӗрентекенӗ, Пӑва земствинче училищӗсен совечӗн председателӗ А.И. Баратынский ӑна ку енӗпе тӗрӗс çул кӑтартма пултарайман, ялан çак шухӑша пуçран кӑларса ывӑтма сӗннӗ.

Чӗмпӗр гимназийӗн 5-мӗш класӗнче вӗреннӗ май кунта вӗрентӳ шайӗ, пурнӑç условийӗсем тата чӑваш каччи те ыттисемпе пӗр тан шайра тивӗçлӗ вӗренсе пурӑнма пултарни И. Яковлева хавхалантарнӑ. Ытти чӑвашсем те çак ырлӑхпа усӑ курма тивӗçлӗ тесе шутланӑ май вӑл тӑван ялӗнчи тус-юлташӗсене, Пӑрантӑкра пӗрле вӗреннӗ Алексей Рекеевпа Игнатий Иванова асӗнчен яман. Гимазин 6-мӗш класне куçсан 1868 çулхи çӗртме уйӑхӗн вӗçӗнче тӑван ялне Кӑнна Кушкине таврӑннӑ. Ар шутне кӗнӗ каччӑсем Иван Яковлевпа нумайччен калаçнӑ, вырӑсла кӗнекесене тепӗр хут алла тытса пӑхнӑ, пӑртак вулама пӗлнӗ, вырӑсла калаçкалама хӑтланнӑ, анчах кил-çурта пӑрахса тухса каясси вӗсемшӗн ытла та йывӑр пулнӑ. Игнатий Иванов çемьеллӗ пулнӑ, Алексей Рекеевӑн ашшӗ ватӑличчен вилнӗ, пилӗк ачаллӑ çемьене ура çине тӑратасси 19 çулхи Алексей ӗнси çине тиеннӗ, çемье хӑй ирӗкӗпе ӑна вӗренме ярасси пирки сӑмах та пулма пултарайман. Вӗренӳ чӑвашсемшӗн çак тапхӑрта та удельни ведомствишӗн ӗçлесе тӑрассине пӗлтернӗ, чиновниксене вӗсем «удельни йыттисем» тенӗ. Çавӑнпа та Алексей тӑванӗсене ӳкӗте кӗртме пултарайман, вӗренес ӗмӗтпе хӗмленнӗскер, 1868 çулхи хура кӗркунне, юпа уйӑхӗн 27-мӗшӗнче килӗнчен вӑрттӑн тухса уттарнӑ. Пӑрантӑк пачӑшки тата чиркӳ шкулӗн учителӗ А.И. Баратынский ӑна укçа-тенкӗ, çӑкӑр-тӑвар тата пӗр мӑшӑр атӑ парса янӑ: «Сан патна Алексее ӑсатса ятӑп, малтанласа унӑн шӑпи Ломоносовӑнни евӗрлех, апла пулсан унран иккӗмӗш Ломоносов тухмалла пултӑр», – тесе

çыру çырса чикнĕ. 70 çухрăм ытла çуран утса А. Рекеев юпан 28-мĕшĕнче Чĕмпĕре И.Я. Яковлев патне пырса çитнĕ. Çак кунтан пуçласа Яковлев хăйĕн пĕрремĕш вĕренекенĕшĕн тăрăшма пикенет, 1868 çулхи юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ вара чăвашсенчен интеллигенци кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен наци шкулĕ никĕсленнĕ кун пулса тăрать.

А. Рекеева малтанласа Чĕмпĕр уезд училищин иккĕмĕш класне вĕренме лартаççĕ, анчах пĕлӳ шайĕ çителĕксĕртереххине туйса илсен, çав кунах пĕрремĕш класа куçараççĕ. Яковлев юлташне вĕрентес тесе нумай ĕçлет, математикăпа уйрăммăн вĕрентме уезд училищин учителĕ В.И. Петухов çӳреме тытăнать. Хĕллехи каникул тĕлнелле вăл лайăх ĕлкĕрсе пыракан ачасен шутне кĕни Яковлева хавхалантарать, вара вăл Рекеева юлташ пултăр тесе тепĕр ача шыраса тупать. Вăл Пăва уесĕнчи Пашьел ялĕнчен килнĕ Егор Улюкин пулнă. Ку ачи питĕ тăнлăскер пулнă, ют чĕлхесене питĕ хăвăрт ăнланнă, çавăнпа Яковлев ăна тӳрех гимназин 1-мĕш е 2-мĕш класне кĕмешкĕн хатĕрлеме тытăнать, А.А. Глазовапа пĕрле нимĕçле тата французла вĕрентме тытăнаççĕ. Анчах Мăнкун умĕн ун патне ашшĕ курма килсен, хулари пурнăçа хăнăхайман ача тунсăха чăтайман, хула тумтирне хывса пăрахать те хăйĕн хресчен тумне тăхăнса ашшĕпе пĕрле пăрахса каять. Çакăн хыççăн Яковлев чăваш ачисене гимназие кĕртме тăрăшни тĕрĕс мар пулнине, вĕсене тӳрех уезд училищине вырнаçтармаллине, вĕсем унта хăйсем пек ачасемпе туслашса хула пурнăçне хăвăртах хăнăхма пултарнине ăнланса илет. Кĕркунне ун патне тата икĕ ачана Иван Исаевпа Василий Кашкарова илсе килеççĕ. Иван Исаев вырăс пулнă, çавăнпа ăна уезд училищин иккĕмĕш класне, В. Кашкарова пĕрремĕш класа вырнаçтараççĕ. Ачасем пĕр-пĕринпе вырăсла калаçнă. 1869/1870 вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле А. Рекеев та çуллахи вăхăтра иккĕмĕш класшăн экзаменсем тытса училищĕн виççĕмĕш класне вĕренме куçать. Ачасем пурте пĕрле Аслă Саратов урамĕнчи пĕр çуртра хваттерте тăраççĕ. Вĕсемпех Яковлевăн гимназири юл-

ташӗсем Александр Панаевпа Николай Соколов пурнӑҫҫӗ, пушӑ вӑхӑтра ачасене училище программипе вӗренме пулӑшаҫҫӗ. Яковлев хӑй укҫа-тенкӗ перекетлес шутпа В.С. Левашов купца ҫуртне куҫать, унӑн икӗ ачине вӗрентнӗшӗн уйӑхра 15-20 тенкӗ илсе тӑрать. Хӑйӗн хваттерте вырнаҫнӑ шкулне куллен ҫӳрет, ачасен пӗлӗвне тӗрӗслесех тӑрать.

1869 ҫулхи кӗркунне ачасене вӗрентнӗшӗн тӳлемелле пулнӑ, Рекеева пирвайхи ҫур ҫулшӑн тӳлессинчен хӑтараҫҫӗ тата кашни уйӑхра 10-шар тенкӗ стипенди тӳлесе тӑма йышӑнаҫҫӗ. Ыттисене иккӗшне 1871 ҫулхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗнчен тытӑнса тин стипенди пама шантараҫҫӗ, унччен вӗсене Яковлев хӑй ӗҫлесе илнӗ укҫа-тенкӗпе пӑхса усрать.

1870 ҫулта Рекеев педагогика курсне вӗренме кӗрет, Исаев виҫҫӗмӗш класа куҫнӑ, Кашкаров – иккӗмӗшне. Ҫакӑн пек ҫитӗнӳсем пулнӑ Яковлевӑн вӗренекенӗсен 1870/1871 вӗренӳ ҫулӗн пуҫламӑшӗнче. Гимназирен вӗренсе тухсан И. Яковлев университета вӗренме кӗрес ыйтӑва татса панипе пӗрлех хӑйӗн Чӗмпӗрти шкулне пысӑклатас ыйтупа те нумай ӗҫлет. А.И. Баратынскипе пӗрле Пӑва уесӗ тӑрӑх ҫӳрет, тӑнлӑрах чӑваш ачисене суйласа илсе Чӗмпӗре вӗренме пыма йыхӑрнӑ. Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланас умӗн вӗсем патне Аксу ялӗнчен Фома текен ача пырса ҫитет, ӑна училищӗн 1-мӗш класне вырнаҫтараҫҫӗ. Ку таранччен вӗсене И.Яковлев хӑй укҫи-тенкипе тытса тӑнӑ пулсан, Хусан университетне вӗренме кӗнӗ студентӑн малашне ку тӗлӗшпе йывӑрлӑхсем тухса тӑнӑ. 1870 ҫулхи ҫурла уйӑхӗнче Яковлев Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи халӑх училищисен директорӗ И.В. Вишневский патне ҫапла ҫырса пӗлтерет: «Виҫӗ ҫул каялла эпӗ чӑвашсене вӗрентсе ҫутта кӑларас тесен вӗсем валли шкулсем уҫса памалла, вӗсенче ӗҫлеме чӑвашсенчен хӑйсенченех вӗрентекенсем хатӗрлеме кирлине ӑнланса илтӗм. Ҫавӑнпа чӑваш ачисене Чӗмпӗре илсе килсе вӗрентме шутларӑм... Ку таранччен эпӗ вӗсене хам уроксем ирттерсе пухнӑ укҫа-тенкӗпе тата А. Рекеева Пӑва земстви пӗлтӗр уйӑрса панӑ 80 тенкӗпе саплаштаркаласа тытса тӑтӑм. Кӑҫал манӑн Хусан

университетĕнче вĕренĕве малалла тăсмалла. Çавна май çак ачасене укçа-тенкĕпе тивĕçтермесĕрех пăрахса кайма тивет... Çавăн чухлĕ ĕçлесе, çавăн чухлĕ укçа-тенкĕ тăкакланă хыççăн вĕсене, вĕренӳре пысăк пултарулăх тата тăрăшулăх кăтартаканскерсене, пăрахса хăварма ытла та шел». Малашне чылай йывăрлăх тӳсме тивнине ăнланса, Яковлев Вишневскирен чăваш шкулне вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнчех пулăшма ыйтать. Мĕншĕн тесен пĕр вĕренекене тытса тăма çулталăкне 100 тенке яхăн кирлĕ пулнă. Вишневский Яковлев ыйтăвне шута илмесĕр хăварман, Пăва земствине çак ыйтăва татса пама хушнă, земство 1871 çултан пуçласа кашни арçын ачана 60-шар тенкĕ уйăрса пама йышăнать.

Чĕмпĕрĕн мал шухăшлă, вĕреннĕ çыннисем Яковлев гимназист пуçарăвне ырласа йышăннă, май килнĕ таран пулăшма тăрăшнă. Хусана тухса кайиччен Яковлев алă пустарса çӳресе 400 тенкĕ укçа пуçтарнă, уйрăмах гимнази преподавателĕсем хастар пулăшнă. Каярахпа та çак майпа темиçе хутчен укçа пуçтара-пуçтара панă. Гимнази преподавателĕ И.Я. Христофоров 1870 çулхи чӳкĕн 28-мĕшĕнче «Симбирские губернские ведомости» хаçатра çапла çырса кăларнă: «Пĕлӳлĕх – вăй, пĕлӳлĕх – пуянлăх, çавăнпа та пĕлӳлĕх çынсем хушшине мĕн чухлĕ ытларах сарăлать, халăх чун-чĕрине вăл çавăн чухлĕ тарăнрах кĕрсе вырнаçать, общество та çавăн чухлĕ ытларах пуян, патшалăх та хăватлăрах пулса тăрать. Анчах ку тĕлĕшпе кашни вĕреннĕ çыннăн мĕн те пулин тума кирлине ытларахăшĕ ăнланса пырать пулин те хамăр тавралла çаврăнса пăхсассăн тата ялсенче вĕрентӳ ĕçне лайăхлатас енĕпе мĕн тунине сăнаса пăхсан пирĕн çут ĕçĕ малалла кайнă теме пултараймастпăр. Чăн та, халăха вĕрентме кирлине ăнланни нумайăшне ку тĕлĕшпе хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарать, хăш-пĕрисем çак шухăша сăмахпа та пулин ырлани паха. Халăха вĕрентес ĕçе мĕнле те пулин вырăнтан хускатас текен çынсем курăна пуçлани вара малалла пĕр утăм пĕлтерет. Чĕмпĕр çыннисем тĕттĕм халăха вĕрентессине ырлани чăваш ачисен шкулĕнче вĕренекенсем валли укçа пуçтарнинчен лайăх курăнчĕ.

Чĕмпĕр обществин çак пархатарлă ĕçĕ чăваш ачисене вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çур çулĕнче выçă ларасран çăлса хăварчĕ, халĕ вĕсем пурте уезд училищинче ăнăçлă вĕренеççĕ. Çитес кăрлач уйăхĕнчен пуçласа Чĕмпĕр гимназийĕн директорĕ И.В. Вишневский çине тăнипе Пăва земстви ачасене 240 тенкĕ уйăрса пама йышăнчĕ.

Çакăн çинчен эпир хамăрпа мухтанас тесе мар, çамрăк çын (Яковлев) пуçарнипе йĕркеленĕ пархатарлă ĕç çакăнпа пĕтсе ан лартăр, малалла сарăлсах пытăр тесе пĕлтеретпĕр. Чăваш ачисенчен инородецсен шкулĕсенче ĕçлеме юрăхлă учительсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе аталантарма малашне те укçа-тенкĕпе пулăшма кăмăл тăвакансем гимнази директорĕ И.В. Вишневский патне е халăх училищисен инспекторĕ И.Н. Ульянов патне пыма пултаратăр». Çак статья хаçатра тухнă хыççăн чăваш шкулĕ валли укçа-тенкĕ пуçтарасси тата ытларах вăй илнĕ. 1871 çулхи кăрлач уйăхĕ тĕлне 252 тенкĕ те 20 пус пухма май килнĕ, ку ĕçе Чĕмпĕрти 73 çын хутшăннă, вĕсен шутĕнче гимнази преподавателĕсем, учреждениСенче ĕçлекенсем, И.Яковлевпа пĕрле удел ведомствинче ĕçленĕ юлташĕсем тата ыттисем те пулнă. Пысăк укçа хывакансен шутĕнче çаксене асăнмалла: кĕпĕрнаттăрăн пулăшаканĕ Д.П. Еремеев – 15 тенкĕ, Евгений архиепископ – 6 тенкĕ, гимнази директорĕ И.В. Вишневский – 10 тенкĕ, гимнази инспекторĕ В.А. Ауновский – 10 тенкĕ, В.С. Левашов купца – 25 тенкĕ. А.А. Глазова ӳкĕтленипе земство деятелĕ Д.А. Лазарев 100 тенкĕ таран хывнă. Çакă Чĕмпĕр хулин прогрессивлă шухăш-кăмăллă çыннисем ырă кăмăллă та ăслă гимназиста И.Я. Яковлева хăйне хисепленине тата унăн пархăтарлă ĕçне ырласа йышăннине кăтартса парать.

Яковлев шкулне Çутĕç министерстви тӳрех йышăнма пултарайман. Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков 1870 çулхи кĕркунне Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторĕпе И.Н. Ульяновпа тата Чĕмпĕрти арçын ачасен гимназийĕн директорĕпе И.В. Вишневскипе Яковлевăн хваттер-шкулне çитсе курнă, вăл чăнласах ăнăçлă ĕçленине тата

çителĕксĕр пурнăçпа пуръннине хăй куçĕпе курса ĕненнĕ. «Чăваш общинине» – Чĕмпĕр çыннисем ăна çапла ят панă – И.Н. Ульяновпа И.В. Вишневский май килнĕ таран хăвăртрах министерство бюджетне кĕртме ыйтнă. Хусана таврăнсан П.Д. Шестаков Яковлева хăй патне чĕнсе илнĕ, шкул çинчен тивĕçлĕ хут çырса пама ыйтнă, каярахпа çав кăтартусемпе сĕнӳсене Халăх çут ĕç министерствине тăратнă, укçа-тенкĕпе тивĕçтерме ыйтнă.

1870 çулхи раштав пуçламăшĕнче Чĕмпĕрти вĕренӳ заведенийĕсене каллех инспекциленĕ, попечителĕн пулăшаканĕ И.Д. Соколов ку хутĕнче те чăваш ачисем патĕнче пулса курнă. Инспекци вĕçленнĕ хыççăн вăл чăваш шкулĕ йывăр лару-тăрура пулни çинчен отчет тăратнă. Яковлев студента тепĕр хут вĕренӳ округĕн управленине чĕнсе илнĕ, шкул ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕ отчет тата ăна аталантармалли малашлăх планне çырса пама ыйтнă. Çак самантпа усă курса И.Я. Яковлев 1870 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче вĕренӳ округĕн попечительне П.Д. Шестакова отчет кăна мар, чăвашсене çутта кăларассине аталантармалли план çырса панă, унта çакна палăртнă: «Чĕмпĕр кĕпĕрнинче чăвашсене çутта кăларас ĕç ăнăçлă аталанса пытăр тесен пĕр харăсах икĕ шкул уçмалла тесе шутлатăп: пĕрне Чĕмпĕр хулинче – ку вăл хăйне евĕрлĕ пансион (интернат) пулĕ, тепĕрне – манăн тăван çĕр-шывра». Яковлев шучĕпе, çак шкулсем чăвашсенчен культурăпа çут ĕç ĕçченĕсене хатĕрлес ĕçе пуçарса яма тивĕçлĕ пулнă. Кăнна Кушкинчи шкул çамрăксене пухса Чĕмпĕре вĕренме кĕме хатĕрлекен пуçламăш шкул пулмалла, Чĕмпĕрти хăйĕн вĕренекенĕсене ятарлă аслă шкулсене кĕме хатĕрлемелле пулнă. Яковлевăн çыру-отчетне попечитель тепĕр куннех Халăх çут ĕç министерствине ярса панă.

Çут ĕç министрĕ Д.А. Толстой çак шкул чăвашсенчен христианство тĕнне сарас енĕпе ĕçлекенсем сахал мар хатĕрлесе кăларасса шанса, ăна пулăшма килĕшет. 1871 çултан пуçласа чăваш шкулĕ министерстăран çулталăкне 340 тенкĕ, Пăва земствинчен 240

тенкĕ илсе тăма тивĕçлĕ пулнă. Анчах шантарнă укçана илме пуçличчен нумай вăхăт иртнĕ, çав хушăра И. Яковлев парăма кĕрсе пĕтнĕ, хăйĕн хăш-пĕр япалисене, çав шутра гимназире илнĕ ылтăн медальне ламбарда кайса панă.

Министерство чăвашсем валли шкул уçма ятарласа укçа-тенкĕ уйăрма килĕшни, паллах, И.Я. Яковлевăн ырă пуçарăвĕсене ырланине çеç пĕлтермен. Министерство ыркăмăллăхĕн тĕп тĕллевĕ чăвашсене ытларах та ытларах православи тĕнĕнче çирĕплетесси, вĕсен хушшинче тухăçлă ĕçлеме кирлĕ миссионерсем вĕрентсе хатĕрлесси пулнă. И.Я. Яковлевăн хăйĕн тĕллевĕсем урăхларах пулнă пулин те вăл хирĕçлемен, влаçсене мĕнле шкул кирлĕ, çавăн пек шкулсем пулĕç тенĕ. Хамăрăн шкулсем, хамăрăн вĕрентекенсем пулсан, каярахпа пĕрлехи вăйпа шкул юхăмне урăхла çул-йĕрпе яма пулĕ тата пĕтĕм халăха çутта кăларас тĕллеве пурнăçа кĕртме май килĕ. Пулас ăру кирек кам çунатти айĕнче хĕртĕнсе аталансан та пирĕншĕн чи кирли – çĕнĕ йышши ăру ӳстересси. Пĕчĕк ют йăвара тухса çитĕнекен куккук чĕппи пек пĕчĕк шкултанах халăха çутта кăларакан культура центрĕ пулса тăма пултарĕ, тенĕ И.Я. Яковлев.

1871 çулхи хĕлле чăваш ачисен шкулне министерство официаллă йĕркепе йышăннă, вăл «Халăх çут ĕç министерствин Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ» пулса тăнă. Çав вăхăтра унта ултă ача вĕреннĕ, вĕсен шутĕнче 4 чăваш, 1 вырăс, 1 мордвин пулнă, пурте пĕр çемьери тăвансем пек килĕштерсе пурăннă, пĕр-пĕрне пулăшса тăнă. 1873/74 вĕренӳ çулĕнче шкулта 6 вырăс, 4 мордвин, 2 тутар, 20 чăваш ачи вĕреннĕ, 1875 çулта – 34 чăваш, 16 вырăс тата 2 мордвин.

И.Я. Яковлев университетран вĕренсе тухсан чăваш шкулĕн ĕçĕ татах вăйланса пынă. Ăнланакан мал шухăшлă çынсем И.Я. Яковлев ĕçне пăхса савăннă, ăна чĕререн ырланă. Ун çинчен центрти журналсенче çырма пуçланă, акă мĕнлерех хак панă унăн ĕçне «Вестник Европы» ятлă журналăн 1876 çулхи пуш уйăхĕнче тухнă номерĕнче: «Эпир пурăнакан тĕттĕм кĕтесре пĕр

çын ĕçлеме пуçларĕ. Унăн официаллă вырăн пулман, ăна никам та хисеплесе йышăнман, ĕçлеме никам та хавхалантарман, кĕсйинче унăн пĕр пус та пулман, вăл пысăк хĕн-хур тӳссе пурăннă. Апла пулин те, вăл тĕлĕрсе пурăнакан обществăна хамăр кĕпĕрнери тĕттĕм халăх çине, сĕм авалхи пек пурăнакан чăваш халăхĕ çине çаврăнтарса пăхтарнă. Çак тивĕçлипе хакламан, пит паллах мар деятель, чăваш, калама çук пысăк йывăрлăхсене сирсе, мĕн пур вăйран тăрăшса, тĕттĕм чăваш ялĕнчен çут тĕнчене тухнă. Вăл халăх шкулĕнчен пуçласа университета çитнĕ, университетран вĕренсе тухнă. Малтан малалла кайса пынă вăл, Чĕмпĕр çыннисен ачисене уроксем панипе укçа тупса çеç тытăнкаласа пурăннă, пĕр тимĕр çеç тӳсме пултаракан йывăрлăхсене тӳссе ирттернĕ. Апла пулин те вăл тăван чăвашĕсене çутта кăларас шухăша пĕр самантлăха та асран яман. Хăй гимназире вĕреннĕ чухнех тĕттĕм ялсенчен темиçе чăваш ачине чĕнсе илнĕ те пирĕн хулара пĕрремĕш чăваш шкулне темле майпа уçма пултарнă. Çĕнĕрен уçнă шкул мĕнлерех тытăнкаласа тăни, çамрăк дикарьсем мĕнпе тăранкаласа пурăнни, вĕренмелли кĕнекесене мĕнле укçапа туянни – çаксем пурте тĕлĕнмелле ĕçсем пулса тăраççĕ. Çакăн пекки Раççейре çеç пулма пултарать. Анчах эпир лайăх пĕлетпĕр: çĕнĕрен уçнă шкул малтан чухăн гимназистăн хăй ĕçлесе тупнă укçипе кăна тытăнса тăнă, ăна кайрантарах çеç земство, министерство, юлашкинчен уйрăм çынсем пулăшма тытăннă».

Çапла чăваш шкулĕнчи мĕн пур ĕçе прогрессивлă педагогсен кăтартăвĕсене шута илсе, хăй енчен çĕнĕлĕхсем шыраса тупса, вĕсене чăваш пурнăçĕпе тачă çыхăнтарса туса пыни унăн чапне хăвăрт ӳстернĕ. Шкулăн ырă ячĕ чăвашсем хушшинче çеç мар, ытти халăхсем хушшинче питĕ хăвăрт сарăлнă.

**Чĕмпĕрти тĕп чăваш шкулĕ институт шайне çĕкленни:**

1868 – Гимназистăн хваттерти шкулĕ.

1871 – Халăх çутĕç министерствин Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ.

1877 – Чĕмпĕрти тĕп чăваш шкулĕ.

1890 – Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕ.

1917 – Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш семинарийĕ.

1918 – Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен икĕ комплектлă чăваш семинарийĕ.

1919 – Чĕмпĕрти чăваш педагогика курсĕсем.

1920 – Чĕмпĕрти халăха вĕрентес ĕçĕн чăваш институчĕ.

1921 – Чĕмпĕрти халăха вĕрентес ĕçĕн чăваш практика институчĕ.

## 3.3. Чăваш хĕрĕсене вĕрентес ĕç

Чĕмпĕр кĕпĕрнинче хĕрсене вырăсла вулама-çырма вĕрентекен пĕрремĕш училищĕне пирвайхи хут 1845 çулта Кузьмина хушаматлă хресчен арăмĕ Солдатская Ташла ятлă ялта йĕркеленĕ. 1846 çулта çак училищĕне удел ведомствин департаменчĕ йышăннă та унта хĕрсене кил-çуртри ĕçсене вĕрентме хушнă. 1845 çулта Улатăрта удел хресченĕсен çемйинчи хĕрачасем валли хуçалăх училищи уçса панă, унта 4 çул вĕренмелле пулнă. Программăна Турă саккунĕ, вуласси, шутласси, сад-пахча ĕçĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç, апат-çимĕç хатĕрлесси, йĕтĕн вырса тирпейлесси тата унтан пиравăр хатĕрлесси, çип пĕветесси, ал ĕçĕ, çурта шăратса кăларасси кĕнĕ. 1848 çулхи авăнăн 23-мĕшĕнче Император килĕн министерстви Чĕмпĕр кĕпĕрнинче хĕрсен виççĕмĕш училищине тумалли проекта çирĕплетнĕ. 1850 çулта училищĕне Чĕмпĕр çывăхĕнче уçнă, унăн 6 теçеттин çĕр пулнă.

1859 çулта Удел ведомствин департаменчĕ хĕрсен тепĕр училищине Пăва уесĕн Патăръел приказне кĕрекен Тăрăн ялĕнче туса лартма хушнă. Анчах Чĕмпĕр удел кантурĕн управляющийĕ А.Ф. Белокрысенко департамента чăваш хĕрĕсене Чĕмпĕрти хĕрсен училищинче вĕрентмелле тесе ӳкĕте кĕртнĕ. Ун чухне ку училищĕре 20 чăваш хĕрĕ вĕреннĕ пулнă. Учи-

лищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн вĕсен хăйсем пек чăваш хĕрĕсене вулама-çырма вĕрентес енĕпе ĕçлемелле пулнă. Тăрăнти хĕрсен училищи валли уйăрса панă строительство материалĕсемпе Департамент вырăнти чиркĕве анлăлатмашкăн усă курма, Чĕмпĕрти хĕрсен училищинче вĕрентмешкĕн вара шкулсăр чăваш ялĕсенче пĕр 10 хĕр суйласа илме хушнă. Çавна май сывлăхлă, тĕрĕс-тĕкел те çирĕп кĕлеткеллĕ, 10–12 çулхи хĕрсене çеç йышăннă. Вĕренсе тухсан вĕсен пурин те наставница пулса ĕçлемелле пулнă. 1860 çул пуçламăшĕнче Пăва уесĕнчен 10 чăваш хĕрне, Самар удел кантурĕнчен тата тепĕр 10 хĕре Чĕмпĕрти хĕрсен училищине илсе пынă.

Анчах чăвашсем хушшинче хĕрсене вĕрентес ĕç кирлĕ пек йĕркеленсе каяйман. Ку ыйту И.Я. Яковлева та канăçсăрлантарнă. Хусан университечĕн 1-мĕш курс студенчĕ пулнă чухнех вăл, 1870 çулхи раштавра Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков патне çырнă çырура чăваш хĕрĕсене вĕрентӳ ĕçĕнчен айккине пăрса хăварма юраманни, вĕсем валли уйрăм шкулсем уçмалли пирки çирĕппĕн каланă. Вĕренӳ округĕнчен те, Çутĕç министерствинчен те нимĕнле хурав та кĕтсе илеймен пулин те И.Я. Яковлев чăваш хĕрĕсем валли шкулсем уçас шухăша пăрахман. «Чăваш хĕрарăмĕсен ялти йывăр пурнăçĕ çинчен пĕлнĕ эпĕ, – аса илет И.Я. Яковлев хăйĕн «Манăн пурăнăç» кĕнекинче, ялти вырăс хĕрарăмĕсен пунăçĕнчен нимĕнпех те уйрăлса тăман вăл. Анчах эпĕ вырăс хĕрарăмĕсем çĕр сухаланине тата тырă вырнине курман. Чăвашсем хушшинче çакă кулленхи ĕç шутланнă. Чăваш арĕсем вĕренме çутта тухма пуçланă чухне чăваш хĕрарăмĕсем тĕттĕмлĕхре юлни тĕрĕс мар пек туйăнчĕ. Чăваш хĕрĕсем опытлă учительницăсем пулса тăрса халăхпа ăнăçлă ĕçлеме пуçласса шанаттăм эпĕ».

1878 çулта И.Я. Яковлев чăваш хĕрĕсене вĕрентес ыйтăва тепре хускатать. Ку хутĕнче вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче икĕ класлă училище курсĕпе ĕçлекен уйрăм уçма сĕнет. Çутĕç министрĕ Д.А. Толстой граф çавнашкал шкула пĕр-пĕр чăваш ялĕнче

уçасшăн пулнă. Анчах Раççейпе Турци хушшинче вăрçă пуçланнă та шкулсем уçас ыйту вăхăтлăха хупăннă. И.Я. Яковлев ку ĕçе хăй аллинчен вĕçертесшĕн пулман. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн Вĕрентӳ минситерствинчен савăнăçлă хыпар çитнĕ: министерство хĕрачасем валли ятарлă шкул уçассине хирĕç пулманине пĕлтернĕ, чăвашсем йышлă пурăнакан çĕрте, хĕр шкулĕ уçма юрăхлă вырăн шырама сĕннĕ. И.Я. Яковлев юрăхлăрах вырăнсем Етĕрне, Çĕрпӳ тата Пăва уесĕсенче пулма пултараççĕ, тесе шутланă. Анчах Пăва уесĕнчи Тăрăн ял обществи çеç хăй çавнашкал шкул уçма хатĕр пулнине пĕлтернĕ. Ун чухне вĕсен ялти хурал пӳртĕнче хĕрсен шкулĕ ĕçленĕ пулнă. Яковлев кунпа килĕшме пултарайман, мĕншĕн тесен Тăрăн Чĕмпĕр хулинчен ытла та аякри ял шутланнă, унта училище уçсан чăваш хĕрĕсем вырăсла та вĕренеймĕç, культура тĕлĕшĕнчен те çĕкленеймĕç тенĕ. Вăл хĕрсен çĕнĕ училищине Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче уçма çине тăрсах ыйтнă. Кунта килнĕ чăваш хĕрĕсем вырăс хĕрĕсемпе хутшăнма пуçлĕç, хула пурнăçне хăнăхĕç, кăмăл-сипет тата ăс-тăн тĕлĕшĕнчен ытларах аталанĕç, тесе ӳкĕтленĕ. Унсăр пуçне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ чăваш хĕрĕсен училищине йĕркелеме педагогика кадрĕсемпе те пулăшасса шантарнă. 1878 çулăн иккĕмĕш çурринче хĕрсен училищине уçма палăртса хунă И.Я. Яковлев министерствăран 1691 тенкĕ укçа ыйтнă. Анчах çур çул ытла ку ыйтăва хуравлакан пулман. Çав хушăра Чĕмпĕрти чăваш шкулне хĕрсем пĕрин хыççăн тепри киле пуçланă.

Çак ĕç мĕнле пуçланса кайнине М.П. Петров хăйĕн «Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев» кĕнекинче çапла çырса панă: «Çак 1878 çулта кĕркунне Пăва уесĕнчи Хула Çырми ятлă ялтан пĕр хĕр Чĕмпĕре, чăваш шкулне пынă та мана вĕрентĕр тесе йăлăна пуçланă. Кăшт тăрсан çав Хула Çырминчех 3-4 хĕр Чĕмпĕре вĕренме каяс шухăш тытнă. Ун çинчен пĕри ак çапла çырать: «Чи малтан кунта, Чĕмпĕре вĕренме килме Ухимепе Анастасия шухăш тытнă; унтан кайран вĕсемпе пĕрле Анна та ки-

лес тесе шухăшла пуçланă. Анчах вĕсене ашшĕ-амăшĕсем яман. Çавăнпа вĕсем ашшĕнчен, амăшĕнчен тарса килес тесе шухăшла пуçланă. Вĕсем кунта çапла килме шухăшласан япалисене илсе тухма май кĕтсе тăнă. Вĕсем çапла пĕр вăхăтра тухса килес тесе калаçма пĕрле çырма хĕрне пухăннă. Вĕсем унта аннине амăшĕсем сиснĕ те вĕсем хыçĕнчен çырма хĕрне ана пуçланă. Вĕсем вара амăшĕсене аякран курса, пĕри – пĕр енне, тепри тепĕр енне тарса килĕсене таврăннă. Пукрав кунĕ вара вĕсем амăшĕсенчен урăх чиркӳллĕ яла кĕлле кайма ыйтнă. Ашшĕсем, амăшĕсем янă вĕсене. Вĕсем çавăн чухне кĕлле каяс вырăнне тӳрех Чĕмпĕре вĕренме утнă... Çапла вĕсем пĕр çитмĕл çухрăм çĕре çуран килсе икĕ кунтах çитнĕ. Унтан вара вĕсенчен кайран тата виçĕ хĕр, пĕри – Хула Çырминчен, иккĕшĕ Аксу ятлă ялтан килме тухнă. Вĕсем Нагаткин ятлă яла çитсен хыçĕсенчен хуса çитсе калле илсе кайнă. Пĕри, Хула Çырминчи, тĕпсакайне кĕрсе юлнă та, ыттисене иккĕшне илсе кайсан, унтан тухса Чĕмпĕре килнĕ. Тата калле илсе кайнисенчен те пĕри кайран татах тарса килнĕ тет. Кăшт тăрсан Чистай уесĕнчи Сунчелейрен пĕр хĕр Чĕмпĕре вĕренме кӳртĕр тесе темĕн пек сарпаласа ыйтса янă. Çапла Чĕмпĕрти чăваш шкулне тĕрлĕ çĕртен чăваш хĕрĕсем пуçтарăннă. Вĕсем пурте пысăкланнă хĕрсем пулнă. Пĕр темиçе кунтан кусем хыççăн ашшĕсем персе çитнĕ. Вĕсем хĕрĕсене калле илсе каясшăн пулнă. Вăл вăхăтра Иван Яковлевич шкулта пулман та уччитлĕсем вăл каламасăр яма пулмасть тесе ĕçе тăсса пынă. Вара лешсем кайнă. Унтан нумай та вăхăт иртмен, амăшĕсем пырса кĕнĕ. Кусем хĕрĕсене курсан шыв пек куççулĕ юхтара пуçланă, хĕрĕсем те ăш-чиккисем капланнине чăтаймасăр темĕн пекех йĕнĕ. Амăшĕсем ĕсĕкле-ĕсĕкле йĕрсе хĕрĕсене икĕ кун ӳкĕтленĕ: халиччен чăваш хĕрĕ хулана тарни çинчен илтни кам пур! Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха: кайран кама каччă кайăр эсир? Хĕрачасен чунĕ вут пек çуннă. Анчах çапах та шкултан каялла пăрахса каяс тесе шухăшламан вĕсем. Çакна курсан амăшĕсем макăра-макăра килне пăрахса

кайнӑ. 16-мӗш октябрьте Иван Яковлевич Хусантан тавӑрӑнсан хай хӗрсен ашшӗсем каллех хӗрсене илсе кайма пынӑ. Анчах лешсем: темӗн тусан та пымастпӑр тенӗ те, вара ашшӗсем Иван Яковлевич патне пуҫтарӑнса ак ҫапла каланӑ: турах ҫапла пулма ҫырнӑ пулӗ. Нимӗн тума та ҫук, вӗренччӗр. Эпир вӗсене ачашласа пӑхса ӳстертӗмӗр. халӗ ӗнтӗ санӑн аллӑна парса хӑваратпӑр. Вӗсене чипер пӑх, пирӗн ята ҫӗртмелле ан пулччӑр. Вӗсем килти пек чӑвашлах ҫӳреччӗр, эсӗ вӗсене майралла ан тумлантар, тенӗ те хӗрӗсемпе сыв пуллашса килӗсене таврӑннӑ. Пӑртак тӑрсан Шупашкар уесӗнчен тепӗр хӗр, шкулри уччитлӗн йӑмӑкӗ, пынӑ. Ҫапла унтан-кунтан киле-киле Чӗмпӗр шкулне 19 хӗр пуҫтарӑннӑ та вӗсене вӗрентме пуҫланӑ. Хӗр шкулне пӑхакан И.Я. арӑмӗ Екатерина Алексеевна пулнӑ, вӑл вӗсене вырӑсла вулама, калаҫма тата ал ӗҫне вӗрентнӗ, ытти науксене арҫын ачасене вӗрентекен уччитлӗсемех вӗрентнӗ. Ӗҫессине, ҫиессине шкул апатне ҫинӗ, пурӑнасса арҫын ачасем пурӑнакан ҫуртрах пӗр пӳлӗмре пурӑннӑ. Хӗр ачасемпе арҫын ачасем хӑйсене хӑйсем лайӑх тыткаланӑ пулин те намӑс ӗҫ-мӗн пуласран Иван Яковлевич нумайччен хӑраса пурӑннӑ. Хӑй ҫуртне туса пӗтерсен, хӗрсене унта куҫарсан, тин унӑн ӑшӗ лӑпланнӑ, шикленми пулнӑ. Ҫапла пуҫланса кайнӑ Чӗмпӗрти хӗр шкулӗ. 1881-мӗш ҫултан пуҫласа чӑваш шкулӗнчи хӗр уйрӑмӗ валли ҫулсерен хыснаран 1945 тенкӗ ярса тӑра пуҫланӑ».

Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ ҫумӗнче хӗрсене училищи уҫӑлни ҫинчен Яковлев вӗренӳ округне 1878 ҫулхи авӑнӑн 29-мӗшӗнче ҫырса пӗлтернӗ: «Кӑҫалхи авӑн уйӑхӗнче Чӗмпӗрти чӑваш шкулне Хусан тата Чӗмпӗр кӗпӗрнисенчен 11 хӗр вӗренме килчӗ. Вӗренме килекенсен шучӗ ӳссех пырать, вӗсем валли уйрӑм пӳлӗм хатӗрленӗ. Чӗмпӗрте чӑваш хӗрӗсен шкулне уҫиччен ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ тӑкаксене эпӗ йӑлтах хам ҫине илетӗп».

Юпа уйӑхӗн 12-мӗшӗнче ҫак ҫырӑва Д.А. Толстой патне ярса панӑ, лешӗ 1878 ҫулхи юпан 28-мӗшӗнче Хусан вӗренӳ округне ҫапла хуравланӑ: «Яковлев гос-

подина усăллă ĕç тунăшăн тата çавна май хăй укçине тăкакланăшăн манран тав сăмахĕ калăр». Анчах министерство шкула укçа-тенкĕпе мĕнле те пулин пулăшасси пирки нимĕн те пĕлтермен.

Çапла министерство ирĕк памасăрах, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче хĕрсен уйрăмĕ уçăлнă. Вăл икĕ класран тăнă, унта çут ĕç министерствин ялти икĕ класлă училищисен курсĕпе Турă саккунне, чиркĕре юрлама, славян тата вырăс чĕлхисене, арифметика, çыру, ал ĕçĕ вĕрентнĕ. Чăвашла куçарса çырнă тĕн кĕнекисене вулаттарнă, унсăр пуçне аслă классенче хĕр ачасем вырăс историйĕпе географи предмечĕсемпе те пĕлӳ илнĕ.

«Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче хĕрсен уйрăмне – училищине уçасси пирки эпĕ тахçанах шухăшласа çӳренĕ. Анчах авланиччен уçма май килмерĕ. Хĕрсен уйрăмне уçасси авланнипе пĕр вăхăта килчĕ. Эпĕ, авланман çын, хĕрсен уйрăмне йĕркеленĕ пулсан, çакă тăшмансемшĕн манăн йĕркесĕрлĕх пирки калаçмалли сăлтав пулнă пулĕччĕ»,– тесе аса илет И.Я. Яковлев «Манăн пурнăç» кĕнекинче.

Хĕрсен уйрăмĕнче Екатерина Алексеевна чылай вăхăт хушши тӳлевсĕрех ĕçленĕ, пирвайхи вунă çулĕнче вăл хĕрсене вĕрентекен тата пăхса тăракан пĕртен-пĕр учитель пулнă. Вăл тӳлевсĕр ĕçлеме килĕшмен пулсан хĕрсен училищине уçасси пирки сăмах та пулма пултарайман. Хĕрсене Е.А. Яковлева вĕрентекен пулма хатĕрлени-сĕр пуçне вĕсенчен пур енĕпе те ырă тĕслĕхпе палăрса тăракан мăшăрсем, аннесем пулччăр тесе те пит хытă тăрăшнă.

Хĕрсен училищи И.Я. Яковлев хăй пурăнакан çуртра вырнаçнă пулнă. Ăна ятарласа 1884 çулта туса лартнă. Вĕренекенсем пурте пӳлĕмсемпе, сĕтел-пуканпа, вĕренӳ хатĕрĕсемпе тӳлевсĕр усă курнă. Классемпе çывăрмалли пӳлĕмсене хĕрачасем хăйсем тасатнă, апатçимĕçне пĕр поварпа пĕрле хатĕрленĕ. Малтанласа вĕренме кĕрекен хĕрсем вулама та, çырма та пĕлмен пирки вĕсене 6 çул вĕрентме тивнĕ. Каярахпа, хутла пĕлекенсем киле пуçласан, вĕренӳ тапхăрĕ 4 – 5

çултан иртмен. 1890 çулхи кĕркунне хĕрарăмсен уйрăмĕнчен хĕрсен училищи туса хунă. 1918 çулччenex пулнă вăл. 1878-1918 çулсенче унтан 505 хĕр ача вĕренсе тухнă, вĕсенчен ытларахăшĕ пуçламăш шкулсенче ĕçленĕ. Хăшĕ-пĕри малалла Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарирен вĕренсе тухса вырăс мар халăхсен пуçламăш училищисенче учительницăсем пулса тăрăшнă. 1900 çулхи авăнăн 1-мĕшĕнче Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче пуçламăш чăваш училищисен учителĕсене хатĕрлес тĕллевпе херарăмсен педагогика курсне уçнă. Ăна тытса тăма Çут ĕç министерстви çулсерен 1000 тенкĕ куçарса тăнă. Малтанхи тапхăрта унта пĕр çул çеç вĕрентнĕ, 1905 çултан пуçласа – икĕ çул. Çапла майпа икĕ çулта пĕрре вĕренме илнĕ. 1912 çултанпа виçĕ çуллăх курс йĕркеленĕ. Тĕллевĕ учительницăсен йышне ӳстересси пулнă. Курсра маларах асăннă предметсемсĕр пуçне тата хута вĕрентес ĕçĕн, пуçламăш арифметика меслечĕсене тата таса çырма вĕреннĕ. Пуçламăш классенче пĕлӳ парас тĕлĕшпе практика занятийĕсем ирттернĕ. Практикăна шкул çумĕнче 1906 – 1917 çулсенче ĕçленĕ хĕрарăмсемпе арçынсен икĕ класлă училищисене çӳренĕ. Курсран вĕренсе тухакансене пуçламăш училищĕн учительници ят панă.

И.Я. Яковлев чăваш хĕрĕсене вĕрентес ĕçре пысăк вăй хунă. Хĕрарăмра вăл чăваш халăх культурине çĕклеме пултаракан хăватлă вăй курнă, çавăнпа та пулас учительницăсене тата пулас ача амăшĕсене вĕрентсе воспитани пама хăйĕн вăхăтне те, вăйне те, укçи-тенкине те шеллемен. 1881 çулччен хĕрсен училищине хăй вăйĕпе тытса тăнă. Хĕрарăм пĕр харăсах ача амăшĕ, арăм тата учительница пулсан, вăл ӳссе çитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕçре калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Хĕрарăм çемьере халăх йăли-йĕркине çирĕп тытса пыракан, кăмăл-сипет никĕсне хывакан тата тĕрлĕ юрăхсăр пулăмсенчен сыхлакан хăватлă вăй пулса тăрать, тесе çырнă И.Я. Яковлев чăваш хĕрарăмĕсем пирки.

Çапла вара 1878 çулта уçăлнă уйрăм революциччен-хи Раççейре чăваш хĕрĕсен пирвайхи вĕренӳ заведенийĕ

пулнӑ. Хӗрсене вӗрентес ӗҫ мӗнлерех аталаннине палӑртса, И.Я. Яковлев ҫапла аса илет: «Чӑваш хӗрӗсем манӑн шанӑҫа тӳрре кӑларчӗҫ. Чӑваш шкулӗнчен ялти шкулсем валли лайӑх учительницӑсем нумай тухрӗҫ. Чӑваш хӗрӗсем хушшинче пултаруллисем те пурччӗ, чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ хӗрсенчен вуннӑшӗ малалла кайрӗҫ, Петербургри, Мускаври вӗренӳ заведенийӗсенче аслӑ пӗлӳ илчӗҫ». Вӗсен шутӗнче: А.И. Иванова, А.И. Ларионова, В.П. Назарова, М.В. Свешникова, А. Сергеева т. ыт. те.

Чӗмпӗрти училищӗсӗр пуҫне вӑл Атӑл тӑрӑхӗнчи чӑваш ялӗсенче те хӗрсене вӗрентессине тимлӗ йӗркелесе пынӑ. Хӗрарӑмсен арҫынсемпе танах вӗренме право пуррине тата вӗсем чӑваш халӑхӗн культурине ҫӗнӗ вӑйпа чӗртсе тӑратма, ӑна ҫӗнӗ шая ҫӗклеме пултарнине палӑртнӑ.

### 3.4. Чӑваш ачисен пирвайхи вӗрентекенӗсем

И.Я. Яковлев пуҫласа янӑ шкула малтанхи виҫӗ ҫул (1868-1871) хушшинче тӳрех шкул теме те пулмасть, мӗншӗн тесен ун чухне унӑн нимӗнле программа та, план та, официаллӑ йӗрке те пулман. Иван Яковлевич чӑваш ачисене хулари шкулсене кӳртме ҫеҫ хатӗрленӗ. Кашни ачана вӑл, репетиторсем пек, уйрӑм вӗрентнӗ. Кам мӗне уҫҫӑнах пӗлмен, ҫавна ҫине тӑрсах ӑнлантарнӑ. Хӑйӗн пӗрремӗш вӗренекенне А. Рекеева вара апат вӑхӑтӗнче сӗтел хушшинче мӗнле лармаллине, кашӑкпа вилкӑна мӗнле тытса ҫимеллине вӗрентнинчен пуҫласа, вӗренекен ҫӗрте учительсемпе, юлташӗсемпе тата ҫавӑн пекех тӗрлӗ чиновниксемпе мӗнле тыткаламалли таранах вӗрентнӗ. Ҫавӑнпа та эпир И.Я. Яковлева хӑйне ҫак шкулӑн пӗрремӗш вӗрентекенӗ – воспитателӗ теме пултаратпӑр. Чӑваш ачисене вӗрентес ӗҫре Иван Яковлевича гимназире пӗрле вӗреннӗ икӗ юлташӗ хытӑ пулӑшнӑ, вӗсенчен пӗри – Александр Панаев, тепри – Николай Соколов. Ҫаксем иккӗшӗ те калама ҫук хастар ачасем пулнӑ,

вĕсене чăваш шкулĕн пирвайхи вĕренекенĕсем ăшă кăмăлпа çеç асăнса пурăннă.

Халăха вĕрентес ĕç министерстви Чĕмпĕрти чăваш шкулне тӳрех йышăнасшăн пулман, çавăнпа та ятарлă вĕрентекен уйăрса парасси пирки те шухăшламан. И.Я. Яковлев Хусан университетне вĕренме кĕрсен шкулти учитель-наставник ĕçне малтанласа А. Рекеев пурнăçласа пынă, анчах ăна та часах салтака илсе кайнă. Чăваш ачисем ертӳçĕсĕр тăрса юлма пултарайман. А. Рекеев хăй салтака тухса кайиччен шкула В.А. Калашников текен вырăса ертсе çӳресе хăнăхтарнă. Вĕсем иккĕшĕ те Чĕмпĕрти педагогика курсĕнче вĕреннĕ пулнă, В.А. Калашников Рекеевран пĕр çул аслăрах курса çӳренĕ. Унта вăл чиркӳ юррисене чаплă юрланипе палăрнă, чăваш ачисене вара чиркӳ юррисене юрлама вĕрентекен çын пулман, çавăнпа та А. Рекеев ăна чăваш шкулне çӳресе ачасене чăвашла кĕлĕ юррисене юрлама вĕрентмешкĕн ыйтса пăхнă. «Василий Андреевич хаваспах тата тӳлевсĕрех ĕçлеме килĕшрĕ, – аса илет А. Рекеев, – çапла вара пирĕн шкулта та чăвашла юрлама пуçларĕç. Çакăн пирки эпĕ тӳрех Иван Яковлевича çырса пĕлтертĕм, вĕсене çыру урлă паллаштартăм. В.А. Калашников пирĕн ушкăна кăмăлласа пăрахрĕ те ачасем патне час-часах пырса çӳреме тытăнчĕ».

Акă мĕншĕн ĕнтĕ А. Рекеева салтака илсе кайнă хыççăн чăваш шкулĕнче ĕçлеме тивĕçлĕ учитель-воспитатель пирки ыйту тухса тăрсан, И.Н. Ульяновпа И.Я. Яковлев тӳрех В.А. Калашникова аса илеççĕ. Ун чухне вырăс каччи 16 çулта çеç пулнă-ха. Анчах унăн 10 çултан пуçласа 20 çула çитичченхи чăваш ачисемпе ĕçлеме тивнĕ. В.А. Калашников чăвашла пĕлменнипе ăна пулăшма И.Я. Яковлев ыйтнипе Хусантан учителе вĕренсе тухнă Игнатий Иванова ярса параççĕ. Çапла вара вĕсем иккĕшĕ пĕрле тăрăшнипе 1870-1871 вĕренӳ çулне чăваш шкулĕнчи ачасем ăнăçлă вĕçленĕ. Калашников кунта ĕçленĕшĕн никамран та пĕр пус та илмен. Иван Яколвевич çакăн çинчен пĕлнĕ, ăна хăй енчен укçа сĕнсе те пăхнă, анчах ырă кăмăллă, пархатарлă чун-чĕреллĕ Калашников килĕшмен, «манăн та

сирĕн пекех чухăн ачасене, малалла вĕренесшĕн хыпса ҫунакан ҫамрăксене пулăшас килет» тесе ҫеҫ хуравланă.

Чăваш шкулĕнчи ачасен йышĕ ӳснĕҫемĕн штатра тăракан учитель те кирлĕ пулнă. Малтанласа И.Я. Яковлев Пăва уесĕнче Пимĕрсел ялĕнчи училищĕре ĕҫлекен Тимофей Петрович Петрова илес тесе шутласа хурать, анчах ку ыйтăва официаллă йĕркепе татса пама май килмест. Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕ пуҫлансан шкулта В.А. Калашниковăнах ĕҫлеме тивет. Унăн ĕҫне И.Н. Ульянов ҫирĕп тĕрĕслесе тата йĕркелесе тăрать. Чăваш ачисене В.А. Калашников пуҫламăш шкул программи тăрăх вырăс чĕлхи, арифметика, Турă саккунне, чиркӳ юррисене вĕрентет. Анчах ҫав-ҫавах ăна официаллă йĕркепе учителе ҫирĕплетме май килмест-ха. 1871 ҫулхи авăнăн 23-мĕшĕнче И.Н. Ульянов Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ ячĕпе ҫакăн пек ҫыру ярать: «Хальхи вăхăтра Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 13 арҫын ачаран тăрать... Вĕсем валли уйрăм учитель-ертӳҫĕ кирлине тĕпе хурса тата ку вырăнта 4 уйăх ытла ĕнтĕ Чĕмпĕр уес училищи ҫумĕнчи педагогика курсĕнчен вĕренсе тухнă В.А. Калашников ĕҫленине шута илсе сиртен тархасласа ыйтатăп, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче учитель пулса ĕҫлемешкĕн ун валли ятарласа уйрăм штат единици ыйтса илме тата ҫавăн пекех учителе ҫулталăкра 300 тенкĕ тӳлесе тăма пулăшсамăр». И.Я. Яковлев та ҫавнашкал ҫырусем сахал мар ҫырнă министерствăна. Анчах вĕсем чылайччен хурав кĕтсе илеймен. 1871 ҫулхи юпа уйăхĕн вĕҫнелле тин Чĕмпĕр чăваш шкулне ятарласа учитель должноҫне уйăрса параҫҫĕ.

1872 ҫула Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ ăнăҫлă вĕҫленĕ, унта 26 вĕренекен тата пĕр учитель пулнă. Ҫак вĕренӳ ҫулĕ чăнласах историе кĕрсе юлнă, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи чăваш ялĕсенче уҫăлакан училищĕсем валли кунтан учительсем йышлăн вĕренсе туха пуҫланă. Хăшĕпĕрисем ялсене ĕҫлеме кайнă, теприсем Чĕмпĕрти педагогика курсĕн иккĕмĕш класне вĕренме куҫнă тата ыттисене В.А. Калашников малалла хатĕрленĕ. Ҫапла майпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн чи пирвайхи учителĕ кунта 1874 ҫулчченех ĕҫлесе пурăннă. Ҫак хушăра вăл

Иван Яковлевичпа самаях ҫывăхланнă, унăн тăван ялĕнче Кăнна Кушкинче те, Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕнче те пулса курнă, чăвашла ăнланакан пулса ҫитнĕ, хăй те ачасемпе чăвашла сăмах хушса калаҫма пуҫланă. Ачасем хăшĕ-пĕри хăйĕнчен виҫĕ-тăватă ҫул аслăраххисем пулнă пулин те, ăна итлесе кăна тăнă. Вĕсен шутĕнче чăваш шкулĕн пĕрремĕш учителĕ Сергей Тимрясова, Илья Бюргановские, Климентий Макарова ырăпа ҫеҫ аса илет. Усалтараххисене, Александр Эдременьпе Степан Кривой пек пуҫтахраххисене, вăл тепĕр чухне «ĕнсе чикки» те пама тивнине пытармасть. Ыттисем вара пĕр вăрҫмасăрах аван вĕренесшĕн тăрăшатчĕҫ, тет. Анчах та И.Я. Яковлев шкула килсе ҫӳренĕ май ачасем, Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕнчи пек, Турра ҫирĕп ĕненсе вĕренменнишĕн ӳпкелешнĕ, вĕренекенсене кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен Турă саккунĕпе килĕшӳллĕн воспитани пама кирлине палăртнă.

1874 ҫул пуҫламăшĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче улшăнусем пулса иртнĕ. Унта пурĕ 32 ача вĕреннĕ. В.А. Калашников Усолье текен вырăс ялне пĕр класлă училищĕне ĕҫлеме куҫнă, ун вырăнне Кивĕ Улхаш ялĕнчен А.Н. Сурова куҫарса килнĕ. Вăл ку шкулта Иван Яковлевич Хусантан куҫса киличченех ĕҫленĕ.

Тата тепĕр учитель Турă саккунне вĕрентекен Иван Васильевич Богоявленский пулнă. Вăл кунта Чĕмпĕрти тĕн училищинчен килсе ҫӳренĕ. Ҫак асăннă учительсем виҫҫĕшĕ те тимлĕ, хăватлă чĕреллĕ вырăс ҫыннисем пулнă. Вĕсем чăваш ачисенчен, ытти вырăс таврашĕ пек, пĕртте йĕрĕнмен, пур хевти ҫитнĕ таран вĕсене вĕрентнĕ, вĕсемшĕн тăрăшнă, ним пĕлмен ачасем пĕлекен пулса тăна кĕнине курсан, темĕн чухлĕ хавасланса ĕҫленĕ. Вырăсла пачах пĕлмен ачасене пĕлĕвĕн ҫуттине кăтартса пама майсем тупма, чăваш халăхĕн чĕрине шкул енне ҫавăрма пултарнă. Ҫапла вĕсем тăрăшнипе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ чи йывăр ҫулсене чипер ирттерсе янă.

Вĕрентессе 1875 ҫулччене вырăсла вĕрентнĕ, чăвашла пăртак вулакалама анчах вĕрентнĕ пулмалла.

Мĕншĕн тесен «Чăваш кĕнеки» 1872 çулта тухнă, ун тăрăх вулăр тесе Иван Яковлевич А. Рекеева çырусенче пĕрмай хăваланă, ăна хăйне те «эсĕ чăвашла лайăх вулаймастăн» тесе питленĕ.

1875 çулта тин чăвашла вулама та, çырма та тĕплĕнрех веренте пуçланă, мĕншĕн тесен ун чухне учителе чăвашла ăста пĕлекен Д.Ф. Филимонова кĕртнĕ. Пуçламăш шкулĕнче малтанхи икĕ çул хушшинче йăлтах чăвашла вĕрентнĕ. Çак икĕ çул хушшинче ачасем вулама, çырма, шутлама хăнăхса çитсен тин вырăсла вĕренте пуçланă. Çапла тăва пуçласан вара тинех ĕç малалла кайнă, унччен вĕренме пултарайман ачасем те чип-чиперех вĕрене пуçланă.

1875-1876 вĕренӳ çулĕнчен пуçласа шкула И.Я. Яковлев хăй ертсе пынă. Çак вĕренӳ çулĕн пирвайхи çур çулĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ мĕнле ĕçлени пирки министерствăна тăратнă отчетпа килĕшӳллĕн ачасем ытти мĕнпур вĕренӳ заведенийĕсенчи пекех расписанипе вĕренме тытăннă. Куллен кашни класра пилĕкшер урок ирттернĕ, уроксем пĕр сехете пынă. Кăнтăрлаччен виçĕ сехет, апат хыççăн тата икĕ сехет вĕреннĕ. Çак предметсем пулнă: вырăс чĕлхи, арифметика, черчени, чистописани, Турă саккунĕ. Ытларикунсенче кăнтăр апачĕ хыççăн тек уроксем пулман, ачасене мунчана илсе кайнă.

Пуринчен ытла ачасене вырăсла лайăхрах вĕрентме тăрăшнă. Мĕншĕн тесен, ăна пĕлсен пур вырăсла кĕнекене те ăнланма пулать тата ăна пĕлмесĕр патшалăхра нимĕнле те ĕçлеме май çук, унтан та ытла ăна пĕлнине кура, вырăс пуçлăхĕсем чăваш шкулне е ырланă, е хурланă. Кун хыççăн пуринчен ытла вырăсларан чăвашла куçарма хытă вĕрентнĕ. Мĕншĕн тесен вырăс культурине чăваш хушшине чăваш чĕлхисĕр сарма пулман.

1875-1876 вĕренӳ çулĕнче вĕрентекенсен йышĕнче çаксем пулнă:

Иван Васильевич Богоявленский – Турă саккунне вĕрентекен, хăй Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухнă пулнă, чăваш шкулĕнче 1874 çултанпах ĕçленĕ.

1876 çулччен пĕр пус укçа та илмен, 1876 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа тин çулталăкне 150 тенкĕ илсе тăма пуçланă.

Николай Михайлович Архангельский – тĕн семинарийĕнчен ятарласа вырăс чĕлхипе илемлĕ сăмахлăх теорине вĕрентме чĕнсе илнĕ.

Даниил Филимонович Филимонов – Хусанти учительсен семинарийĕнчен вĕренсе тухсан 1875 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме пуçланă. Ун чухне вăл 19-ти каччă пулнă. И.Я. Яковлев ăна шкул заведующийĕ пулма шаннă. Чăвашла вĕрентнĕ.

Даниил Павлович Павлов – чăвашла верентнĕ иккĕмĕш учитель, вăл та, Филимонов пекех, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарирен вĕренсе тухнă.

Петр Васильевич Савенков – таса (яка) çырма тата ӳкерчĕксем тума вĕрентекен. Чĕмпĕр уес училищинче сăнарлă искусствăна вĕрентекен преподаватель чăваш шкулне эрнере икĕ кун килсе çӳренĕ.

Петр Горбунов — шкулăн хуçалăх ĕçне туса пыраканĕ, алăсти мастерскойĕсемшĕн явапли, Д. Филимонован çумĕ (халĕ заместителĕ тетпĕр) пулнă.

Çаксемсĕр пуçне ачасене тата тĕрлĕрен алă ĕç тума вĕрентнĕ, атă-пушмак, кĕнеке хуплашкисем туса çĕлеме тата йывăçран тĕрлĕ эрешсем каскалама. Атă-пушмак çĕлеме вĕрентекенни Чĕмпĕр мещенĕ Алексей Самойлов пулнă. Куншăн ăна уйăхне 8-шар тенкĕ тӳлесе тăнă. Вĕренекенсем пурĕ 52 арçын ача пулнă, вĕсенчен чăвашсем – 35, вырăссем – 15, мордвинсем – 2.

Иван Яковлевич çак вăхăтра тĕп чăваш шкулне учительсене пит суйласа кĕртнĕ, хăй майлă шухăшлакансене, шкул ĕçне юратакансене, чăваш ĕçне хавас тăвакансене. Унсăрăн ун чухне май та килмен, мĕншĕн тесен шкула чун кĕртекенни вăл вăл кирек ăçта та – вĕрентекен. Вĕрентекен начар пулсан, шкул та начар пулать, вара ăна нимĕнле программа та, нимĕнле методика та, нимĕнле материал та ырă тăваймасть, тенĕ И.Я. Яковлев. Çавăнпа вăл хăй тавра чăн хастар, чи тимлĕ, укçашăн çунман çынсене пуçтарма тăрăшнă.

Пĕрре шаннă çынна Иван Яковлевич ĕçленĕ чухне ирĕк панă, пӳлсе-чăрмантарса тăман.

Чăваш шкулĕнче вĕрентекенсем икĕ тĕрлисем пулнă: кĕçĕн классенче вĕрентеккеннисем пурте – чăвашсем, аслă классенче вĕрентеккеннисем – вырăссем. Чăвашсем пурте ачасемпе пĕрле шкултах пурăннă. пĕрле ĕçсе-çинĕ. Çавăнпа кĕçĕн классенче вĕрентекен учительсем ачасемпе çывăхрах хутшăннă, ашшĕ-амăшĕ вырăнĕнче пулнă.

1877-1878 вĕренӳ çулĕнчен пуçласа 4-мĕш класс уçăлнă май тата вĕрентӳ программи те пысăклансах пынипе, çавăн пекех шкулта Турă саккунне чăвашла вĕрентсе Турра кĕл тăвассине те чăвашла çеç ирттерме ĕмĕтленсе И.Я. Яковлев Хусанти учительсен семинарийĕнчен вĕренсе тухнă хастар чăваш каччисене Петр Васильева, Сергей Тимрясова тата Андрей Петрова хăйĕн шкулне ыйтса илет. Кĕркунне учительсен хисепĕ 9 çынна çитет. «Чăваш учительсемпе Иван Яковлевич кашни кунах тĕл пулса калаçатчĕ, тепĕр чухне çурçĕр çитиччен ларатăмăр. Ытларах вăл шкул çинчен, чăвашсем çинчен, чăвашла куçарусем çинчен, пĕтĕмĕшле илсен чăвашсене çутта кăларасси çинчен калаçатчĕ», – аса илсе çырнă И.Я. Яковлевăн пулăшаканĕ Д.Ф. Филимонов.

Петр Васильев кĕçĕн классенче, каярахпа аслă классенче вырăс чĕлхи вĕрентме пуçланă. Сергей Тимрясовпа пĕрле вĕсем чăваш шкулĕсем валли вырăс чĕлхи учебникĕсене çырса хатĕрлес тесе нумай тăрăшнă. Иван Яковлевич министерствăри пуçлăхсене Петр Васильев преподаватель ĕçĕнче çеç вăй хурĕ тесе шантарнă пулин те, вăл Иван Яковлевича Библи кĕнекисене тата ытти тĕн литературине те куçарма нумай пулăшнă. Сергей Тимрясов килнĕ-килмен куçару ĕçне йĕркелесе ертсе пыма пикеннĕ, тепĕр чухне учительсем çитменнипе кĕçĕн классенче арифметика та вĕрентнĕ. Андрей Петров чиркӳ юррисене чăвашла юрлама вĕрентнĕ, вăлах чиркӳ юррисене чăвашла куçарса нотăсем çыракан пĕрремĕш музыкçă пулнă, шкулта вĕренекенсемпе хор йĕркеленĕ. 1882 çулта ăна пуçламăш училищĕри тата хĕрсен уйрăмĕнчи кĕçĕн классенче Турă саккунне вĕрентме ирĕк панă. Д.Ф. Фи-

лимонов çĕнĕ çĕре куçса кайсан Андрей Петрова тата шкул заведующине кӳртнĕ. Çапла Андрей Петрович Петров (Туринге) чăваш шкулĕнче 1888 çулхи раштавченех тăрăшнă, пур ĕçре те – ачасене вĕрентнинчен пуçласа Сăваплă Çырусемпе тĕн кĕнекисене çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр чăвашла куçарни таранах – И.Я. Яковлевăн шанчăклă пулăшаканĕ пулнă.

1890 çулчченхи тапхăра пăхса тухсан Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен тĕп чăваш шкулĕнче ак çак педагогсем вăй хунине пĕлтĕмĕр:

1) вырăс чĕлхипе сăнарлă сăмахлăх вĕрентекенĕсем – Николай Михайлович Архангельский (1877 – 1888 çулсенче ĕçленĕ), Николай Иванович Новинский (1889 – 1892) чиркӳ-славян чĕлхипе вулама тата вырăс чĕлхипе эрнере 8 – 10 урок таран вĕрентнĕ;

2) **математикăпа физика учителĕсем** – И.Я. Яковлев (1876 – 1878), Алексей Васильевич Годнев (1878 – 1880), Никифор Михайлович Охотников (1881–1888), Александр Васильевич Смоленский физика-математика наукисен кандидачĕ (1889 – 1893), А.В. Годнев чăваш шкулĕнче виçĕ вĕренӳ çулĕ ĕçленĕ, çавна май чăваш ачисене пит мухтанă. «Чăваш ачисем математикăпа физикăра пит вăйлă пулнине мĕнпе çыхăнтармаллине ку таранччен те ăнланса çитерейместĕп, чăваш йăхĕ пит пултаруллипе е ăслă-тăнлă ачасене суйласа илме пĕлнипе. Анчах çĕнĕ вĕренекенсен вăйне эпĕ кунсерен пысăкран та пысăкрах хак пама пуçларăм. Класри тимлĕх тата тăрăшулăх тĕлĕнмелле çӳллĕ шайраччĕ. Мĕн калатăн, тӳрех ăнланса илеççĕ, çакна эпĕ вĕсен куçĕнчен пăхсах кураттăмччĕ. Чăваш шкулĕнче хам сăнанă тăрăх, чăваш йăхĕ çав тери пулттаруллă йăх тесе шутлатăп», – аса илнĕ каярахпа А.В. Годнев.

А.В. Смоленский Иван Яковлевичшăн ют çынах пулман иккен. Н.И. Ильминский мăшăрĕ Екатерина Степановна унăн тăванĕ пулнă, вăл çамрăклах вĕсем патĕнче ӳссе çитĕннĕ, Хусан университетне пĕтернĕ. Н.И. Ильминский ыйтнипе И.Я. Яковлев ăна Чĕм-пĕрти чăваш шкулне йышăннă. Кунта пурăннă чухне чăвашла калаçма вĕреннĕ, чăвашсем çут çанталăкри улшăнусем

çинчен каланисене пухса уйрăм кĕнеке кăларнă. Çак асăннă учительсем пурте. И.Я. Яковлевпа Н.М. Охотниковсăр пуçне, вырăссем пулнă, пурте тенĕ пекех тĕн семинарийĕнче ĕçленĕ;

3) **педагогика учителĕ** – И.Я.Яковлев (1880 – 1890);

4) **историпе географи учителĕсем** – Даниил Павлович Павлов (1876). Икĕ çул ĕçленĕ хыççăн Хутар шкулне куçнă. Д.Ф. Филимонов (1876 – 1882). И.Я. Яковлев хăй (1882 – 1884). В.Н. Никифоров (1884 – 1890).

**Кĕçĕн классенче арифметикăна** вĕрентекенсем Д.Ф. Филимонов (1876), С.Н. Тимрясов (1877–1878), И. Зельцовпа П.М. Миронов (1879–1881), **вырăс чĕлхине** вĕрентекенсем П.В. Васильев (1883–1884), В.И. Скворцов (1885–1888). К.А. Алексеев (1889–1892); **музыкăна тата чиркӳ юррисене юрлама** вĕрентекенни А.П. Петров (Туринге) (1876–1885), В.А. Афанасьев (1889–1890); **илемлĕ ӳкерме вĕрентекенсем** Строганов (1876–1880), С.Н. Огонь-Догановский (1889–1892).

Кунсăр пуçне тата шкулта гимнастикăпа çар ĕçĕ текен предметсене кӳртнĕ. Вĕрентекенни Кошунски 5-мĕш пехота полкĕн запасри унтер-офицерĕ Василий Дементьевич Билетников пулнă. Ачасемпе вăл кашни кунах 1 сехетрен кая мар ĕçленĕ, вырсарникунпа уяв кунĕсенче çеç стройпа утма тухман.

1877–1878 вĕренӳ çулĕнче шкулта столярь, слесарь, токарь тата тимĕрçĕ мастерскойĕсене уçнă. Мастерскойсен заведующийĕнче çак шкултанах вĕренсе тухнă Г.И. Перепелкин ĕçленĕ. Ĕçе пĕлсе йĕркелесе янине кура шкул валли кăна мар, айккинчен заказсем илсе ĕçленĕ.

Çапла вара чăваш халăхне вĕрентӳ çутипе çутăлтарасшăн çуннă И.Я. Яковлевăн тĕлĕнмелле хастарлăхне пула шкулăн пĕтĕм пурнăçĕ вĕрентекенсемпе воспитательсем тăрăшнипе патварланса пынă, чăваш шкулĕ хăйĕн вăйне кăтартма пуçланă. Пĕчĕкçĕ шкултан пысăк вĕрентӳ комплексĕ пулса тăнă, çак илсе кăтартнă пирвайхи тапхăртах вăл хăйĕн умне пысăк пĕлтерĕшлĕ задачăсем лартса пурнăçлама пултарни курăнса тăрать.

## Тĕп литература

1. Волков Г.Н. И.Я. Яковлев – чăваш халăх педагогĕ / Г.Н. Волков.– Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1959. – 70 с.

2. Димитриев В.Д. Просветитель чувашского народа И.Я. Яковлев: сб. ст. / В.Д. Димитриев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. – 140 с.

3. Краснов Н.Г. Выдающийся педагог-просветитель / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1992.

4. Краснов Н.Г. Иван Яковлев и его потомки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 352 с.

5. Кураков Л.П. Прометей из чуваш: Размышления о выполнении Завещания И.Я. Яковлева / предисл. И.А. Яковлева. 3-е изд., доп. – Чебоксары: Чув. кн. изд-во, 1999. – 223 с.

6. Мукина И.В. И.Я. Яковлев çинчен хунă чăн сăмах / И.В.Мукина. – Шупашкар: Руссика, 1998. – 246 с.

7. Петров М.П. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев çинчен / М.П. Петров. – Шупашкар: Халăх çутĕç комиссариачĕ, 1928. – 95 с.

8. Яковлев А.И. И.Я. Яковлев. 1848-1930 гг. / под ред. проф. Ф.Н. Петрова. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1958.

9. Яковлев И.Я. Моя жизнь: Воспоминания / вступ. статья Л.П.Куракова, археогр. предисл. Г.Н. Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г. Краснова. – М.: Республика, 1997. – 696 с.

10. Яковлев И.Я. Становление системы образования чувашского народа / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004. – 454 с.

## Хушма литература

1. Александров Г.А. Иван Яковлевич Яковлев: фрагменты жизни / Г.А. Александров. – Чебоксары: Изд-во «Чувашия», 1997. – 194 с.

2. Александров Г.А. Чувашские интеллигенты. Биографии и судьбы / Г.А. Александров. – Чебоксары, 2002. – 212 с.

3. Вопросы яковлевоведения. Труды Института И.Я. Яковлева. Вып. 1. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1999.

4. Жиркевич А.В. Мои встречи с И.Я. Яковлевым. Из дневника за 1916 -1924 гг. / сост. и коммент. Г.А. Александрова. – Чебоксары: Руссика, 1998. – 467 с.

5. Земляков А.Е. Проблема связи воспитания с жизнью в истории чувашской школы и педагогики: монография / А.Е. Земляков. – Чебоксары: Чувашгоспедуниверситет имени И.Я. Яковлева, 2004. – 290 с.

6. Земляков А.Е. Яковлевоведение: учеб. пособие для студентов педагогических учебных заведений / А.Е. Земляков. – Чебоксары: Чувашгоспедуниверстет имени И.Я. Яковлева, 2006. – 2003 с.

7. Плечов Г.Н. Вараксарская чувашская женская трудовая община: феномен просветительно-педагогической теории и практики И.Я. Яковлева / Г.Н. Плечов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1999. – 150 с.

8. Таймасов Л.А. Христианизация чувашского народа в первой половине Х1Х века: монография / Л.А. Таймасов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2005.

9. И.Я. Яковлев в воспоминаниях современников. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1968.

10. Яковлев И.Я. (Саламбек). Симбирская учительская школа и его роль в просвещении чуваш / И.Я. Яковлев (Саламбек). – Чебоксары, 1959.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. XVI-XVII ĕмĕрсенче чăвашсемшĕн çĕнĕрен çутлăх тапхăрĕ, шкул вĕрентĕвĕн тапхăрĕ пуçланни мĕнле сăлтавсемпе çыхăннă?

2. Яковлев гимназист йĕркелесе янă чăваш шкулĕн ĕçне Чĕмпĕрĕн мал шухăшлă, вĕреннĕ çыннисем мĕнле кăмăлпа йышăннă?

3. И.Я. Яковлев 1870 çулта Чĕмпĕрти гимназипе училищĕсен директорĕ И.В. Вишневский тата Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ П.Д. Шестаков патне çырнă çырусемпе паллашăр. Вĕсенче чăваш халăхне çутта кăлармалли программа тĕллевĕсене мĕнлерех палăртнă?

4. Чĕмпĕрти чăваш наци шкулĕн аталанăвне кăтартса паракан схемăна ӳкерсе илĕр, ун тăрăх кĕске доклад хатĕрлĕр.

# 4 сыпӑк
# И.Я. ЯКОВЛЕВ – ЧӐВАШ ХАЛӐХ ПЕДАГОГӖ

*Наука пӗлтерӗшне вӑл халӑхӑн анлӑ массисен культура шайне ҫӗклеме мӗнле-рех витӗм кӳнине кура та хаклаççӗ.*

*И.Я. Яковлев*

## 4.1. Тӗнчери халӑхсен ӑс-тӑн пуянлӑхне хисеплесси

Просветитель ӗç-хӗлне тата унӑн педагогика идейисен пӗлтерӗшне лайӑх ӑнланас тесен И.Я. Яковлевӑн тӗнче курӑмӗ мӗнлерех аталанса пынине тӗплӗнрех пӑхса тухмалла. Çакна вӑл пурӑннӑ чухнехи истори условийӗсене шута илмесӗр тума май çук. И.Я. Яковлев обществӑпа экономика формацийӗсен тӗрлӗ условийӗсенче пурӑннӑ, çавӑнпа та çав вӑхӑтра пулса иртекен улшӑнусем унӑн тӗнче курӑмне тӳрремӗнех витӗм кӳнӗ.

Х1Х ӗмӗрӗн 60-мӗш çулӗсенчи ирӗклӗх идейисен витӗмӗ, Чӗмпӗр хулин прогрессивлӑ çыннисемпе хутшӑнни те унӑн шухӑш-кӑмӑлне хӑйне евӗр пысӑк витӗм кӳрет. Демократла шухӑш-туйӑмлӑ А.А. Мукосеев математикпа тата Чӗмпӗрти вырсарникун шкулне йӗркелесе ертсе пынӑ М.В. Арнольдовпа çывӑх туслашни те И.Я. Яковлевӑн шухӑш-кӑмӑлне çирӗплетнӗ, обществӑпа политика аталанӑвӗн ыйтӑвӗсене çӗнӗлле хаклама вӗрентнӗ. М.В. Арнольдовпа иккӗшӗ те вӗсем пӗр вӑхӑтрах Хусан университетӗнче вӗреннӗ, юлташсем пулнӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл Яковлева Чӗмпӗрте чӑваш ачисем валли хӑйне евӗрлӗ шкул йӗркелесе ярас ӗçре те сахал мар пулӑшнӑ. Яковлевӑн тӑван халӑха вӗрентсе çутта кӑларас идейине социаллӑ политика пӗлтерӗшӗпе çыхӑнтарнӑ. Хулара чӑнласах çавӑн пек шкул ӗçлеме тытӑнсан Арнольдов пирвайхи вӗренекенсем валли хваттер, тӳлевсӗрех вӗрентме килӗшекен учительсем тупса пама тӑрӑшнӑ. «Симбирские губернские ведомости» хаçатра официаллӑ мар

пайӑн редакторӗ пулнӑскер Яковлев гимназистӑн вӗренӗвӗ ҫинчен, унӑн шкулӗ, вӗрентӳ системи пирки пӗрре мар ырлакан статьясем ҫырса кӑларнӑ. Арнольдов уҫҫӑнах А.И. Баратынский системине хирӗҫленӗ, ачасене пурне те малтан тӑван чӗлхепе вӗрентме кирлине ӗнентернӗ, И.Я. Яковлева малалла ӗҫлеме хавхалантарса тӑнӑ.

«Чувашский праздник учук» статйине те И.Я. Яковлев М.В. Арнольдовпа пӗрле ҫырнӑ. Унта вӗсем халӑх культурине хӳтӗлекенсем пек культура традицийӗсене малалла аталантарма кирлине ҫирӗплетсе халӑх традицийӗсене тимлӗрех тишкерме, халӑхӑн иртнӗ пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ йӑла-йӗркисене упрама чӗнсе каланӑ.

Ялти ҫӗр виҫевҫи пулса ӗҫленӗ ҫулсенчех Яковлев хресченсен пурнӑҫӗпе, чи малтанах ҫынсен танмарлӑхӗн сӑлтавӗсемпе, ҫӗре тата ытти ырлӑхсене тӗрӗс мар пайланипе питӗ ҫывӑх интересленнӗ. Хайӗн пӗлӗвне малалла ӳстерес тесе гимназире вӗреннӗ чухне илемлӗ литература тата ӑслӑлӑх кӗнекисем нумай вуланӑ. Тӗслӗхрен, 1869 ҫулхи кӑрлачӑн 19-мӗшӗнче вӑл мӗнле кӗнекесем вуласа тухмаллине хӑйӗн тетрачӗ ҫине ҫырса хунӑ: 1. Философи пайӗ: Клеванов. Платон, Сократ философийӗ; Гизо. Цивилизаци историйӗ; Дрепер. Европа ӑс-хакӑл аталанӑвӗн историйӗ т. ыт. те. 2. Ҫул ҫӳревсен пайӗ: Ҫул ҫӳревсем ҫинчен пӗтӗмӗшле каласа ӑнлантарни. Гулливер. Молдавипе Сербири ҫул ҫӳревсем; Риттер. Европа. Ҫӗр, ӳсен-тӑран, ҫын. Чи авалхи тӗнче. 3. Сӑмахлӑх, истори, литература теорийӗн пайӗ: Аксаков, Байрон, Вальтер Скотт, Гарибальди, Гегель, Гейне, Гончаров, Данте, Державин, Добролюбов, Дювер, Мильтон, Овидий, Тысяча и одна ночь, Фенелон, Шевченко, Шекспир, Шиллер т.ыт.те. Вырӑс тата ют ҫӗршыв писателӗсемпе философӗсен ӗҫӗсемпе паллашни социаллӑ пурнӑҫри тата политикӑри пулӑмсене лайӑхрах ӑнланма, обществӑри хӑйӗн тивӗҫне тата вырӑнне палӑртма пулӑшнӑ. Ҫав ҫулсенче Америка президенчӗн Авраам Линкольнӑн ӗҫхӗлӗпе интересленнӗ пулас. Хӑйӗн тетрачӗсенчен пӗрин хуплашки ҫине президент портретне ҫыпӑҫтарса хунӑ тата

«Негрсене ирӗке кӑларакан» – тесе ҫырса хунӑ (тетрачӗ, Н.Г. Краснов палӑртнӑ тӑрӑх, И.Я. Яковлев музейӗн ал ҫырусен пайӗнче А.И. Кондаков фондӗнче упранать. – *И.М.*).

Гимназире вӗреннӗ чухне Яковлев Чӗмпӗрти Карамзин библиотекинче вырӑссен революцилле демократӗсен Белинский, Добролюбов, Чернышевский кӗнекисене вуланӑ. 1870 ҫулта библиотекӑра вулакансен шутӗнче пурӗ 5 хресчен, вӗсенчен пӗри удельни хресченӗ И.Я. Яковлев пулнӑ. Нумай кӗнекене вӑл чирлӗ выртакан С.Д. Раевский валли илнӗ. Раевский патӗнче хваттерте пурӑннӑ май «Преступление и наказание» кӗнекене ватӑ ҫынна сасӑпа вуласа панине аса илет. Паллах, асӑннӑ кӗнекесем, революци идейине мала хуракан демократла литература И.Я. Яковлевӑн чун-чӗрине хускатмасӑр тӑма пултарайман, ҫавӑн пекех ҫӗр-шывра халӑха вӗрентес ӗҫ юхӑмӗ сарӑлса пыни ҫамрӑк ҫыннӑн тӗнче курӑмне тӗпрен улӑштарнӑ.

«Ҫынсем пурте пӗр пек пултарулӑхпа ҫуралаҫҫӗ, анчах пурнӑҫ условийӗсене, япӑх воспитательсене, педагогсене пула вӗсен пултарулӑхӗ тӗрлӗ шайра аталанать» – ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тӑвать И.Я. Яковлев. Ҫыннӑн ӑс-хакӑл аталанӑвӗ чи малтанах пурнӑҫри тан мар условисенчен килнине ӑнланса илет.

Хӑйӗн тавра курӑмне ҫамрӑкла хӗрӳлӗхпе аталантарма тӑрӑшакан И.Я. Яковлев Раҫҫейри халӑхсене «историре тӗп вырӑн йышӑнакан», «аслӑ», «хӑйсем тӗллӗн пурӑнма пултарайман», «чи пӗчӗк шайри» халӑхсем ҫине пайлакан реакцилле теорие сивленӗ. Вӑл палӑртса хатӗрленӗ педагогика системи туслӑх, халӑхсен пӗр танлӑх идейи тата вӗсен наци туйӑмӗсене хисеплени ҫинче никӗсленсе тӑнӑ. «Вырӑссем, тутарсем, чӑвашсем, мӑкшӑсем... пурте пӗр тан» текен шухӑша хӑйӗн вӗренӳ кӗнекисенче те малти вырӑна хунӑ. Тӑван халӑхӗн ӑс-хакӑл хӑватне пысӑк хак панӑ, ҫавӑнпа: «...Чӑвашсене Турӑ нимӗнпе те кӳрентермен, пултарулӑхӗ енчен вырӑс халӑхӗнчен пӗртте кая мар. Халлӗхе вӗсен мӗнпе те пулин палӑрмалӑх, паллӑ ҫыннисене тӗнчене кӑтартмалӑх кирлӗ пек лайӑх условисем пул-

ман-ха. Эпӗ чӑвашсем наукӑпа искусствӑра ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме пултарнине, ҫав шутрах музыкӑра, литературӑра палӑрма пултарнине ӗнентерекен тӗслӗхсем яланах курса тӑнӑ», – тенӗ.

Анчах И.Я. Яковлев ҫӗр ҫинчи ҫынсем пурте пӗр тан пулма тивӗҫлине ӑнланнӑ пулин те хӑй пурӑннӑ тапхӑрти класс хирӗҫӗвӗсем пирки филисофилле пӗтӗмлетӳсем тума пултарайман. Обществӑри тӗрӗс марлӑхсене вӑл халӑх массисен тӗттӗмлӗхӗпе, чухӑнлӑхӗпе ҫеҫ ҫыхӑнтарнӑ, культура тӗлӗшӗнчен пӗчӗк шайра пулни, халӑх чухӑнлӑхӗ чи малтанах хуҫа пулса тӑракан классен пусмӑрламалли политикипе ҫыхӑнса тӑнине ӑнланасшӑн пулман.

XVIII ӗмӗрти Франци материалисчӗсем Гельвеций, Гольбах тата ыттисем пек пурнӑҫри тӗрлӗ условисем, тӗрлӗ шайри воспитани ҫын аталанӑвне тӗрлӗ витӗм кӳреҫҫӗ тесе шутланӑ. И.Я. Яковлев тӗнче курӑмӗн аталанӑвне тӗпчекенсенчен пӗри С.С. Спиридонов палӑртнӑ тӑрӑх, халӑха ҫутта кӑларас ӗҫӗн тӗллевӗпе пӗлтерӗшне чӑн-чӑн идеалистла хакланӑ, ӑна вӑл социаллӑ пурнӑҫа лайӑхлатмалли, халӑха ӑс-хакӑлпа культура тӗлӗшӗнчен ҫӳллӗ шая ҫӗклемелли пӗртен-пӗр ҫӑлӑнӑҫ вырӑнне хурса йышӑннӑ. «Пирӗн тӗп задача, – тенӗ вӑл хӑйӗн вӗренекенӗсене, – вырӑс мар халӑхсен ӑс-хакӑл шайне ҫӗклесси, унӑн тавра курӑмне аталантарасси, халӑх хушшинче ҫут ӗҫне сарса пырса, унӑн чун-чӗрине, кӑмӑл-сипетне пуянлатасси».

Пурнӑҫпа ӗҫ-хӗлӗн тӗллевне И.Я. Яковлев ӗҫ халӑхӗн пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатса улӑштарассинче курнӑ. Анчах та ҫакна халӑха хутла вӗрентсе ҫутта кӑларнипе, кашни ҫынна вӗрентсе воспитани панипе ҫыхӑнтарнӑ. Вӗренӳпе воспитани кашни ҫынна аталантарамалли хатӗр пулса тӑма тивӗҫлӗ, тесе шутланӑ вӑл. Халӑхӑн ӑс-хакӑл аталанӑвӗнче пурнӑҫ условийӗсемпе воспитани пӗлтерӗшне ӳстеререх хакласа, вӑл ҫынсен революцилле ӗҫ-хӗлне, революцилле ӗҫсем пурнӑҫ условийӗсене те, ҫынсен шухӑш-кӑмӑлне те тӗпрен улӑштарнине шута илмен.

Кăмăл-сипете çирĕплетессине, ăна тивĕçлĕ шайра тытассине И.Я. Яковлев пурнăçăн тĕп тĕллевĕ тесе шутланă. Ку тĕлĕшпе христианство тĕнĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине хирĕçлемен. Тĕн унăн тĕнче курăмне аталантарас енĕпе пысăк вырăн йышăннă. Гимназире вĕреннĕ чухнех «О суевериях и предрассудках» сочинени çырнă. Сăлтавĕсене кăтартса панă. Халăха хутла, вулама-çырма вĕрентсен кăна тĕттĕмлĕхрен хăтарма пулать! «Просвещение чуваш прежде всего должно быть религиозно-нравственное, в духе православной церкви и потому уже патриотическое, т.к. понятие православие, Царь, русская народность нераздетимы между собой», – тенĕ вăл.

1905–1907 çулсенчи революци хумĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи тата çавăн пекех ытти йышши учительсен семинарийĕсенчи вĕренӳпе воспитани ĕçне пăлхатма пуçланă. Вĕренекенсен революцилле кăмăл-туйăмĕ ӳссе пынă, ачасем Турра ĕненес туйăмĕ сĕвĕрĕлсе пынă. Христианла çутĕç системи умне хăрушлăх тухса тăнă. И.Я. Яковлева Чĕмпĕрти чăваш наци шкулĕн пуласлăхĕ пăшăрхантарать. Кирек мĕнле пулсан та шкула сыхласа хăвармалла. Çак тĕллевпе вăл патша правительствине парăнса тăнине кăтартса парас тĕллевпе 2-мĕш Микулай патша 1905 çулхи çурлан 6, юпан 16, чӳкĕн 3-мĕшĕсенче кăларнă манифесчĕсене 1906 çулта чăвашла куçарса кăларать. Çав тĕллевпех Чĕмпĕр кĕпĕрнаттăрĕ сĕннипе чăваш ялĕсем тăрăх «улпутсене ан тапăнăр», – тесе агитацилеме тухса каять.

Революцилле улшăнусем И.Я. Яковлевшăн яланах ют пулнă, ĕмĕрĕ тăршшĕпех вăл халăх пурнăçне культурăпа çут ĕçне вăйлатнипе улăштарса лайăхлатма пуласса шаннă. Çавна май вырăс мар халăхсен тăван чĕлхине аталантарма чĕнсе каланă, тăван чĕлхепе ирĕклĕ калаçма, общество пурнăçĕн мĕн пур сферисенче тăван чĕлхепе усă курма тивĕçлине, çав вăхăтрах патшалăхра тата нацисем хушшинчи хутшăнусенче вырăс чĕлхи тĕп вырăнта пулма кирлине палăртнă. «Кашни халăха шкулта тата чиркӳре тăван чĕлхепе ирĕклĕ усă курма майсем туса памалла. Чĕлхе ăна ту-

са хунӑ халӑхпа кӑна вилме пултарать, ҫавӑнпа та халӑха тӑван чӗлхине манма сунни, ҫав халӑха вилме суннипе пӗрех», – тенӗ вӑл.

Мӗн виличченех Яковлев халӑхсене ҫутта кӑларни тата демократилле реформӑсем туса ирттерни вӗсене социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑри, политикӑри пусмӑрлӑхран хӑтармалли чи лайӑх ҫул-йӗр тесе шутласа пурӑннӑ. Пӗтӗмлетсе каласан, И.Я. Яковлевӑн тӗнче курӑмӗ питех те кӑткӑс тапхӑрта йӗркеленнӗ. Вӑл крепостла Раҫҫей условийӗсенче йӗркеленме пуҫланӑ та капитализм саманинче ҫирӗпленсе ҫитнӗ, совет тапхӑрӗ унӑн шухӑш-кӑмӑлне каллех пӑтратнӑ. Ҫавӑнпа та ҫӗршывра пулса иртнӗ улшӑнусемпе тарӑн йӗр хӑварнӑ пулӑмсене вӑл тӗрлӗрен хаклани хӑй пурӑннӑ саманапа, Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсене вӗрентсе ҫутта кӑларассишӗн кӗрешнӗ, ҫапла майпа вӗсен пурнӑҫне лайӑхлатма тӑрӑшнӑ самана уйрӑмлӑхӗсемпе ҫыхӑннӑ. Ҫутта кӑлараканӑмӑрӑн тӗнче курӑмӗн лайӑх е япӑх енӗсем пурте тенӗ пекех унӑн педагогика идейисемпе практикӑри ӗҫ-хӗлӗнче палӑрса юлнӑ.

## 4.2. И.Я. Яковлевӑн педагогика идейисем, унӑн халӑха ҫутта кӑлармалли вӗрентӳ системи

Историе халӑх хӑй тӑвать, тенӗ И.Я. Яковлев. Ҫавна май вӑл унӑн пултарулӑх вӑй-хӑватне ҫирӗп ӗненнӗ. Ӗмӗр тӑршшӗпех ӑна чунтан парӑнса ӗҫленӗ, тӑван халӑхне чухӑнлӑхран, мӗскӗнлӗхрен илсе тухас тесе тӑрӑшнӑ. Халӑха ҫутта кӑларас тӗллевпе туса хатӗрленӗ хӑйне майлӑ вӗрентӳ системинче вырӑс мар хресченсен ӑс-хакӑл, кӑмӑл-сипет шайне ҫӗклесси, пурнӑҫне пур енлӗн ҫӑмӑллатса лайӑхлатасси тӗп вырӑнта пулнӑ. Ун шучӗпе, халӑхӑн анлӑ массисене, ҫав шутра хӗрарӑмсене те вӗрентсе пӗлӳ панипе, ал ӗҫне, ял хуҫалӑх ӗҫне вӗрентнипе, ҫутта кӑларас ӗҫе пур енлӗн аталантарнипе ҫеҫ ҫак тӗллеве пурнӑҫа кӗртме пулать.

Икӗ ҫул хушши хӑйӗн «чӑваш шкулӗнче» учитель-наставник пулса ӗҫленӗскер, Яковлев вӗренӳ процесне

майӗпен наци элементне кӗртсе пынӑ, вӗренекенсемпе пӗрле ҫыру чӗлхине йӗркелес тесе тӑрӑшнӑ, тӑван чӗлхепе усӑ курса вырӑсла калаҫма, вулама, ҫырма вӗрентмелли ҫул-йӗрсемпе меслетсене шыранӑ. Вырӑс чӗлхине вӗрентнӗ май вӗренекенсене пӗр вӑхӑтрах вырӑс культурине, Раҫҫее хисеплеме, юратма хӑнӑхтарнӑ.

Раҫҫее Иван Яковлевич тӗнче цивилизацийӗн хӑй тӗллӗн аталанма пултаракан факторӗ пек йышӑннӑ, вӑл икӗ тӗнчене – Анӑҫпа Тухӑҫа – ҫыхӑнтаракан сыпӑк пулнине ӑнланнӑ. Истори тӗлӗшӗнчен пӑхсан, унӑн тӗп халӑхӗ – вырӑс халӑхӗ – Раҫҫейре пурӑнакан пӗчӗк йышлӑ халӑхсен культурипе пурнӑҫ интересӗсене хӳтӗлекен халӑх пулса тӑрать, тесе шутланӑ Яковлев. Истори лабиринчӗсенче ҫамрӑксене вӗрентсе ӳстермелли, воспитани памалли пӗр ҫирӗп йӗрке, икчӗлхелӗх, икӗ культура ҫыхӑнулӑхӗн принципӗсем ҫинче никӗсленсе тӑракан система туса хума пултаракан халӑх ҫеҫ хӑйӗн сӑн-сӑпатне сыхласа хӑварасса шаннӑ вӑл.

Чӑваш халӑхӗшӗн ҫакнашкал системӑна И.Я. Яковлев йӗркелесе никӗсленӗ. Шӑпах ҫак система тӑван халӑхӑн культурине сыхласа хӑварма тата ҫавӑнпа пӗрлех чӑваш халӑхне вырӑс культурипе ҫывӑхланма пулӑшнӑ. «Ҫирӗп шанатӑп, ӗненетӗп,– тенӗ вӑл хӑйӗн аса илӗвӗсенче, – нумай миллионлӑ вырӑс халӑхӗ ӗмӗрне те пӗтес ҫук. Апла пулсан, эпӗ ӗненни тӳрре тухсан, чӑваш йӑхӗ те пӗтес ҫук, мӗншӗн тесен вӑл вырӑс халӑхӗпе пӗр Тӑван ҫӗршывпа – Раҫҫейпе – ҫыхӑннӑ».

Раҫҫейри вырӑс мар халӑхсен наци культурине малта пыракан культура витӗмӗсӗр аталантарма май ҫуккине лайӑх ӑнланнӑ вӑл. Наци культурине аталантармалли тӗп хатӗр – тӑван чӗлхепе усӑ курса ӗҫлесси, ӑна юратма вӗрентесси, тӑван чӗлхене ҫемье чӗлхинчен шкул чӗлхи туса хурасси. Тӑван чӗлхе – шухӑшлав, ӑнлав хатӗрӗ, ӑс-хакӑла пуянлатса аталантармалли хатӗр. Халӑх шухӑшлавӗ, унӑн мӗнпур тӗнчекурӑмӗ пӗтӗмпех тӑван чӗлхепе ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та тӑван чӗлхесӗр халӑха ҫутта кӑларасси пирки ӗмӗтленме те кирлӗ мар. Тӑван чӗлхе пулӑшнипе ҫеҫ ҫынна ҫӗнӗлле шухӑшлама вӗрентме пулать, кивӗ ӑнлавсене ҫӗнӗ эле-

ментсем кĕртсе çĕнетсе улăштарма пулать,– тесе шутланă вăл.

И.Я. Яковлев, аслă вырăс педагогĕ К.Д. Ушинский пекех, воспитание «наука йĕркелесе пыракан искусство» тенĕ. Çак искусство ячĕ – педагогика. Яковлев наука педагогикине ытларах хакланă, çавăнпа пĕрлех пулас учительсене халăх педагогикине те тĕпчеме сĕннĕ, уйрăмах паха енĕсене палăртма тăрăшнă.

Воспитани тĕллевĕ, Яковлев шучĕпе, пур енлĕ пĕлӳ пухса аталаннă çынна, халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатма пултаракан, хăйĕн пунăçĕнче вара шкулта е килте кирлĕ япаласене хăй тĕллĕн туса хатĕрлеме пĕлекен çынна вĕрентсе хатĕрлесси пулнă. Воспитанин тĕп задачисем – çыннăн вăй-хал тата ăс-хакăл пултарулăхне аталантарасси, халăхшăн, Тăван çĕр-шывшăн ĕçлеме тивĕçлине ăнланма, нравственность, кăмăл-сипет нормисене ăша илме пулăшасси, ĕçлеме хăнăхтарасси, ăсхакăлпа вăй-хал ĕçне шайлашуллă туса пыма вĕрентесси. Хăйĕн шкулĕнчи воспитани çинчен И.Я. Яковлев: «вĕренекенсен йышĕнчен чи малтанах лайăх çынсем, чăнчăн гражданcем, унтан вара лайăх учительсем вĕрентсе кăларма тăрăшнă, мĕншĕн тесен кăмăл-сипет, нравственность енĕпе çӳллĕ шайра пулмасан лайăх педагог пулма май çук», – тесе çырнă.

Воспитани – социаллă пулăм, вăл халăхăн мĕнпур сийĕсене пырса тивет. Воспитани предмечĕ – чи малтанах ачасем. Анчах çакă педагогика «ача-пăча науки» тенине пĕлтермест. Çитĕннисене те (хресченсене) хăйсен ăс-хакăл пултарулăхне аталантарма пулăшмалла, пур енĕпе те çĕнĕлле пурăнма вĕрентмелле. Çитĕннисене пĕлӳ енне çавăрасси çăмăлах мар, ку енĕпе вĕрентекенсен пайтах ĕçлеме тивет.

Анчах çынна аталанма май параканни пĕртен-пĕр воспитани çеç мар, мĕнле йăхран тухни тата мĕнле çынсем хушшинче пурăнни те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕнле йăхран тухни темле пысăках пĕлтерĕшлĕ пулманнине палăртнипе пĕрлех Яковлев çыннăн аталанăвĕнче йăх вăрлăхĕн витĕмĕ пуррине хирĕçлемен.

Уйрăмах И.Я. Яковлев мĕнле халăх, мĕнле çынсем хушшинче пурăнни пысăк пĕлтерĕшлине палăртнă. Çакăн шутне вăл «çемье», «шкул», «общество», «чиркӳ», «патшалăх» ăнлавсене кĕртнĕ, çавна май çемьепе шкула чи мала хунă. Вĕсене патшалăхăн халăх пуласлăхне палăртакан уйрăм пайсем тесе шутланă. Çемье воспитани ĕçне пуçăнма, хальхи тапхăрта пурнăçа кĕртсе пыма тата пуласлăхра ăна малалла тăсма кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать. Ачасене воспитани парасси – пĕр вĕçĕмсĕр пурнăçа кĕрсе пыракан ĕç – ашшĕ-амăшĕ умне çеç мар, çемьери аслăрах ӳсĕмри кашни çын умне пысăк яваплăх кăларса тăратать. Мĕнле çемье пулнине унти ачасем мĕнлерех ӳссе çитĕннине, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнлерех туслă пулнине кура тата ашшĕ-амăшне мĕнле итлесе, хисеплесе тăнине кура хаклаççĕ. Ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕ – туслă та çирĕп çемье пултăр тесе тăрăшасси. «...Çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан та хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьенĕн лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа ан вараларăр, ӳсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан, килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр валли тĕреклĕ чарак лартса хурăр» – çапла чĕнсе каланă И.Я. Яковлев хăйĕн Халалĕнче.

Ырă-сывă, культурăллă çемьесем йĕркелени, Яковлев шучĕпе, ял халăхĕн культурине пĕтĕмĕшле çĕклеме пулăшать. Интеллигента тухнă чăвашсене вăл интеллигентлă çемьесем пулччăр, тăван чĕлхепе культурăна аталантарма май пултăр тесе чăваш хĕрĕсенех качча илме сĕннĕ. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухакансем халăх интересĕсене яланах шута илме, вĕсене хăйсен интересĕсенчен çӳлерех хума тивĕçлĕ пулнă.

Этемĕн общество аталанăвĕнчи тепĕр паллă тапхăр – шкулти воспитани. Шкул ача хăватĕнче мĕн пуррине йăлтах «йĕркене кĕртме» тивĕçлĕ: тӳсĕмлĕ, тирпейлĕ

пулма, хушнă ĕçе пурнăçламалли тата уншăн явап тытмалли тивĕçе ăнланма, сăнама, харпăр хăй ăнлавĕпе килĕшӳллĕн хаклама, тавра курăма аталантарассишĕн тăрăшма вĕрентмелле. И.Я. Яковлев палăртнă тăрăх, шкулăн тĕп çул-йĕрĕ, ытти вĕренӳ заведенийĕсенни пекех: 1) вĕренӳ заведенийĕ тытса пыракан тĕллеврен, 2) ертӳçĕрен, 3) вĕрентекенсен йышĕнчен, 4) вĕренекенсен йышĕнчен килет. Шкул ачан кăмăл-сипет, ăс-хакăл, вăй-хал пултарулăхне пĕр пек шайра аталантарма тивĕç. Çакă пĕтĕмпех пурнăç условийĕсенчен килет. Кăмăл-сипетпе çыхăннă паха енсене – тӳрĕ кăмăллăха, гуманизма, сăпайлăха, ĕçченлĕхе, халăха, Тăван çĕршыва чунтан парăнса юратассине мĕн ачаран хăнăхтарса, аталантарса пымалла.

И.Я. Яковлев ăс-хакăл, нравственность, эстетика тата вăй-хал тĕлĕшĕнчен, çавăн пекех ĕçпе воспитани парассине пĕр-пĕринчен уйăрма пĕлнĕ. Воспитани панă май вĕрентекен хăйĕн ĕçĕнче уйрăм принципсене тĕпе хурать, вĕсене «тĕп çул-йĕрсем» тесе шутланă. Çав çулйĕрсен шутне вăл çутçанталăк панă ăс-ăнлав, халăхлăх принципĕсене тата вĕрентсе воспитани памалли принципа кĕртнĕ. Çутçанталăк панă ăс, ăнкарулăх принципĕ текен ăнлава вăл ачан физиологи уйрăмлăхĕсене, унăн çутçанталăк (Турă) панă пултарулăхне кĕртнĕ. Вĕрентекен çавсене шута илсе ачана воспитани памалли меслетсене суйласа илет, унăн ăс-хакăл тата чунчĕре хăватне аталантарать. Педагогăн вĕренекенсене юратмалла, тӳрĕ кăмăллă тата çирĕп пулмалла, воспитани ĕçĕнчи пархатарлă тĕллевсене пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Чи малтанах, пуçламăш тапхăрта ачасене воспитани парасси тăван чĕлхепе пулса пымалла, çакă – вĕрентӳ ĕçĕнчи халăхлăх принципĕ. Çав вăхăт килессе ĕненнĕ вăл, тĕрĕс воспитани парса ӳстерсен чăваш ачисем пурте вулама-çырма вĕренĕç, тĕнче çине тĕттĕмлĕхре пурăннă çамрăк çыннăн шиклĕ куçĕсемпе мар, пачах урăхла пăхма пуçлĕç, – тенĕ И.Я. Яковлев. Халăх пуласлăхĕ нумай чухне воспитанирен килет,

воспитани ĕçĕнче халăхлăх принципне туллин пурнăçа кĕртсе пымалла.

Воспитание И.Я. Яковлев вĕрентӳ ĕçĕнчен уйăрмасть, пачах урăхла, вĕсене пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, уйрăм çынна пур енлĕн аталантарас тĕллевпе пурнăçа кĕрсе пыракан пулăм пек хаклать. Ачасем вĕреннипе пĕрлех ăслăлăх никĕсĕсене алла илççĕ, çавна май лайăхрах воспитани илеççĕ, мĕншĕн тесен пĕлӳ вĕсене пур енлĕ паха витĕм кӳрет. Вĕрентӳпе воспитани парасси – педагог-воспитателĕн тĕп принципĕ.

Хăй туса хатĕрленĕ педагогика программине те вăл çутçанталăк панă ăс-тăн, ăнланулăх, харпăр хăйĕн пултарулăх, курăмлăх, йĕркеллĕ шайлашулăх тата воспитани паракан вĕрентӳ принципĕсене тĕпе хунă. Тĕп вĕрентӳ меслечĕсен шутне аналитика тата синтетика меслечĕсене кĕртнĕ. Çавна май Яковлев вĕренӳ процесĕнче çĕнĕ материала ăнлантарнă чухне – аналитика меслечĕпе усă курни, ăнлантарнă материалпа практикăра усă курнă чухне – синтетика меслечĕ вырăнлăрах пулнине палăртнă.

Яковлев программипе килĕшӳллĕн вĕрентӳ меслечĕсем вĕрентӳ хатĕрĕсемпе тачă çыхăннă, вĕсен шутĕнче вăл уйрăмах пĕлӳ паракан тата пĕлĕве çирĕплетекен хатĕрсене палăртать. Пирвайхисен шутне çаксем кĕреççĕ: кăтарту хатĕрĕсем (япаласем, ӳкерчĕксем, портретсем), тĕслĕхсем (сăмахсен, предложенисен, хисепсен тĕслĕхĕсем), калав, çырса кăтартни (ансат мелпе тата илемлĕх мелĕсемпе сăнарлă) тата сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене, шухăша ăнлантарса пани. Иккĕмĕшĕсен шутĕнче – пăхмасăр вĕренни, аса илӳ, хăнăхтарусем, задачăсем, илемлĕ вулав. Çак хатĕрсемпе усă курасси вĕрентӳ форминчен килет.

И.Я. Яковлевăн пуçламăш шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне йĕркелемелли системине Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче педагогика занятийĕсенче тишкернĕ. Пулас учительсем пуçламăш училищĕсен тулашри сăн-сăпачĕпе, унăн çурт-йĕрĕпе, шкул картипе, пахчапа, классемпе, сĕтел-пуканпа, класра кирлĕ ытти хатĕрсемпе, вĕренӳ пособийĕсемпе, шкулти

тасалăхпа тирпейлĕхе тытса тăрассипе çыхăннă ыйтусемпе тĕплĕн паллашнă.

Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче вĕренекенсем пуçламăш шкулăн пĕтĕмĕшле дидактикине тата çавăн пекех чăваш шкулĕнче унпа усă курмалли уйрăмлăхсемпе те тĕплĕн паллашнă. «Дидактика» программине çак ыйтусем кĕнĕ: 1) вĕренӳ занятийĕсене йĕркелесси, вĕренекенсем чиркӳпе, шкулпа, вĕрентекенсемпе тата пĕр-пĕринпе мĕнлерех хутшăнура пулмаллине палăртакан правилăсемпе постановленисем; 2) шкулти вĕрентӳ ĕçĕ тата унăн тĕп правилисем, вĕрентӳ меслечĕсем, унăн формисем, учитель усă куракан тĕрлĕ меслетсемпе мелсем, синтетика, аналитика, генетика меслечĕсем, вĕрентӳ форми, катихизис е эвристика мелĕсем.

«Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухакан учительсем чи малтанах шкулăн тĕп пĕлтерĕшне ăнланма, вĕрентекен предметсене тĕплĕн пĕлме тата нравственность тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма тивĕçлĕ»,– тенĕ И.Я. Яковлев. Ун шучĕпе учителĕн хăйĕн пĕлĕвĕсене тăтăшах кĕнеке вуланипе ӳстерсе тăмалла, харпăр хăйĕн педагогика пĕлĕвĕсемпе опытне сăнаса, тĕрĕслесе тăмалла пулнă.

Учительсене И.Я. Яковлев халăха çутта кăларакансем тесе шутланă, çак пархатарлă миссие вĕсем ял хуçалăх никĕсĕсене алла илсен тата ытларах тӳрре кăларĕç, тенĕ. Ку тĕлĕшпе пухнă хăйĕн опытне пĕтĕмлетсе Раççейри ытти педагогика вĕренӳ заведенийĕсенче сарма тăрăшнă. Çак тĕллевпе «Учительсен шкулĕсемпе семинарийĕсенче ял хуçалăхне вĕрентессине йĕркелесси çинчен» ĕç пичетлесе кăларнă, унта çĕршыври социаллă пурнăçпа экономикăри условисене шута илсен, çак предмета Раççейри мĕн пур халăха вĕрентме тивĕçли çинчен каланă.

Ял хуçалăхне вĕрентессине йĕркелеме виçĕ япала – преподаватель, вĕренекен тата сăнавсем irттермелли çĕр лаптăкĕ кирлĕ. Теори вĕрентĕвĕпе практика опычĕ пĕр шайра, тачă çыхăнуллă пулмалла, пĕтĕм процеса опытлă пĕр вĕрентекен йĕркелесе ертсе пымалла. Паллах, хăй вăхăтĕнче К.Д. Ушинский сĕннĕ çак идейя

чăнласах прогрессивлă пулнă. Мĕншĕн тесен учительсен семинарийĕсем, тĕпрен илсен, ытларах ялсем валли вĕрентекенсем хатĕрлесе кăларнă.

И.Я. Яковлев шучĕпе, ял хуçалăхне мĕнпур педагогика вĕренӳ заведенийĕсенче вĕрентмелле. Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче ăна 1893 çултанпах вĕрентнĕ. Учитель çапла майпа хресченсем хушшинче агрономи пĕлĕвне сарать, хресченсен пурнăçне лайăхлатма, çӳллĕрех шая çĕклеме пулăшать. Унсăр пуçне тата сахал шалупа пурăнакан халăх учительне сад-пахча ĕрчетни хăйĕн пурнăçне те лайăхлатма, пĕр вырăнта пусăрănса пурăнма май парать, çавăн пекех вăл вырăнти халăхпа тачăрах килĕштерсе ĕçлеме пултарать. Пĕр вырăнта тĕпленсе пурăнни шкул ĕçне те ăнăçлă йĕркелесе пыма май парать, халăха пĕлӳ патне ытларах туртăнма хистет. Çавăнпа И.Я. Яковлев учительсен шкулĕпе семинарисене ытларах ĕçпе пурăнакан хресчен çемйинчен тухнă, мĕн пĕчĕкрен хресчен ĕçне тума хăнăхнă ачасене йышăнма сĕнет.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсем çуркунне, çулла тата кĕркунне ял хуçалăх ĕçĕпе пурăннă, хĕлле мастерскойсенче, ал ăсти кружокĕсенче тăрăшнă. Хĕр ачасене ял хуçалăх ĕçне хăнăхтарас тĕллевпе Яковлев ятарлă программа туса хатĕрленĕ, унпа килĕшӳллĕн пулас учительницăсен, пулас ача амăшĕсен, пулас кил хуçи арăмĕсен тивĕçĕсене шута илсе вĕрентнĕ. Тĕпрен илсен, вĕсене сĕт паракан мăйракаллă выльăхсене пăхма, сĕт юр-варĕсем хатĕрлеме, апат-çимĕç пĕçерме, кĕпе-йĕм çĕлеме, сад-пахчара ĕçлеме вĕрентнĕ.

Вĕрентӳпе воспитани идейисене Яковлев шкулта ăнăçлă пурнăça кĕртсе пынă, нумай çулхи педагогика опытне тĕпе хурса пуçламăш шкулти вĕрентӳ системине туса хунă. Пуçламăш шкула вăл ачасене вĕрентсе воспитани памалли вырăн пек çеç мар, аслисене ырă тĕслĕх кăтартса тата вĕсемпе калаçусем ирттерсе ял хуçалăх пĕлĕвĕсем паракан вырăн пек курнă.

И.Я. Яковлевăн педагогика системин паллă енĕсен шутне вырăс мар халăхсен ачисене вĕрентекен пуçламăш училищĕсенче тăватă çул вĕрентесси, пирвай-

хи икĕ çулĕнче вĕрентӳпе воспитани ĕçне тăван чĕлхепе туса пырасси, мĕнпур классенче вырăс чĕлхине вĕрентесси, тăван чĕлхене уйрăм предмет пек пĕтĕм вĕренӳ тапхăрĕнче вĕрентесси, вĕрентĕве тĕрлĕ кружоксенче, мастерскойсенче, ял хуçалăх фермисенче е шкул çумĕнчи çĕр лаптăкĕсем çинче ĕçлессипе çыхăнтарасси, вырăс культурине тата ĕç халăхне юратма вĕрентесси кĕнĕ. Унăн тĕп пайĕсем: 1) пуçламăш шкула йĕркелесе ертсе пырасси, 2) ялсенчи ик чĕлхеллĕ наци шкулĕсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне йĕркелесси, 3) халăх учителĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли система.

Вырăс мар халăхсене çутта кăларас енĕпе И.Я. Яковлев туса хатĕрленĕ система Атăл тăрăхĕнчи шкулсенче ăнăçлă пурнăçа кĕме пуçличчен пур çĕрте те Н.И. Ильминскин вĕрентӳ системипе усă курнă.

Н.И. Ильминскин вĕрентӳ системипе И.Я. Яковлевăн вĕрентӳ системин тĕллевĕсемпе задачисене илес пулсан, вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ха?

Ильминскин педагогика ситеминче вырăс мар халăхсем хушшинче христианство идеологине тăван чĕлхепе усă курса сарасси тĕп вырăнта тăнă. Çавна май пуçламăш шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентме, чиркӳсенче службăсене тăван чĕлхепе ирттерме пуçланă. Ильминский системине 1870 çулта йышăннă «Раççейре пурăнакан вырăс мар халăхсене вĕрентмелли мерăсем çинчен» текен правилăсене тĕпе хурса йĕркеленĕ. Правилăсенче шкулта миçе çул вĕрентмеллине палăртман, тăван чĕлхепе миçе çул вĕрентессине каламан, вĕренӳ çулĕ хăçан пуçланса вĕçленессине те кăтартман. Вырăс чĕлхине хăçан вĕрентме пуçласси те паллă пулман. Çак ыйтусене вырăнти условисене тата тăван чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илсе халăх училищисен директорĕсемпе инспекторĕсем татса пама тивĕçлĕ пулнă.

Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсен шкулĕсенче пур çĕрте те 70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вĕренӳ процесне йĕркелес, пуçламăш классенче уйрăм предметсене вĕрентес енĕпе пĕр йĕрке пулман. Тĕслĕхрен, Хусан кĕпĕрнинчи «инородецсен» шкулĕсенче пирвайхи уйăхранах ачасем вырăс чĕлхине те, тăван чĕлхене те пĕр

харăс вĕренме пуçланă, хăш-пĕрисенче чăвашла пĕлекен учительсем пулманнипе вырăсла çеç вĕрентнĕ.

Тăван чĕлхе ытти предметсене вĕренме тытăнмалли хатĕр те пулнă. Анчах тăван чĕлхепе вĕрентес тĕлĕшпе пĕр çирĕп система пулманни пĕтĕм вĕренӳ материалне ăнланса вĕренме чăрмантарнă.

XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи шкулсем ку тĕлĕшпе лайăх енчен палăрса тăнă. Вĕсенче И.Н. Ульянов вĕренӳпе воспитани процесне ăнăçлă йĕркелеме пултарнă, пĕрремĕш класа çӳрекенсем тăван чĕлхепе çеç вĕреннĕ, арифметикăна та тăван чĕлхепе ăнлантарнă. Вырăс чĕлхине вĕрентнĕ чухне вăл чи малтанах калаçма хăнăхтарассине тĕпе хунă. Ильминский системипе килĕшӳллĕн арифметика пек предметсене вырăслах вĕрентмелле пулнă. Анчах хăш-пĕр вырăнсенче Ильминский системине шута илменни пулкаланă.

1875 çулхи кĕркуннерен тытăнса Яковлев темиçе уйăх чăваш шкулĕсене инспекцилесе çӳренĕ, çавна май вăл тĕрлĕ кĕпĕрнесенчи шкулсен опытне танлаштарса тĕпченĕ хыççăн Ильминский системипе тĕрлĕ наци шкулĕсенче пур çĕрте те пĕр пек усă курма май çуккине уçса панă. «Пирĕн ĕçсем кунта, Николай Иванович, Хусантипе танлаштарсан, пачах урăх условисенче пулса пыраççĕ, çавăнпа та ирĕксĕрех вырăнти условисене шута илсе ĕçлеме тивет»,– çырса пĕлтернĕ вăл Чĕмпĕртен.

1876 çул пуçламăшĕнче И.Я. Яковлев чăваш шкулĕсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне йĕркелеме тытăнать. Çавна май 1870 çулта йышăннă правилăсенчи хăш-пĕр положенисене конкретлăрах палăртать. Тĕслĕхрен, вĕренӳ процесне 4 çула çити тăсать, тăван чĕлхепе анлăрах усă курас пирки çĕнĕ сĕнӳсем парать, халăх училищисене вĕренме йышăнмалли правилăсене тӳрлетӳсем кĕртет. Çак сĕнӳсене вăл 1871 çулхи юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче çирĕплетнĕ «Халăх училищисен инспекторĕсем валли хатĕрленĕ инструкцисемпе» килĕшӳллĕн пурнăçа кĕртет. «Инспекторсем сăнаса тăракан училищĕсенче, – тенĕ унăн 17-мĕш параграфĕнче,

– вĕренӳ тапхăрĕ мĕн вăхăта тăсăлассине, хĕллехи вакацисен вăхăтне, çавăн пекех куллен миçешер урок пулассине инспектор вырăнти условисене, климата, учительсем ытларах мĕнле ĕçпе пурăннине шута илсе палăртать, çакна вĕренӳ округĕн попечителĕ çирĕплетет».

1880 çулта халăх училищисен инспекторĕсен Хусанта иртнĕ съездĕнче И.Я. Яковлев чăваш шкулĕсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне йĕркелемелли план проекчĕпе паллаштарнă. Унта вăл çак пунктсене пăхса тухма сĕннĕ: 1) вĕренӳ тапхăрне 4 çула палăртмалла, вĕренӳ çулне авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче пуçламалла та çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче вĕçлемелле, 2) училищĕсене 9 çултан çамрăк мар ачасене йышăнмалла, 3) вĕрентекенсен ачасен тăван чĕлхине пĕлмелле, 4) пĕрремĕш çулне йăлтах чăвашла çеç тата вырăнти калаçу чĕлхипе çырса хатĕрленĕ кĕнекесем тăрăх вĕрентмелле, каярахри çулсенче тĕнпе нравственность темипе çырнă кĕнекесене тăван чĕлхепе вулама эрнере 4 сехетрен кая мар уйăрмалла, 5) чăваш училищисене кирлĕ кĕнекесемпе тивĕçтермелле, 6) иккĕмĕш вĕренӳ çулĕнче вырăсла вĕрентме тытăнмалла, енчен те вырăнти условисем май параççĕ пулсан, пĕрремĕш çулăн иккĕмĕш çур çулĕнчех вырăсла вĕренме тытăнмашкăн юрать, 7) вĕрентекенсем валли вăхăтлăх педагогика курсĕсем ирттермелле, 8) вĕренекенсен тăван чĕлхине пĕлмен учительсене майĕпен улăштарса пымалла, 9) Гурий святителĕн тăванлăхĕнчен «инородецсен» шкулĕсенче Турă саккунне вĕрентес енĕпе тивĕçлĕ положенисем палăртса хатĕрлеме ыйтас. Съезд, иккĕмĕш пункчĕсĕр пуçне пурне те çирĕплетнĕ, шкула çичĕ-сакăр çулхи ачасене те йышăнма юранине палăртнă.

И.Я. Яковлевăн проектне пĕтĕмĕшле йышăнни унăн системипе Атăл тăрăхĕнче пурăнакан вырăс мар халăхсем (христианство тĕнне йышăннă халăхсем) хушшинче усă курма май pană. Вырăссен çав тапхăрти паллă педагогĕсем, чи малтанах И.Н. Ульянов, А.И. Анастасиев, Н.А. Бобровников тата ыттисем те пулăшнипе вăл майĕпен малалла аталанса пынă, ăна пĕтĕм Хусан

вĕренӳ округĕнчи халăх учителĕсем ырласа йышăннă. Халăха вĕрентес ĕçре хăйĕн системипе анлăрах усă курма майсем туса парас тата ăна малалла лайăхлатса пырас тĕллевпе И.Я. Яковлев вырăнти земство деятелĕсемпе Чĕмпĕр шкулĕн вĕренекенĕсем пулăшнипе вăхăтлăх педагогика курсĕсемпе съезчĕсем йĕркелесе ирттернĕ, вĕсен ĕçне хăй ертсе пынă. Çав курссемпе съездсен ĕçне вырăс, чăваш, çармăс, мордва, удмурт, тутар тата калмăк учителĕсем хутшăннă. Çавнашкал пĕрремĕш курссене – 1882 çулта Хусан кĕпĕрнин Çĕрпӳ уесĕнче, юлашкине Астрахань кĕпĕрнин Царево уесĕнче 1916 çулта ирттернĕ. Хăйĕн опычĕпе тата малта пыракан пултаруллă учительсен опычĕпе усă курса И.Я. Яковлев чăваш шкулĕсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне йĕркелемелли принципсене тата ачасене вĕрентмелли меслетсемпе мелсене тăтăшах лайăхлатса пынă.

И.Я. Яковлевăн çитĕнĕвĕсене кура тата унăн вĕрентӳ системипе чăваш, мари, мордва учителĕсем анлăн усă курнине шута илсе, Н.И. Ильминский хăйĕн системинчи чылай положение пăхса тухнă, вырăс мар халăхсен шкулĕсем валли çĕнĕ программа туса хатĕрленĕ. «Эпир И.Я. Яковлев шухăшĕпе килĕшетпĕр,– çырнă Ильминский тĕне кĕнĕ «инородецсен» шкулĕсем валли хатĕрленĕ программинче, – вырăс мар халăхсен ачисене вĕрентекен шкулсене икĕ çулта пĕр хутчен вĕренме йышăнмалла; çакă шкулсенче икшер уйрăм йĕркелеме май парать. Вĕсенчи занятисем, виçĕ уйрăмрипе танлаштарасан, чылай ăнăçлăрах пулса иртеççĕ, çавна май пирĕн программăна шăпах çакăн пек тăватă çул вĕрентекен икĕ уйрăмлă училищĕсем валли туса хатĕрленĕ. Кĕçĕн уйрăмра вĕрентӳ чĕлхи ачасен тăван чĕлхи пулмалла, аслă уйрăмра – вырăс чĕлхи».

И.Я. Яковлев системи, тĕпрен илсен, министерствăпа земство шкулĕсенче анлă сарăлнă пулнă, анчах пултаруллă учительсем унти положенисемпе чиркӳ ведомствин шкулĕсенче (тăван чĕлхене шута илмен шкулсенче) те усă курнă.

Яковлев наци шкулĕсенче вырăс чĕлхи уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Вырăс чĕлхине

вăл «патшалăх пурнăçĕн, наукăпа цивилизаци органĕ» тесе шутланă. Вырăс чĕлхине тăван чĕлхепе танлаштарса вĕрентмелли методика туса хатĕрленĕ. Унта чĕлхе пулăмĕсене танлаштарса вĕрентесси, сасăсене аналитика-синтетика меслечĕпе калама хăнăхасси тĕп вырăнта пулнă. Çак меслет пулăшнипе ачасем хăйсем тĕллĕн вырăс чĕлхине вĕреннĕ, вырăсла калаçма хăнăхнă, логика шухăшлавне аталантаранă. Шкул вĕрентĕвĕнче Яковлев Турă саккуне мар, тăван тата вырăс чĕлхисене вĕрентесси çине тимлĕрех пăхнă. Ильминский системинче тĕн вĕрентĕвĕ малти вырăнта, чĕлхесене вĕрентесси иккĕмĕш вырăнта тăнă.

И.Я. Яковлевăн педагогика системин тепĕр паллă енĕ вырăс мар халăхсен чĕлхисене анлăрах хӳтĕлессипе çыхăннă. Унпа килĕшӳллĕн тăван чĕлхе вырăсла вĕренме пулăшакан тата аслă вырăс халăхĕн культурипе паллашма май паракан хатĕр пулнă. Чĕлхесене хӳтĕлесе, вăл пĕр вăхăтрах Атăл тăрăхĕнчи халăхсен наци интересĕсене те хӳтĕленĕ. Вырăс мар халăхсен чĕлхисем, вырăс чĕлхи пекех, наци культурине аталантарма пулăшакан хатĕр пулса тăраççĕ, – тенĕ И.Я. Яковлев.

Вырăссен аслă педагогĕ К.Д. Ушинский пекех, И.Я. Яковлев та ачасене пăхса çитĕнтернĕ, вĕсене вĕрентсе ăс панă чух халăхăн уйрăмлăхĕсене шута илмелле, халăха пурнăçра мĕн кирлине манмалла мар, тесе вĕрентнĕ. Тăван чĕлхен халăх пурнăçĕнчи вырăнĕ пирки те вăл вырăссен аслă педагогĕ евĕрех шутланă. Вăл та тăван чĕлхене халăхăн чи чаплă педагогĕ тесе хак панă, ăçта май пур, унта вăл, тăван чĕлхен историлле вырăнĕ, унăн вăйĕпе чапне хӳтĕлесе, витĕмлĕ те хĕрӳллĕ сăмахсем каланă. Тăван чĕлхе халăхăн нацилле шухăш-туйăмне, ĕмĕт-кăмăлне хăпартать, çирĕплетнĕ И.Я. Яковлев.

Чĕлхене пĕтерес тени çак халăха пĕтерес тенипе пĕр танах тесе шутланă И.Я. Яковлев. Вăл ун пирки пĕтĕм чун-хавалĕпе акă мĕн каласа хăварнă: «Чĕлхе хăйне туса хунă халăхпа пĕрле çеç вилет, çавăнпа халăха тăван чĕлхене манма хушни çав халăха вилме хушнипе пĕр пекех… Тăван чĕлхе пулăшнипе кивĕ ăн-

ланусене улăштарма, çĕнетме, аталантарма, вĕсем çумне çĕннисене хушма, çĕнĕ элементсем кĕртме пулать, анчах тăван чĕлхе пулăшмасăр çав ăнланусене пăсма, юрăхсăра кăларма çеç пулать».

Çапла вара И.Я. Яковлев Ильминский системинчен вырăс мар халăхсен шкулĕсенче ачасене тăван чĕлхепе вĕрентес идейăна çеç илнĕ, тăван чĕлхепе усă курса çав халăхсем хушшинче тĕн вĕрентĕвне сарас тĕллеве Яковлев шкулĕсенче земствăпа министерство шкулĕсен программисенче палăртнă шайра çеç пурнăça кĕртсе пынă.

И.Я.Яковлев XIX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенчех халăха çутта кăлармалли прогрессивлă система туса хатĕрленипе çеç çырлахман, Ильминскипе танлаштарсан, çутĕç пĕлтерĕшне чылай анлăрах тата тарăнрах ăнланнипе палăрса тăнă. И.Я. Яковлев системи Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене культурăпа çутĕç тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк витĕм кӳнĕ. Н.И. Ильминский хăйĕн системипе ялти шкула священник ертсе пыракан миссионер вучахĕ туса хурассишĕн тăрăшнă, чăвашсене çутта кăлараканĕ И.Я. Яковлев вара ялти шкула чăн-чăн культура центрĕ – сад-пахчасемпе, алăсти мастерскойĕсемпе чапа тухнă, халăх учителĕ ертсе пыракан культура центрĕ туса хурассишĕн.

Ильминский системипе танлаштарсан, чăвашсене çутта кăлараканĕн системи наци хăй евĕрлĕхĕпе палăрса тăракан система пулнă, çавăнпа та ăна чăнласах «Яковлев системи» теме пултаратпăр. Хăйĕн системине И.Я. Яковлев Раççейри мĕн пур халăхсен интересĕсем пĕр евĕрлĕ пулнине шута илсе йĕркеленĕ.

1908 çулта «Санкт-Петербургские ведомости» хаçат Иван Яковлевичăн педагогика системине питĕ пысăк хак панă: «Чĕмпĕр кĕпĕрнинче çеç мар, Раççейĕн чăвашсем, мордвасем тата ытти халăхсем пурăнакан пĕтĕм Тухăç пайĕнчи инородецсен культура аталанăвĕнче И.Я. Яковлев ячĕ Н.И. Ильминский ятĕнчен çӳлерех тăма тивĕçлĕ». Чăнах та, Атăл тăрăхĕнчи халăхсене çутта кăларас ĕç 1860 çулсенчен пуçланса кайнине тата çак пархатарлă ĕç Иван Яковлевич Яковлев ячĕпе çыхăннине Раççейĕн çутĕç историйĕнче çирĕппĕн çырса хăварнă.

### 4.3. Чăваш шкулĕсен инспекторĕн ĕçĕ-хĕлĕ

Университетран вĕренсе тухнă хыççăн 1875 çулхи çурла уйăхĕнче И.Я. Яковлева Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕн ĕçĕсене туса пыма хушнă, çапла вăл 1883 çулхи нарăсăн 21-мĕшĕнчен пуçласа асăннă шкулсен инспекторĕ пулса тăнă.

Чăваш шкулĕсен инспекторĕн должноçне 1867 çулта Н.И. Ильминский пуçарнипе çирĕплетнĕ пулнă, тĕп тĕллевĕ кунта чăваш халăхне çутта кăларассишĕн тăрăшнипе мар, чăвашсем чӳк тĕнĕнчен уйрăлса христианствăна çирĕппĕн йышăнма пултарайманнипе, христианствăпа маготанство енĕпе ытла та иккĕленӳллĕ пулнипе, икĕ тĕн хушшинчи уйрăмлăха туйса илме пултарайманнипе çыхăннă.

1867-1872 çулсенче чăваш шкулĕсен инспекторĕнче Н.И. Золотницкий ĕçленĕ, сывлăхĕ хавшанипе çак вырăнтан хăй ирĕкĕпе тухнă. Виçĕ çул хушши çак должноçа никама та уйăрса лартман. 1875 çулта Çут ĕç министерстви И.Я. Яковлева округ инспекторне лартнă. Çак ĕçре унăн халăха çутта кăларс енĕпе гимназире вĕренĕ çулсенчех пуçланă ĕç-хĕлне малалла тăсма, халăх шкулĕсене ытларах та ытларах уçма майсем пулса тăнă. Чăваш шкулĕсен инспекторĕн тĕп задачисемпе тивĕçĕсен шутне чăваш халăхне магометанство тĕнĕ витĕм кӳнинчен хăтарасси, чăвашсем тутара тухнине хирĕç кĕрешесси, тутар тĕнне йышăннă тата язычествăран хăтăлайман чăвашсене парвослави тĕнĕпе тата вырăссемпе çывăхлатасси кĕнĕ. Çак задачăсене шкулсем уçнипе тата тĕн литературипе чиркӳре службăсем ирттермелли кĕнекесене чăвашла куçарса кăларнипе пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ пулнă. Вĕренӳ ĕçне пĕтĕмпех чăваш шкулĕсен инспекторĕн йĕркелесе тăмалла пулнă, çĕнĕрен уçнă шкулсенче ĕçлеме чăвашла тата вырăсла пĕлекен учительсем вĕрентсе хатĕрлесси, чăваш халăх шкулĕсенче учительсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăрасси, вĕсен пĕлĕвне тăтăшах ӳстересси, вĕсене тĕрлĕ канашсемпе пулăшса тăрасси, кăтартусем парасси – çакă пĕтĕмпех унăн тивĕçĕ шутланнă.

И.Я. Яковлев инспекторта ӗҫленӗ ҫулсенче Хусан вӗренӳ округӗ Астрахань, Вятка, Чӗмпӗр, Самара, Саратов тата Хусан кӗпӗрнисене пӗрлештерсе тăнă. Чăваш шкулӗсем ытларах юлашки тăваттăшӗнче тата ҫавăн пекех Оренбург вӗренӳ округне кӗрекен Ӗпхӳ кӗпӗрнинче пулнă. Чăваш шкулӗсен инспекторӗ Чӗмпӗрте пурăннă.

Шкулсен ӗҫне инспекцилессине И.Я. Яковлев икӗ ҫаврăмпа ирттернӗ. Пӗрремӗш ҫаврăмне Чӗмпӗрпе Хусан кӗпӗрнисем кӗнӗ, иккӗмӗшне – Самарпа Саратов кӗпӗрнисем. Ытларах пӗрремӗш ҫаврăмра вăрах вăхăт иртнӗ, мӗншӗн тесен унта чăваш шкулӗсем нумай пулнă. Вӗсене тӗрӗслесе тăрасси ҫăмăл ӗҫ пулман, ҫулсерен икшер-виҫшер хут Чӗмпӗртен тухса кайса инспекцилесе ҫӳренӗ : пӗрре – хӗлле, тепре – ҫăва тухсан, ачасене каникула яриччен тата ҫавна май ял халăхне тӗрлӗ пулăшу панă. Чи паллă маршручӗсем ҫаксем пулнă: 1) Чӗмпӗр – Семенчино – Тӗрлемес – Аттиково – Карачево – Кăрмăш – Бичурино – Акулево – Шупашкар – Иккасси – Ишек – Пихтулино – Турай – Етӗрне – Хучаш – Элӗк – Хутар – Нăрваш-Енших – Шăхасан – Елчӗк – Рункă – Пăва – Кăнна Кушки – Пӳркел – Элшел – Чӗмпӗр (500 ҫухрăм ытла); 2) Чистай – Саврăш – Атлашкино – Аксу – Сунчелей – Челна – Тевлеҫеркино – Тăвармă (180 ҫухрăм); 3) Чӗмпӗр – Улхаш – Йӗлмел – Аксу – Чукал – Чекура – Хула Ҫырми – Тимӗрҫен – Пухтел – Чӗмпӗр. Паллах, ҫӗнӗ шкулсем уҫăлнă май инспекторăн маршручӗсем пӗр вӗҫӗмсӗр улшăнса тăнă.

Тӗттӗмлӗхре, мӗскӗнлӗхпе чухăнлăхра пурăнакан халăх хушшинче шкул ҫутине ҫутмалла пулнă, халиччен туман чӗрӗ ӗҫе пуҫарса ярасси Яковлев пек ҫыншăн та ҫăмăлах пулман.

Чăвашсем хушшипе иртсе ҫӳренӗ чух вăл пысăкрах ялсенче темиҫешер кун пурăннă, шкулсем уҫас пирки халăхпа калаҫнă. Ытларах унăн тутар тӗнӗ еннелле сулăннă е киремет тӗнӗнчен хăтăлайман чăваш ялӗсенче нумай вăй хума тивнӗ. Ҫавна май вырăнти халăх вӗренесшӗн пулнине е тата халăхăн ытлă-ҫитлӗ

пурнăçĕ шкул уçма тата ăна тытса тăма май панине пĕлес тĕллевпе Яковлев священниксемпе, вулăс правленийĕсемпе тата ялти хресченсем ытларах хисеплекен çынсемпе тачăрах килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнă. Хăш чухне унăн ĕçĕ ăннă, хăш чухне ăнман. Çапла Етĕрне уесĕнчи Мăн Явăшра шкул тăвассишĕн вăл çак яла виçĕ хутчен кĕре-кĕре тухнă, хресченсене пуçтара-пуçтара ачасене хут вĕрентме кирли çинчен питĕ витĕмлĕн кала-кала панă, ялта шкул уçма ўкĕтленĕ, анчах пур пĕрех ĕçĕ тухман. Мĕншĕн тесен хресченсем хăйсем вĕренесшĕн пулмасан вăйпа шкулсем уçса пани нихăш енчен те усă кўмен, халăх хирĕç тăнă чухне ачасене ирĕксĕрлесе вĕрентме май килмен. Çул çинче çўренĕ чухне тертне асапне те, хуйхи суйхине те сахал мар курма тивнĕ, пĕрре ăна тутарсем тапăннă, тепре, Тевлиçеркинăна кайнă чух, çумăр айне лексе хытă шăнса пăсăлнă тата тепрехинче Пăрăнтăкра тифпа чирлесе 3 уйăх ытла выртнă. «Кашни çул çўрев манăн чуна хумхантарать, ыраттарать, киле таврăнсан та вăрах вăхăт лăпланаймастăп. Çул çўрев вăхăтĕнче эпĕ шкул ыйтăвĕсене çеç мар, чăваш халăхĕн кулленхи ыйтăвĕсене те татса пама хутшăнатăп. Тепĕр чухне савăнмалли пулать, анчах та ытларах халăх чухăн, мĕскĕн тĕттĕмлĕхре пурăнни кăмăла хуçать», – тесе çырнă вăл 1883 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче Н.И. Ильминский патне.

Кĕпĕрнесем тăрăх шкулсене инспекцилесе таврăннă хыççăн Яковлев кашнийĕнчех вĕсенчи вĕренўпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ятарлă мерăсем йышăннă. Тĕслĕхрен, чăваш шкулĕсене çулталăк хушши тĕрĕслесе тăнă хыççăн 1876 çулхи çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче вĕренў округне «Хусан вĕренў округĕнчи чăваш халăхĕ хушшинче çутлăх ĕçне аталантармалли мерăсем çинчен» сĕнўсем çырса тăратнă. Тĕрĕссипе, ку Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăх ачисене шкулта вĕрентессине маллалла аталантармалли программа пулнă. Сĕнўсемпе пĕрле учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕ пирки çырса хатĕрленĕ положенипе пулас шкул штачĕн проектне тăратнă. Материалсене тўрех мини-

стерствӑна ӑсатнӑ, анчах ҫав ҫулхи чӳк уйӑхӗнчех чӑвашсем валли учительсем хатӗрлекен шкул уҫма май ҫукки ҫинчен пӗлтернӗ. Апла пулин те, И.Я. Яковлев сӗнӗвӗсене шута илсе, Д.А. Толстой министр «Хусан вӗренӳ округӗнчи чӑваш халӑхӗ хушшинче вӗрентӳ ӗҫне аталантармалли мерӑсем ҫинчен» постановлени йышӑннӑ.

И.Я. Яковлев шкулсене инспекциленипе ҫеҫ ҫырлахман, ҫӗннисене те сахал мар уҫнӑ. Официаллӑ даннӑйсем тӑрӑх, 1875 ҫулта Хусан округӗнче Ҫутӗҫ министерствин 41 шкулӗнче вырӑс мар халӑхсен ачисем вӗреннӗ, вӗсенчен ҫиччӗшӗ – чӑваш шкулӗсем. 1903 ҫул тӗлне округра чӑвашсен 45 шкул пулнӑ. Вӗсем пурте Ҫутӗҫ министерствин ведомствине кӗнӗ. Яковлев земство шкулӗсене те, чиркӳ прихучӗн шкулӗсене те йӗркеленӗ. Ҫавӑн пекех вӑл Гурий святитель тӑванлӑхӗн шкулӗсене те уҫнӑ, тӗслӗхрен – Чӗмпӗр уесӗн Улхаш ялӗнче, Сӗве уесӗн Аслӑ Меми ялӗнче. Шкул ҫурчӗсене тума Яковлев вырӑнти паллӑ ӑстасене хутшӑнтарнӑ. Чӑваш ачисене вӗрентекен тӑванлӑх шкулӗсем валли И.Я. Яковлев уйрӑм программа туса хатӗрленӗ, ун тӑрӑх ачасене малтан тӑван чӗлхепе вӗрентнӗ, каярахпа – вырӑсла. Шкултан вӗренсе тухнӑ ял ачисене вӑл Чӗмпӗрти тӗн семинарине те вӗренме янӑ. «Эпир кирек мӗнле вӗрентӗве те, кирек мӗнле шкулта тата кирек мӗнле майпа пухнӑ пӗлӗве те хаклатпӑр, ҫавӑнпа тӗн семинарийӗ паракан пӗлӳ те паллӑ пӗлтерӗшлӗ», – тенӗ И.Я. Яковлев. Мӗншӗн тесен тӗн семинарийӗнчен вӗренсе тухакан чӑваш ачисем университета вӗренме кӗме те, учительте ӗҫлеме те пултарнӑ.

Тӑванлӑх шкулӗсен йышӗпе чӑвашсем Атӑлпа Кама тӑрӑхӗнче пӗрремӗш вырӑнта пулнӑ. 1875 ҫулта ҫак тӑванлӑхӑн пурӗ те 8 шкул ҫеҫ пулнӑ пулсан, 1892 ҫул Гурий святитель тӑванлӑхӗшӗн чи ӑнӑҫлӑ ҫул пулнӑ, ҫав ҫулхине чӑвашсен 51 шкул, марисен – 3, удмуртсен – 8, мордвасен – 1, вырӑссен 6 шкул ӗҫленӗ. Тутарсемпе кӳршӗллӗ пурӑнакан чӑваш ялӗсенче, уйрӑмах магометанство витӗмӗ вӑйлӑ сарӑлнӑ ялсенче ҫӗнӗ шкулсем йӗркелеме И.Я. Яковлев мӗнпур майсемпе усӑ

курнă, çавна май хăйĕн укçи-тенкине те шеллемен. Çав укçа-тенкĕ каялла таврăнасси пирки шутламан вăл, иквиçĕ çул тытса тăнă хыççăн аталанса-çирĕпленсе çитнĕскерсене земство е тĕн ведомствисене панă. Тĕслĕхрен, Пĕкĕльме уесĕнчи Кивĕ Устюмкино, Пăва уесĕнчи Кивĕ Тăван тата Рункă, Чĕмпĕр уесĕнчи Çĕнъял ялĕсенчи училищĕсемпе çапла тунă. Малтанласа шкулсем ялти пĕр-пĕр пысăк çуртра вырнăçнă, кил хуçи пӳлĕмĕнчен вĕсене алкумсем çеç уйăрнă. Çапла вара И.Я. Яковлев çĕнĕ шкулсем уçнă чухне çӳлтен хушнă кăтартусемпе килĕшӳллĕн çеç мар, вырăнти условисене шута илсе те ĕçленĕ, урăхла каласан, ăçта мĕнле пулмаллине пурнăç хăй кăтартса пынă.

Атăл тăрăхĕнче çеç мар, Ĕпхӳ кĕпĕрнинче те чылай шкул уçнă Яковлев. Вăл ертсе пынипе тата Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухакансем тăрăшнипе çак тăрăхра 30 ытла училище уçăлнă. Çакна та палăртса хăвармалла, чăваш училищисенче нихăçан та чăваш ачисем çеç вĕренмен, вĕренекенсен йышĕнче вырăсĕ те, тутарĕ те, çармăсĕ те, удмурчĕ те е тата ытти халăх представителĕсем те пулнă. Тĕслĕхрен, Пăва уесĕнчи Шамкино училищинче 1879 çулта 3 вырăс, 14 мордва, 22 чăваш вĕреннĕ, Чикме уесĕнчи Петнур шкулĕнче – 1877 çулта Яковлев икĕ класлă училище туса хунă шкулта – çурри ытла çармăс ачисем пулнă. Çавăн пекех Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче, ун çумĕнчи хĕрсен училищинче Чĕмпĕр уесĕнчен килнĕ вырăссем, чăвашсем тата мордвасем вĕреннĕ. Хут çинче вĕсем пурте чăваш шкулĕсем шутланнă, И.Я. Яковлев инспектор вĕсене пур енлĕ пулăшу парса тăнă, вĕренекенсен тăван чĕлхине пĕлекен учительсем тупа-тупа панă.

Чĕмпĕр шкулĕнче хăйĕнче вырăссенчен, мордвасенчен, тутарсенчен, марисенчен, калмăксенчен учительсем хатĕрленĕ. Тĕрлĕ халăх çыннисем пурăнакан уессенче яланах хутăш училищĕсем йĕркелеме тăрăшнă. Чăваш шкулĕсене инспекцилесе çӳренĕ чухне вăл «хутăш» училищĕсене те сиктерсе хăварман. 1876 çулта вăл Сызрань уесĕнчи Сайманово училищине (унта чăваш

тата тутар класĕсем пулнă) тытса тăма ытларах укçатенкĕ уйăрма кирли çинчен вĕренӳ округне çырса пĕлтернĕ.

Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен шкулта вĕренекенсем тĕрлĕ халăх ачисем пулнипе çеç уйрăлса тăман, тĕрлĕ тĕне ĕненекенсем те пулнă вĕсем хушшинче. 1890 çулта кăларнă Положенипе килĕшӳллĕн çавăн пек шкулсене православи тĕнне ĕненекенсене çеç вĕренме е ĕçе илме юранă пулин те Яковлев ертсе пыракан шкулта христиансем те, магометансем те пĕр тан шайра вĕреннĕ. 1903 çулта Приморье облаçĕнчен Цой хушаматлă старшина Яковлев патне янă çырура икĕ класлă училищĕрен вĕренсе тухнă корееца Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме илме ыйтнă. Ыйтăва татса парасси вĕренӳ округĕн попечителĕнчен килнĕ, çавăнпа Иван Яковлевич Цой сĕнекен ачана сăнав шучĕпе вĕренме илме шутлать, попечительтен ирĕк ыйтать. Попечитель корееца Хусанти учительсем хатĕрлекен шкула йышăнма сĕнет.

Хăйĕн шкулĕнчен вĕренсе тухнă сахал мар учителе И.Я. Яковлев Урал, Çĕпĕр, Алтай тăрăхĕнче пурăнакан тĕрлĕ халăх шкулĕсене ĕçлеме янă. Вĕсем шор, казах, пушкăрт тата ытти халăх ачисене вĕрентнĕ, ачасене пĕлӳ панипе пĕрлех çитĕннисене те шкул ĕçне явăçтарнă. XIX ĕмĕр вĕçĕнче Ĕпхӳ кĕпĕрнин Стерлитамак уесĕнчи Тетербашево училищинче – М. Такташкин, Пелепей уесĕнчи Базиевăра – А. Петров, Ĕпхӳ уесĕнчи Сихонкинăра – Г. Степанов, Оренбург уесĕнчи Çĕнĕ Амекескинăра С. Васильев, çав уесри Этбулановăра – Сильвестров, Астрахань кĕпĕрнинчи Ордынкăри хĕрсен училищинче Т. Савельева, Иркутск кĕпĕрнин Балаганов уесĕнчи Муравьевăра В.П. Назарова учительте тăрăшнă.

Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен шкултан вĕренсе тухакансем хăйсемех инçет тăрăха кайса ĕçлеме кăмăл тунă. Ачасене вĕрентнисĕр пуçне учительсем хресченсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе те ĕçлеме, санитарипе гигена пĕлĕвĕсене пропагандăлама, вĕсен культура шайне çĕклессишĕн тăрăшма тивĕçлĕ пулнă. Вĕсем ĕçе

юратни, халăха çутта кăларассишĕн вăй-халне шеллемесĕр тăрăшни халăха тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтернĕ, чунтан савăнтарнă. Çапла вара халăх культурине хăпартас ĕç пĕр çын хастарĕпе çеç пулма пултарайман. Аслă Педагогăн чунĕнчи хĕлхем пулас вĕрентекенсен чунне вут хыптарнă, тăван халăха хута вĕрентес ĕçре вĕсем чĕртнĕ пĕлӳ вучахĕ ялкăшса çуннă.


**Тĕп литература**

1. Краснов Н.Г. Иван Яковлев и его потомки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 352 с.
2. Яковлев А.И. И.Я. Яковлев. 1848-1930 гг. / под ред. проф. Ф.Н. Петрова. – Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1958.
3. Яковлев И.Я. Моя жизнь: Воспоминания / вступ. статья Л.П. Куракова, археогр. предисл. Г.Н. Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г.Краснова. – М.: Республика, 1997. – 696 с.

**Хушма литература**

1. Александров Г.А. Иван Яковлевич Яковлев: фрагменты жизни / Г.А. Александров. – Чебоксары: Изд-во «Чувашия», 1997. – 194 с.
2. Александров Г.А. Чувашские интеллигенты. Биографии и судьбы / Г.А. Александров. – Чебоксары, 2002. – 212 с.
3. Волков Г.Н. И.Я.Яковлев – чăваш халăх педагогĕ / Г.Н. Волков. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1959. – 70 с.
4. Вопросы яковлевоведения. Труды Института И.Я. Яковлева. – Вып. 1.– Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1999.
5. Жиркевич А.В. Мои встречи с И.Я. Яковлевым. Из дневника за 1916 -1924 гг. / сост и коммент. Г.А.Александрова. – Чебоксары: Руссика, 1998. – 467 с.
6. Земляков А.Е. Проблема связи воспитания с жизнью в истории чувашской школы и педагогики: монография / А.Е. Земляков. – Чебоксары: Чувашгоспедуниверситет им. И.Я. Яковлева, 2004. – 290 с.
7. Земляков А.Е. Яковлевоведение: учеб. пособие для студентов педагогических учебных заведений / А.Е. Земляков. – Чебоксары: Чувашгоспедуниверстет им. И.Я. Яковлева, 2006. – 2003 с.

8. Петров М.П. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев çинчен / М.П. Петорв. – Шупашкар: Халăх çутĕç комиссариачĕ, 1928. – 95 с.

9. Плечов Г.Н. Вараксарская чувашская женская трудовая община: феномен просветительно-педагогической теории и практики И.Я. Яковлева / Г.Н. Плечов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1999. – 150 с.

10. Таймасов Л.А. Христианизация чувашского народа в первой половине Х1Х века: монография / Л.А. Таймасов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2005.

11. И.Я. Яковлев в воспоминаниях современников. – Чебоксары, 1968.

12. Яковлев И.Я. (Саламбек). Симбирская учительская школа и его роль в просвещении чуваш / И.Я.Яковлев (Саламбек). – Чебоксары, 1959.

13. Яковлев И.Я. Письма / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1985. – 366 с.

14. Яковлев И.Я. Из переписки. Ч. 1 / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1989. – 320 с.

15. Яковлев И.Я. С думой о народном просвещении. Из переписки. Ч. 2 / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1998. – 438

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Хăйĕн тĕнче курăмне аталантарас тесе И.Я. Яковлев мĕнле ĕçленĕ?

2. Н.И. Ильминский пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама хатĕрленĕр.

3. И.Я. Яковлевпа Н.И. Ильминский вĕренӳ системисем хушшинчи пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсем çинчен каласа парăр.

4. Хăвăр пурăнакан тăрăхра чăваш шкулĕсен инспекторĕ И.Я. Яковлев уçнă шкулсен кĕске историне çырса килĕр.

5. Г.А. Александров тĕпчесе хатĕрленĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнисен списокĕпе паллашăр («Хыпар» кĕнеки. 19 №, Шупашкар, 1996, çурла, 3). Хăвăр тăрăхран тухнă çынсене тупса палăртăр, вĕсен историне çырса килĕр.

5 сыпăк

# И.Я. ЯКОВЛЕВ ЧĂВАШСЕН ÇĔНĔ ÇЫРУЛĂХНЕ ЙĔРКЕЛЕНИ ТАТА УНĂН ПĔЛТЕРĔШĔ

## 5.1. Алфавит – халăхсене тĕнпе ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен çывăхлатмалли хатĕр

Цивилизацисемпе çырулăхсен историйĕ кăтартса панă тăрăх, авалхи çырулăхсене тата çĕнĕ çырулăхсенчен ытларахăшне йĕркелессине пĕр-пĕр ĕненӳ культне тытса пырассипе е тĕн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртессипе çыхăнтарнă. Чылай вилĕ чĕлхесен, çавăн пекех çыру палăкĕсенчен чухăн чĕлхесен çырулăхĕ культ тексчĕсенче çеç сыхланса юлнă. Тĕслĕхрен, Пасха утравĕн хăйне евĕрлĕ ӳкерчĕклĕ çырăвне илес пулсан, унта хăма татăкĕсем çине культ тата мифологи юррисăввисене асра юлма май паракан ӳкерчĕксемпе çырса хăварнă. Сĕм авал тата вăтам ĕмĕрсенче конфесси тĕллевĕсем çырулăха аталантарма пулăшакан тĕп факторсем пулса тăнă. Çав шутра VII-VIII ĕмĕрсем хушшинче масоретсем (иудейсен сăваплă кĕнекисене ăнлантарса çырса паракансем) еврей çырулăхне çĕнетсе улăштарни культура аталанăвĕшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Кирек мĕнле халăхăн та культура аталанăвĕ çырулăх пуçланнипе çыхăннă. Çырулăха пула çеç халăхăн ĕмĕрхи ăс-тăн пуянлăхне упраса хăварма пулать, çырулăха пула çеç пĕр халăх тепĕр халăхăн культурипе анлăн паллашма пултарать. Истори кăтартса панă тăрăх, çырулăх пуçланса каясси халăхсем хушшине тĕн вĕрентĕвĕ сарăлса пынипе те çыхăннă. Сăваплă Çырусене, Библи кĕнекисене хăй чĕлхине куçарма пуçланă май кашни халăх çырулăх йĕркелеме тăрăшнă. Тĕслĕхрен, сириецсен, готсен, нимĕçсен, эрменсен, грузинсен, славянсен пурин те çырулăхĕ тĕн кĕнекисене куçарма пуçланă тапхăрта йĕркеленнĕ. Кирилпа Мефодий пĕр тăвансем IX ĕмĕрте авалхи славянсен çĕрĕ çине Моравие килсен славянсем валли азбука туса хатĕрленĕ, ун хыççăн Турă

кӗнекисене, сӑваплӑ Евангелисене славянла ҫырма пуҫланӑ.

И.Я. Яковлев Библи кӗнекисене чӑвашла куҫарма пуҫланӑ чухне те чӑваш халӑхӗ “кӗнекесӗр” халӑх шутӗнче тӑнӑ. Унӑн хӑйӗн алфавичӗ те пулман. Кивӗ ҫырулӑх тапхӑрӗнче чӑвашла сӑмахсене ҫырма латин алфавичӗпе, каярахпа вырӑс графикипе усӑ курнӑ.

Кашни халӑхӑн ҫырулӑх никӗсӗнче наци чӗлхин хӑй евӗрлӗхне палӑртса тӑракан графикӑпа орфографи йӗрки пулмалла. Кунсӑр пуҫне наукӑра ҫыру палӑкӗсен пӗтӗм йышне те ҫырулӑх теҫҫӗ.

Чӑваш ҫырулӑхӗ пӗр ӗмӗр каяллах пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Уншӑн эпир тӑван чӗлхемӗрӗн шалти асамлӑ вӑйне хӑват кӗртме пултарнӑ ҫынсене тав тума тивӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсен ҫырулӑхри сӑпайлӑ ӗҫӗ-хӗлӗ пусмӑр саманинчех халӑхӑмӑрӑн чун-хавалне ҫӗклентерме, ӑна хӑйӗн тивӗҫне ӑнланса илме, тӑван халӑх культурине вӑйлӑ аталаннӑ ҫырулӑхлӑ халӑхсен культурин шайне ҫити ҫӗклеме, чӑвашсен наци ӑнланулӑхне вӑратма пулӑшнӑ.

Пирӗн халӑх мӗн авалтан ҫамрӑксене хӑйӗн тӑван чӗлхине юратма, хисеплеме вӗрентнӗ, тӑван чӗлхерен писекен ҫынсене питленӗ. Ӗлӗкхи вӑхӑтра халӑхӑн пысӑк пайӗ Киремет тӗнне ӗненсе пурӑннӑ. Чӑваш тӑрӑхӗнче чиркӳсем чылай туса лартнӑ пулин те, вӗсене халӑх ҫӳресшӗн пулман. Мӗншӗн тесен вӗсенче ытларах чухне вырӑс пачӑшкисем ӗҫленӗ, кӗлӗсене вырӑсла вуланӑ. Халӑх вара хутла пӗлмен пирки вырӑсла ӑнланман. Ҫавна пула тутар ялӗсемпе юнашар вырнаҫнӑ чӑваш ялӗсем ислам тӗнне йышӑнма пуҫланӑ. Ислам тӗнне йышӑнни вара тутарланас юхӑм вӑйланассине пӗлтернӗ. Енчен те чӑвашсем малашне те тутар тӗнне йышӑнса тутарланса пынӑ пулсан чӑваш этносӗ пӗтсе ларма пултарнӑ. Пӗтӗм чӑваш халӑхӗн шӑпишӗн хыпса ҫунакан И.Я. Яковлев ҫакна пит лайӑх ӑнланнӑ.

Чӑваш ҫырулӑхӗн ҫӗнӗ тапхӑрне Иван Яковлевич Яковлев пек хастар чун-хаваллӑ, халӑхӑмӑрӑн малаш ӗмӗтне, шухӑш-кӑмӑлне, хуйхи-суйхине чӗрере тытса

тăракан пысăк чĕреллĕ çын çеç пуçарса яма пултарнă. Унăн чăваш çырулăхĕпе культурине аталантарас тĕлĕшпе 50 çул хушши туса пынă пархатарлă ĕçĕ – чăн-чăн паттăрлăх.

Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕн тĕллевне – чăваш халăхне христианство тĕнĕпе пĕтĕçтерсе шăпăр шăтăкĕнчен çутлăхăн анлă тĕнчине илсе тухас, чăваша çын шутне кĕртес тĕллевне – чиркӳ ĕçĕпе тата патша влаçĕн политикипе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшнă. Тăван халăха тĕнче цивилизацийĕн шайне çĕклеме ĕмĕтленнĕ.

Чăвашсен çырулăхне пуçарса ярасси çинчен И.Я. Яковлев çамрăклах шухăшлама пуçланă. Анчах ку тĕлĕшпе ĕçлес тесен икĕ чĕлхене чаплă пĕлекен çын çеç мар, чăн-чăн чĕлхе ăсти, чĕлхе наукине лайăх чухлакан, нумай пĕлӳллĕ, анлă тавракурăмлă çын пулмаллине вăл лайăх ăнланнă.

## 5.2. Чăваш çырулăхĕн çĕнĕ тапхăрĕ

И.Я. Яковлевăн 1870-мĕш çулсен пуçламăшĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ чăваш халăхĕн пурнăçĕнче пысăкрах та пысăкрах пĕлтерĕшлĕ пулса пынă. Яковлев университета вĕренме кĕнĕ тапхăрта Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене вĕрентсе çутăлтарас ĕçре паллă ученăй-ориенталист, педагог-миссионер Н.И. Ильминский туса хатĕрленĕ системăпа усă курнă. Вăл Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулне йĕркелесе яраканĕ тата чăвашсемпе çармăссем, тутарсемпе удмуртсем хушшинче Гурий святитель тăванлăхĕн шкулĕсене уçассишĕн тăрăшакансенчен пĕри пулнă. 1870 çулта асăннă халăхсем хушшинче çавнашкал хĕрĕх ытла шкул ĕçленĕ. Христианство тĕнне сарас тата магометансен витĕмне хирĕç кĕрешес тĕллевпе çав шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне тăван чĕлхепе йĕркелемелле пулнă. Çавна май уйрăм ĕçсем туса ирттермелле: учительсем вĕрентсе хатĕрлемелле, вĕрентӳ кĕнекисем çырмалла, вĕсене тăван чĕлхепе çырас тесен çав халăхсен çырулăхне туса хатĕрлемелле пулнă.

И.Я. Яковлев чăваш çырулăхĕн çитменлĕхĕсене гимназие вĕренме кĕме хатĕрленнĕ тапхăртах асăрханă теме пултаратпăр. Çакна унăн Н.И. Золотницкий хатĕрленĕ «Сőлдалык кнеге» пирки çырнă, 1867 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Симбирские губернские ведомости» хаçатра пичетленнĕ рецензийĕ те лайăх кăтартса парать: «Сőлдалык кнегере» автор господин христиансен календарĕсĕр пуçне христиансен уявĕсем çинчен ăнлантарса парать, çавăн пекех вырăс историйĕнчи хăш-пĕр паллăрах пĕлтерĕшлĕ событисем çинчен, тĕслĕхрен, Хусана вырăссем илни, Кузьминпа Пожарский, ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче Император Государе тапăнни çинчен каласа парать. Унсăр пуçне автор г. чăвашсен язычество тĕнĕпе çыхăннă хăш-пĕр ĕненĕвĕсене тата христиансен святоя кăларнă таса çыннисен пурнăçĕ çинчен ăнлантарса пама тăрăшать.

Хам енчен автор г(осподин) хатĕрленĕ кĕнеке усси çинчен каласа тăни ытлашши пулĕ тетĕп. «Сőлдалык кнеге» пек кĕнекесем усăллă пулнине вулама-çырма пĕлмен чăвашсене аталантарма ĕмĕтленекен кашни çынах ăнланать. Чăвашсем вырăсла япăх пĕлеççĕ тата вырăс кĕнекисене сахал вулаççĕ. Тĕттĕм кĕтессенче, вырăссемпе хутшăнмасăр пурăнакан чăвашсем, уйрăмах Хусан кĕпĕрнинче, çавăн пекех хамăр кĕпĕрнери Кăрмăш тата Пăва уесĕсенчи чăвашсем вырăссемпе пачах та хутшăнмаççĕ. Акă мĕншĕн «Сőлдалык кнеги» пек кĕнекесем, вĕсене вырăсла мар, чăвашла çырсан ытларах усă кӳме пултараççĕ. Шел пулин те, «Сőлдалык кнеге» автор хăй ĕмĕтленнĕ пекех усăллă пулма пултараймасть.

Пĕрремĕшĕнчен, чăвашсен пĕлӳлĕхĕ çителĕксĕртерех пулнине автор шута илесшĕн пулман; вăл тĕрлĕ фактсем çинчен пĕлтерет, анчах вĕсем пирки кирлĕ пек ăнлантарса памасть, çавăнпа кĕнекере мĕн çырнинчен ытларахăшĕ чăвашсемшĕн ăнланмалла мар: тĕслĕхрен, автор Иисус Христос шыва кĕнĕ хыççăн мĕнлерех типĕ тытни çинчен каласа парать. Çак калава вуланă хыççăн чăваш мĕншĕн-ха унăн хăйĕн те типĕ тытмаллине е Çăлаканăмăртан мĕншĕн тĕслĕх илмеллине па-

чах ăнланмасть. Кĕнекере çакăн пек тĕслĕх нумай тупма пулать.

Иккĕмĕшĕнчен, «Сӑлдалык кнегере» чăваш чĕлхинче пулма пултарайман сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулаççĕ. Хăш-пĕр тĕслĕхсенче автор г(осподин) пурте пĕлекен ăнлавсене палăртмалли сăмахсем тупаймасть, хăш-пĕр япаласен ячĕсене пĕлмест, çавăнпа «Сӑлдалык кнегере» чăваш пачах ăнланман вырăнсем тĕл пулаççĕ, тепĕр тĕлте вара çавна пула калавсен шухăшĕ те пăсăлать. Çакна ĕнентерме эпĕ «Сӑлдалык кнегери» пĕр вырăна илсе кăтартасшăн: ака уйăхĕн 4-мĕшĕнчи ĕççене çырса панă тĕлте автор г. «сад» сăмаха чăвашла «пахча» тесе куçарать, «револьвера» – кĕске пăшал тет, анчах чăваш чĕлхинче «сад» та «пистолет» та пур. Пĕтĕмĕшле каласан, ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ ĕççем пирки çырса панинчен чăваш нимех те ăнланса илеймест.

Юлашкинчен чăваш чĕлхинчи сасăсене автор йышăннă вырăс сас паллийĕсемпе палăртмалли меслетсем пирки пĕр-ик сăмах каламаллах пулĕ тесе шутлатăп. Ман шутпа, чăваш чĕлхинчи сасăсене палăртмашкăн хăш-пĕр паллăсем шухăшласа кăлармалла, мĕншĕн тесен уйрăм сасăсене вырăс сас палийĕсемпе палăртма май çук. Чăнах та, автор г. хăш-пĕр паллăсемпе усă курать-ха, анчах хăш сасса мĕнле паллăпа палăртнине ăнлантарса памасть, çавăнпа та çав паллăсене чăваш ăнланаймасть».

Чăваш çырулăхне мĕнле майпа халăха тивĕçтермелле тăвас ыйту И.Я. Яковлева чăнласах шухăшлаттарнă пулин те, вăл çĕнĕ сас паллисем тăвас, çырулăх чĕлхине нормăлас ĕçе тӳрех тытăнма пултарайман, ăна валли унăн пĕлӳ те, опыт та пулман. Малтан наука пĕлĕвĕ пухмалла, тăван чĕлхене тĕпчемелле, ытти халăхсен алфавичĕсемпе паллашмалла пулнă. Тепĕр тăватă çултан, гимназие питĕ ăнăçлă пĕтерсе Хусанти университета вĕренме кĕрсен, И.Я. Яковлев вак халăхсене çутта кăларас ĕçре пысăк опыт пухнă Н.И. Ильминский профессорпа паллашать. Хусан профессорĕ пултаруллă чăваш каччи çинчен

малтанах пӗлсе тӑнӑ, унӑн Золотницкий кӗнеки пирки ҫырнӑ рецензине те вуланӑ, ҫамрӑк ҫын унта каланӑ шухӑшсемпе килӗшнӗ. Яковлевпа паллашиччен Н.И. Ильминский чӑвашла та, тутарла та лайӑх пӗлекен чӑваш каччисемпе, Самарти тӗн училищинчен вӗренсе тухнӑ В.В. Васильевпа тата хӑй ертсе пыракан шкулта (тӗне кӗнӗ тутарсен шкулӗ. – *И.М.*) вӗренекен С.Н. Тимрясовпа тӗн кӗнекисене тутарларан чӑвашла куҫарас енӗпе ӗҫленӗ, ҫав кӗнекесемпе тӑванлӑх шкулӗсенче вӗренӳ пособийӗсем пек усӑ курма тивӗҫлӗ пулнӑ. 1870 ҫулхи авӑн уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Иван Яковлев та вӗсемпе пӗрле ӗҫлеме килӗшет, чӑвашсен ҫӗнӗ алфавитне йӗркелеме сӗнет тата ҫак ӗҫре Чӗмпӗр шкулӗнче вӗренекен чӑваш ачисемпе пулӑшма шантарать. Яковлев идейине Н.И. Ильминский профессор хаваспах йышӑнать. Ҫапла вара 1870/71 вӗренӳ ҫулӗнче Ильминский хваттерӗ Яковлевшӑн тӗрӗк чӗлхисен фонетикине тишкермелли вырӑн пулса тӑрать. Тӑван халӑха ҫутта кӑларассипе, чӑвашсен ҫӗнӗ ҫырулӑхне йӗркелессипе, пирвайхи вӗренӳ кӗнекисем хатӗрлесе кӑларассипе ҫыхӑннӑ конкретлӑ плансем те ҫакӑнтах ҫуралаҫҫӗ.

Ҫак тӗл пулусен пӗлтерӗшӗ пирки И.Я. Яковлев каярах ҫапла аса илнӗ: «Вӑл чӗннипе эпӗ ун патне час-часах пырса ҫӳреме пуҫларӑм. Паллашнӑ хыҫҫӑн пӗр тӑватӑ уйӑхра кӑна эпир унпа сахалтан та 30 хутчен тӗл пултӑмӑр, ҫавна май эпӗ ун патне ирех пыраттӑмччӗ те тепӗр кунне ҫутӑлсан е ирхи кӗлле чӗнсе чиркӳ чанӗ ҫапма пуҫласан тин тухса каяттӑм... Ҫав тӗл пулусем вӑхӑтӗнче Ильминский мана тӑван чӑвашсене ҫутта кӑларас тесен вӗсене чи малтанах чӑвашла вӗрентме кирлине, ытти халӑхсем те ҫаплах тума тивӗҫлине ӗнентеретчӗ».

Чӑваш студентне Николай Иванович О.Н. Бетлинг, А.А. Шифнер, Ф.И. Видеман академиксен тата алфавит тӑвас енӗпе ӗҫленӗ ытти ученӑйсен ӗҫӗсемпе паллаштарать. Иван Яковлевич Ф.И. Видеман ҫырса хатӗрленӗ «Собрание грамматики черемисского языка» кӗнекене, О.Н. Бетлингӑн «Язык якутов» ӗҫне уйрӑмах тарӑннӑн тӗпченӗ. Паллах, профессор пултаруллӑ сту-

дента хӑй вырӑс графикипе усӑ курса тутарсем валли туса хатӗрленӗ ҫӗнӗ алфавитпа та паллаштарнӑ.

Н.И. Ильминскин вӗрентӳ системипе тата вӑл йӗркеленӗ тутар шкулӗнче тӑван чӗлхепе вӗрентнипе паллашни, В.Г. Белинский, Н.Г. Чернышевский, Н.А. Добролюбов, Д.И. Писарев ҫырнисене вулани И.Я. Яковлев ӑсӗнче тӑван чӗлхепе тӑван ҫырулӑх урлӑ кӑна халӑхсем тӗттӗмлӗхрен, тӗшмӗшлӗхрен, мӗскӗнлӗхрен хӑтӑлма, хӑйсен пурнӑҫне ҫӗнетсе улӑштарма, тӑван культурине аталантарма пултарӗҫ текен шухӑша ҫирӗплетет. Ҫакӑ ӑна чӑваш ҫырулӑхне ҫӗнӗлле йӗркелес ӗҫе ҫине тӑрсах тытӑнма хистенӗ.

Кирек епле чӗлхере те алфавит тӑвас ӗҫ виҫӗ тапхӑртан тӑрать: 1) чӗлхери сасӑсен (фонемӑсен) йышне тӗпчесе палӑртасси; 2) палӑртнӑ сасӑсем (фонемӑсем) валли ҫыру паллисем шухӑшласа кӑларасси; 3) ку е вӑл принципсене тӗпе хурса алфавит тӑвасси.

## 5.3. Сасӑсен йышне тӗпчесе палӑртни

Алфавит тӑвас ӗҫ чӗлхери сасӑсене, вӗсен сӑнсӑпатне, пуплеври тӗрлӗ вырӑнта (сӑмах пуҫламӑшӗнче, вӗҫӗнче, тӗрлӗ сасӑсем хушшинче) вӗсем епле илтӗннине тӗпченинчен пуҫланать. Ҫакна тума чи малтан чӗрӗ калаҫу чӗлхине сӑнамалла, ҫыхӑнуллӑ текстсене илсе тӗпчемелле, сӑмахсен йышне пухмалла. Паллах, ҫакна кӗске вӑхӑтра пӗччен тума ҫук. И.Я. Яковлев та пӗччен пулман. Н.И. Ильминский сӗннипе вӑл хӑйне пулӑшма университетри историпе филологи факультечӗн аслӑрах курсӗнче вӗренекен В.А. Белилин студента тата тӗне кӗнӗ тутарсен шкулӗнче вӗренекен С.Н.Тимрясова суйласа илнӗ. В.А. Белилин вырӑс пулнӑ, университетра Н.И. Ильминский патӗнче турккӑтутар чӗлхине тӗпченӗ, арабла вӗреннӗ, тӗрлӗ чӗлхесенчи сасӑсен тытӑмӗпе интересленнӗ, анатомипе сасӑ органӗсем ҫинчен лекцисем итленӗ. Хӑй вырӑс пулин те, вырӑс мар чӗлхесенчи сасӑсене ҫӑмӑллӑн уйӑрса илме пултарнӑ. С.Н. Тимрясовӗ чӑваш пулнӑ, анчах мӗн ачаранах тутарсем хушшинче ӳссе, тутар

шкулĕнче вĕреннĕ, тутарла та лайăх пĕлнĕ. Çавăнпа та тутар кĕнекисене тӳрех чăвашла куçарса вулама пултарнă.

1871 çул пуçламăшĕнче И.Я. Яковлев, В.А. Белилин, С.Н. Тимрясов чăваш чĕлхинчи сасăсене тутар, вырăс чĕлхинчи сасăсемпе танлаштарса тĕпчеме тытăннă. Чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕпчесе палăртас майпа вĕсем ытларах диктант çырнă. Тимрясовĕ тутар кĕнекисене тӳрех чăвашла куçарса вуланă, Белилинĕ Тимрясов вуланине хут çине çырса панă. Çавăн пек çыру ĕçĕсем кашни кунах ик-виçĕ сехете пынă.

«Çапла майпа, – тесе çырнă ун пирки Н.И. Ильминский «Переписки о чувашских изданиях Переводческой комиссии» (Хусан, 1890) кĕнекере, – темиçе эрне хушшинче крешĕн тутар кĕнекисене пĕтĕмпех чăвашла куçарса хучĕç. Паллах, В.А. Белилин хăвăрт, чăваш сассисем хăйне мĕнле илтĕнетчĕç, çавăн пек çыратчĕ, çырнă чухне вырăс сас паллисемпе усă куратчĕ. Çапла майпа куçарса çырнисем 1971 çулхи çуллахи каникул пуçланиччененех выртрĕç. Каникул пуçлансан, Яковлев вĕсене иккĕшне те хăйĕн тăван çĕр-шывне чĕнсе кайрĕ, кунта вĕсем Чĕмпĕрте вĕренекен А.И. Рекеевпа тата ытти ачасемпе пĕрле Белилин студент тетрачĕсене тишкерме тытăннă...».

Вара вĕсем чăваш чĕлхинчи сасăсен хисепĕпе пахалăхне кулленхи калаçăва итлесе тĕпчеме пуçăннă. Çак тĕллевпе вĕсем Кăнна Кушкинче тата таврари ытти ялсенче халăх сăвви-юррине, юмах-халапне, ваттисен сăмахĕсене çыра-çыра илнĕ. Ку ĕçре А. Рекеев, И. Иванов, С. Тимрясов тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен ытти ачасем хастар пулнă. Сасăсен хисепне тата пахалăхне палăртас тĕлĕшпе уйрăмах Белилин тимлесе ĕçленĕ, вăл хăйшĕн ют чĕлхе шутланакан чăваш чĕлхинчи сасăсене усăмлăн уйăрса илме пултарнă. Вăл чăваш чĕлхинче хăйне евĕр çемçе хупă сасăсемпе кĕске усă сасăсем (*ă, ĕ*) пуррине асăрханă. Яковлевпа иккĕшĕ çакна, тĕрлĕ çын калаçăвне тĕпчесе, темиçе хут та тĕрĕслесе пăхнă, юлашкинчен ун çинчен Н.И. Ильминские пĕлтернĕ, хăйсем мĕн асăрханине

пĕрле сӳтсе явнă. Çапла анатри чăвашсен чĕлхинче вĕсем 8 уçă сасă (*а, ă, е, ĕ, ы, и, у, ӳ*) тата 37 хупă сасă (*п, п', б, б', в, в', к, к', г, г', т, т', т'', д, д', д'', ш, ш', ж, ж', с, с', з, з', х, х', г, г,, р, р', й, л, л', м, м', н, н'*) тупса палăртнă. Кунта анатри чăвашсен калаçăвĕнче тĕл пулакан пур сасăсем те пур. Çакă И. Яковлевпа В.А. Белилин тунă чăннипех те пысăк пĕлтерĕшлĕ уçлăх пулнă. Çакăнпа В.А. Белилин хăй ĕçне вĕçленĕ. Анчах та ку алфавит тăвас ĕçĕн пĕрремĕш тапхăрĕ кăна пулнă-ха. Чĕлхери сасăсене, вĕсен йышне палăртнă хыççăн çав сасăсем валли сас паллисем суйласа илмелле е çĕнĕрен шухăшласа кăлармалла пулнă. Çакăн пирки И.Я. Яковлев нумай шухăшланă. Малашлăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçре ăна Н.И. Ильминский профессор пĕр уйрăлми ертсе пынă.

Тĕрлĕ халăх алфавичĕсене илсе пăхсассăн, çакă курăнать, вĕсенчен нумайăшĕ пĕр-пĕрне çывăх. Ку вăл тĕрлĕ халăх çырулăхĕсем пĕр-пĕр паллă алфавитран пулса кайнине пĕлтерет. Сăмахран, авалхи финикиецсен çырулăхĕнчен грексен çырулăхĕ пуçланнă. Грексен алфавитĕнчен этрус, латин, славян, (кириллица) алфавичĕсем туратланса тухнă. Вĕсенчен Европăри ытти халăхсен алфавичĕсем пулса кайнă.

Н.П. Петров тĕпчевçĕ хăйĕн «Чăваш çырулăхĕ» кĕнекинче палăртнă тăрăх, революцичченхи Раççейре ку е вăл алфавитпа усă курасси тĕн ыйтăвĕпе çыхăнса тăнă. Христос тĕнне тытакансем (вырăссем, украинсем, белоруссем тата ыт.те) хăйсен алфавичĕсене кириллицăна никĕсе хурса тунă, католиксемпе протестантсем (поляксем, финсем, эстонсем, латышсем, литвасем) латин алфавичĕпе, мусульмансем (казахсем, узбексем, тутарсем, азербайджансем) араб графикипе, ламаистсем (бурятсемпе калмăксем) авалхи уйгур çырăвĕпе, тĕрлĕ иудаистсем (караимсем, Крымри, Вăтам Азири, Хĕвеланăç Европăри еврейсем) авалхи еврей çырулăхĕпе усă курнă. Вĕсенчен халăх хушшине кириллица, араб тата латин алфавичĕсем анлă сарăлнă. Тĕрĕк халăхĕсем, чăвашсемпе якутсемсĕр пуçне, пурте араб

графикипе усӑ курнӑ. Чӑвашсен аслашшӗсем те масар ҫинчи чул палӑкӗсем ҫине араб сас паллисемпе ҫырнӑ.

Хӗвеланӑҫ Европӑри халӑхсем хушшинче латин алфавичӗ анлӑ сарӑлнӑ. Арабсеннипе танлаштарсан, вӑл чылай ансат. Наукӑра тата медицинӑра пӗтӗм тӗнчипех латин ҫырӑвӗпе усӑ кураҫҫӗ.

Ҫӗнӗ чӑваш алфавитне хӑш алфавита никӗсе хурса йӗркелемелле. Ытти тӗрӗк халӑхӗсем пек, араб алфавитне йышӑнмалла-и, латин алфавичӗ ҫине куҫмалла-и е малтанхи традицие тытса пымалла.

Ку тӗлӗшпе тӗрлӗ сӗнӳ пулнӑ. Малтанах Яковлевӑн сас паллисене Европӑри халӑхсем пек латинла ӳкерес шухӑш та пулнӑ, анчах ӑна Н.И. Ильминский чарнӑ: «...апла хӑтлансан, вырӑссем юратас ҫук», – тенӗ. Вара вӑл вырӑссемпе чӑвашсен историри шӑпине шута илсе, ҫӗр ҫулхи традицирен чакас темен. Вырӑс чӗлхинчи сасӑсемпе пӗр пек илтӗнекен чӑваш сассине унчченхи пекех вырӑс сас паллийӗсемпе палӑртнӑ, сасӑсен ҫемҫелӗхне уйӑрма сас паллисен тӑррине сулахаялла чалӑш патак (апостроф) туртнӑ. Анатри чӑвашсен чӗлхинчи *ть* сасса ҫывӑх тӑракан ҫемҫе *ч* (т’ш’) сасса *т* сас палли тӑррине сылтӑм енчен сылтӑмалла чалӑш патак туртса (т′) палӑртнӑ, унӑн янӑравлӑ мӑшӑрне палӑртма *д* сас палли тӑррине патак лартнӑ (д′). *Х* сассӑн янӑравлӑ мӑшӑрне Золотницкий *г* тӑррине пӑнчӑ лартса палӑртнӑ (г). Яковлев *г* сас паллине урӑх сас паллипе – якут ҫырулӑхӗ валли О.Н. Бетлинг академик тунӑ алфавитран илнӗ хӳреллӗ *г,* паллӑпа улӑштарнӑ.

Ҫыру паллисен системинче халиччен палӑртман малти ретри *ĕ* тата кайри ретри *ӑ* сасӑсем валли авалхи славян ҫырулӑхӗнчи ҫав пӗлтерӗшлӗ *ь, ъ* паллӑсене йышӑннӑ. Малти ретри *ӳ* усӑ сасса палӑртма Золотницкий алфавитӗнчи *ӳ* саспаллине илнӗ.

Алфавита пӗтӗмӗшле 47 саспалли кӗртнӗ, вӗсенчен 9-шӗ – усӑ сасӑсене пӗлтерекеннисем, 38-шӗ – хупӑ сасӑсене.

Кунта чăваш чĕлхинчи пур сасăсене те палăртнă. Вырăс сăмахĕсенче тата тури чăвашсен чĕлхинче кăна тĕл пулакан *о, ф* сасăсене те манса хăварман.

Çак алфавитпа, анатри *у*-па калаçакан диалекта тĕпе хурса, 1871 çулта И.Я. Яковлев чăваш букварĕ – «Т''ъваш ад''изен'е с'ыръва в'ър'ен'м'ел'л'и к'н'ег'е» хатĕрленĕ, ăна 1871 çулхи чӳкĕн 15(27)-мĕшĕнче пичете пама çирĕплетнĕ, вăл 1872 çулта кăрлачра Хусанта çапăнса тухнă. Чăвашсен пĕрремĕш букварĕ – анатри диалекта тĕпе хурса хатĕрленĕ букварь – хутла вĕрентмелли кĕнеке çеç мар, хресченсене пурăнма вĕрентекен кĕнеке пулса тăнă. Çĕнĕ çырулăхпа чăвашла çырса хатĕрленĕ пĕрремĕш кĕнеке чăвашсен ăс-хакăлĕпе кăмăл-сипечĕн нумай енне: вĕсен йăли-йĕркине, кăмăл-сипетне, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене тата тĕнпе çыхăннă ăнлавне кăтартса панă.

Çапла ĕнтĕ, çĕнĕ чăваш çырулăхне тунă чухне И.Я. Яковлев пĕччен пулман. Ăна çак ĕçре ертсе тата хавхалантарса пыраканĕ Н.И. Ильминский профессор пулнă. И. Яковлев çак пысăк ĕçе чи малтан университетра историпе филологи факультечĕн арабпа тутар чĕлхисен уйрăмĕнче вĕренекен В.А. Белилин вырăса, тĕне кĕнĕ тутар ачисен Хусан шкулĕнче вĕренекен С.Н. Тимрясов чăваша, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ĕçлекен А.В. Рекеева, Пăва уесĕнчи Тимĕрсел шкулĕнче ĕçлекен Т.А. Петров учителе, Пăва уесĕнче Кăнна Кушки ялĕнчи И.И. Иванов учителе, Çĕрпӳ уесĕнчи Ямаш ялĕнчен Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарие вĕренме пынă Д.Ф. Филимонов чăваша явăçтарнă. Çак çынсем пулăшнипе чăваш чĕлхинчи пĕтĕм сасăсен йышне тупса палăртма май килнĕ, çĕнĕ çырулăх пĕрремĕш утăмсем тунă.

## 5.4. Çĕнĕ графика принципĕсем

И.Я. Яковлев çĕнĕ алфавита фонетика транскрипцийĕн принципĕсене никĕсе хурса тунă. Çак алфавит чăваш сăмахĕсене те, вырăс сăмахĕсене те пĕр йĕркене пăхăнтарса çырма май панă. Çĕнĕ алфавитпа хатĕрленĕ

букварьте кашни сасса пĕр сас паллипе палăртнă, кашни сас палли пĕр пĕлетрĕшлĕ. Пĕр сасса икĕ сас паллипе е икĕ сасса пĕр сас паллипе палăртни çук кунта. Хупă сасăсене кирек хăш вырăнта та пĕр сас паллипе кăна кăтартнă, тĕслĕхрен: т'ьд'ьм (тĕтĕм), т'ьт'ьм (тĕттĕм), ага (ака), ака (акка), к'ъзен (кĕçен), к'ьс'ен (кĕççен), кад"а (кача), кат"а (каччa) т.ыт.те.

Пĕр сасса пĕр сас паллипе кăна палăртни алфавитăн чи паха енĕ. Анчах лайăххипе пĕрлех çак алфавитăн çитменлĕхĕсем те пулнă. Пĕрремĕш çитменлĕхĕ – алфавитри сас палли йышĕ пысăк пулни, иккĕмĕшĕ – сас паллисемпе усă курма ăнăçлах пулманни: çемçе хупă сасăсене палăртма усă курнă вертикаллĕ патаксем кĕнеке пичетленĕ чух хуçălса аптратнă, çырура та сас паллисене пĕр чарăнмасăр çыхăнтарса çырма чăрмантарнă, çыру хăвăртлăхне ик-виçĕ хут чакарнă. Виççĕмĕш çитменлĕхĕ – янравлăхпа янравсăрлăх тĕлĕшĕнчен сасăсемпе сас паллисем пĕр-пĕрне хирĕçлени, урăхла каласан, фонетика транскрипцийĕн принципĕ пăсăлни. Ку вăл чăваш чĕлхинчи сасăсен уйрăмлăхĕнчен килет. Хупă сасăсем, мĕнле вырăнта тăнине кура, хăйсен пахалăхне çапла улăштараççĕ:

1) хупă сасă сăмах пуçламăшĕнче тата сăмах вĕçĕнче янăрамасăр илтĕнет;

2) хупă сасă икĕ уçă сасă хушшинче янăраса илтĕнет: *абат (апат), мăга (мăка), адă (атă).*

3) хупă сасă ялан янăракан хупă сасăпа уçă сасă хушшинче янăраса илтĕнет: *авдан (автан), вăйзăр (вăйсăр), калда (калта).* Çак йĕркепе сăмах умĕнчи е вĕçĕнчи янăравсăр хупă сасăсем те сăмах форми улшăннă май янăраса илтĕнме пултараççĕ, çапла вара пĕр сăмахах тĕрлĕ формăра тĕрлĕ çырмалла килсе тухать: *ак – агать (акать), сут – судать (сутать), кас – казать (касать).*

**Алфавитăн иккĕмĕш варианчĕ.**

Çӳлерех асăннă хирĕçӳлĕхсенчен хăтăлас тесе И.Я. Яковлев 1872 çултах Н.И. Ильминский профессор, Хусан тĕн академийĕн профессорĕ Г.С. Саблуков, Хусан университечĕн вырăс литератури кафедрин про-

фессорĕ Н.Н. Булич сĕнĕвĕсене шута илсе, чăваш алфавичĕн 27 сас паллирен тăракан иккĕмĕш вариантне туса хатĕрленĕ. Вĕсем çаксем:

*Аа, Пп, Вв, Кк, Тт, Тт, Т, т, Ее, Шш, СС, Çç, Ии, Jj, Лл, Мм, Л, л, Нн, Н, н, Оо, Рр, Уу, Ӳӳ, Фф, Хх, Ъъ, Ьь, Ыы.*

Çак алфавитпа Хусанта çĕнĕ букварь – «Çыръва вьренме тытънмалли кьнеке» тата «Т,ън тьн кьнеки» пичетлесе кăларнă. Халăх çут ĕçĕн министерстви ăна çав çул вĕçĕнчех шкулта усă курма çирĕплетет.

И.Я. Яковлев ку хутĕнче янăравлă хупă сас паллисене алфавитран кăларать, хупă сасăсене пурне те янăравсăр хупă сасăсене пĕлтерекен паллăсемпе палăртать. Çав сас паллисене янăравлă е янăравсăр вуласси вара хупă мĕнле вырăнта тăнинчен килет, урăхла каласан хупă сассăн пахалăхне юнашар тăракан сасăсем кăтартса параççĕ. Хăш-пĕр сăмахсенче ку е вăл хупă сасă уçă сасăсем хушшинче тăнă чух та янăрамасть, ун пек сасăсене Яковлев икĕ хупă сасăпа палăртнă: *кукка, кăркка, аппа, иккен, асатте.*

*В, к, м, п, р, с, х, ш* хупă сасăсен çемçе мăшăрĕсене те (*ль, нь, ть* сасăсемсĕр пуçне) уйрăм паллăпа палăртман, çав сасăсене çемçен е хыттăн вулассине юнашар тăракан уçă сасăсем кăтартса панă. Сăмахри сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕх килĕшĕвĕ тăрăх хупă сасă малти ретри (*э (е), ĕ, и, ӳ*) уçă сасăсемпе юнашар тăнă чух çемçен илтĕнет (*телей, тирĕк, пĕрне, çĕмел, тĕнче, шевле*), кайри ретри (*а, ă, ы, у, о*) уçă сасăсемпе юнашар тăнă чух, хыттăн илтĕнет (*лав, хăлат, юман, ыраш, чыс*). Анчах *ль, нь, ть* сасăсем çак йĕркене пăхăнмаççĕ: вĕсем хăш-пĕр сăмахсенче кайри ретри уçă сасăсемпе юнашар тăнă чух та çемçен илтĕнме пултараççĕ, сăмахран: *кукăль, мăкăль, шукăль, мăкăнь, супăнь, вулать, кулать, çырать.* Çакна шута илсе, хупă сасăсен çемçе мăшăрĕсенчен *ль, нь, ть* сасăсене Яковлев уйрăм сас паллисемпе палăртать: *ль* сасă валли хӳреллĕ *л (л,),* нь сасă валли хӳреллĕ *н (н,)* кĕртет, *ть* сасса палăртма *т* саспалли тăррине çур çаврашка лартать (т). Çапла вара *ль, нь, ть* сасăсене,

вĕсем мĕнле сыпăксенче тăнине кура, икĕ тĕрлĕ палăртать: çемçе сыпăксенче тăнă чух – *л, н, т* паллăсемпе, хытă сыпăксенче тăнă чух *л, н, т* паллăсемпе.

1871 çулта тунă алфавитра *ç* сасă *с* сассăн çемçе мăшăрĕ пек курăнса тăрать. Тĕрĕссипе вара *ç* сасă хăйне уйрăм фонема, унăн çемçелĕхĕ вăл мĕнле вырăнта тăнинчен килмест, хытă сыпăкра та, çемçе сыпăкра та *ç* пĕр пекех илтĕнет: *çапăç – çепĕç, çуха – çўхе. С* сасă малти ретри (*э (е), ĕ, и, ÿ*) сасăсемпе юнашар тăнă чух *ç* сасса куçмасть. Çак сасăсем чĕлхере хăйне уйрăм пĕлтерĕшлĕ сăмахсем е формăсем тăваççĕ: *симĕс – çимĕç, сисĕм – çиçĕм, сенĕк – çенĕк.* Çавăнпа та алфавитăн иккĕмĕш вариантĕнче Яковлев *ç* сасса уйрăм саспаллипе – хўреллĕ *с (ç)* паллăпа палăртнă. Тури диалектри *ч* сасăпа тўрĕ килекен *т* сасса, анатри диалектра *ть* сасăпа çывăх тăраканскер, палăртма хўреллĕ *т (т,)* кўртнĕ, *й* сас паллипе *j* паллăпа улăштарнă. Çапла И.Я. Яковлев алфавитăн иккĕмĕш вариантне туса хунă. Алфавитăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш вариантне танлаштарсан, çакă курăнать: И.Я. Яковлев çемçе хупă сасăсене палăртакан сас паллисене кăларса пăрахать.

Чăваш чĕлхи – сингармонизмлă чĕлхе: хытă сăмахра хытă сасăсем, çемçе сăмахра – çемçе сасăсем пулаççĕ. Хупă сасăсен çемçелĕхне палăртма ятарлă сас паллисем кирлĕ мар. Анчах И.Я. Яковлев *л, н, т* сасăсене (исключени евĕр) хăварать. Пирĕн шутпа, 47 саспаллирен 27 çеç хăварни чăваш çырăвĕшĕн хăйне евĕр çăмăллăх пулса тăрать.

**Алфавитăн виççĕмĕш варианчĕ.**

И.Я. Яковлевăн иккĕмĕш букварĕ тухсан, вырăс пупĕсем *ъ* тата *ь* сас паллисене пула тавлашса кайнă, вĕсем И. Яковлева хытă вăрçа пуçланă. И.Я. Яковлев нумай хирĕçлесе тăмасть, хăйĕн алфавитне татах тўрлетет. *Ă, ĕ* сасăсене *ъ, ь* паллăсемпе палăртни, çав вăхăтрах вырăс чĕлхинче ку паллăсемпе урăх пĕлтерĕшпе (хытăлăхпа çемçелĕхе кăтартма) усă курни çыру чĕлхинче хирĕçўлĕх кăларса тăратма пултарассăн туйăннă. Çавăнпа та *ъ, ь* саспаллисем вырăнне Яков-

левăн çĕнĕ сас паллисем шухăшласа кăлармалла пулнă. *Ъ* сасса палăртма латин, румын çырулăхĕсенче усă куракан *Ăă* сас паллипе, *ь* сасса палăртма латин, румын, чех алфавичĕсенче усă куракан *Ĕĕ* сас паллине йышăннă. *Й* сасă вырăс чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те пĕр пекех илтĕннине шута илсе, *Jj* сас палли вырăнне каллех *Йй* сас палли йышăннă, чăваш чĕлхинче *ф* сасă пулман пирки алфавитран *Фф* сас паллине кăларнă.

Литература чĕлхи вырăнне йышăннă анатри диалектра *о* сасă çук, çывăнпа та çак сасса пĕлтерекен сас паллине те Яковлев алфавитран кăларнă. Çакăн хыççăн Яковлев алфавитĕнче 25 сас палли кăна тăрса юлнă. Вĕсене çапла вырнаçтарса тухнă:

*Аа, Ăă, Уу, Ыы, Ее, Ĕĕ, Ӳӳ, Ии, Йй, Лл, Љл, Мм, Нн, Њ,н, Рр, Сс, Çç, Шш, Вв, Кк, Хх, Пп, Тт, ЂђЂЊ, Т,т,.*

Вĕсенчен вун çиччĕшне вырăс алфавитĕнчен ним улăштармасăрах илнĕ, саккăрăшне вырăс саспаллийĕсем çумне диакритика (уйрăмлăх) паллисем хушса тухнă (тăррине лартса: *Ăă, Ĕĕ, Ӳӳ, Тт,* хӳре çыпăçтарса: *Њ, Ђ, Љ,, Çç,*).

1873 çул пуçламăшĕнче çак алфавитпа И.Я. Яковлевăн виççĕмĕш букварĕ – «Чăваш кĕнеки» тата «Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки» пичетленсе тухаççĕ. 1873 çултанпа Яковлев хăйĕн алфавитне урăх пачах та улăштарман. Вăл çав халлĕн 60 çул хушши тытăнса тăнă.

Çак алфавит чăваш чĕлхинчи пур сасăсене те палăртнă. Вырăс чĕлхинчен улшăнмасăр кĕнĕ сăмахсене, революциччenхи чăваш чĕлхинче вĕсен йышĕ нумай пулман пирки, вырăс алфавичĕпе усă курса çырнă.

«Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки» кĕнекере çулсерен хушма пай пичетлеме тытăнаççĕ, унта чăваш ачисене вырăсла вĕрентме кирлĕ кăтартусем кĕртнĕ. Çапла вăл 1912 çулччeнех тухса тăнă. И. Трофимовпа К. Иванов ăна «Чăваш çыруне вĕренмелли кĕнеке» тесе улăштараççĕ. «Чăваш кĕнекин» вырăсла хушăмне 1892 çулта уйрăм кĕнекен кăларма

тытăннă. Тĕп пайне пĕтĕмпе 33 хутчен пичетленĕ, кăлармассерен тенĕ пек унăн тытăмне улăштарса пынă, пуянлатнă. «Чăваш кĕнеки» Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемшĕн ырă тĕслĕх шутланнă.

Чăвашла букварь кăларас ĕçе И.Я. Яковлев хăй куçарса, хăй йĕркелесе пынă, ăна халăха çутта кăларас ĕçе пăхăнтарса тăнă. Çавăнпа малтанхи вĕренӳ кĕнекине халăхлăха тĕпе хурса йĕркеленĕ, пурнăçпа лару-тăру улшăннă май ун тытăмне çĕнетсе пуянлатнă. Анчах унăн пайĕсем тĕпрен улшăнман: унта халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене те, вĕрентекенсем е вĕренекенсем çырса панă хайлавсене, вырăсларан куçарнисене те, тĕн литературине те кĕртнĕ. Тĕплĕ тăвас тĕллевпе ку ĕçе чĕлхене лайăхрах пĕлекенсене явăçтарнă, хăй Н.И. Ильминскипе пĕрле çирĕплетнĕ правилăсене тытса пынă, вĕсене кĕнеке пуçламăшĕнче е вĕçĕнче пичетленĕ.

Çапла вара, тăрăшни сая кайман – эпир паян кунччenex усă куракан алфавита шăпах И.Я. Яковлев халăх патне çитернĕ. Ăна нумай паллă çын питĕ лайăх алфавит тесе йышăннă. Çырулăх И.Я. Яковлева тăван халăха тăван чĕлхепе вĕрентес ĕçе пуçласа яма май панă. Чăваш çырулăхĕ çавăн пекех халăха культура тĕлĕшĕнчен хăвăртрах аталанма, чăвашла кĕнекесем пичетлеме çул уçнă. Çулсем иртнĕçемĕн унăн чапĕ тата та ытларах сарăлса пырĕ, мĕншĕн тесен Иван Яковлевич Яковлевăн тăван халăхшăн тунă ĕçĕсем вилĕмсĕр.

## 5.5. Çĕнĕ çырулăх орфографийĕ

И.Я. Яковлев чăваш çырулăхĕшĕн, наци чĕлхи аталанăвĕшĕн, халăха çутта кăларассишĕн, халăх культуришĕн калама çук пысăк ĕç тунă терĕмĕр.

Чăваш улăпĕн нумай-нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕнчен ыттисене шута илмесен те, пĕр чăваш графикине туса йĕркелени хăех хак парса çитерейми, çав тери вăйлă, çав тери пархатарлă ĕç шутланать. Чăвашсем хăйсен чĕлхинчи сăмахсене çырура пĕр пăсмасăр, тĕрĕс вулама-çырма май илнĕ. Çырулăхпа уйрăм çынсен ушкăнĕ кăна мар, пĕтĕм халăх пĕр чăрмавсăр усă курма пул-

тарать, вăл чăннипех наци çырулăхĕ пулса тăтăр тесен, ăна орфографи тĕлĕшĕнчен йĕркелемелле. Орфографи – пĕр йышши сăмахсене пĕр пек çырмалли правилăсен системи.

Чăвашсен çĕнĕ çырулăх пуçланнă тапхăрта орфографи правилисем пирки калаçу та пулман. Кашни автор е тăлмач ытларах хăй пĕлнĕ пек çырнă. Чĕлхери сасăсене палăртма саспаллисем çителĕксĕр пулни те çырулăхра çирĕп традици туса хума чăрмантарнă.

Чăвашсем çеç мар, çав тапхăрта çыру (графика) йĕркелеме пултарнă ытти халăхсем те тӳрех орфографи правилисем тума, орфографи словарĕсем пичетлесе кăларма пултарайман. Ку ĕçсем валли вăй та, вăхăт та нумай кирлĕ пулнă.

Çырулăхăн малтанхи тапхăрĕнче, акă, вырăссем сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрмасăр çырнă пулнă. Çавăнпа та сăмахсене пысăкран е пĕчĕкрен çырмалли, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарса çырмалли правилăсем çинчен, паллах, калаçу та пулма пултарайман. Кунашкал правилăсене пирвайхи хут 1885 çулта тин – вырăс çырăвĕ пуçланнăранпа сакăр ĕмĕр иртсен – Я.К. Грот академик «Русское правописание» ятлă кĕнекере пичетлесе кăларнă.

И.Я. Яковлев ятарласа чăваш чĕлхин орфографи правилисене çырман. Букварĕн умсăмахĕнче («Предуведомление») графика ыйтăвĕсене никĕсленĕ май кăна сăмахри сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, янăравлăхĕпе янăравсăрлăхне çырура мĕнле палăртмалли çинчен правилăсем панă.

Пирĕн шутпа, сасăсене сăмах тытăмĕпе морфемăсен тытăмĕнче мĕнле çырасси, сăмахсене текстра пĕрле, уйрăм е дефис урлă çырасси, сăмахсене пысăкран е пĕчĕкрен пуçласа çырасси тата сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарса çырасси И.Я. Яковлев кĕнекисенче мĕнле йĕркелени çинчен кирлĕ таранах калама пулать, урăхла каласан, кĕнекесенче сăмахсене мĕнле пичетленине тĕплĕн тишкерсен, Яковлевăн орфографи нормине асăрхатпăр. Кивĕ çырулăхпа тухнă

кĕнекесенчи сăмахсене мĕнле çырнипе танлаштарсан, çапла çирĕплетме пултаратпăр: И.Я. Яковлев графикăра çеç мар, орфографире те пысăк утăм тунă. Халь усă куракан орфографи правилисем, тĕпрен илсен, Яковлевăн орфографи нормисем çинчех никĕсленсе тăраççĕ теме юрать. Ытларах та калама тивет: паянхи орфографи системине И.Я. Яковлев орфографийĕн системипе танлаштарсан, унăн кĕнекисенчи орфографире чăваш чĕлхинчи сăмахсен специфики уçăмлăрах палăрать теме май пур. Пирĕн халĕ пуринчен ытла сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефис урлă çырасси И.Я. Яковлев çырнинчен уйрăлса кайнă.

И.Я. Яковлев орфографи правилисем çырман, çавăнпа та букварĕн малтанхи кăларăмĕсенче сăмахсен пĕр-пĕр ушкăнне çирĕп правилăна пăхăнтарайман пулсан, каярах тухнă кăларăмĕсенче çав сăмахсенех паллă йĕркене пăхăнтарса çырнă. Букварь текстне тишкерсе И.Я. Яковлев фонетика принципне çирĕп тытса пынине асăрхама пулать; сăмах тĕпĕ (е тымарĕ) хытă пулсан, аффиксăн варианчĕсене те хыттисене хушнă, сăмах тĕпĕ (е тымарĕ) çемçе пулсан аффиксăн çемçе варианчĕсене хушнă. Хăш-пĕр сăмахсенче сăмах тĕпĕнче мĕнле уçă сасă пулнине тӳрех пĕлме йывăр: *ы* е *и* *(чыс е чис, çырла е çирла)* çырмалла. Кунта И.Я. Яковлев сăмах тĕпĕ çумне аффиксăн хăш варианчĕ хушшăннине пăхнă: хытă вариант хушăнсан, сăмах тĕпĕнче те хытă уçă саспалли çырмалла, çемçе вариант хушăнать пулсан – çемçе уçă саспалли.

Чăваш чĕлхинче сăмахри морфемăсем пĕрлешнĕ вырăнти хупă сасăсем пĕр евĕрлĕ артикуляциллĕ пулнă чухне пуплевре çав сасăсем час-часах пĕрпекленсе каяççĕ (ассимиляциленеççĕ):

1) *-ас(-ес)* аффикслă причастисем *-шăн(-шĕн)* йышăннă чух деепричастин *с* сасси *ш* сасса куçать, çырура ăна морфологи принципне хисепе хурса çырма йышăннă: *каясшăн, килесшĕн* (*каяшшăн, килешшĕн мар*).

2) *ш* сасăпа пĕтекен галголсен тĕпĕ çумне деепричасти аффиксĕ *-са(-се)* хушăннă чух аффиксри *с* сасă

*ш* сасса куҫать, ҫырура ăна сăмах тытăмне кура ҫырма йышăннă: *пулăшса, килĕшсе* (*пулăшша, килĕшше мар*).

3) хушу наклоненийĕн 2-мĕш сăпатĕнче *ш* сасăпа пĕтекен глаголсем *-сам* татăк йышăннă чух аффиксри *с* сасă *ш* сасса куҫать. Ҫырура ăна морфологи принципĕпе ҫырасси йăлана кĕнĕ: *пулăшсам, килĕшсем* (*пулăшшам, килĕшшем мар*).

4) *ш, ҫ* сасăсемпе пĕтекен сăмахсем *-сăр(-сĕр)* аффикс йышăннă чух аффиксри *с* сасă *ш* сасса е *ҫ* сасса куҫать, ҫырура ăна морфологи принципĕпе ҫырма йышăннă: *ырашсăр, пĕлĕшсĕр, канăҫсăр, тивĕҫсĕр* (*ырашшăр, пĕлĕшшĕр, каннăҫҫăр, тивĕҫҫĕр мар*).

Букварĕн малтанхи кăларăмĕсенче ҫакнашкал пулăмсене И.Я. Яковлев фонетика принципне пăхăнса палăртнă: *каяшшăн, килĕшше.* Букварĕн каярахри кăларăмĕсенче вара И.Я. Яковлев хупă сасăсен пĕрпекленĕвне ҫырура палăртасшăн пулманни сисĕнет, чылай чухне морфологи принципне пăхăнтарса ҫырать: *тăратпăр, ларатпăр, вулатпăр, ҫӳретпĕр. Сана тавлашса ҫĕнтереймĕн (1900:37). Айăпласшăн кăшкăрса пăрахса калать (1900:37). Нимĕн тăва пĕлместпĕр (1900:24). Акар йытти ашса пырать (1900:27).*

Паллах, морфологи принципĕ кунта сăмахăн тытăмне вулаканшăн ăнланулларах тăвать. Анчах та букварĕн каярахри кăларăмĕсенче те ку принципа пăхăнман, фонетика принципне пăхăнса пичетленĕ вырăнсем те тĕл пулкалаҫҫĕ. Сăмахра икĕ уҫă сасă хушшинче тата ялан янăракан хупă сасăпа уҫă сасă хушшинче хупă сасăсем янăравлăрах илтĕннине И.Я. Яковлев лайăх пĕлнĕ. Ҫак фонетика условийĕпе ҫыхăннă ҫурма янăравлăха вăл уйрăм палăртасшăн пулман (*лаша, пукан, хисеп, калта, куршанкă*). Кунта **б, г, д, ж, з** саспаллисем урлă кăтартни чăваш чĕлхишĕн вырăнлă маррипе ĕнтĕ И.Я. Яковлев вăл саспаллисене букварĕн иккĕмĕш кăларăмĕнчех пăрахăҫланă.

Морфемăсене туллин тата кĕскен калама май пуррине пăхсан, И.Я Яковлев кĕнекисенче сăмахсене ытларах морфологи принципне пăхăнтарас туртăма асăр-

хатпăр. Акă сăмах тытăмĕнчи морфемăсене, вĕсем пуплевре кĕскелеççĕ пулин те, çырура туллин палăртма тăрăшнине кăтăртакан таблица. Танлаштарăр:

| И.Я. Яковлев кăларнă кĕнекесенче | Пуплевре |
| --- | --- |
| пурăнăç | пурнăç |
| тавăрăннă *(Бук., 1900, 42)* | Таврăннă |
| *вырăнаç (Бук., 1900, 79)* | *вырнаç* |
| *шăнкăрчăсем (Бук., 1900)* | *Шăнкăрчсем* |
| *ниăçта (Бук., 33)* | *ниçта* |
| *тепĕринпе (Бук., 34)* | *Тепринпе* |
| *пулăçăпа (Бук., 1900, 34)* | *пулăçпа* |

Морфемăсене тулли формăпа çырас туртăм пысăк пулнă пулин те, кĕске формăсене пĕтерейменн: *шултра, аптранă (39), пит (сахал) (41), нӳр (çапнă) (34).* Уйрăмах «Сказки и предания чуваш» кĕнекере ансăр формăсем йышлă тĕл пулаççĕ.

Анчах пĕр букварьтех иккĕлле çырнине те асăрхама пулать: пĕр сăмахах пĕр çĕрте морфологи принципне, тепĕр çĕрте фонетика принципне пăхăнтарса çырнă. Танлаштарăр:

1. *Ачасем, вĕренекен ача класра мĕн-мĕн тăвать. (1900, 112) – Вĕренекен ача класра каласа парать (113).*

*2. Пĕрре мана тырă вырнă вăхăтра чĕпĕ сыхлама хăварчĕç. Ун чух чĕпĕсем тухни виççĕмĕш кун анчахчĕ (44). – Пĕр чĕп амăшĕ чĕпсем кăларнă (37).*

Сăмахсенчи пĕлтерĕшлĕ пайсене çырнă чухне И.Я. Яковлев фонетика принципĕпе морфологи принципне те шута илнĕ. Анчах та И.Я. Яковлев ку принципсене мĕнле кирлĕ апла ылмаштарман, кашнинчех ку е тепĕр принципĕ вырăнлăрах, усăллăрах пулнине мала хунă.

Сăмахсене пĕрле, дефис урлă е уйрăм çырас проблема паянхи орфографишĕн те чи йывăрри тата тавлашулли шутланать.

Ку тĕлĕшрен И.Я. Яковлев хăйĕн букварĕн малтанхи кăларăмĕнчех тĕрĕс позици йышăннă: пĕлтерĕшлĕ

кашни сăмахах уйрăм çырнă. Чăнах та ĕнтĕ, сăмахсене уйăрса çырни питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен пуплев сăмахсем çине пайланать: сăмах хыççăн пĕчĕк пауза тăватпăр; сăмахăн, ялан тенĕ пекех, ударени пур. Сăмахсене пĕр-пĕринчен уйăрмасăр вуласа кайни текста ăнланма йывăрлатать, мĕншĕн тесен сăмахсене пĕрлештерсе вуланă чух юнашар тăракан сасăсем пĕр-пĕрне витĕм кӳреççĕ: янăрама тивĕçлĕ мар хупă сасăсемех янăравлăн илтĕнме, çемçен илтĕнме кирлĕ мар хупă сасăсем çемçен илтĕнме пуçлаççĕ. Вара сăмахăн пĕлтерĕшне те пĕрре вуланипех ăнланса илме йывăр.

Анчах хăшпĕр сăмахсем пĕр-пĕринпе таччăн пĕрлешсех каяççĕ. Уйрăмах сăмахсен хушшинчи çыхăну пĕлтерĕшĕ пĕтсе ларсан тата сăмахсен çыхăнăвĕ палăракан пулăм е япала хăйĕн функцине улăштарсан, сăмах майлашăвне кĕрекен сăмахсене уйăрса каласси пĕтсе ларать, вĕсем пĕр-пĕринпе пĕрлешсе каяççĕ. Чылай чухне хăйсен функцине улăштарсан, сăмах майлашăвне кĕрекен сăмахсене уйăрса каласси пĕтсе ларать, вĕсем пĕрлешсе каяççĕ, чылай чухне хăйсен фонетика сăн-сăпатне те çухатаççĕ. Паллах, кун пек сăмах майлашăвĕсене пĕр сăмаха (пĕр çыпçăнчăка) тухса кайнă темелле. Ун пек сăмахсене И.Я. Яковлев кĕнекисенче пĕрле çырнă. Акă букварьте *алсиш* тенине те, *алшиш* тенине те (144) тĕл пулатпăр. Паллах, вĕсем *алса ăшĕ* текен сăмах майлашăвĕнчен пулса кайнă: унăн пĕлтерĕшĕ алса ăшне хумалли (çăмран çыхнă) япала тенине кăтартать. Анчах çав япалан пурнăçри функцийĕ улшăннине пула – ытларах алсисĕрех тăхăнса çӳренине пула – ку сăмах майлашăвĕн тĕп пĕлтерĕшĕ майĕпен çухалса пынă – вара фонетика тĕлĕшĕнчен улшăнса, хутлă ăнлавран хутсăр ăнлава кăтартакан сăмах пулса тăнă. Кун пек тĕслĕхсене кĕнекерен татах илсе кăтартма пулать: *арçын, тумтир* (39)*, кĕркунне* (50)*, чĕркуççи* (54)*, анкарти* (54)*, асанне* (55)*, асатте* (58). Вĕсене çырнă чухне пĕрре те иккĕленсе тăман: И.Я. Яковлев пурне те фонетика принципне пăхăнса çырнă, сăмах хăй вăхăтĕнче мĕнле сăмахсемпе пĕрлешсе кайнипе пулнине пăхса тăман.

Анчах та пăхăнуллă çыхăнура тăракан сăмахсен майлашăвĕнчи компонентсен лексика пĕлтерĕшĕсем те, фонетика сăн-сăпачĕ тата çав компонентсен хушшинчи çыхăну пĕлтерĕшĕ те упранса тăраççĕ пулсан, вăл сăмах майлашăвĕсене И.Я. Яковлев пĕрле çырасшăн пулман: вĕсене, ялан тенĕ пекех, е уйрăм çырнă, е дефис урлă çырнă. Час-часах апла та, капла та çырнине курма пулать. Акă, халĕ *хĕрача* сăмах майлашăвне эпир пĕрле çыратпăр, И.Я. Яковлев букварĕнче – е дефис урлă çырнă (129), е уйрăм (182); пĕрле çырнине ниçта та тĕл пулмастпăр, çак страницăрах *арçын ача* сăмах майлашăвне дефиспа пичетленĕ. 1900 çулти букварьтен илнĕ ытти тĕслĕхсем:

*услан-кайăк шыв ĕçет (125), ăмăрт кайăк ярăнса аннă (42); хура-курак (18), ула курак (37); çĕнĕ-çын (30), хура тулă (155), вĕçен кайăк (205); çĕр улми (146), çĕр çырли, хурăн çырли (187), иçĕм-çырли (28); кил-ăшчикки (41), кил-карти (46,51); сар-çупа услам-çу (199); пир-тăла, çăм-тăла (144); вăрăм-туна (19, 36); çап йывăççи (154, 203); çăм атă сăран атăран çăмăл та çемçе (12), çăм-атă, кĕççе-атă (142); суха пуçĕ, ака пуçĕ (153); сухапуçĕ (203), суха-пуçĕ (63); ват-супнă, ват супнă (40); йĕке-хӳре пĕр çăмарта тунă тет (32); мĕн тăвас йĕке-хӳресен. (32); сăвап-сунан, сăвап сунсан (56); ал-шăлли (42), çара-уран (41), ăш-çунтармăш (45), виçĕм-кун (54), мун-кун (63), тунти-кун, ытлари-кун, юн-кун (199) т.ыт.те.*

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, И.Я. Яковлев çакнашкал конструкцисене хутлă сăмахсем тесе шутланă имĕш. Пĕр енчен, кун пек конструкцисене вăл вăхăтра никам та хутлă сăмах темен. Хутлă сăмах ыйтăвне чăваш чĕлхи наукинче Тимухха Хĕветĕрĕ 20-мĕш çулсенче хăйĕн «Чăваш чĕлхийĕн крамматĕкĕ» кĕнекинче хускатнă. Мĕншĕн И.Я. Яковлев пĕр конструкциех икĕ е виçĕ майлă çырнă-ха. Дефис лартса уйăрнин сăлтавĕ мĕнре-ши?

И.П. Павлов шучĕпе, сăмах майлашăвĕнчи компонентсене дефиспа уйăрни (пĕрле çырманни) вĕсен лексика пĕлтерĕшĕ тата фонетикăпа морфологи сăн-сăпачĕ

улшӑнманнинчен килнӗ. Пӗрле ҫырнӑ сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем тӗксӗмленнине, орфографие пула вулав ӗҫӗ йывӑрланнине И.Я. Яковлев лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ кунашкал конструкцисене вӑл пӗрле ҫырасшӑн пулнӑ.

*Мӑшӑрӑн каланӑ сӑмахсене* ҫырассинче букварӗн малтанхи кӑларӑмӗсенче пӗрпеклӗх пулман. Акӑ, 1880 ҫулта тухнӑ кӗнекере *атте-анне* мӑшӑр сӑмах компоненчӗсене пӗр-пӗринчен запятойпа уйӑрнӑ: *Манӑн атте, аннесене ҫӑл (41); аҫу, аннӳ пиллӗхне... (30). Ача-пӑча* мӑшӑр сӑмахра нимӗн паллӑ та лартман, *тарҫӑ-тӗрҫӗ* сӑмахра дефис лартнӑ: *Ача пӑчана шанакан хӑрах куҫлӑ пулнӑ тет, тарҫа-тӗрҫе (!) шанакан сӗм суккӑрах пулнӑ тет (7, 8).*

Каярахри кӑларӑмсенче мӑшӑр конструкцисене ялан тенӗ пекех дефис лартса ҫырнӑ. Апла пулсан, ку йӗрке И.Я. Яковлев вӑхӑтӗнчех йӗркеленсе ҫитнӗ темелле. Акӑ, 1900 ҫулта тухнӑ кӗнекере: *атте-анне, ывӑл-хӗр, ача-пӑча, кил-йыш, йыт-качка, савӑт-сапа, кил-ҫурт* т.ыт.те.

Кунта пӗр уйрӑмлӑха палӑртса хӑвармалла: *хӗр* тата *арӑм* сӑмахсен ҫыхӑнӑвне И.Я. Яковлев букварӗн пур кӑларӑмӗсенче те яланах дефис урлӑ пичетленӗ: 1880 ҫулта 39 стр., 1886 ҫулта 76 стр., 1897 ҫулта 19 стр., 1900 ҫулта 20, 129 стр. пӑхӑр. Халь усӑ куракан орфографи тӑрӑх, *хӗрарӑм* сӑмаха пӗрле ҫыраҫҫӗ, *хӗр ача* сӑмаха – уйрӑм.

Ик хут каланипе пулнӑ формӑсене ҫырнӑ ҫӗрте букварӗн малтанхи кӑларӑмӗсенче те, кайранхисенче те пӗрлӗх пулман. Компонентсене уйрӑм (пӗр палӑртмасӑр) ҫырни те, запятой е дефис лартса ҫырни те кашни кӑларӑмрах тӗл пулаҫҫӗ, сайрара пӗрре пӗрле ҫырни те пур. Тӗслӗхсем:

**1880 ҫулта:** *тӑнланӑ, тӑнланӑ та ҫывӑрнӑ (6), чавӑп, чавӑп кӑларӑп (17); Тилли… кула, кула ҫисе выртнӑ (28); чупса, чупса пынӑ чух… (12). Эпир пӗр-пӗрӗмӗре савса пурӑнсан,… (32).*

**1886 ҫулта:** *Эпир тыр вырнӑ вӑхӑтра эрни-эрнипе хирте пурӑнатпӑр (11); йӑлтӑр, йӑлтӑр тӑвать (19); асапланкаларӗ асапланкаларӗ тет, ниепле тухаймарӗ тет*

*(21); урам хушшинчи çырмасем чăл-чăл-чăл юхса выртаççĕ (23); пĕтĕм кĕтӳне пăва-пăва тухрĕ тет (25); вĕçтерсе çӳресен-çӳресен пирĕн çерçи çатан çине пырса ларчĕ (29); халь ĕнтĕ епле те пулин кайăп-кайăпах (38).*

**1894 çулта:** *Йĕре-йĕре ĕçлекен кула-кула çиет, тет (10); чупрăм, чупрăм çитеймерĕм (12); пĕр-пĕр çын сана хур тусассăн (13).*

**1900 çулта:** *Хăмла аврисем явăна, явăна çӳле çитичченех улăхрĕç, хăмлисем алса пӳрнески пек усăна, усăна тăра пуçларĕç (24); чупса-чупса пынă чух... (24); пĕтĕм кĕтӳне пăва пăва пăрахрĕ тет (29); шăнкăр, шăнкăр шыв юхать (34); ... тăп-тăп савса ачашлакаланă... (62); пĕр пĕрне пулăшса... (48); пĕр пĕр çын (67).* Икĕ хут калакан формăсене пĕрешкел çырасси Октябрь революцийĕ хыççăн тин йĕркене çитет.

Сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефис урлă çырас ыйту икĕ е темиçе сăмахран тăракан хисеп ячĕсене те пырса тивет. 11-19, 80-90, 200-700 тата ытти кăтартакан хисеп ячĕсене И.Я. Яковлев кĕнекисенче пĕрле çырни те, дефис урлă çырни те тĕл пулать: *Вуниккĕн авăн çапма лайăх (1900 ç., 15), Вун-иккĕпе тунă çăпата (59), сакăр-вунă çулхи старик (51), мăн асатте хуранне çĕр-аллă çын йăтаймасть (58).* Хальхи орфографи правилисем тăрăх, *çĕр аллă* хисеп ячĕсĕр пуçне, çӳлĕрех кăтартнă хисепсен ячĕсене пĕрле, ыттисене уйрăм çырма йышăннă.

Традици (истори) принципĕ хушнă тăрăх, хальхи чĕлхери сăмахсене, вĕсем фонетика е морфологи тĕлĕшĕнчен нумай улшăнса кайнă пулсан, ĕлĕкхи пекех çыраççĕ, вуласса вара – çĕнĕлле вулаççĕ. Тĕслĕхрен, акăлчансем çырулăхĕнче традици принципĕнчен хăтăлаймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен орфографийĕнче традици принципне улăштарни авалхи çырулăха пĕлме хытă чăрмантарнă пулĕччĕ.

И.П. Павлов тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, чăваш çырулăхĕнче орфографин нимĕнле традици принципĕ те пулма пултараймасть. Пĕр енчен, хальхи чĕлхере хисеп ячĕсене И.Я. Яковлев вăхăтĕнчи пекех калаççĕ, вĕсенче пĕр улшăну та палăрмасть. Тепĕр енчен, хальхи орфографи хисеп ячĕсене И.Я. Яковлев пек çырма хуш-

масть. Апла пулсан, орфографи историйĕнчи 30-40 çул традици принципĕ çуратма пултарĕ-ши. Тĕрĕссипе илсен, кунта чăваш чĕлхин хисеп ячĕсене вырăс чĕлхинчи хисеп ячĕсемпе пĕрешкел çырма тăрăшни çеç калаçу пултарать. Вырăс чĕлхинче 12-19, 80-90, 200-900 хисеп ячĕсене фонетика принципне пăхăнтарса çыраççĕ. Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен *двенадцать* сăмахри *две* тата *десять* хушшинчи çыхăну пĕлтерĕшĕ те, теçетке ячĕн фонетика сăн-сăпачĕ те улшăнса кайнă. Ытти хисеп ячĕсенче те çакăн евĕрлĕ пулăмах куратпăр. Чăваш чĕлхинче вара – асăнса тухнă хисепсен ячĕсенче нимĕнле фонетика улшăнăвĕ те палăрмасть. Темиçе сăмахран тăракан хисеп ячĕсене морфологи принципне пăхăнтарса çырнă пулсан, хисеп ячĕсене çырассинче нимĕнле йывăрлăх та пулман пулĕччĕ.

Сăмахсене пысăкран е пĕчĕкрен пуçласа çырасси, пĕлетпĕр ĕнтĕ, идеографи принципĕпе çыхăннă. И.Я. Яковлев тексчĕсенче чĕлхе спецификине кăтартакан паллăсем çук. Вырăс кĕнекисенчи пекех çырнă. Точка хыççăн сăмахсене яланах пысăк сас паллинчен пуçласа çырнă. Анчах ыйту палли тата кăшкăру палли хыççăн тăракан предложенисене час-часах пĕчĕкрен пуçласа çырнине куратпăр: *Кульльи, çӳçне чипер пуçтарса çыхсам ачам! ав, аппу епле тирпейлĕ çӳрет (1900, 21). Мĕн пăхатăн тата атя, хуçа сана та пирĕн пекех тăрантрĕ (33).*

Кавычкăра илнĕ урăх çын сăмахĕ автор сăмахĕсен варринче тăрать пулсан, урăх çын сăмахне пĕчĕкрен пуçласа çырнă: *Михаларан пушшине туртса илчĕ те хăйне çаптара пуçларĕ, – «ан тив çынна! ан тив çынна! ак сана!» терĕ (27). Кашкăр куран пекки туса çынсене – «килĕр кунта! кашкăр пур, кашкă-ă-ăр!» тесе кăшкăра пуçларĕ тет (28).*

Пайăр ятсене И.Я. Яковлев яланах пысăк саспаллинчен пуçласа çырнă. Çавнашкалах Турă кульчĕпе çырнă сăмахсене те вăл вăхăтра пысăкран пуçласа çыртарнă: *эй чĕрĕлĕх паракан Турă Ывăлĕ, Сана кирек хăçан та… (70).*

Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне И.Я.Яковлев орфографийĕнче фонетика принципĕ

пуҫ пулса тăнă. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене вĕсем сыпăксем ҫине пайланнине кура куҫарнă. Акă, 1900 ҫулта тухнă букварьтен илнĕ хăш-пĕр тĕслĕхсем: *каҫ-серен (51), ҫу-накан (55), ҫи-екен (67), пă-хăнтарса (67), ҫӳлел-ле (38), пулмал-ла (45), шар-тах сикет (38).*

Маларах кăларнă букварьсенче фонетика принципĕ ҫакăн пекех ҫирĕп принцип пулман. 1880 ҫулта тухнă букварьте фонетика принципне пăхăнмасăр куҫарса ҫырнисем те тĕл пулаççĕ: *сы-хлама (31), сăма-хпа (41).*

Пĕтĕмĕшле илсен, ҫапла калама пулать: ҫырулăх аталаннă май орфографи те пĕр вырăнта тăман. Ăна ҫĕнĕ правилăсемпе пуянлатса, лайăхлатса пынă. Нумай ыйтăва кулленхи ĕҫпе татса панă. Алҫырусене пичете парична тĕплĕн сӳтсе явнă. Ҫак ĕҫе тĕрлĕ диалектпа калаҫакан ҫынсене хутшăнтарнă. Ҫакăн пек сӳтсе явусене Н.И. Ашмарин ҫапла аса илет: «Кунта нумай тавлашатчĕҫ, ҫак тавлашусене вуншар ҫын хутшăнатчĕ, тавлашсан-тавлашсан, ку е вăл текста йышăнатчĕҫ».

И.Я. Яковлевăн графики пур енчен йĕркеленсе, пиҫсе ҫитнĕ пулсан, унăн орфографийĕ пĕтĕмпех вырăна ларса ҫитеймен-ха. Каларăмăр ĕнтĕ, маларах та, ҫырулăх пуҫламăшĕнчех чĕлхери пур пулăмсене те шута илсе ҫитерме тата орфографи правилисем йĕркелеме май килмен. Орфографи словарĕсем пичетлесе кăларасси пирки сăмах та пулма пултарайман. Апла пулин те, вăл кăларнă кĕнекесен орфографийĕ, тĕпрен илсен, ҫирĕп никĕс ҫине ларса пынă. И.Я. Яковлев хатĕрленĕ букварьсенчи ҫырулăх орфографийĕ виҫĕ принципран: фонетика, морфологи тата истори традицийĕсенчен тăрать, тесе ҫирĕплетме пултаратпăр.

### 5.6. И.Я. Яковлева ҫырулăх тума пулăшакансем

И.Я. Яковлев хăйне ҫырулăх йĕркелесе яма пулăшнă В.А. Белилин, С.Н. Тимрясов, А.В. Рекеев, И.И. Иванов, Т.П. Петров ҫинчен чылай ҫĕрте ырăпа асăнать. Камсем пулнă-ха вĕсем – чăваш халăхĕн культурине ҫĕклессишĕн пĕтĕм чун-хавалĕпе тăрăшса ĕҫленĕ ҫак ҫынсем?

Василий Алексеевич Белилин 1852 çулта Хусанта мещен çемйинче çуралнă. 1869 çулта Хусан университечĕн историпе филологи факультечĕн арабпа тутар чĕлхисен уйрăмне вĕренме кĕнĕ. 1874 çулта университетран вĕренсе тухнă. Унтан 33 çул хушши (1874-1917) Хусанти гимназисенче чĕлхепе литература вĕрентнĕ, 11 çул (1907-1918) Хусанти 2-мĕш реальнăй училище директорĕнче ĕçленĕ. 1918 çулта ăна Хусанти Советски районĕнчи икĕ сыпăклă шкула ĕçлеме куçарнă. Шкулта ĕçленĕ хушăрах вăл 1920-1921 çулсенче рабпрос аппаратĕнче ĕçленĕ. 1923 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕнче, 71 çула çитсен, пенсие тухнă. В.А. Белилин 1932 çулта, 80 çул тултарсан, Хусанта вилнĕ.

Выçлăх çул, 1922 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче, Чăваш область ĕçтăвкомĕн ларăвĕнче В.А. Белилина апатçимĕç тĕлĕшпе пулăшасси çинчен ыйту сӳтсе явнă, ăна 20 пăт çăнăх парса пулăшнă.

Çĕнĕ чăваш çырулăхне тума хастар хутшăннăшăн тата çуралнăранпа 80 çул çитнĕ ятпа 1932 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче Совет правительстви (ВЦИК) В.А. Белилина «Ĕç геройĕн» хисеплĕ ятне панă.

Сергей Николаевич Тимрясов 1851 çулта хальхи Тутар Республикинчи Чистай районне кĕрекен Ишел ялĕнче тĕне кĕмен чăваш хресченĕсен çемйинче çуралнă. Малтанах вăл Ишел ялĕнче тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕнче вĕреннĕ. Унтан ăна Н.И. Ильминский ыйтнипе Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулне вĕренме илнĕ. Кунта вăл 1872 çулхи январьччен пурăнать. И.Я. Яковлева çĕнĕ çырулăх йĕркелес ĕçре хастар пулăшать. Тутарсем хушшинче çуралса ӳснĕрен вăл ачаранпах тутарла лайăх пĕлнĕ, çакă вара ăна тутарла çырнă тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса кăларма май парать. 1871 çул пуçламăшĕнче С.Н. Тимрясов Иван Яковлевичпа тата В.А. Белилинпа пĕрле чăваш чĕлхинчи сасăсене вырăспа тутар чĕлхисенчи сасăсемпе танлаштарса тĕпчеме тытăннă. Тĕпчев ĕçĕ çăмăлах пулман. Çак ĕçе вĕсем диктантсенчен пуçланă. С.Н. Тимрясов тутарларан куçарса чăвашла вуланă текстсене В.А. Белилин вырăс алфавитĕнчи сас паллисемпе чăвашла

çырса пынă. И.Я.Яковлев сĕннипе 1872 çулхи кăрлачран пуçласа çу уйăхĕччен С.Н. Тимрясов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче учительте ĕçлесе пăхать. 1872 çулхи утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче С.Н. Тимрясов пуçламăш шкул учителĕн ятне илме экзамен тытнă, ку тĕлĕшпе ăна Н.И. Ильминский нумай пулăшнă. Халăх учителĕн ятне илнĕ С.Н. Тимрясова хăй çуралса ӳснĕ Чистай уесĕнчи Ишел ялне тĕне кĕнĕ тутарпа чăваш ачисене вĕрентме янă.

1874-1877 çулсенче С.Н.Тимрясов Хусанти Н.И. Ильминский ертсе пынă учительсен семинарийĕнче пĕлӳ пухнă, çакăн хыççăн И.Я. Яковлев ыйтнипе ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулне ĕçлеме янă. Кунта вăл виçĕ çул хушши (1877-1880) ĕçленĕ, И.Я. Яковлева тĕн кĕнекисем куçарма пулăшнă. 1880-1883 çулсенче С.Н. Тимрясов – Чистай уесĕнчи Сунчелейри чăваш шкулĕн учителĕ, кунтах вăл Н.М. Охотниковпа çывăх паллашнă. 1885-1886 çулсенче çав уесрах Кивĕ Мокшина ялĕнче чăваш ачисене хутла вĕрентнĕ. С.Н. Тимрясов хăйĕн юлашки çулĕсене Чистай уесĕнчи Чăваш Шупашкарĕ ялĕнчи шкулта ĕçлесе ирттернĕ. 1910 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче, 58 çул тултарсан, çĕре кĕнĕ.

С.Н. Тимрясов пултаруллă вĕрентекен пулнă. Ун пирки архив материалĕсемпе тĕрлĕ шкул отчечĕсенче чылайăшĕ ăшă сăмах каласа çырнă. Акă «Годичное собрание братства святителя Гурия» журналăн 1874 çулхи кăларăмĕнче çакăн пек йĕркесем пур: «Тимрясов обладает природным мягким характером, с любовью и ревностно исполняет свою учительскую обязанность и таким образом вполне оправдывает доверие к нему братства и заслуживает любовь, как от своих питомцев, так и от лиц, наблюдающих за самим Тимрясовым». С.Н. Тимрясов пултаруллă учитель пулни çинчен И.Я. Яковлев Хусан кĕпĕрнинчи Чистай уесĕнчи халăх училищисен инспекторĕ патне çапла çырнă: «При этом считаю долгом присовокупить, что Тимрясов состоял учителем в Симбирской чувашской школе с 1 августа 1877 года по 1880 год и все время был усерден к исполнению своей обязанности, отличного поведения».

С.Н. Тимрясов хӑй вӑхӑтӗнче чӑваш халӑх этнографийӗпе те интересленнӗ. 1875 ҫулта «Известия по Казанской епархии» журналӑн 9-мӗш номерӗнче унӑн «Похороны и поминки чуваш-язычников в дер. Ишалькиной Чистопольского уезда» ятлӑ статйи пичетленсе тухнӑ. С.Н. Тимрясов мӗн виличченех хӑйӗн аслӑ вӗрентекенӗпе И.Я. Яковлевпа ҫыхӑну тытнӑ.

Алексей Васильевич Рекеев – И.Я. Яковлевӑн пӗрремӗш вӗренекенӗ, чи ҫывӑх пулӑшаканӗсенчен пӗри. Вӑл 1848 ҫулта Кӑнна Кушкинче удельни хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. 1869-1872 ҫулсенче И.Я. Яковлев пулӑшнипе Чӗмпӗрти хула училищинче вӗреннӗ. 1872 ҫулта И.Я. Яковлев Хусан университетӗнче вӗреннӗ ҫулсенче вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ачасене вӗрентнӗ, И.Н. Ульяновпа туслӑ пулнӑ. Ҫӗнӗ чӑваш ҫырулӑхне тунӑ тапхӑрта А.В. Рекеев Тимӗрҫенти (халӗ Ульяновск облаҫӗнчи Чӑнлӑ районне кӗрет) чӑваш шкулӗнче вӗрентнӗ, малтанхи букварьсен пахалӑхне сӑнаса тӗрӗсленӗ. 1874-1881 ҫулсенче вӑл Хусанти Н.И. Ильминский ертсе пынӑ учительсен семинарийӗнче чӑваш ачисене вӗрентсе пурӑннӑ. 1881 ҫулта А.В. Рекеев Теччӗ уесӗнчи Кивӗ Эйпеҫ (халӗ Чӑваш Республикинчи Елчӗк районӗ) ялӗнчи шкулта вӗрентме тытӑнать. Пӗр вӑхӑтрах чиркӳ ӗҫне йӗркелесе ертсе пырать. Кунта вӑл пӗр улшӑнмасӑр 30 ҫул хушши, пенсие тухиччене, ӗҫлет. А.В. Рекеев ӗмӗрӗ тӑршшӗпех И.Я. Яковлевпа пӗрле чӑваш халӑх культурине ӳстерессишӗн ӗҫлесе пурӑннӑ. Вӗсем хушшинчи туслӑ та ӗҫлӗ ҫыхӑнусен пӗлтерӗшӗ чӑваш ҫырулӑхӗн историйӗнче питех те пысӑк.

Игнатий Иванович Иванов 1848 ҫулта хальхи Тутар Республикинчи Теччӗ районне кӗрекен Кӑнна Кушки ялӗнче удельни хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. 1856 ҫулта вӑл И.Я. Яковлевпа пӗрле Пӑрӑнтӑкри удельни шкулне вӗренме кӗнӗ, унтан Чӗмпӗрти ҫӗр виҫекенсен шкулӗнче вӗреннӗ, анчах ашшӗ ӳкӗтленипе унӑн вӗренме пӑрахса яла таврӑнма тивнӗ. Вара 1870 ҫулччен кунта хресчен ӗҫӗпе пурӑннӑ. 1870 ҫулта И.Я. Яковлев чӗннипе Хусанта Н.И. Ильминиский уҫнӑ шкул ӗҫ-хӗлӗпе паллашать, учитель пулма

хатĕрленет. 1871-1875 çулсенче тăван ялĕнчи шкулта ĕçлесе пурăнать. 1876 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире учитель ятне илме экзамен тытнă хыççăн Теччĕ уесĕнче тĕрлĕ шкулсенче учительте ĕçлет.

Тăван ялта ĕçленĕ вăхăтрах И.И. Иванов халăх пурнăçĕнчен илнĕ темăсемпе йăла калавĕсем çырма тытăннă, пурĕ 14 калав çырнă. Вĕсенче вăл халăх пурнăçĕнчи, йăли-йĕркинчи çитменлĕхсене питлет.

Пăва уесĕнчи Пимĕрсел ялĕнчи Т.П. Петров учитель те çĕнĕ çырулăх тăвакансене хастар пулăшнă: укçа-тенкĕ парса тăнă, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухнă, тимлĕ информатор пулнă. 1873 çулхи юпа уйăхĕнче Н.И. Ильминскипе И.Я. Яковлев пулăшнипе вăл халăх училищисен учителĕн ятне илме экзамен ăнăçлă тытнă.  И.Я. Яковлев 1873 çулхи юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче А.В. Рекеев патне янă çырăвĕнче Т.П. Петров çинчен çапла çырнă: «Ĕнтĕ пирĕн инçетри чăвашсемшĕн тăрăшакан тепĕр çын пулчĕ. Тимофей Петрович чăвашла вĕрентме пит ăстах пулмасан та, вăл хамăр çын, кирлĕ пулсан ун патне чăвашла авантарах пĕлекен ача яма та юрать».

Т.П. Петров учителĕн ĕмĕрĕ вăрăм пулман, вăл 1875 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче хальхи Самар облаçĕнчи Чаллăпуç районне кĕрекен Тилечер ялĕнче çĕре кĕнĕ.

Юлашкинчен çапла пĕтĕмлетсе калăпăр: çĕнĕ чăваш çырулăхĕн сăпки умĕнче чĕлхе наукине ăста пĕлекен хастар çынсен ушкăнĕ тăнă. Çĕнĕ чăваш çырулăхне тăвас шухăш чи малтан Н.И. Ильминский пуçĕнче çуралнă, çав идейăна пурнăçлама ăна И.Я. Яковлев пек çивĕч ăслă, пултаруллă çамрăк кирлĕ пулнă. Ку вара пĕтĕм ĕçе йĕркелесе ертсе пынă. Уншăн вăл хăйĕн вĕренӳ вăхăтне те, укçи-тенкине те хĕрхенмен. И.Я. Яковлева çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçре унăн çывăх юлташĕсем В.А. Белилин, С.Н. Тимрясов тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи малтанхи вĕренекенĕсем, А.В. Рекеев, И.И. Иванов тата Т.П. Петров хастар

пулăшса тăнă. Çавăншăн чăваш халăхĕ вĕсене ĕмĕрех асра тытĕ.

## 5.7. Çĕнĕ çырулăхăн пĕлтерĕшĕ

И.Я. Яковлев – чăваш культурине пуçарса яраканĕ, чăваш культурин аслашшĕ. Вăл чăваш алфавичĕн çырулăхне туса, халăха çутта кăларас ĕçе сарса янă, чăваш интеллигенцине вĕрентсе çитĕнтернĕ, литература чĕлхине йĕркеленĕ, кĕнекесем кăларас ĕçе аталантарнă, тăван литературăна вăй илме çул уçса панă, наци искусствине çĕкленме пулăшнă.

И.Я. Яковлев çураличченех официаллă пичетре чăвашсен ăс-хакăл пултарулăхне пачах та шута илмен, вĕсене çын шутне хуманннине кăтартса паракан статьясем курăнкаланă. Пĕр-пĕр чиркӳ çынни е чиновник 1829 çулта «Казанский вестник» журналăн пиллĕкмĕш кĕнекинче çапла çырнă: «Чăвашсенчен купца е ученăй çеç мар, пĕр-пĕр алă ăсти те пулман, халĕ те çук, вулама пĕлекен е пĕр-пĕр ют чĕлхене ăнланма пултаракан çын та çук. Вĕсен ăнлавĕ те чи пĕчĕк шайра, шухăшлас пултарулăхĕ пурри те туйăнмасть». 1836 çулта В.П. Вишневскин «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленный для духовных училищ Казанской епархии» текен кĕнеке пичетленсе тухсан Хусан университечĕн профессорĕ Г. Суворов çырнă хаклав та çавнах кăтартса парать: «Çакăн йышши кĕнекесене курсан ирĕксĕрех çапла ыйтас килет: çак чĕлхесен правилисемпе грамматикисене çырма кирлехши? Мĕншĕн тесен ку таранччен çак чĕлхепе нимĕн те çырман, сĕм авалтанпах тĕттĕмлĕхре пăнтăхса пурăнакан тӳрккес те кăнттам йăхсен пысăках мар ушкăнĕсем калаçакан чĕлхене тĕпчени этемлĕх пĕлĕвĕсен пуянлăхĕ çумне нимĕн çĕнни те хушас çук. Çак чĕлхесем хăйне хăйех çухалччăр, пĕтчĕр, вĕсемпе калаçакан йăхсем патшалăхри тĕп халăхпа пĕрлешсе кайччăр тесен вĕсене манса кайни лайăхрах мар-ши? Çармăс, чăваш, ирçе, вотяк, зырян, пермяк тата ытти-сем пек инородецсен чĕлхисене çапла тĕпчеме кирлех-

ши? Вĕсен хӑйсен ҫырулӑхĕ те, аваллӑхпа ҫыхӑннӑ историйĕ те ҫук, этемлĕх историне вĕсем пĕр ӑслӑ шухӑш та хывман, халӑх пурнӑҫĕнче мĕнпе те пулин палӑрса юлас тесе пĕр пархатарлӑ ĕҫ те туман». Пуҫ пулса тӑракан чиновниксем чӑвашсем пек пĕчĕк йышлӑ халӑхсене ҫакӑн пек хакласси XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш ҫулĕсемччен палӑрса тӑнӑ.

1856 ҫулта чӑваш ҫĕр-шывне наука тĕллевĕсемпе килнĕ финн чĕлхеҫи Август Альквист, чӑвашсен ун чухнехи пурнӑҫ йӑли-йĕркисемпе, чĕрĕ калаҫу чĕлхипе паллашнӑ хыҫҫӑн, чӑваш чĕлхин, чӑваш культурин, чӑваш халӑхĕн малашлӑхĕ пирки ҫапла пӑшӑрханса ҫырнӑ: «Чӑваш чĕлхи – ҫепĕҫ кĕвĕллĕ чĕлхе, унӑн пуплев тытӑмĕ питĕ ҫыпӑҫуллӑ та ытарлӑ. Ҫак паха енсем чӑваш чĕлхин шӑпине халичченхинчен телейлĕрех пулма тивĕҫ параҫҫĕ, анчах хальхи шайра тӑрса, вӑл вӑйсӑрлансах пырать е грамматика страницисенче ҫеҫ тытӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа та эпир чӑваш чĕлхин телейлĕ пуласлӑхне шанмастпӑр... Чӑвашсен оригиналлӑ литература пачах та ҫук, чӑвашла сайра-хутра тухкаланӑ кĕнекесем те – вырӑсларан ниме юрӑхсӑр куҫарнӑскерсем... Халӑха вĕрентес ĕҫ те пысӑк йывӑрлӑхра тӑрать, анчах вӑл тин кӑна пуҫланать-ха, ҫитес вӑхӑтра ку ĕҫе ҫине тӑрсах тытӑнас пулсан та, вырӑсла кӑна вĕрентĕҫ. Ку таранччен ҫапла пулнӑ. Юлашкинчен, власть, пуҫлӑхсем, администраци пур. Ку таранччен вĕсем чӑваш чĕлхипе нихӑҫан та усӑ курман, ӳлĕмрен хӑҫан та пулин чӑвашла калаҫас шанчӑк татах та сахал...».

1860-мĕш ҫулсем тĕлне чӑваш ҫĕр-шывĕнче пĕтĕмĕшпе те 46 пуҫламӑш шкул ĕҫленĕ. Унта тӑван чĕлхепе пачах усӑ курман, ҫавӑнпа та йывӑр пулнӑ, вĕренес текенсем те сахал пулнӑ. Тĕттĕм чӑваша пур ҫĕрте те хĕсĕрленĕ, чӑваш чĕлхине ниҫта та картман.

Вырӑс мар халӑхсен патшалӑх тытӑмне туса хурас туртӑмне пуҫĕпех тĕп тӑвасси, вĕсен культурине хӑртасси, чĕлхине хĕсĕрлесси, хӑйсене тĕттĕмлĕхре тытса тӑрасси, юлашкинчен, май килнĕ таран вырӑслантарасси тĕп тĕллев пулнӑ. Тĕрĕссипе, «вырӑслантарас» поли-

тика вак халăхсене вырăсланма мар, вырăс халăхĕнчен пистернĕ кăна.

И.Я. Яковлевăн шухăш-тĕллевĕсем шăпах çак условисенче çирĕпленсе пынă. Унăн шучĕпе, чăваш халăхне тĕттĕмлĕхрен, мĕскĕнлĕхрен, чухăнлăхран хăтарас, вырăс халăхĕпе çумма-çуммăн тăрса аталантарас тесен, чăвашсене чи малтан культура тĕлĕшĕнчен çĕклемелле, вырăс культурипе çывăхлатмалла: вырăс культурипе çывăхлатас тесен, тăван культурăна çĕклемелле, халăха çутта кăлармалла. «Чăваш культурине тăван чĕлхепе, халăх ăнланакан чĕлхепе кăна çĕклеме пулать», – тенĕ вăл. Çак чĕлхе çырулăх чĕлхи пулмалла. Тăван çырулăхсăр кĕнеке кăларас ĕçе ăнăçлă йĕркелеме, халăха çутта кăларассине малалла яма çук. Çакна ăнланса илни Яковлева чăваш чĕлхин çĕнĕ çырулăхне тума хистенĕ. Çак çырулăхран халăха вĕрентес ĕçре те, пичет ĕçĕнче те, литература чĕлхинче те çĕнĕ тапхăр пуçланнă.

Çĕнĕ çырулăх пуçланнă тĕлелле чăвашсем хушшинче çырма-вулама пĕлекенсем 100 çын пуçне те пĕрер-икшер кăна шутланнă, хăш-пĕр уессенче ялĕпе те пĕр çын тупăнман, пурлă-суклă шкулсем те çурма пушă ларнă. 1866 çулта Çĕрпӳ уесĕн земство управи хушнипе ачасене шкула ярас ыйтупа Шăхасанта вулăс пухăвĕ ирттернĕ. Пуху кашни арçын пуçне çулсерен пĕр арçын ача шкула ямалла тесе йышăннă. Халăх шкултан ютшăнни учительсен ĕçри пултарулăхĕнчен те килнĕ. Шкулсенче учитель ĕçне тивĕçлĕ çынсем пăт-пат кăна пулнă. Ытларах педагогика енĕпе нимĕнле пĕлӳ те илмен пуп таврашĕсем, ĕççĕр тăрса юлнă тĕрлĕ чиновниксем, отставкăри унтерсем ĕçленĕ, вĕсенчен ытларахăшĕ вырăс пулнă. Вĕрентессе те вырăс учебникĕсемпе вĕрентнĕ, чăваш чĕлхипе усă курман, çавăнпа вĕренекенсемпе вĕрентекенсем час-часах пĕрпĕрне ăнланман, çапла темиçе çул шкула çӳрени те харама кайнă. Çакă ачасене шкултан пистернĕ, ашшĕ-амăшĕсем те шкул çине шанмасăр пăхнă, шкул уссине ĕненмен.

Чăваш чĕлхин çĕнĕ алфавитне туни, çав алфавитпа çĕнĕ çырулăх пуçарса яни чăваш халăх пурнăçĕнче революцилле утăм туниех пулнă. Вăл халăхăн обществăллă пурнăçĕпе культура аталанăвне хăвăртлатнă. Вăл вăхăтри вырăс обществин малта пыракан интеллигенцийĕ те И.Я. Яковлев тунă çĕнĕ алфавитпа çĕнĕ çырулăх пĕлтерĕшне пысăка хурса хакланă. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторĕ И.Н. Ульянов çак çырулăха чăваш шкулĕсене сарма пулăшнă. 1873 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче Яковлев патне Хусана янă çырăвĕнче вăл çапла çырнă: «Эпĕ ĕнер тата сирĕн пĕчĕк кĕнекĕре илтĕм. Сирĕншĕн, Сирĕн кĕнекĕр пичетленсе тухнишĕн эпĕ питĕ хавас, хам енчен кĕнекĕре чăваш шкулĕсене сарма май пур таран тăрăшăп», – тенĕ. Çырура асăннă «пĕчĕк кĕнеке» 1873 çулта çапăнса тухнă чăваш букварĕ пулнă. Хăйĕн ĕмĕрне чăваш историйĕпе этнографине тĕпчесе ирттернĕ вырăс ученăйĕ В.К. Магницкий те Яковлев ĕçĕсене ырланă, чăваш çырулăхĕ çуралнăшăн хавасланнă. Чĕмпĕр хулинче ĕçленĕ И.В. Вишневский, И.В. Ишерский, А.В. Годнев паллă педагогсем те Яковлев ĕçне пысăка хурса йышăннă.

Хусанти учительсен семинарийĕн директорĕ Н.И. Ильминский профессор И.Я. Яковлева вĕçĕмсĕр хавхалантарса, йывăр вăхăтсенче пулăшса, тăшмансенчен хӳтĕлесе тăнă. «Вырăс саспалийĕсем çумне хушса тунă çĕнĕ паллăсем чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕрĕс те уçăмлă палăртма май параççĕ, опыт çакна кăтартса пачĕ: вулама вĕренекен шкул ачисем çак алфавита çăмăл, хăвăрт тата тĕплĕн ăша хываççĕ», – тесе çырнă вăл.

Правительство таврашĕнчи чиновниксем вырăс алфавитĕнчен кăшт чакнине те чăтма пултарайман. Вĕсен шучĕпе, ку е вăл чĕлхере вырăс алфавитне кăшт улăштарни те вырăс мар халăхсене вырăслантарма чăрмантарать имĕш. Тĕрĕк чĕлхисенче мĕнле транскрипципе усă курассине 1878 çулта Академире тата Питĕрти университетăн чĕлхе факультечĕн Канашĕнче сӳтсе явнă. Кунта та ытларах сасăпа ыйтăва фон. Кауфман майлă татса панă. Тĕрĕк-тутар чĕлхисенчи сасă-

сене вырӑс алфавичӗпех палӑртма пулать, ҫавӑнпа ӑна улӑштарма та, тӳрлетме те, кирлӗ мар, чӑваш, ҫармӑс тата Уралти ытти чӗлхесенче те вырӑс алфавичӗпе ним улӑштармасӑр усӑ курмалла, тенӗ. Анчах Яковлев хӑйӗн алфавитӗнчен чакма шутламан. Унӑн алфавитне хӳтӗлесе, Н.И. Ильминский пысӑк статья ҫырать. Унта вӑл вак халӑхсен чӗлхинчи сасӑсене палӑртма вырӑс алфавитне улӑштарса тӳрлетни вырӑс патшалӑхне нимӗн чухлӗ те сиен кӳменнине кӑтартса панӑ. Анчах Ильминскийпе килӗшекенсем сахалӑн пулнӑ.

Вырӑс духовенстви те ку ыйтупа патша чиновникӗсен ҫулӗпех пынӑ. Чӑваш халӑхӗн хӑйӗн ҫырулӑхӗ пулассинчен сехӗрленсе ӳкнӗ пуп таврашӗсем, уйрӑмах вырӑс пупӗсем, Яковлевӑн алфавитне пачах та йышӑнасшӑн пулман. Яковлева хирӗҫ кӗрешӳ пуҫарса янӑ, ӑслӑ пуҫлӑхсем патне элеклӗ хутсем ҫырма тытӑннӑ, алфавит авторӗ «вырӑс патшалӑхӗшӗн сиенлӗ ӗҫ тӑвать» тесе янӑрашнӑ. Акӑ мӗн ҫырнӑ 1884 ҫулта «Церковно-общественный вестник» журналӑн 8-мӗш номерӗнче пичетленнӗ статьяра: «Яковлев господин чӑвашсене ҫутта кӑларас тӗлӗшпе 1870 ҫултанпа ӗҫлет. Ҫамрӑк ҫын хӗрӳлӗхӗпе ӗҫе тытӑнса, вӑл вырӑс мар халӑхсем тӗлӗшпе тӗрӗс мар ҫул ҫине тӑчӗ. Чӑвашсене ҫутта кӑларас тесе, Яковлев господин чӑваш чӗлхинчен кӗнеке чӗлхи тӑвас тесе тӗллев тытрӗ... Ҫак тӗллев ӑна паллах, алфавит тӑвас шухӑш патне те илсе пычӗ». Статьяра Яковлева: чӑваш чӗлхине ытти литература чӗлхисен йышӗнче «граждан прави» парассишӗн тӑрӑшмалла мар, тесе асӑрхаттарнӑ.

«Мӗскӗн чӑвашсем! Сирӗн кӑмӑл-туйӑма аталантарма аллӑра хӑвӑртрах та ытларах тӗн ҫинчен тата хӑвӑрӑн мӗнле пулмалли ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем тыттарас вырӑнне, ҫак ӗҫе тума пултаракан ҫынсем сирӗн чӗлхе пултарулӑхне аталантарса вӑхӑта сая яраҫҫӗ, сире хӑвӑрӑн фонетика ҫепӗҫлӗхӗпе паллаштарма тӑрӑшаҫҫӗ», тесе – ҫырнӑ Шупашкар уесӗнчи Урхас Кушкӑ пупӗ В.Я. Смелов. Яковлева хӑй ӗҫӗнчен пӑрса яма тӑрӑшса, вӑл ун ҫинчен вун виҫӗ ҫул хушши татти-сыпписӗр ӑхав ҫырнӑ. В. Смеловпа пӗр ҫӑварлӑ пулса, Чикме

уесĕнчи иккĕмĕш округ чиркĕвĕсене пăхса тăракан П. Любимов пуп та çĕнĕ алфавита вилĕм суннă. Яковлев кĕнекисем кĕçех «архив тусанĕ айне» пуласса кĕтнĕ; çĕнĕ çырулăх кĕнекисем, сиенсĕр пуçне, нимĕн те памаççĕ, халăх вĕсене йышăнмасть, вĕсем çынсене «турра хирĕç тăратаççĕ» тесе çухăрашнă.

Аслă держава шовинизмĕн сĕрĕмĕпе анранă чиновниксемпе пупсем çине тăнипе Хусанти куçару комиссийĕ 70-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче чăваш кĕнекисене кивĕ алфавитпа та кăларма йышăннă. Çапла, 1876-1878 çулсенче чăваш кĕнекисем пĕр харăсах Яковлев алфавичĕпе те, кивĕ алфавитпа та пичетленнĕ. Анчах Яковлев кĕнекисем, вырăс алфавичĕпе тухнă кĕнекесемпе танлаштарсан, чылай малта тăнă. Çавăнпа та вĕсене халăх ытларах кăмăлланă. Кăна пупсем асăрхамасăр тăма пултарайман. Сăмахран, Çĕрпӳ уесĕнчи пупсен 1879 çулхи октябрь уйăхĕнче пухăннă съездĕнче Нăрваш пупĕ Н. Богородицкий çапла тухса каланă: «Пилĕк çул каярах пирĕн съезд Яковлев господин куçарнă кĕнекесемпе усă курма йышăннăччĕ, анчах ун чухне съезд çав кĕнекесен орфографине кăмăлламаннине палăртнăччĕ. Яковлев господинăн кавычкăллă-хӳреллĕ сас паллийĕсем унăн кĕнекисене халăхăн юратнă кĕнекисем пулса тăма нимĕн чухлĕ те чăрмантармарĕç; чăвашсем вăл кĕнекесене ытларах та ытларах ыйта пуçларĕç, манăн прихутра кăна вĕсене 200 экземпляр ыйтса илнĕ, çемьере пĕри кăшт та пулин вулама-çырма пĕлет пулсан, çавăн пек чăваш çемйинче кашнинчех Яковлев кĕнекисене курма пулать... Çапла вара Яковлев господинăн халăх валли куçарнă кĕнекисене тата орфографине халăх хăех çав тери пысăка хурса хакларĕ», – тенĕ.

Çĕнĕ алфавита аслă держава шовинизмĕ майлă пупсенчен хӳтĕлесе хăварас, Яковлев ĕçне путарса лартма парас мар тесе, Çĕрпӳ уесĕнчи пупсен съезчĕ çапла йышăннă: «Чăвашсем Яковлев господин орфографийĕпе çăмăллăнах та часах вулама вĕреннине тата нумайăшĕ унпа хăйсем тĕллĕнех усă курма хăнăхнине

шута илсе, чăвашсем валли кăларакан чăвашла кĕнекесене малашне пурне те пĕр улăштармасăр Яковлев орфографийĕпе пичетлеме ыйтас». Çакă вăл Яковлев алфавичĕн авторитечĕ хăвăрт ӳссе пынине, вăл пуçарнă çырулăх халăх хушшине çирĕп тымар янине кăтартнă.

1871 çулта чăваш чĕлхин алфавитне тусан, 1872 çулта И.Я. Яковлев умлă-хыçлăн икĕ букварь пичетлесе кăларнă (1872-1918 çулсенче Яковлев букварĕсем пĕтĕмпе 33 хутчен çапăнса тухнă). Çĕнĕ алфавит хутла вĕрентес ĕçе палăрмаллах çăмăллатнă, Яковлев букварĕсем сас палли кĕнекисем кăна мар, илемлĕ литература хрестоматийĕсем те пулнă. Унта ача-пăча сăввиюррисем, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, пĕчĕк калавсемпе халапсем, кĕске юмахсем пичетленнĕ. Вĕсенче ăса вĕрентсе каланисем пысăк вырăн йышăннă. Урăхла каласан, вĕсем чăвашсен илемлĕ литературине пуçарса яракан кĕнекесем пулнă. Чăвашла букварьсемпе шкулсенче усă курма тытăнни вĕрентӳ ĕçне чĕрĕ сывлăш кĕртнĕ. Ачасем кĕнекене юратса вулама тытăннă, чăнчăн пĕлӳ илме пуçланă. Хăйĕн букварĕсенче И.Я.Яковлев чăваш ачисене тăван чĕлхене хисеплеме вĕрентес шухăша яланах асра тытнă, вĕсене ваттисен темĕн тĕрлĕ çепĕç сăмахĕсене кĕртсе илемлетнĕ, чĕлхе пуянлăхне, янравлăхне, илемне кирек хăш страницăна вуланă чух та туйса тăмалла тунă. Çак майпа вăл ачасене тăван чĕлхене тивĕçлĕн юратса хисеплеме вĕрентет.

Яковлев букварĕсем чăвашла кăларнă пĕртен-пĕр учебник пулман. 1907-1912 çулсенче чăваш шкулĕсенче тăван чĕлхепе вулама «Букварь хыççăн вуламалли кĕнеке» тухнă, вырăсларан А. Барановăн «Книга для классного чтения в начальных школах», И. Михеевăн «Книга для чтения на чувашском языке» (1-мĕшпе 2-мĕш пайсем), Л. Толстойăн «Первая и вторая книги для чтения», «Третья и четвертая книги для чтения» кĕнекисене куçарса кăларнă.

1873 çулта Яковлевăн виççĕмĕш букварĕ – «Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки»

тата «Т'ън тьн' кьнекин» иккĕмĕш кăларăмĕ», «Матфей çырнă евангелiе», «Мън кун кьллисем» тухнă.

Пĕтĕмпе, тулли мар кăтартусем тăрăх, çĕнĕ алфавитпа 1872-1880 çулсенче – 21 кĕнеке, 1881-1890 çулсенче – 37 кĕнеке, 1991-1900 çулсенче – 145 кĕнеке, 1901-1910 çулсенче – 191 кĕнеке, 1911-1917 çулсенче – 184 кĕнеке, пĕтĕмпе 675 кĕнеке пичетленнĕ. Яковлев халăха çутта кăларас, унăн культура шайне çĕклес ĕçре кĕнеке пĕлтерĕшне питĕ пысăка хунă. Çапла майпа И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем чăвашсен литература чĕлхине аталантарас тĕлĕшпе калама çук чаплă ĕçсем туса хăварнă.

Пирĕн шутпа, И.Я. Яковлевпа унăн çывăх юлташĕсем тăрăшнипе тунă çĕнĕ çырулăх пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Вăл пирĕн халăхăн вĕренӳпе культура шайне хăпартма пулăшрĕ, ăна тĕнче культурин аслă çулĕ çине тухма май пачĕ. Вĕсем революцичченхи тапхăртах çырullă тăван культурăна аталантарас тесе, 50 çул хушши (1868-1918) ырми-канми ĕçлесе, (Хусанти куçару комиссийĕпе пĕрле) 700 ытла чăвашла кĕнеке пичетлесе кăларнă, илемлĕ чăваш литература чĕлхине йĕркелеме пултарнă. Вĕсен çак пархатарлă ĕçĕ пирĕн паянхи çырулăхăн, илемлĕ литературăпа искусствăн тата наци шкулĕн çирĕп никĕсĕ пулса тăрать.

### Тĕп литература


1. Егоров В.Г. Роль И.Я.Яковлева в создании чувашского алфавита и чувашской письменности / В.Г. Егоров.– / Учен. зап. ЧНИИ. – Вып. 3. – Чебоксары, 1949. – С. 68-80.

2. Истрин В.А. 1100 лет славянской азбуки / В.А. Истрин. – 2-е изд., пераб. и доп. – М.: Наука, 1988. – 192 с.

3. Каховский В.Ф. Была ли письменность у чувашей в древности / В.Ф. Каховский. – / Учен. зап. ЧНИИ. – Вып. 21. – Чебоксары, 1962. – С. 201-225.

4. Мукина И.В. И.Я.Яковлев çинчен хунă чăн сăмах / И.В. Мукина. – Шупашкар: Руссика, 1998.

5. Мусаев К.М. Алфавиты языков народов СССР / К.М. Мусаев. – М.: Наука, 1965.

6. Петров Н.П. Чăваш çырулăхĕ / Н.П. Петров. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1971.

7. Петров М.П. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев çинчен / М.П. Петров. – Шупашкар: Халăх çутĕç комиссариачĕ, 1928. – 95 с.

8. 100 лет новой чувашской письменности: сб. ст. – Чебоксары: ЧНИИ, 1972. – 208 с.

9. Яковлев И.Я. Учебные книги: в 2 т. / сост. Л.П. Кураков, Н.Г. Краснов, Г.Н. Плечов; предисл. Н.Г. Краснова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. – Т. 1. – 538 с. – Т. 2. – 510.

## Хушма литература

1. Алексеев А.А. И.Я.Яковлев тата ăна çырулăх тума пулăшакансем / А.А. Алексеев. // 100 лет новой чувашской письменности: сб. ст. – Чебоксары: ЧНИИ, 1972. – С. 98-108.

2. Горский С.П. И.Я. Яковлев чăваш литература чĕлхине йĕркелени / С.П. Горский // Ялав, 1968. – 9 №.

3. Комиссаров (Вантер) Г.И. Алфавит историйĕнчен / Г.И. Комиссаров. // Канаш, 1929. – Нарăс, 27-мĕшĕ.

4. Краснов Н.Г. И.Я. Яковлев и его потомки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 352 с.

5. Петров Н.П. Зарождение и развитие чувашской письменности / Н.П.Петров. // 100 лет новой чувашской письменности: сб. ст. – Чебоксары: ЧНИИ, 1972. – С. 77-97.

6. Павлов И.П. И.Я.Яковлев кăларнă кĕнекесен орфографийĕ çинчен / И.П. Павлов // 100 лет новой чувашской письменности: сб. ст. – Чебоксары: ЧНИИ, 1972.– С. 109-120.

7. Правдолюбов В.А. Çыру историйĕ / вырăсларан Г. Комиссаров куçарнă. – Шупашкар, 1927.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăваш халăхне çырулăх йĕркелесе парас пирки И.Я. Яковлев хăçан шухăшлама пуçланă? Çакăн çинчен аса илӳсен “Манăн пурнăç” кĕнекинче 3-мĕш сыпăкра мĕн çырса панă?

2. Чăвашсен çĕнĕ çырулăхне хăçан тата камсем йĕркеленĕ?

3. Çĕнĕ çырулăха мĕнлерех йышăннă? Ăна хирĕç тăнин сăлтавĕсене ăнлантарса парăр.

4. И.Я. Яковлев кăларнă пирвайхи вĕренӳ кĕнекисен графикине танлаштарса тĕпчĕр. Алфавитăн виçĕ варианчĕпе усă курса "Асран кайми аки-сухи" юррăн текстне çырса килĕр.

5. И.Я. Яковлев литература чĕлхинче сăмахсен вырăнне йĕркеленине "Чăваш кĕнекисенче" пичетленнĕ калавсемпе ӳкĕтсен чĕлхипе стильне сăнаса кăтартса парăр.

6. 1904 çулта пичетленннĕ "Малтанхи чăваш кĕнекинче" (80 стр.) ӳкĕтсене вуласа тухăр. Вĕсенчен хăшĕсене эсир ваттисен сăмахĕ вырăнне хурса йышăнма пултаратăр? Çырса илĕр.

7. Çӳлерех асăннă букварьти "Эпир уйăрăлни" калава паянхи орфографи правилисене шута илсе çырса парăр.

## 6 сыпăк
## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ – СĔМ АВАЛХИ ПУРНĂÇ КĔНЕКИСЕН ЧĔЛХИ

### 6.1. Библи чĕлхи тата авалхи куçарусем

"Библия" тени грексен biblia сăмахĕнчен, тĕрĕсрех каласан, нумайлă хисепри ТА BIBLIA сăмахран пулса кайнă, "кĕнекесем" тенине пĕлтерет. XII ĕмĕртен пуçласа çак сăмахпа пĕрреллĕ хисепре çеç усă курма тытăннă. Тепĕр чухне чиркӳçĕсем "библиотека" ятпа та усă курнă е "Дивина библиотека" тенĕ. Чăвашла "Турă çинчен çырнă кĕнекесен пуххи" тени пулать вăл. Мĕншĕн тесен, Библи пĕр кĕнекерен çеç мар, 1500 çул хушшинче 40 яхăн автор çырнă 66 кĕнекерен тăрать. Ăна çыракансем хушшинче патшасем, ăсчахсемпе тухтăрсем, чиркӳçĕсемпе ӳкĕтлевçĕсем, патшалăх ĕçĕнчи пысăк вырăнти пуçлăхсем, ял хуçалăх ĕçченĕсем, пулăçсем, музыкантсем, пророксем пулнă.

Пĕтĕм Библи хăй икĕ пайран тăрать, пĕри – Авал хунă Сăмах ("Ветхий завет") тепри – Çĕнĕ Сăмах ("Новый завет"); "Завет" сăмахпа, – çырать Сăвапллă Çырусене тишкерес енĕпе палăрнă ученăй Э. Эби, – чи малтан чиркӳ çынни Тертуллиан атте "союз" пĕлтерĕшпе усă курнă". Çавна май Авал хунă Сăмах ("Ветхий Завет") – Турă Моисей урлă Израиль халăхĕпе, Çĕнĕ Сăмах ("Новый Завет") – Христос Хăйĕн Чиркĕвĕпе çыхăну йĕркеленине кăтартса парать. Библи чĕлхи çинчен калас пулсан, Авал хунă Сăмаха, тĕпрен илсен, ***ивритла*** çырнă. Ездра, Неемия тата Даниил пророксен кĕнекисенчи уйрăм пайсене ***арамейла*** çырса хăварнă. Сĕм авал иврит Палестинăра усă куракан тĕп чĕлхе пулнă, арамей чĕлхи – каярахпа йĕркеленнĕ диалект, Тухăçра пурăнакан еврейсен калаçу чĕлхи. Çĕнĕ Сăмаха вара грекла çырнă. Çав вăхăталла грек чĕлхи тĕнчипе тенĕ пек паллă вырăн йышăннă.

Библи куçарăвĕсем мĕн авалтанпах пулнă, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем пирĕн вăхăта çитнĕ оригиналсенчи ал çырăвĕсенчен те ватăрах. Авал хунă Сăмахăн, çавăн

пекех Çĕнĕ Сăмахăн тексчĕсене тишкернĕ чухне çав куçарусем калама çук пысăк пулăшу параççĕ. Сĕм авалхи куçарусенчен чи паллăраххисен шутне çаксене кĕртеççĕ:

Септуагинта ("çитмĕл" тенине пĕлтерет) – Авал хунă Сăмаха грекла куçарнă текст. Ăна Александрия хулинче, Птоломей Филадельфус патшара ларнă чухне куçарма пуçланă та Христос çураличченхи (урăхла каласан, пирĕн эрăччченхи) 275-130 çулсем хушшинче куçарса пĕтернĕ. Халăхсем хушшине сарăлнă сăмах-юмах тăрăх, çак текста грекла куçарас енĕпе Иерусалимран килсе çитнĕ 72 ăслайçă-кĕнекеçĕ тăрăшнă. Тăлмачăсем пĕр-пĕрне курмасăр, пĕр-пĕринпе калаçмасăр 72 кун та 72 çĕр пуçне çĕклемесĕр тенĕ пек ĕçленĕ, Авал хунă Сăмахăн мĕн пур кĕнекине куçарса хунă. Куçарусене пурне те пĕрле пăхса тухса тĕрĕсленĕ хыççăн çак Сăваплă Çырусен содержанийĕ пĕр-пĕринчен уйрăлса тăманнине, текст чĕлхипе стилĕ кăна тĕрлĕрен пулнине, çавăнпах-тăр тăлмачсене ку сăваплă ĕçре çӳлти Турă хăват парса тăнă тесе йышăннă, куçарнă текстсене пĕрле пухса, "септуагинта" тесе çаптарса кăларнă. Çак сăмах-юмах тĕрĕс-и, çук-и ун пирки тĕпчевçĕ-историксем паянхи кунччченех тавлашаççĕ, анчах вырăс чиркĕвĕн литературинче те ăна "çитмĕл тĕрлĕ ăнлантарса панă куçару" теççĕ. Тĕрĕссипе, Септуагинтăн тĕрлĕ пайне пирĕн эрăччченхи III тата II ĕмĕрсенче тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ çынсем куçарнă, çавăнпа та вĕсем пĕр-пĕринчен чĕлхипе те, стилĕпе уйрăлса тăраççĕ. Септуагинтăпа пирвайхи христиансем, Павел апостол усă курнă.

Тепĕр паллă куçару вăл – "Пешитта" – Библи кĕнекисене сири чĕлхине куçарни. Ăна Христос çуралнă хыççăн 4-мĕш çĕрçуллăхра куçарнă.

Виççĕмĕш куçару Хĕвеланăç Германи епископĕн ячĕпе, Христос çуралнă хыççăн 388-мĕш çулччен пурăннă Ульфиласпа çыхăннă. Библие вăл грекларан готсен (Германири авалхи йăхсен пĕр ушкăнĕ) чĕлхине куçарнă, çак тĕллевпех готсен алфавитне туса хатĕрленĕ. Ульфилас куçарăвĕ ("готический перевод")

Германи литературин сĕм авалхи палăкĕ пулса тăрать. Шел пулин те, пирĕн вăхăт тĕлнелле çак куçарăвăн уйрăм сыпăкĕсем, тĕпрен илсен, хĕрлĕ пергамент çине кĕмĕл шывĕпе çырнă Евангелисен пайĕсем çеç сыхланса юлнă, вĕсем Швецире упранаççĕ.

Христиантсво Италире тата латинла калаçакан ытти çĕр-шывсенче сарăлса, çирĕпленсе пыни Библие латинла куçарма хистенĕ. Латинла куçарăва "Вульгата" тенĕ, ку вăл "халăх чĕлхипе çырнă", "пурне те ăнланмалла" тенине пĕлтерет. Мĕншĕн тесен, Италире патшалăх чĕлхи вырăнĕнче малтанласа вырăнти çынсем ăнлансах пĕтерейменен грек чĕлхи пулнă.

Латинла куçарнă пирвайхи текстсем пурте ăнăçлах пулса тухайманнине шута илсе Рим папи Дамасий Чиркĕвĕн чи пултаруллă Иероним ятлă ăслайçă-кĕнекеçине Сăваплă çырусене грекла текст тăрăх çĕнĕрен куçарса хатĕрлеме хушнă. Иероним атте Çĕнĕ Сăмах кĕнекисене грекларан куçарнă, Авал хунă Сăмаха вара оригинал чĕлхинчен ивритла Библирен куçарма шутланă. Çак тĕллевпе вăл еврей чĕлхине ятарласа вĕреннĕ, кайран 15 çул хушшинче Авал хунă Сăмах кĕнекисене йăлтах куçарса пĕтернĕ. Ку ĕç пирĕн эрăри 383-405 çулсенче пулса иртнĕ. Библин çак латинла куçарăвĕ (у.к. "Вульгата") католиксен чиркĕвĕ йышăннă пĕртен-пĕр саккунлă кĕнеке пулса тăнă.

Тепĕр паллă куçару – Мартин Лютерăн нимĕçле куçарăвĕ, ăна вăл Вартбургра 1521 çулта пуçланă та 1534 çулта вĕçленĕ. Библие йăлтах оригиналтан куçарнă, Лютер пек çӳллĕ шайра куçарнă нимĕçле вариант ку таранччен те çук. Унта тăлмачă нимĕç халăхĕн пуян чĕлхипе туллин усă курма пултарнă, çапла майпа нимĕçсен пĕтĕмĕшле литература чĕлхин никĕсне хывнă. Лютер куçарнă Библие нимĕçсем паянхи кун та чăн-чăн литературăпа истори палăкĕ вырăнне хурса упраççĕ, унпа тивĕçлипе мăнаçланаççĕ.

Хăй вăхăтĕнче Совет Союзне кĕнĕ халăхсене илес пулсан, чи авалхи куçарусем эрменсемпе грузинсен пулнă. Библие вĕсем йăлтах V ĕмĕрте куçарса алла тытнă.

## 6.2. Вырӑсла Библин кӗске историйӗ

Руçе тӗне кӗртнӗ хыççӑн (988 ç.) вырӑссем Кирилпа Мефодий пӗр тӑвансем куçарнӑ славянла Библипе усӑ курнӑ. Çавна май христианство тӗнне славянсен çӗрӗ çинче çирӗплетме ятарласа янӑ Кирилпа Мефодий Библие куçарас умӗн славянсем валли азбука та туса хатӗрленине палӑртса хӑвармалла.

Вырӑс православи чиркӗвӗнче авалхи славянсен чӗлхипе усӑ курасси темиçе ӗмӗре пынӑ. Протестантсен чиркӗвӗ Библие халӑх калаçакан чӗрӗ чӗлхепе вӗрентме, тишкерме тӑрӑшнӑ, çакӑ Турра ӗненекенсен йышне ӳстерме пулӑшнине палӑртнӑ. Паллах, ку вырӑс чиркӳне витӗм кӳмесӗр тӑма пултарайман, Раççей обществинче те вырӑсла Евангели, вырӑсла Библи кирлӗ пулни сисӗне пуçланӑ. Çак сӑлтава пулах 1813 çулта Раççейре Библи обществине туса хунӑ.

Çакӑн йышши общество малтан Англире йӗркеленнӗ, 1804 çулта Лондонра уйрӑм хуçасен укçи-тенкипе Британин Библи обществине туса хунӑ. Унӑн "обществӑра пурӑнакан мӗн пур çынсене Турӑ сӑмахне вулама вӗрентес, çавӑнпах Библи кӗнекисене тӗрлӗ халӑх чӗлхисене куçарса пичетлесе кӑларас тата çав кӗнекесене йӳнӗ хакпа сутас, чи чухӑннисем хушшинче тӳлевсӗрех сарас" тӗллев пулнӑ.

Малтанласа Раççейӗн Библи обществи Библи кӗнекисене Синодран йӳнӗрех хакпа туянас тата Раççей империйӗн территорийӗнче пурӑнакан халӑхсене Сӑваплӑ Çырусене хӑйсен чӗлхипе куçарса парас енӗпе ӗçленӗ. 1816 çулта славянла Библие тепӗр хут пичетлесе кӑларма хӑтланнӑ. Ӑна вырӑсла куçарасси пирки сӑмах та пулман. Анчах кӑштах вӑхӑт иртсен, Библи обществи Турӑ çырӑвӗсене вырӑс халӑхӗ калаçакан чӗрӗ чӗлхене куçарас ыйтӑва хускатнӑ. I Александр патша та çакӑнпа пӗр сӑмахсӑрах килӗшнӗ. 1816 çулхи нарӑсӑн 28-мӗшӗнче Библи обществин президенчӗ А.Н. Голицын князь Синод членӗсене патша кӑмӑлне пӗлтернӗ. Çавӑнпа пӗрлех вӑл çапла ӑнлантрарса панӑ, чиркӳсенче славянла текстпа çеç усӑ

курмалла, вырăсла куçарăва та славянла текстпа пĕрле пичетлемелле. Çийĕнчен тата Греци чиркĕвĕнче хăйĕнче те Константинополь патриархĕ Кирилл ирĕкĕпе Çĕнĕ Сăмаха грексен хальхи вăхăтра калаçакан чĕлхипе вуласа ăнлантарни пирки асăнса хăварнă. Апла пулин те çак шухăша Синод ырласах йышăнман, анчах патшана хирĕç те кайма пултарайман, "Сăваплă Çырусене хальхи вырăс чĕлхине куçарса пичетлени усăллă" тесе палăртнă та куçару ĕçне тӳрременех хутшăнма килĕшмен.

Çапла вара куçару ĕçĕ йалтах Тĕн академийĕсемпе училищисен представителĕсенчен йĕркеленĕ комиссипе Библи обществи çине тиеннĕ. А.Н. Голицын çине тăнипе Библи кĕнекисене вырăсла куçарас ĕçе Мускав, Петербург тата Киев тĕн академийĕсен профессорĕсене хутшăнтарнă. Матфей çырнă Евангелие – Петербург тĕн академийĕнче авалхи еврей чĕлхине вĕрентекен профессор Герасим Петрович Павский, Марк çырнă Евангелие – тĕн семинарийĕн ректорĕ Поликарп архимандрит, Лука çырнă Евангелие – академи бакалаврĕ Моисеев архимандрит, Иоанн çырнă Евангелие – Филарет архимандрит куçарнă. 1818 çулта тăватă Евангелие пичетлесе те кăларнă. 1819 çулта вара патша çак çĕнĕ куçарăва тепĕр хут славянла текстсăр пичетлеме ирĕк панă. 1822 çулта Çĕнĕ Сăмах кĕнекисем пурте пĕрле таса та чĕрĕ вырăс чĕлхипе çапăнса тухнă. Евангелисене тата Апостолсен ĕçĕсемпе Çырăвĕсене Синод хушнипе грек чĕлхинчен мар, славян чĕлхинчен куçарнă. 1824 çул тĕлне Раççей Библи обществи ертсе пынипе тата тӳрременех хутшăнса ĕçленипе Çĕнĕ Сăмахăн кĕнекисене йалтах, Авал хунă Сăмахран – Моисейĕн 5 кĕнекине, Псалтире, Руфь, Иисус Навин, судьясен кĕнекисене вырăсла куçарса пĕтернĕ. Çак çулах Çĕнĕ Сăмаха пирвайхи хут славянла текстăр пичетлесе кăларнă. Пĕтĕм куçарăвăн редакторĕ Г.П. Павский профессор пулнă.

Тĕрĕссипе, Авал хунă Сăмаха 1820 çулта куçарма тытăннă. "Пултарни" текен кĕнекене – Петербург тĕн

академийӗнче, "Тухни" кӗнекене – Мускавра, «Левита" Киевра куҫарнӑ. 1825 ҫул тӗлне Руфь кӗнеки патне ҫитиччен йӑлтах куҫарса пичетлеттернӗ, анчах кӗтмен ҫӗртен Библи обществине хупнӑ та Раҫҫейри пӗтӗм куҫару ӗҫӗ чарӑнса ларнӑ.

Анчах уйрӑм ҫынсем ку ӗҫе пӑрахман. Г.П. Павский профессор 20 ҫул хушшинче Тӗн академийӗнче ирттернӗ лекцисем вӑхӑтӗнче Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене сӑмахпа каласа пӗрерӗн-пӗрерӗн йӑлтах куҫарса тухнӑ. Вӑл каланине студентсем ҫырса пырса пӗр-пӗрин хушшинче вӑрттӑн сарнӑ. Г.П. Павский профессор Кивӗ Сӑмахӑн кӗнекисене авалхи еврей чӗлхинчен хальхи вырӑс чӗлхине чи пирвай куҫарнӑ ҫын пулнӑ.

Унпа пӗр вӑхӑтрах Библие аякри Алтай тӑвӗсем ҫинче пурӑнакан православи миссионерӗ Макарий архимандрит (Михаил Яковлевич Глухарев) куҫарнӑ. Вырӑнти халӑх хушшинче чаплӑран та чаплӑ ӳкӗтлевҫӗ шутланнӑ Таса атте хӑй прихутне ҫӳрекен христиансене Турӑ сӑмахӗ ӑнланмалла пултӑрччӗ тесе тӑрӑшнӑ, Авал хунӑ Сӑмаха грек чӗлхинчен мар, подлинникран, авалхи еврей чӗлхинчен куҫарнӑ. Ӳкӗтлев службисене славянла мар, чӗрӗ вырӑс чӗлхипе ирттерме пуҫланӑ хыҫҫӑн Макарий архимандрит прихутӗнче пурӑнакан язычниксемпе магометансем те тӗне кӗме, чиркӗве ҫӳреме пуҫланӑ.

Шел пулин те, Г.П. Павский профессорпа Макарий архимандритӑн ӗҫне патша та, Синод та йышӑнман. Пачах урӑхла, “хӑйсен тивӗҫӗсен картинчен тухса аслӑ влаҫ йышӑнӑвӗсене хирӗҫ кайнӑшӑн” айӑпласа юратнӑ ӗҫрен уйӑрма хӑтланнӑ. Вӗсен куҫарӑвӗсем вара Синод архивӗнче чӗрӗк ӗмӗр хушши тусанланса выртнӑ. 1876-1877 ҫулсенче тин вӗсене “Православное обозрение” журналта пичетлесе кӑларнӑ. Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене вӗсем иккӗшӗ те йӑлтах авалхи еврей чӗлхинчен куҫарнӑ, Маккавейсен 1-мӗшпе 2-мӗш кӗнекисене кӑна – грек чӗлхинчен. Каярахпа, Библие вырӑсла куҫарнӑ чухне тӑлмачӑсем яланах Г.П. Павский профессорпа

Макарий архимандритăн куçарăвĕсемпе усă курнă, вĕсем тăлмачсене çав тĕрлĕ пысăк пулăшу панă.

Хупнă хыççăн тепĕр 30 çултан Раççейĕн Библи обществи çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă. Ку хутĕнче Синод Библие куçарас енĕпе ĕçлемешкĕн официаллă йĕркепе ирĕк панă.

Малтанхи пекех, куçару ĕçне тума Петербург, Мускав, Киев тата Хусан тĕн академийĕсене хушнă. Кашни академирех авалхи чĕлхесемпе Турă саккунĕсене вĕрентекен профессорсен йышĕнчен куçаруçă-тăлмачсене суйласа илсе, уйрăм комитетсем йĕркеленĕ, вĕсене ректорсем ертсе пынă. Тăлмачсене ĕçлеме лайăх условисем туса панă, ĕçтернĕ-çитернĕ, пулăшма ятарлă çынсем уйăрнă. Тĕпрен илсен, тăлмачсем авалхи еврей чĕлхипе çырнă текста тĕпе хунă, ытти куçарусене те шута илмесĕр хăварман. Хатĕр куçарусене малтан сыпăкăн-сыпăкăн тĕн журналĕсенче пичетлесе пынă, вулакансем ярса панă асăрхаттарусене йăлтах пăхса тухса шута илме тăрăшнă.

1860 çулта тăватă Евангелин вырăсла куçарăвне пичетлесе кăлараççĕ, 1862 çулта – Çĕнĕ Сăмахăн ытти пайĕсене капăшĕпех. Çапла вара Çĕнĕ Сăмаха пирвайхи хут чĕрĕ вырăс чĕлхипе, славянла текстсăр пичетлесе кăларнă хыççăн шăпах 40 çул иртсен Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмахăн тулли кăларăмĕ тепĕр хут çапăнса тухнă.

1867 çулта Синод пĕтĕм Библие те кăларма пуçланă. Вырăсла Библин пĕрремĕш пайĕ – Моисейĕн пилĕк кĕнеки – 1868 çулта кун çути курнă. Ун хыççăн Библие пайăн-пайăн кăларсах тăнă, 1876 çулта вара пирвайхи хут Сăваплă Çырусен мĕнпур кĕнекине пĕр томпа пичетлесе кăларнă. Ку вырăсла Библие "Синод хăй пехиллесе" пичетлеттернĕ, паянхи кун та вăл аслă вырăс халăхĕн мăнаçлă пуянлăхĕ пулса тăрать.

Синод пехилленĕ вырăсла Библие авалхи грек чĕлхине куçарнă Септуагинтăна тата чиркӳре усă куракан славянла Библие тĕпе хурса йĕркеленĕ. Урăхла каласан, çак Библири кĕнекесен йышĕ тата вĕсене вырнаçтарас йĕрке Септуагинтăпа славянла Библирен

пěртте уйрăлса тăман. Çапах та Авал хунă Сăмахри канонланă (чиркӳ саккунěпе çирěплетсе йышăннă) кěнекесене – еврей чěлхинчен, канонламаннисене грекла е латинла подлинниксенчен куçарнă. Библири ятсене еврейла мар, грекла мěнле каланă, çавăн пек хăварнă. Мěншěн тесен чиркӳ çыннисем те, тěне ěненекенсем те вěсене тахçанах грекла калама хăнăхса çитнě. Акă, тěслěхрен, "Иисус" ят еврейсен чěлхипе "Ешуа" пулать. "Христос" сăмаха ивритла "Машиах" сăмахран куçарнă, "помазанник" тенине пěлтерет. Еврейла "Эстер" вырăнне "Эсфирь", "Бетлехем" вырăнне – "Вифлеем" тата ыт.те.

Сăмахăм мěн пирки пынине шута илсе, çакна палăртса хăварам, вырăссем паянхи кунччченех Синод пехилленипе 1876 çулта кăларнă Библи тексчěпе усă кураççě. Мěншěн тесен çак куçару чěлхе, стиль тěлěшěнчен чи çӳллě шайра тăрать, ăна пурте ăнланаççě, çавна май Сăваплă çырусенчи йěркесене славянла вулани, вěсем хамăрăн авалхи йăхсен чěлхипе – Кирилпа Мефодий чěлхипе – янăрани пуриншěн те паха тесе шутлаççě. Протестантизм тымарěнчен тухнă конфессисемшěн, çавăн пекех Раççейри католиксемшěн те Синод кăларнă вырăсла Библи чăн-чăн çветтуй кěнеке, кěлěсем вăхăтěнче те вěсем вырăсла текста çеç тěпе хураççě, ăна улăштарса пăсасран пит сыхланаççě.

### 6.3. Христианла культура çутăлăхěшěн

Раççейре 1813 çулта Библи обществине уçнă хыççăн вăл Вырăс патшалăхийěнче пурăнакан суя тěнлě халăхсемпе магометансем валли те хăйсен чěлхипе Библи пичетлесе парас тěллев лартнă.

Чăвашла куçарнă Библин пирвайхи пайěсене çак общество 1820 çултах пичетлесе кăларнă. Çěнě Сăмаха йăлтах куçарса пěтернě пулнă, анчах вěсенчен тăвата Евангелие кăна çаптарса кăларма пултарнă. Ку вăхăт тěлнелле Хусанти куçару шкулě ура çине тăма вăй çитернě ěнтě, хăйěн ěçěнче вăл Чулхула шкулěн традицийěсене тěпе хурса, малалла аталанса пынă. XIX ěмěрěн пирвайхи вунăçуллăхěсенче чăваш кěнеке ěçě,

тĕпрен илсен, йăлтах Хусанта пулса пынă. В.Г. Родионов тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, çак тапхăрта куçару ĕçне П. Таллиевпа А. Алмазов пупсем чун хĕрӳлĕхĕпе хутшăннă, ӳкĕтсемпе вĕрентсе каланисене чăвашла анлăн куçарнă. Иккĕшĕ те Муркаш тăрăхĕнчи чăвашсем пулнăран вĕсем Хусан шкулĕн литература чĕлхине çав калаçу уйрăмлăхĕсене сахал мар кĕртеççĕ. Тăван чĕлхемĕре лайăх пĕлнĕ пулин те вĕсен куçарăвĕсем мĕн пур чăваш хушшине сарăлайман, мĕншĕн тесен тури чăвашсен калаçу уйрăмлăхĕсем çинче никĕсленнĕ çыру чĕлхи ытти тăрăхра пурăнакан чăвашсемшĕн ют чĕлхе евĕрлех янăранă, халăхăн чĕрĕ калаçу чĕлхи çывăхне те пырайман. Анчах христианла тĕн вĕрентĕвне кирек ăçта та ĕненекенсен тăван чĕлхипе усă курмасăр сарма май çук. Çавăнпах-тăр Христос вĕрентĕвĕ çак тапхăрта чăваш чĕринче вырăн тупайман.

Тепĕр 50 çултан Библие çĕнĕрен чăвашла куçарма пикеннĕ. Ку хутĕнче Иван Яковлевич Яковлев çак йывăр çĕклеме йăтма килĕшнĕ.

Кирек хăш халăх та Сăваплă Çырусене хăй чĕлхине куçарма пуçланă май хăйĕн çырулăхне йĕркелеме тăрăшнă. Акă, тĕслĕхрен, сириецсен, готсен, нимĕçсен, эрменсен, грузинсен, славянсен пурин те çырулăхĕ Библи кĕнекисене куçарма пуçланă тапхăрта йĕркеленнĕ. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, Кирилпа Мефодий пĕртăвансем авалхи славянсен çĕрĕ çине Моравие килсе çитнĕ-çитмен славянсен азбукине туса хатĕрленĕ, ун хыççăн вара, Турă пулăшнипе, сăваплă Евангелисене славянла çырма пуçланă.

И.Я. Яковлев Библи кĕнекисене чăвашла куçарма пикенсе пăхас шухăш тытнă чухне чăваш халăхĕ те "кĕнекесĕр халăх" шутĕнче тăнă. Унăн хăйĕн алфавичĕ те пулман, христианла кĕлĕ сăмахĕсене, литурги поэзине ăнлантарма кирлĕ литература чĕлхи пирки тĕн çутлăхĕшĕн çунса тăракан чиркӳçĕсем ĕмĕтленме çеç пултарнă. Хăйĕн те Кирилпа Мефодий асапнех тӳссе ирттерме тивнине ăнланнă пулĕ И.Я. Яковлев.

Çырулăх çукки хăй пĕр кăткăслăх, çав хушăрах Сăваплă Çырусене куçарас тесен чăваш чĕлхине тĕн вĕрентĕвĕпе, философипе, патшалăх тата общество тытăмĕпе çыхăннă ăнлавсене палăртакан çĕнĕ сăмахсем нумай кирлĕ-çке.

Ахаль куçаруçă çеç вăй çитереймен çак йывăр задачăна татса пама. Çакăн валли сахалтан та икĕ чĕлхене чаплă пĕлекен çын кăна мар, чăн-чăн чĕлхе ăсти, урăхла каласан, чĕлхе наукине тарăн чухлакан, нумай пĕлӳллĕ, анлă тавра курăмлă çын кирлĕ пулнă.

Çав вăхăтри чи паллă ăслайçăсенчен пĕри – педагог-миссионер, тĕне кĕнĕ тутарсен шкулне уçса ертсе пыраканĕ Н.И. Ильминский – чăвашсем валли çакнашкал сăваплă ĕçе тума пултаракан çын тупма пĕлнĕ. Вăл И.Я. Яковлева суйласа илнĕ. Тин çеç Хусан университетне вĕренме кĕнĕ студентпа Н.И. Ильминский 1870 çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче паллашнă. Çавăнтанпа Христос тĕнне Атăлпа Вятка хутлăхĕнче пурăнакан вак халăхсем хушшине сарас тĕлĕшпе хĕмленсе ĕçленĕ "апостолпа" тăван халăхне çутта кăларса, çын шутне кĕртес тесе тăрăшнă "чăваш патриархĕн" пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăннă.

Чăваш халăхне христианла культура çутăлăхне илсе тухас тĕллевпе тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса парас шухăш çамрăк Иван Яковлев пуçĕнче Чĕмпĕр гимназийĕнче вĕреннĕ чухнех çуралнă. Çавнашкал куçарусем тума хăтланса та пăхнă вăл, анчах ĕçĕ ăнсах кайман. Çав хушăрах нимĕçлерен вырăсла, вырăсларан латинла куçарма ансатрах пек туйăннă ăна. Çавăн чухне ĕнтĕ вăл чăвашла, культура тĕлĕшĕнчен чи пĕчĕк шайра тăракан халăх чĕлхине куçарас ĕç мĕн тери йывăр пулнине ăнланса илнĕ.

Çамрăк чухне И.Я. Яковлев чăвашсене вырăс културипе çывăхрах паллаштарас тесен, мĕн пĕчĕкрен вырăсла çеç вĕрентмелле тесе шутланă. Анчах Н.И. Ильминский ăна хирĕç пулнă, вĕрентӳ никĕсĕнче тăван чĕлхе тĕп вырăнта пулма кирлине курăмлă тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшнă. И.Я.Яковлева тĕне

кĕнĕ тутарсен шкулне илсе çӳренĕ, унта вĕренекенсен пурнăçĕпе, пĕлӳ шайĕпе çывăхрах паллашма хистенĕ. Ак çапла çырнă Н.И. Ильминский хăйĕн шкулне И.Я. Яковлев пирвайхи хут пырса курни пирки: "Шкул тата вĕренекенсен тăван чĕлхипе чиркӳре кĕлĕ ирттерни, çавăн пекех хăйсенĕн чĕлхипе вулакан кĕлĕ сăмахĕсене вĕсем савăнса тимлени, пачăшкăпа пĕрле хаваслăн юрлани И.Я. Яковлева тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ». "Шăпах крешĕн тутарсен шкулне час-часах килсе çӳренипе ĕнтĕ шухăшĕ улшăнса пычĕ унăн (И.Я.Яковлевăн. – *И.М.*), христианла православи тĕнĕ чăвашсем пек вак халăхсене ăс-хакăл, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çĕкленме пулăшнине курса ĕненчĕ, çавна май христианла ăнлавсене ăша хывма пулăшаканни тăван чĕлхе пулнине ăнланчĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ унăн христианла тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене чăвашла куçарас шухăшĕ çирĕпленчĕ", – тенĕ Н.И. Ильминский.

Самарти тĕн училищинчен вĕренсе тухнă В.В. Васильев тата Хусанти тĕне кĕнĕ (крешĕн) тутарсен шкулĕнче вĕренекен С.Н. Тимрясов, (чăвашла та, тутарла та япшар калаçнă ачасем), Н.И. Ильминский вĕрентсе те ертсе пынипе чăваш шкулĕсенче вĕренӳ пособийĕ вырăнне усă куракан тĕн кĕнекисене чăвашла куçарнă. 1870 çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче ку ĕçе Иван Яковлев студент та явăçать. И.Я. Яковлевпа пĕрле ытти чăваш ачисем кĕлĕ кĕнекисене тата Сăваплă çырусен уйрăм сыпăкĕсене чăвашла куçарас енĕпе пикенсе ĕçлеме тытăнаççĕ. Каярахпа И.Я. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсене те куçару ĕçне хутшăнтарма тытăнать. "Хусан университетĕнче вĕренме пуçланă пирвайхи çулах эпĕ тутарла лайăх пĕлекен Рекеевпа Игнатий Иванов пулăшнипе тутарларан чăвашла куçарма пикентĕм. Ĕçсем ăнăçлах пулса тухрĕç. Унтан вара эпĕ Ильминский программипе вырăсларан чăвашла куçарма пуçларăм. Кунта аплах ăнмарĕ. Куçару вăраххăн малалла шурĕ. 1871 çулта эпĕ алтай халăхĕсем валли вырăсла букваре алтай чĕлхине куçарма пуçларăм. 1871 çулхи çулла Матфей çырнă

Евангелие вырăсларан чăвашла куçарма пикентĕм. Çак ĕç йăлтах вăраххăн та йывăрпа пулса пычĕ. Анчах майĕпен, ĕçленĕçемĕн куçару меслетне алла иле пуçларăм. Кунта та мана Рекеев, Игнатий Иванов, ытти ачасем пулăшса тăчĕç", – аса илет И.Я. Яковлев хăйĕн "Манăн пурăнăç" кĕнекинче.

Куçару ĕçне хăвăртлатас тĕллевпе Н.И. Ильминский пуçтарнă тăлмачăсен ушкăнĕнчи С.Н. Тимрясова И.Я. Яковлев ыйтнипе Чĕмпĕре куçараççĕ. Ку вăхăтра чăваш шкулĕнче пурĕ 30 яхăн ача вĕреннĕ. Вăл пулăшнипе А. Рекеев, И. Бюргановский тата аслăрах классенче вĕренекен ытти ачасем Евангелие чăвашла куçарнă. Çак самантран тытăнса Библи кĕнекисене чăвашла куçарас тапхăр пуçланать.

* * *

Библие И.Я. Яковлев Çĕнĕ Сăмахран ("Новый завет") куçарма пуçланă. Н.И. Ильминский сĕннипе вăл Матфей çырнă Евангелие суйласа илнĕ. 1871 çулхи çуллахи каникул вăхăтĕнче вăл, тĕпрен илсен, е Кăнна Кушкинче юлташĕсемпе пĕрле вырăнти калаçу тĕслĕхĕсене, халăх сăмахлăхне пухса çӳренĕ, е Чĕмпĕрте (общежити евĕрлĕ) чăваш шкулĕнче асăннă Евангелие куçарса пурăннă. Пĕр вăхăтрах фонетика законĕсем тăрăх чăвашла букварь çырса хатĕрленĕ. Пĕрремĕш Евангелие И.Я. Яковлев-студент çулталăка яхăн куçарнă.

1873 çулта Хусанта "Матфей çырнă таса Евангели" чăвашла çапăнса тухсан, çакна Англин Хусанти консулĕ В. Салмен асăрханă. Вăл Британипе Ют çĕршывсен Библи Обществин (БИБО) Раççейри агентствин секретарьне Вильям Николсона çак кăларăмсемпе интересленсе пăхма сĕннĕ. 1873 çулхи чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче В. Николсонран Лондона БИБО представителĕ К. Джексон патне çакăн пек хыпар çитнĕ, "Салмен господин ман патăма çветтуй Матфейăн чăвашла куçарнă Евангелине ярса пачĕ, ăна Яковлев господин куçарнă иккен, хăй шучĕпех çаптарнă; хальхи вăхăтра вăл Сăваплă çырусене чăвашла куçарас енĕпе ĕçлет. Çак куçару пурнăçра усă

курма юрăхлă-и е юрăхлă мар-и тесе, ăна эпĕ Санкт-Петербург Академийĕн членĕсенчен хăшне те пулин кăтартса пăхма шутлатăп" (БИБОн Кембридж университетĕнче упранакан архивĕ, ECI БИБО редакцине пырса кĕрекен çырусем, 1873, т. 10, с. 125. – Кĕнекере усă куракан ытти çырусем те çав архивранах. – *И.М.*).

1874 çулхи çĕртме уйăхĕнче Атăл тăрăх пăрахутпа çӳренĕ чухне В. Николсон Хусанта И.Я. Яковлевпа тĕл пулнă. Ун пирки вăл хăйĕн кун кĕнекинче çапла çырса хăварнă, "... эпĕ çав тери кăмăллă та йĕркеллĕ пĕр çамрăкпа, Яковлевпа, паллашрăм, вăл Сăваплă çырусене тата ытти тĕн кĕнекисене тăван чĕлхине – чăвашла – куçарас енĕпе чăн-чăн христианла филантроп пек хытă тăрăшса ĕçлет. Çветтуй Матфейĕн Евангелине куçарса кăларнă та ĕнтĕ вăл, унăн копине Лондона ярса панăччĕ. Çав куçарăва халĕ тĕрĕк чĕлхисене тĕпчекен ăслайçă А. Шифнер академик грекла çырнă текстпа танлаштарса тĕрĕслет".

1874 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче Лондона янă тепĕр çырура В. Николсон "чăвашла куçарнă Евангели питех те ăнăçлă пулса тухни пирки А. Шифнер академик ырласа çырнă отчета илни" çинчен хыпар ярать.

Çакна каласа хăварни те вырăнлă пулмалла. Тĕрĕк чĕлхисене тĕпченĕ А. Шифнер академик 1875 çулта Н.И. Золотницкин "Корневой чувашско-русский словарĕн" наука редакторĕ пулнă.

Куçарусен пахалăхне тĕрĕслени И.Я. Яковлева пăшăрхантарман. Мĕншĕн тесен ку ĕçе вăл таса чĕререн, ырă кăмăлтан, хăй кирлĕрен те кирлĕ ĕç тунине чăннипе ĕненсе те юратса тунă. Хусанта вĕреннĕ чухне те, кярахпа Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăннă чухне те куçарусене малтан уйрăммăн çаптарса тĕпчевçĕ-чĕлхеçĕсене кăтартма тăрăшнă.

Университетра ăс пухнă тапхăрта Н.И. Ильминиский ăна хăйĕн çывăх юлташĕпе Гордей Семенович Саблуков профессорпа паллаштарнă. Г.С. Саблуков, араб чĕлхисене тĕпчесе çырнă нумай-

нумай ёҫсен авторӗ, Хусанти тӗн академийӗнче тата семинарире тутар, грек, араб, сири чӗлхисемпе лекцисем вуланӑ, авалхи еврей (иврит) чӗлхине чаплӑ пӗлнӗ. И.Я. Яковлева та евангелисенчи уйрӑм текстсене, псаломсемпе кӗлӗсене тӗплӗн ӑнлантарса пама тӑрӑшнӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл христианство вӗрентӗвӗпе ҫыхӑннӑ кӗнекесене – тутарла, Корана чи малтан вырӑсла куҫарнӑскер, тин ҫеҫ куҫару ӗҫне пуҫӑнакан студента пысӑк пулӑшу панӑ. Ҫавна май И.Я. Яковлев унӑн чаплӑ та пуян библиотекипе усӑ курнӑ. Ҫак ученӑй-чӗлхеҫӗ пирки И.Я. Яковлев "Манӑн пурӑнӑҫ" кӗнекинче ӑшшӑн тав туса тата сума суса аса илет.

Каярахпа И.Я. Яковлева ку тӗлӗшпе тӗнчипе паллӑ тюрколог Н.И. Ашмарин нумай пулӑшнӑ. Ҫакна вӑл Н.И. Ашмарин патне янӑ ҫырусенчен те курма пулать. Акӑ И.Я. Яковлев 1899 ҫулхи раштавӑн 5-мӗшӗнче Н.И. Ашмарин патне янӑ ҫырури хӑш-пӗр йӗркесем, "... Сирӗн пата тин ҫеҫ пичетрен тухнӑ таса Евангелисене ярса паратӑп. Тӗрӗс мар ҫапнӑ тӗлсене асӑрхама тата ҫӗнӗ кӑларӑмсене кӗртсе хӑварма май пур йӑнӑшсене тӳрлетме тархасласа ыйтатӑп, ҫавӑн пекех вӑхӑтӑр пулсан, тархасшӑн, чӑвашла текста грекла текстпа танлаштарса пӑхайсан, асӑрхаттарусене ман патма ярса параймӑр-ши; ҫавнашкал асӑрхаттарусене кӑрлач уйӑхӗччен алла илни аван пулӗччӗ, мӗншӗн тесен тепӗр икӗ уйӑхран эпӗ Евангелин ҫӗнӗ кӑларӑмне ҫаптарма пуҫласшӑн".

1899 ҫулта Н.И. Ашмарин Хусанта крешӗн тутарсен шкулӗнче тата вак халӑхсем валли учительсем хатӗрлекен семинарире вӗрентнӗ. И.Я. Яковлев ыйтнӑ ӗҫ уншӑн йывӑрах пулман, кирек мӗнле ыйтӑва та тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлама хӑнӑхнӑ ученӑй чӑвашла куҫарнӑ Евангелисене тӳрех грекла текстпа танлаштарса тӗрӗсленӗ. Унӑн асӑрхаттарӑвӗсемпе тӳрлетӗвӗсене И.Я. Яковлев ҫӗнӗ кӑларӑмсенче шута илме тӑрӑшнӑ. Н.И. Ашмарин уншӑн авторитет пулнӑ, чӗлхене чӑн-чӑн ученӑй

шайӗнче чухлакан ҫыннӑн сӑмахӗ куҫарусене редакциленӗ чухне татӑклӑ пулнӑ Иван Яковлевичшӑн.

Ҫавӑн пекех Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ӗҫленӗ учительсенчен пӗри Турӑ законӗсене вӗрентекенскер, грекла питӗ лайӑх калаҫнине кӑтартса паракан хыпарсем те пур. Вӑл вара Библи кӗнекисене оригинал чӗлхинчен тӳрех чӑвашла куҫарнӑ.

1874 ҫулта И.Я. Яковлев Хусанта Ҫӗнӗ Сӑмахӑн малалли пайӗсене – Маркпа Лука апостолсем ҫырнӑ таса Евангелисене – ҫаптарса кӑларать. Н.И. Ильминский чӑвашла Евангелисене Раҫҫейре ют ҫӗршыв укҫи-тенкипе кӑларттарасшӑн пулман. Хӑй йышне илнӗ вак халӑхсен тӑван чӗлхине аталантарас ӗҫе вырӑс патшалӑхӗ хӑй тӗллӗнех туса пыма пултарать тесе шутланӑ вӑл. Ҫак патриотла туйӑмах ӑна БИБОран та ютшӑнтарса тӑнӑ. Ҫавна пулах чӑвашла тӗн кӗнекисен пирвайхи кӑларӑмӗсем Библи обществин представителӗсем патне ҫитеймен пулас, вӗсем ҫинчен уйрӑммӑн каласа хӑварни БИБО архивӗнче ҫук. Н.И. Ильминский вилнӗ хыҫҫӑн Святейший Синодӑн обер-прокурорӗсем пулнӑ К.П. Победоносцев тата В.К. Саблер акӑлчансен пулӑшӑвне сивлемен, Библи кӗнекисене вак халӑхсен чӗлхипе, ҫав шутра чӑвашла пичетлеме уйӑракан укҫа-тенкӗпе усӑ курма тытӑннӑ.

Университетран вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн И.Я. Яковлев "Авал хунӑ Сӑмахӑн тата Ҫӗнӗ Сӑмахӑн сӑваплӑ историне" (Чӗмпӗр, 1876), "Ҫӳлти Туррӑмӑрпа Турӑ Амӑшийӗн тӗп чиркӳ уявӗсене" ("Аслӑ праҫниксем") (2-мӗш кӑларӑм, Хусан) тата ытти кӗнекесене чӑвашла ҫаптарнӑ. “Сӑваплӑ историе” вӑл универститетра вӗреннӗ чухнех куҫарса пӗтернӗ пулнӑ. Ҫакӑ Алексей Рекеев патне 1873 ҫулхи юпа уйӑхӗн 18-мӗшӗнче янӑ ҫыруран та курӑнать, “Афинский ҫырнӑ Сӑваплӑ историе ман патма хӑвӑрттарах ярса пар – хӑв тӳрлетме тата ҫӗнӗрен ҫырса пама пулнӑ пайӗсене; пӗрремӗш пайне Сергей (Тимрясов. – *И.М.*) пит аван тӳрлетсе ҫӗнӗрен ҫырса пачӗ; эс те лайӑх тӳрлетессе шанатӑп”.

Çырусенченех çакă курăнать, “Чăн тĕн кĕнекине”, “Аслă праçниксене”, “Матфей çырнă Евангелие” И.Я.Яковлев 1873 çулта чăвашла çаптарттарса хăй пĕлекен чăвашсем патне яра-яра панă, вĕсене чăвашла кĕнекесене вулаттарса вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлесшĕн çуннă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Ырă Хыпарсен ("Евангелие" сăмах грек чĕлхинчен куçарсан "ырă хыпар" тенине пĕлтерет) тăваттăмĕш кĕнекине – Иоанн çырнă таса Евангелие – куçарас енĕпе малалла ĕçлет. "Чăвашла Евангели пирки калас пулсан, – тет В. Николсон 1878 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче Лондона янă çырура, – эпĕ Чĕмпĕрти Яковлев инспектортан çыру илтĕм, унта вăл Иоанн çырнă Евангелие куçарса пĕтерни çинчен хыпар парать. Ăна Хусан университечĕн типографийĕнче çулла çапса кăларăççĕ. Ун хыççăн тин Евангелие редакцилесе пирĕн патăмăра ярса пама пулчĕç. Ĕçеваскатас тесе, Евангелисене куçарнăшăн эпĕ ăна кашни хутĕнчех 150 тенкĕ пама пултăм. Анчах Яковлев куçарусене тĕплĕн редакцилесе çитериччен укçа илме килĕшмерĕ".

Çапла вара Çĕнĕ Сăмахăн тата тепĕр 23 кĕнекине (Евангели 27 пайран тăрать) куçармалла пулнă. Библие куçарса кăларассипе çыхăннă ĕç-хĕле И.Я. Яковлев БИБОн Раççейри представителĕсемпе татса пама тăрăшнă. Библи обществи чăвашла куçарусене пичетлесе кăларма укçа-тенкĕпе пулăшса тăнă. Иоанн çырнă таса Евангелие 1880 çулта Хусанта Православин Миссионер обществи 1200 экземпляр тиражпа кăларнă. Çакăн хыççăн пĕр хушă чăвашла çĕнĕ куçарусем çаптарас ĕç чарăнса тănине палăртаççĕ БИБО представителĕсем.

Тепĕр 15 çул иртсен, 1895 çулта, Матфей, Марк, Лука, Иоанн çырнă тăватă Евангелие пĕрле 273 страницăпа БИБО Чĕмпĕрте пичетлесе кăларать. Тата икĕ çултан 4 Евангели пĕрле Хусанта 3600 экземпляр тиражпа тухать тата тепĕр çулталăкран, 1898 çулта, çавсемех Чĕмпĕрте виççĕмĕш хут калăпланса тухаççĕ. 1901 çулта Чĕмпĕрте Библи Обществи И.Я. Яковлев

куçарнă Псалтире, унтан Апостолсен ĕçĕсене (сăнавлă кăларăм – 200 экземпляр) тата Евангелисен тӳрлетнĕ кăларăмне Апостолсен ĕçĕсемпе пĕрле пичетлет. Библие чăвашла куçарас енĕпе 30 çул ытла чунтан тăрăшса ĕçленĕ хыççăн И.Я. Яковлев çĕнĕ Сăмахăн юлашки пайĕсене – Апостолсен çырăвĕсемпе Апокалипсиса – 1904 çулта пичетлесе кăларма пултарнă.

Анчах та çакна палăртса хăварас килет. Чăвашла кăларнă Библи кĕнекисем пирвайхи хут пичетленнĕ вăхăта Библи Обществин представителĕсем пĕр тĕрлĕ палăртаççĕ. И.Я. Яковлев çав кĕнекесем хăш çулсенче тухнă пирки ак çапла çырса хăварнă: "Çапла хĕрĕх çул хушшинче эпĕ çак кĕнекесене çаптарнăччĕ, малтан – 1873 çулта Хусанта 1) Матфей çырнă Евангелиене çаптарнăччĕ, унтан 1874 çулта Хусанта; 2) Маркпа Лука çырнă Евангелисене 1879 çулта Хусанта 3) Матфей çырнă Евангелиене, иккĕмĕш хут; çав çулах Хусанта 4) Иоанн çырнă Евангелиене; унтан 1889 çулта Чĕмпĕрте 5) Матфей, Марк, Лука, Иоанн çырнă Евангелиесене, унтан 1891 çулта Чĕмпĕрте 6) çавнах (Тăватă Евангелие. — *И.М.*), иккĕмĕш хут; 1897 çулта Чĕмпĕрте 7) çавнах виççĕмĕш хут; ун хыççăн 1900 çулта Чĕмпĕрте 8) Апостолсен ĕçĕсене; çав çулах Чĕмпĕрте 9) Евангелиепе Апостолсен ĕçĕсене; унтан 1903 çулта Чĕмпĕрте 10) Апостолсен çырăвĕсемпе Апокалипсиса; тепĕр çул (1904) Чĕмпĕрте 11) Евангелипе Апостолсен ĕçĕсене, иккĕмĕш хут; юлашкинчен 1906 çулта Чĕмпĕрте 12) Апостолсен çырăвĕсемпе Апокалипсиса, иккĕмĕш хут çаптарнăччĕ" (Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмах. – Чĕмпĕр, 1911).

Çапла вара çӳлерех çырса панă икĕ абзацра илсе кăтартнă вăхăтсем пĕри те тӳр килмеççĕ. Çакă И.Я. Яковлев чăвашла куçарнă кĕнекесене, тĕпрен илсен, Вырăс православи миссионер обществи урлă пичетлесе кăларнипе çыхăннă. Куçару ушкăнĕ питĕ хастар ĕçленĕ, БИБО вĕсен куçарăвĕсене пурне те сăнаса тăма та ĕлкĕреймен, И.Я. Яковлев та акăлчансене хăйĕн пĕтĕм ĕçĕ пирки йăлт пĕлтерсе тăма

кирлех мар тенĕ. Куçарнă кĕнекесене малтанласа сăнаса пăхас шутпа вăл 100-500 экземплярпа çаптарса кăларнă. Çакă куçарусене тӳрлетсе лайăхлатма май паракан ăнаçлă меслет тесе шутланă. Çавăнпа та хăш-пĕр кăларăмсем Лондонри Библи çуртне çитеймен те. Анчах та çакăн пек ирĕклĕн ĕçлени БИБОна килĕшсех каймасть, унăн пуçлăхĕсем "Яковлев мистер" хăйсемпе канашламасăрах укçа-тенкĕ нумай тăкакланăшăн ӳпкелешме пуçлаççĕ. Сăмахран, Библи обществинчен ыйтмасăрах И.Я. Яковлев 1900 çулта Апостолсен ĕçĕсемпе Псаломсене 300 экземпляр кăларать, çавна май Гурий святителĕн Тăванлăх канашĕ çумĕнчи Куçару комиссийĕ укçа-тенкĕпе тивĕçтерме май çукки çинчен хыпарланă хыççăн тăкаксене саплаштарма БИБОран укçа ыйтса пăхать. "Ку вăл пирĕншĕн ытла та хака ларакан меслет" текелеççĕ пулин те, укçине памах тивет Библи Обществин. Мĕншĕн тесен унта Библие чăвашла куçарас ĕçе И.Я. Яковлевран лайăхрах тума пултаракан çын çуккине ăнланаççĕ.

Библие урăх чĕлхене куçарнă чухне БИБО тăлмачăсене Сăваплă çырусене куçармалли ятарлă мелсемпе паллаштарнă, ку вăл çирĕпленнĕ йăла пулнă. Анчах БИБО архивĕнче И.Я. Яковлева ятарласа Библие куçарма вĕрентни çинчен калакан пĕр хыпар та çук теççĕ. Ку вара Библие чăвашла куçарас ĕçре БИБО, тĕпрен илсен, кĕнекесене пичетлесе кăларма тата сутма пулăшакан спонсор çеç пулнине кăтартса парать. Тепĕр чухне вăл Библи кĕнекисене чăвашла çаптарса кăларнисене тĕрĕслесе тăма та ĕлкĕреймен.

Библин Çĕнĕ Сăмахне йăлтах И.Я. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ уçăлнăранпа 40 çул çитнĕ тĕле куçарса пĕтернĕ. Анчах пĕр тулли кĕнеке кăларас ĕç вăраха кайнă. Вырăс Православи Миссионер обществи, у.к. Святейший Синод укçа-тенкĕ çитменнипе хыпар ямасăр тăнă. Иван Яковлевич ку вăхăталла 60-тан иртнĕ ватă çын пулнă ĕнтĕ, унăн пурăнăç тăршшĕнче ку тĕлĕшпе тунă ĕçĕсене пĕтĕмлетес килнĕ. Шăпах çакăн пек йывăр шухăшсемпе пурăннă чухне ун патне Чĕмпĕре Библи обществин уполномоченнăйĕсем В.

Кинпа тепĕр çын пырса çитнĕ. Ку хутĕнче, 1908 çулхи çулла Иван Яковлевич, акăлчансен сĕнĕвне сӳтсе явнă хыççăн, кĕнекене вĕсен укçипе пичетлесе кăларма килĕшнĕ. Анчах пĕр условипе, Библи обществи пичетлесе кăларакан кĕнекесенче вырăссене кӳрентерме пултаракан кăтартусем, урăхла каласан, чăвашла куçарусене Раççейре акăлчансен укçи-тенкипе кăларнине палăртни пулмалла мар. “Пĕр-пĕринпе кĕскен канашласа илнĕ хыççăн Библи обществин представителĕсем çакăнпа килĕшнĕ, çапах та чăвашла куçарусен Чĕмпĕрте çаптарнă листисене Финляндие, Библи обществин кĕнеке хуплашкисене туса çĕлекен мастерскойсене ярса пама ыйтнă. Иван Яковлевич çакăнпа килĕшнĕ. Вара тинех акăлчансем ĕçе вăраха ямасăр 2000 кĕренкке стерлинглăх (ылтăн укçапа 20000 тенке яхăн) кредит уçма сĕннĕ. Çакăн хыççăн Иван Яковлевича Библи обществин хисеплĕ членне суйланă“.

1910 çул вĕçнелле тин ĕмĕтленнĕ ĕмĕте тултарас шанăç çуралнă. Çапла халиччен çапăнса тухнă куçарусене тĕплĕн тĕрĕслесе тӳрлетӳсем кĕртнĕ хыççăн, 1911 çул пуçламăшĕнче, Чĕмпĕрте "Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмах" пĕрремĕш хут тулли кăларăмпа 20000 экземпляр тиражпа пичетленнĕ. Ку ĕнтĕ калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулнă. Çакăн пек чаплă та сумлă чăвашла кĕнеке тухни И.Я. Яковлевшăн çеç мар, пĕтĕм чăваш культуришĕн пысăк çитĕнӳ пулни пирки никам та иккĕленмен. Тинех чăваш чĕлхи чухăн чĕлхе, вăл нихçан та кĕнеке чĕлхи пулма пултараймасть тесе И.Я. Яковлева ура хума хăтланакансен çăварĕсем хупăннă. Çитменнине тата çакнашкал чаплă кĕнеке чикĕ леш енче мар, чăваш культурин центрĕнче Чĕмпĕрте тухни те паллă пĕлтерĕшлĕ пулнă.

И.Я. Яковлев хăй те шутсăр савăннă, çакă Çĕнĕ Сăмахăн чăвашла кăларăмĕ валли ятарласа çырнă тарăн пĕлтерĕшлĕ Умĕн каланă сăмахран та курăнать. Унта вăл тăван халăха йăвашшăн çапла тархасланă: "Эй савнă тăванăмсем, вăй çитнĕ таран туса пынă ĕçĕм пулса çитнине эпĕ куртăм ĕнтĕ; манăн мĕнпур

шухăшăм çавăн çинчеччĕ, çавăншăн пуринчен ытла тăрăшрăм, ăна пуринчен ытла юратса пурăнтăм; ĕнтĕ хам хытă ĕненсе тăнă тăрăх, йывăр ĕçпе ирттернĕ пурăнăçăмра хам курса пĕлнĕ тăрăх, çак сăмахсене йăвашшăн каласа сире тархаслатăп, Турă сăмахне хисеплĕр, вăл ырăлăха Турă, ытти этемсене панă пек, сире те пачĕ. Çак ырăлăхран пуçне пирĕншĕн те, пĕтĕм тĕнчешĕн те ĕмĕрне те урăх ырăлăх пулас çук. Чăн малтан çав ырăлăха Турă Хăй кăмăл тунипе *суйласа илнисене, Израил ывăлĕсене* анчах панă. Халĕ сире те, *суя тĕнлĕ халăхсен* хисепĕнчисене, *тĕттĕмре, вилĕм тĕттĕмĕнче* ларакансене Христос çутти çутатрĕ. Апостол каланă пек, халĕ эсир те *суйласа илнисем, таса халăх, Турă çыннисем... ĕлĕк эсир халăх та марччĕ, халĕ Турă халăхĕ пултăр, ĕлĕк сире каçарманччĕ, халĕ сире каçарнă.* Эсир *ĕлĕк аякра тăраттăрччĕ, халĕ Іисус Христос урлă Унăн юнĕпе çывăх çынсем пултăр. Хăвăр ĕненнĕ тăрăх сире тивлет парса çăлнă; çăлăнасси хăвăртан килмен, вăл Турă панă ырăлăх.* Туррăн çав тĕрлĕ ырăлăхне хисеплеме вĕренĕр. Хăвăр хисепе хуманнипе, кăмăлăр пăсăлса ĕненме пултарайманнипе, пурăнăçăр йĕркесĕррипе çав ырăлăха çухатасран хăраса тăрăр. Апостол каланă пек, хăвăра тĕттĕмрен Хăйĕн тĕлĕнмелле çуттине чĕнсе Кӳртекенĕн ырăлăхĕсене пĕлсе тăрăр. Пурăнăçăра таса пурăнса, Христос вĕрентнине туса ирттерĕр; чиркӳре Турă сăмахне пĕтĕм кăмăлăртан итлесе тăрăр; килĕрте те Турă сăмахин кĕнекине хисеплĕ тытăр. Вулама та ăна таса чĕрепе, ырă ăспа тытăнас пулать. Савăнăç килсен те, хуйхă килсен те, çак савăнăç паракан, çăлăнăç кӳрекен кĕнекене ырă кăмăлпа, таса шухăшпа тытса вулас пулать, кил-çуртра ăна чи лайăх вырăнта усрас пулать. Анчах Турă сăмахне итленинчен, вуланинчен пуçне, ăна тата тĕрĕс ăнланни кирлĕ. Ăна Христос тĕнне сыхласа тăракан, тĕрĕс ăнлантарса паракан Чиркӳ вĕрентнĕ пек ăнласа илес пулать. Турă сăмахне ăнланма халĕ сире хĕнех мар ĕнтĕ. Хăвăр пĕлмен ют чĕлхепе вĕрентнĕ чух, Христос вĕрентнийĕн чăнлăхĕ, савăт айне лартнă çутнă çурта пек, сире

курăнмастчĕ. Павел апостол хăй те ĕлĕк каланă, *ыттисем пĕлмен чĕлхепе каласа паракан – çынна каламасть, мĕншĕн тесен ăна никам та ăнласа илеймест*, тенĕ. Халĕ ĕнтĕ, Иисус Христос Туррăмăрăн таса Евангелийĕне сире те хăвăр чĕлхĕрпе вĕрентме Турă пачĕ. Çакă пирĕншĕн – савăнăç, анчах çаках пире, эпир Турă сăмахне пĕлмен чухнехи пек пурăнсан, пысăк айăпа хăварать. Çавăн пекех – кăмăла хытаракан, ӳте астаракан Магомет тĕнĕ хыççăн каякансем те тӳрре тухаймĕç, хальхи илĕртекен çĕнĕ вĕрентӳсем хыççăн каякансем те айăпа юлĕç, мĕншĕн тесе *ун пек вĕрентӳсем çынна ирĕке кăларма пулаççĕ, хăйсем ирсĕр ĕç чурисем. Эй тăванăмсем, юлашкинчен тата Çăлаканпа, Унăн хăватлă вăйĕпе тĕреклĕленĕр; Туррăн вăрçă хатĕрĕсене пурне те тăхăнса хурăр.* Юратнă тăванăмсем*, сыхланса пурăнăр, чăн тĕне хытă тытăр, хăватлă тăрăр, тĕреклĕ пулăр,* вара *хамăра Çăлакан Іисус Христос Туррăмăрăн ырăлăхĕ сире пурсăра та* пулĕ. *Іисус Христоса ĕненнĕ тăрăх эпĕ сире пурсăра юратса тăратăп. Иван Яковлев.* Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ. Раштав уйăхин 24-мĕш кунĕнче, 1910-мĕш çулта".

Тĕрĕссипе, чăвашла Евангелие çакăн пек умсăмахпа пичетлесе кăларни БИБО правленине килĕшмен, Лондонра çакна истори традицийĕнчен пăрăнни пек хаклама пăхнă. БИБОн куçарупа издательство пайĕн управляющийĕ Р. Килгор Лондонран Раççее  В. Кин патне 1911 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче çырнă çырура çапла калани пур: "Чĕнӳ тем пек лайăх пулсан та, ăна эпир çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнса кăларса пăрахмалла. Яковлев мистера çакăн пирки епле те пулин çемçен пĕлтерме тăрăшсамăр".

И.Я. Яковлевшăн чăвашла Евангели халиччен пулман кĕнеке пек туйăннă, çавăнпа унăн вулакансене кăларăм тĕллевне тата пĕлтерĕшне ăнлантарса парас килнĕ. Ăна БИБО валли мар, тăван халăх валли кăларатпăр, тенĕ. Евангелие, ум сăмахне кăларса пăрахмасăр, хăй укçипе те кăларма хатĕр тăнă вăл.

Юлашкинчен Библи Обществин И.Я. Яковлев çавнашкал çирĕп тăнипе ирĕксĕрех килĕшме тивнĕ.

Кирек мĕнле пулсан та БИБО Сăваплă çырусен тĕп куçаруçин тата тĕп редакторĕн ĕçне пысăк хак панă. 1911 çултах, Евангели чăвашла тухнă хыççăн, И.Я.Яковлева Библи Обществин ют çĕр-шывсенчи Хисеплĕ членне илнĕ. Çак сумлă ят ăна, каярахпа, ватлăхри йывăр кунсенче, БИБОран пулăшу илсе тăма май панă.

Çавăн пекех пирĕн аслă Вĕрентекенĕмĕрĕн пурнăçĕнче пулса иртнĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ самант пирки каласа хăварни те ытлашши пулмĕ. Чăвашла Евангелие тата ун хыççăн çулталăкран çапăнса тухнă "Мухтав юррисен кĕнекине" И.Я. Яковлев II Микулай патшана та парнеленĕ. 1912 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче çут ĕç министрĕ Л.А. Кассо, ăна Санкт-Петербурга чĕнсе илсен, Иван Яковлевич Таса Синодăн обер-прокурорĕпе В.К. Саблерпа тĕл пулма шутлать. Чĕмпĕртен килнĕ инспектор ун валли çыру çырса хăварать. Çырура вăл чăвашла Евангелипе Псалтире, май килсен, II Микулай патшана парнелеме ыйтнă. В.К. Саблер Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторне лайăх пĕлнĕ, çавăнпа И.Я. Яковлевăн ыйтăвне тивĕçтерет, чăвашла кĕнекесене патшана парнелет. Кĕнекесенчен пĕрин ăшне И.Я. Яковлев çыру çырса чикнĕ. Ăна патша патне вырăсла çырнине шута илсе, чăвашла куçармасăрах илсе парар:

“С-Петербург, 1912.

Всепресветлейший, Державнейший, Великий Государь Император Николай Александрович, Самодержавец Всероссийский, Государь Всемилостивейший!

Господу Богу было удобно дать совершиться делу перевода на чувашский язык Слова Божия. Ныне я дожил до осуществления (мечты) своей молодости – дать своим соплеменникам Святое Евангелие и большую часть Библии на их родном, им понятном и доступном языке. Дело этого перевода начато было 40 лет тому назад с Высокомилостивого одобрения

Вашего незабвенного деда царя-освободителя, благословения Святейшего Синода и при живом сочувствии обер-прокурора графа Д.А.Толстого и К.П.Победоносцева; оно продолжалось под покровом благосклонного внимания вашего августейшего родителя царя-миротворца и ныне в Ваше благополучное царствование, наш возлюбленный монарх, совершено оно в своей главной и основной части. Словами не могу выразить своей бесконечной благодарности памяти Ваших отца и деда и Вам, государь за высокое покровительство моему слабому и несовершенному труду. Только это покровительство и сделало возмозжным его доведение до конца. Да благословит господь Ваши дни и да пошлет он в Вашем сыне такого же крепкого защитника и покровителя делу распространения веры Христовой, какими были в длинном ряде столетий его прадеды и его царь – христианин-отец.

Вашего Императорского Величества верноподданный".

Патша çак парнесемшĕн каярахпа И.Я. Яковлева чĕререн тав тунă. Çакна Святейший Синодăн обер-прокурорĕ В.К. Саблер Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторне Яковлева официаллă çырупа пĕлтерет, "Милостивый Государь, Иван Яковлевич. Его Императорское Величество Государь Император, милостиво приняв доставленные мне Вашим Превосходительством, для поднесения Его Императорскому Величеству, экземпляры Нового Завета и Псалтири на чувашском языке, в 8 день текущего ноября, в Царском Селе, Всемилостивейше повелеть соизволил благодарить Вас, Милостивый Государь, за поднесение означенных изданий.

О таковой Всемилостивейше благодарности имею честь уведомить Ваше Превосходительство.

Примите уверение в совершенном моем почтении и преданности".

II Микулай патша ку вăхăталла И.Я. Яковлева Чĕмпĕр кĕпĕрнаттăрĕн отчечĕсем тăрăх çеç мар,

хăйĕнпе тĕл пулнисем тăрăх та пĕлнĕ. Пĕрремĕш хут вĕсем Чулхулара, 1896 çулхи çулла, Пĕтĕм Раççей выставкинче тĕл пулнă. Иккĕмĕш хутĕнче – 1905 çулхи çу уйăхĕнче. Ун чухне çут ĕç министерстви И.Я. Яковлева Санкт-Петербургра Раççейĕн Хĕвел тухăçĕнчи вак халăхсене çутта кăларас ыйтупа ирттернĕ канашлăва чĕнсе илнĕ пулнă. Канашлу хыççăн унта хутшăннисене II Микулай патша ятарлă апата чĕннĕ. Çав апат вăхăтĕнче патшана И.Я. Яковлевпа паллаштарнă. Çак тĕл пулу пирки И.Я. Яковлев çапла аса илнĕ: “Николай Александрович император патшана манпа 1905 çулта, çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче е çĕртмен 1-мĕшĕнчеччĕ-и – хăш кунне лайăх ас тумастăп – Патша Салинче, Çĕнĕ Александр керменĕнче паллаштарнăччĕ. Паллашу ак мĕнле лару-тăрура пулса иртрĕ. Çав çулхи çу уйăхĕн пуçламăшĕнче мана Петербурга чĕнсе илчĕç. Атăл тăрăхĕнчи (каярахпа – Çĕпĕрти) вырăс мар халăхсене вĕрентес ĕçри йĕркесене палăртса çирĕплетес тĕллевпе туса хунă комиссие. Пирĕн комисси ĕçне ертсе пыраканни паллă славист Антон Семенович Будиловиччĕ. Комисси хăйĕн ĕçне вĕçленĕ хыççăн халăх çутĕç министрĕ Глазов генерал патшана комисси членĕсемпе паллаштарма кăмăл турĕ. Çакна палăртсах калама юрать, министр мана уйрăмах ăнланма тăрăшатчĕ. Палăртнă кун эпир, комисси членĕсем, пĕр хĕрĕх çын, Глазовпа Будилович ертсе пынипе Патша Салинчи вокзалтан ирхине 10 сехетсенче тӳрех кермене мар, кермен çывăхĕнчи пĕр çурта пырса çитрĕмĕр. Унта пире ирхи апат тутарчĕç. Апат хыççăн эпир кермене куçрăмăр. Чылайччен кĕтрĕмĕр патша тухасса. Комисси членĕсемпе Глазовсăр пуçне тĕл пулура урăх никамах та пулмарĕ. Патша пирĕн пата пĕчченех тухрĕ. Чи малта Будилович профессор тăратчĕ, иккĕмĕшĕ – Софья Владимировна Чичерина, унтан виççĕмĕшĕ – такамччĕ, тăваттăмĕшĕ – эпĕ, ыттисем ман хыççăн. Çакăн умĕн маларах Глазов пирĕнтен пуринчен те хамăр кам пулни, мĕнле вырăнта ĕçлени, наукăри ĕç-хĕл тата ытти çинчен çырса панă хутсене

илнӗччӗ. (Ун чухне эпӗ действительнӑй статский советник пулнӑ). Патша хӑйне ахаль ҫын пекех тыткаларӗ. Кӑмӑллӑ та ачаш куҫсемччӗ Унӑн. Пирӗнпе пуринпе те Глазов генерал паллаштарса пычӗ. Патша пире кашнинех алӑ тытрӗ. Ман тӗле ҫитсен, патша мана эпӗ хам ҫырса панӑ хут тӑрӑх темиҫе ыйту пачӗ: "Эсир кӗнекесене чӑвашла куҫарнӑ-и? Мӗнле кӗнекесем? Ӑҫта ӗҫленӗ? Эсир халӗ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн инспекторӗ-и?" "Чӑваш шкулне эпӗ йӗркелесе янӑ, ҫавӑн пекех эпӗ букварьсене, сӑваплӑ кӗнекесене, кӗлӗ кӗнекисене, Евангелие чӑвашла куҫарнӑ". "Тата ытти мӗнле кӗнекесене?" – ыйтать манран патша. "Петрушевскинне – вырӑс историйӗнчен илнӗ калавсене." Ҫакӑн хыҫҫӑн патша ҫапла хушса хучӗ: патриотла кӗнеке. Аван, ӑна куҫарнӑ пулсан. Тав тӑватӑп сире!" Унтан, пуҫне тайса, иккӗмӗш хут алӑ памасӑр, теприн патне куҫрӗ. Манпа вӑл 8 минут хушши, ыттисенчен чылай нумайрах калаҫнине пурте асӑрхарӗҫ".

## 6.4. Патриархӑн юлашки ӗмӗчӗсем

Библие куҫарнӑ чухне ялан тенӗ пекех малтан Ҫӗнӗ Сӑмахран пуҫлаҫҫӗ. Анчах И.Я. Яковлев кунта та ҫак йӗркене ҫирӗп пӑхӑнма тӑрӑшман. Чӗмпӗр шкулӗнче ӗҫлекен тата вӗренекен талантлӑ ҫынсен пултарулӑхӗпе усӑ курса, вӑл Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене те Евангелипе пӗр вӑхӑтрах куҫарма тытӑннӑ.

Калӑпӑшӗпе Авал хунӑ Сӑмах Ҫӗнӗ Сӑмахран виҫӗ хут пысӑкрах, унта пурӗ канонланӑ 39 кӗнеке, унсӑр пуҫне тата апокриф кӗнекисем 10 ытла. Сӑваплӑ Ҫырусене "канонланисем" тата "канонламаннисем" (апокрифсем) ҫине пайлаҫҫӗ. Ҫак икӗ ӑнлав пирки кӑштах каласа хӑварни вырӑнлӑ пулмалла. "Апокриф" тени "ӑшри, чун патӗнчи", "вӑрттӑн" тенине пӗлтерет. "Канон" пӗр-пӗр ӗҫе, пулӑма тӗрӗслемелли "виҫе" е "правило" тени пулать. Канонланӑ кӗнекесене пурне те ивритла ҫырнӑ, апокрифсем вара грекла е латинла ҫеҫ

пулнӑ, урӑхла каласан, вӗсене каярах вӑхӑтра ҫырнӑ. Авал хунӑ Сӑмаха грекла куҫарнӑ чухне ун шутне еврейла Библире пулман кӗнекесене те кӗртсе хӑварнӑ. Тӗслӗхрен, вӗсен шутне Товит, Юдифь, Маккавейсен кӗнекисем, Соломонӑн, Сирах ывӑлӗ Иисусӑн Ӑслӑлӑх кӗнекисем тата ытти те кӗреҫҫӗ. Ҫӗр-ҫӗр ҫул хушши ҫыраннӑ кӗнекесене Сӑваплӑ ҫырусем тесе шутланӑ. Библире халӗ вӗсене Авал хунӑ Сӑмах ("Ветхий Завет") ятпа палӑртаҫҫӗ. "Ветхий Завет" тени Ҫӳлти Турӑ сӗм авал Израиль халӑхӗпе Моисей урлӑ ҫыхӑну йӗркеленине пӗлтерет. Библири Сӑваплӑ ҫырусенче каласа хӑварнӑ тӑрӑх, Турӑ, Египетра вӑрах вӑхӑт хушши чуралӑхра пурӑннӑ еврей халӑхне "суйласа илсе" Моисей пулӑшнипе ирӗке кӑларнӑ, каярахпа Моисей Синай тӑвӗ ҫинче ҫак халӑх ячӗпе Турӑпа килӗшӳ тӑвать, Турӑ хӑй суйласа илнӗ халӑха – Израилӗн ывӑлӗсене – Ханаан ҫӗрӗ ҫинче (еврейсем ӗмӗртенпе пурӑннӑ ҫӗрте) ҫӑтмахри пек ырӑ пурнӑҫ туса пама шантарать, ҫакӑншӑн хӑйне ҫеҫ итлесе пурӑнма, пӗтӗм чун-чӗререн, пӗр иккӗленмесӗр ӗненсе тӑма ыйтать.

Авал хунӑ Сӑмахӑн пӗрремӗш пайӗ Моисей ячӗпе ҫыхӑннӑ пилӗк кӗнекерен тӑрать. Еврейсем тата мӗнпур христиансем ҫав кӗнекесене Моисей ҫырнӑ тесе шутлаҫҫӗ. Вӗсенче саккунсемпе правилӑсем тӗп вырӑн йышӑннипе пулӗ, еврейсем Моисей кӗнекисене пӗр сӑмахпа Тора, урӑхла каласан, Саккун тенӗ. Вӑл 52 пайран тӑрать, кашни шӑматкун кӗлӗ вӑхӑтӗнче пӗрер пайне вуланӑ. Авал хунӑ Сӑмаха ивритран грекла куҫарнӑ тӑлмачӑсем Моисейӗн пилӗк кӗнекине, содержанине кура, уйрӑм ят панӑ: Пултарни ("Бытие") – тӗнчене туса хуни тата этемсем, Израилӗн ывӑлӗсем ҫурални  ҫинчен – тӗнчен сӗм авалхи историйӗ; Тухни ("Исход") – Авраам йӑхӗсем Египетри чуралӑхран тухса тарни тата таса Турӑпа этем хутшӑнса пурӑнмалли условисем ҫинчен; Левит – Левит йӑхӗнчисене чӗнсе илсе хӑйсен пӗртен-пӗр Туррине хисеплесе, итлесе тата вӑл каланине тӗпе хурса ӗҫлесе пурӑнмалли йӗркесемпе паллаштарни ҫинчен; Хисеп кӗнеки ("Числа") – Турӑ сӗннӗ ҫӗр ҫине таврӑннӑ чухне тӑшман

йăхĕсемпе çапăçăва кĕрсе пысăк çухатусемпе йывăрлăхсем тӳснĕ халăх йышне шута илсе çырма пуçлани çинчен; Ас тутарса калани (“Второзаконие”) – Моисей Израиль ывăлĕсемпе сывпуллашас умĕн иртнĕ пурнăçа аса илсе тишкерни, Египетри чуралăхран тухсан пуш хирсенче ӳссе çитĕннĕ çамрăк ăрусене Турă шантарнă çĕр-шывра мĕнле пурăнмаллине вĕрентсе калани, Саккуна (Туррăн вунă халалне) çĕнĕрен вĕрентсе ас тутарни.

Британипе Ют Çĕр-шывсен Библи Обществи (БИБО) палăртнă тăрăх, И.Я. Яковлев Авал хунă Сăмахăнултă кĕнекине (343 страница) – Моисейĕн пилĕк кĕнекине тата Псалтире – 1897 çул тĕлнех куçарса пĕтернĕ. Вĕсене вăл ялахи пекеех сăнав шучĕпе сахал кăна çаптарса та кăларнă пулнă. Анчах пурне те пĕрле пухса уйрăм кĕнеке пек пичетлесе кăларма укçа çукки чарса тăнă. БИБОра ĕçлекенсенчен хăш-пĕрисем Псаломсемпе Моисейĕн пилĕк кĕнекине пичетлессипе çыхăннă тăкаксене тӳлесси пирки ыйту хускатнă пулнă, анчах Редакци комитечĕ ку ыйтăва татса парассине каярах вăхăта хăварма сĕннĕ. Библи обществи И.Я. Яковлев Авал хунă Сăмахăн кĕнекисене те çакăн пек пысăк хастарлăхпа куçарма пикенессе шутламан та, çавăнпа ку ĕç валли укçа-тенкĕ уйăрма хатĕр пулман. “Мухтав юррисен кĕнеки” валли, вăл куллен кирлине шута илсе, Хусанти Миссионер Обществине 1000 тенкĕ куçарса панă. 1900 çулта Псалтирь уйрăм кĕнекен çапăнса тухнă. Моисейĕн пилĕк кĕнекине те тем пекех пичетлесе кăларасшăн пулнă И.Я.Яковлев. БИБОна вăл çак куçарусене 50 кĕренкке стерлингпах пичетлеттерме ирĕк парасшăн тăнă. Анчах ку вăхăтра БИБОна Çĕнĕ Сăмах кăларăмĕ çеç интереслентернĕ.

БИБО Авал хунă Сăмаха куçарас ыйтупа интересленсех кайманни И.Я. Яковлев кăмăлне хуçман. Ахăртнех чун туртăмĕн хăвачĕ чăнласах çирĕп пулнă-тăр унăн. Кирек мĕнле пулсан та Библие куçарас ĕç мĕнле пыни çинчен БИБО представителĕсене пĕлтерсе тăма тăрăшнă.

1912 çулхи чӳк уйăхĕнче вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе Санкт-Петербургра пулнă чухне Иван Яковлевич хăйĕн

çывăх юлташĕпе – БИБОн Раççейри агентствин секретарĕпе В.Кинпа – тĕл пулать. Хăй Авал хунă Сăмахăн пирвайхи кĕнекисене чăвашла куçарни, вĕсене халăх мĕнле йышăннине сăнаса пăхас тĕллевпе сахал йышпа пичетлесе кăларма хатĕрлесе çитерни тата ку ĕçе йăлтах хăйĕн укçи-тенкипе туса пыни çинчен пĕлтерет.

Çак хыпара В. Кин пĕр тăхтаса тăмасăр БИБО референчĕ А. Тэйлор патне çитернĕ: ”Чĕмпĕрте пурăнакан Иван Яковлев мистер, Сăваплă Çырусене чăвашла куçаракан тăлмачă, темиçе кун каярах Санкт-Петербургра пулчĕ. Вăл склада кĕрсе мана çыру парса хăварчĕ, ăна сире акăлчанла куçарса ярса паратăп. Вăл мĕнле шухăш-туйăмсемпе пурăннине пĕлме интереслĕ пулĕ сирĕншĕн. Мана вăл Авал хунă Сăмахăн малтанхи кăларăмне пичете хатĕрлесе çитерни пирки пĕлтерчĕ, ăна вăл хăй шучĕпе пичетлет”. Çыру çине 1912 çулхи чӳкĕн 12-мĕшĕнче алă пуснă. Çав кунсенче И.Я. Яковлев Санкт-Петербургра Л.А. Кассо министр чĕннипе пулнă.

Часах А. Тэйлор Лондонра Куçарупа издательство комиссийĕн ларăвĕнче Яковлевăн çĕнĕ куçарăвĕсем пирки В. Кин çырнă çырупа паллаштарать. Анчах издательство комиссийĕ И.Я. Яковлев БИБО хушмасăрах “хăй ирĕкĕпе пуçарнă ĕçе” укçа-тенкĕ хывма килĕшмест. Енчен те Авал хунă Сăмах кĕнекисене Яковлев мистер, ниме пăхмасăр, хăй укçипех пичетлесе кăларас пулсан, пирĕн библиотека валли те пĕрер экземпляр туянса ярса пама ыйтатпăр”, – тесе çеç пĕлтереççĕ. Çавăн пекех И.Я. Яковлев хăй тĕллĕн кăларнă Библи кĕнекисенчен хăшĕ БИБО библиотекинче çук, çавсене те пĕрер кĕнеке тупса пама ыйтаççĕ.

Библие чăвашла куçарас ĕç пуçаруçи тата йĕркелӳçи И.Я. Яковлев айккинчен пулăшу кĕтсе ларман, кĕлмĕçленсе укçа-тенкĕ те ыйтса çӳремен. Çĕнĕ Сăмаха пичетлесе халăх хушшине сарас ĕç ăнăçлă пулса тухнипе хавхаланнăскер, Авал хунă Сăмаха та чăваш халăх аллине тăван чĕлхипе парасчĕ тесе малаллах талпăннă.

Анчах çав хушăра пĕр кăсăк ĕç пулса иртнĕ. БИБОра ĕçлекен чиновниксенчен пĕри Петербурга килнĕ

те чăвашла куçарусем ăнланмалла пулнипе пулманнине тĕрĕслесе пăхма шут тытнă. Çак тĕллевпе тĕрмере ларакансем патне пынă, лешсем мĕн вуланине ăнланманничен тĕлĕннĕ, ирĕксĕрех БИБО чиновникĕн (Подинăн) иккĕленӳллĕ шухăшсем çуралнă. Ырă мар хыпар часах Лондона çитнĕ. БИБО управленийĕ В. Кина ăнлантарса пама ыйтнă. 1913 çулхи авăнăн 18-мĕшĕнче Килгор Петербурга Кин патне çапла çырнă: ”Çак кунсенче Подин мистер Библи çуртне килсен, эпĕ унпа куçарусем пирки калаçрăм. Вăл тĕрмере ларакансемпе тĕл пулса калаçнă чухне чăвашла куçарăва ăнланма йывăр пулни çинчен пĕлтерчĕ. Куçарусем ăнăçлах пулса тухайман тесе шутлать пулас вăл. Тен, Эсир çакăн çинчен пĕлетĕр те пулĕ?”

Анчах ăслă В. Кин столицăри акăлчансен, БИБО чиновникĕсен иккĕленĕвне сирсе яма пĕлнĕ. Çак тĕллевпе вăл Петербургри вĕренӳ заведенийĕсенче чăваш студенчĕсене шыраса тупнă та иккĕленекенсене пурне те куçарусем ăнланмалла пулнине ĕненмелле кăтартса панă. 1913 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче хăйĕн тĕрĕслевĕн результачĕсем çинчен Р. Килгора пĕлтернĕ, “Адам Подин мистер кирек кам пулсан та вăл чăвашла куçарусен пахалăхне тĕрĕслекен эксперт мар. Ку чĕлхене пĕлмест вăл. Куçарусене мĕншĕн япăх тесе хак пани пирки ыйтрăм эпĕ унран. Вăл уçăмлă хурав параймарĕ. Тата эпĕ мĕнпур куçарусем пирки те çавăн пекех япăх шутланипе-шутламанни пирки ыйтрăм: «Çук, – терĕ вăл акăлчанла, – эсир кăна ытлашши ӳстерсе калатăр. Тĕрмере ларакансенчен ытларахăшĕ, хутла пĕлменскерсем, кĕнекере пичетленнĕ чĕлхе хăйсен тăван чĕлхи пулнине тӳрех ăнкарса илеймерĕç», – теме çеç пултарчĕ Подин мистер. Çавăн пекех Подин мистертан эпĕ Яковлев ĕçĕсем çинчен мĕн те пулин пĕлетĕр-и, тесе ыйтрăм. Яковлев, чăваш, пĕр енчен вăл чăваш шкулĕсен инспекторĕ, чăваш ачисем текех хутла вĕренмесĕр ан ӳсчĕр тесе тăрăшать, тепĕр енчен, хăй тавра пуçтарнă çынсемпе пĕрле вăл 30 çул хушши ĕнтĕ Çĕнĕ Сăмах кĕнекисене пĕрин хыççăн тепĕрне куçарнă тата редакциленĕ, çавна май хăйĕн ĕçне чи

çӳллӗ шая çитериччен темиçе хутчен тӳрлетсе çӗнетнӗ, юлташӗсемпе пӗрле ӗçе тӗплӗн вӗçлемесӗр нихăçан та пичетлесе кăларма васкаман. Ытти япаласем çинчен нумай пӗлнӗ пулин те Подин мистер çакăн пирки нимӗн те илтмен. Çавăнпа та хăй пачах ăнланман япаласем çинчен Лондона кайса калаçса çӳреме кирлех те пулман унăн”.

Телее, çакăн пек пăтăрмахсем çинчен Яковлев нимӗн те пӗлмен. Кин ăна кулянтарас темен пулас. Çав хушăрах Лондонран çыру хыççăн çыру киле пуçланă, вӗсенче пуринче ялан пӗр ыйтăвах пулнă, Яковлевăн Авал хунă Сăмахӗ пирки мӗнле те пулин хыпар çук-и?

1911-1914 çулсенче Чӗмпӗрти чăваш шкулӗнчи куçару ӗçӗ вӗренӳ округӗнчен тӗрлӗ ревизисемпе килсе чăрмантарнине пула чарăнса ларнă. Кӗвӗçсе усал сунакансем куçару ӗçӗ шкулта ӗçлекенсемпе вӗренекенсене хăйсен тӳрӗ тивӗçне пурнăçлама чăрмантарать тесе айăплама хăтланаççӗ. “Иртнӗ 1911 çул хушшинче, çавăн пекех кăçалхи 1912 çулта та округран манăн ӗçе тапăнсах тăчӗç тата пӗр вӗçӗмсӗр йывăрлăхсем кăларса тăратаççӗ. Юлашкинчен мана сепаратист тесе айăпларӗç”,– тет хăйӗн аса илӗвӗсенче И.Я. Яковлев.

1913 çулхи авăн уйăхӗнче Хусан вӗренӳ округӗн инспекторӗ Богоявленский шкул ӗçне вунă куна яхăн тӗрӗсленӗ. Ун хыççăн халăх çутӗç министерствине çакăн пек отчет тăратнă: “Хам куçпа курса ӗненнӗ тата учительсем вӗрентсе хатӗрлекен шкулта çӳретекен çырусене пăхса тухнă хыççăн çакна калама тивӗçлӗ: чăн-чăн статски советник Яковлев – националист-чăваш, çавăнпа та ăна шанса панă вӗренӳ заведенийӗсем пурте чăвашлăхпа палăрса тăраççӗ. Çакă вăл учительсем хатӗрлекен шкулта тата ун çумӗнчи вӗренӳ заведенийӗсенче чăваш чӗлхине вӗрентнинчен те, тӗн вӗрентӗвӗпе çыхăннă кӗнекесемпе кӗлӗ кӗнекисене чăвашла вуланинчен те курăнать”. Тӗрӗссипе, Богоявленский Чӗмпӗр чăваш шкулне пенси çулне çитнӗ И.Я. Яковлева ӗçрен кăларттарас тӗллевпех килнӗ пулнă.

И.Я. Яковлев çак ревизи хыççăн çутĕç министрĕ Игнатьев граф патне хăйĕн куçару ĕçĕ тата чăвашла кĕнекесем кăларнă пирки акă мĕн çырса пĕлтернĕ: “Шкул çумĕнче (кĕнекесене чăвашла куçарса кăларакан) нимĕнле комисси те çук. Анчах эпĕ 1878 çултанпа Православи миссионер обществин куçару комиссийĕн членĕнче тăратăп. Унсăр пуçне мана 1875 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне уйăрса лартнă чухне Сăваплă Çырусемпе кĕлĕ кĕнекисене тата ытти кĕнекесене чăвашла куçарассине манăн тивĕçсен шутне кĕртсе çирĕплетнĕ. Куçарусем мĕнле майпа мана хамăн тĕп тивĕçсене пурнăçлама “чăрмантарнине” чăн-чăн статски советник Богоявленский шкулпа çиелтен çеç паллашнă хыççăн ниепле те хаклама пултараймасть”.

Пĕтĕм йывăрлăха чун çывăхне илсе, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр пăшăрханнă И.Я. Яковлев. Çав тĕрĕслевсене шăла çыртса тӳссе ирттерет чăваш шкулĕн пуçлăхĕ. Анчах куçару ĕçĕн хастарлăхĕ чакать. Паллах, тăван халăхшăн ырми-канми ĕçленине чылайăшĕ ăнланманни, çак çул çинче тепĕр чухне тăр пĕччен тăрса юлма тата час-часах ӳпкев сăмахĕ илтме тивни 65 çулхи Иван Яковлевичăн чĕрине ыраттарнă. Хăй пуçарнă ĕç тĕрĕс те кирлĕ пулнине ăнланни çеç йывăр самантсенче пуçа усма паман, малаллах тăрăшма хистенĕ. “Турă пулăшасса шанни тата хамăн ĕç халăха ĕмĕрлĕх кирлĕ пулнине ăнланни чуна çемçететчĕ”,– çырнă вăл чунĕ кӳтсе килнĕ чухне.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнă хыççăн И.Я. Яковлевпа Библи обществи хушшинчи çыхăну пĕр хушă татăлать. 1917 çулхи революци хыççăн пирĕн çĕр-шывра БИБО агентствине хупаççĕ. 1921 çулхи çулла тин И.Я. Яковлевăн ывăлĕ Алексей Иванович пуçарнипе çыхăну çĕнĕрен тĕвĕленет. Ун чухне Мускавра Британин Коммерци миссийĕ ĕçленĕ, вăл Раççейри чиркӳ çыннисемпе БИБО хушшинче çырусем çӳретме пулăшакан кĕпер пулса тăнă. Çак мисси ĕçне ертсе пынă Х. Монтгомери Гроув 1921 çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче И.Я. Яковлев ывăлĕпе – Мускав

университечĕн профессорĕпе тĕл пулни ҫинчен ҫырать: "Яковлев мистер хăй хальхи вăхăтра профессор шалăвне илменни тата пурăнма укҫи ҫукки ҫинчен каласа пачĕ. Унăн ашшĕ хăй ĕмĕрĕнче ĕҫлесе илнĕ пĕтĕм укҫи-тенкине йăлтах чăваш чĕлхине аталантарма тата чăвашла кĕнекесем кăларма парса пынă, халĕ, ватлăх кунĕсенче, пĕр пуссăр тăрса юлнă. Профессор ашшĕне тăрантарса пурăнайманни ҫинчен каларĕ. Мĕнле те пулсан укҫан пулăшу памасан ашшĕ хĕлле выҫăпа вилесрен шикленнине пĕлтерчĕ".

БИБОран ҫийĕнчех хурав кĕтсе илейменрен авăнăн 26-мĕшĕнче М. Гроув Лондона тата тепĕр хыпар ярать: "Сэр, Иван Яковлев мистера 1913 ҫулхи ҫу уйăхĕнче Сирĕн Обществăн Хисеплĕ членне илнĕ пулнă. (Тĕрĕссипе, маларах асăннăччĕ ĕнтĕ, Хисеплĕ ята И.Я. Яковлев 1911 ҫултах илнĕ, ҫакăн ҫинчен БИБОн Куҫару-издательство комиссийĕн протоколĕнче ҫырса хăварнă. Хисеплĕ член Дипломне вара 1913 ҫулта тин панă). Унăн ывăлĕ каланă тăрăх, Сирĕн общество унччен маларах ашшĕне куҫарусемшĕн пĕрре мар укҫа сĕннĕ, анчах вăл килĕшмен, мĕншĕн тесен ун чухне вăл хăйех тулăх пурнăҫпа пурăннă. Халĕ унăн нимĕн те ҫук. Енчен те эсир пулăшмасан, хĕлле ватă ҫынна выҫлăх ҫапса хуҫма пултарать".

БИБОн Куҫарупа издательство пайĕн пуҫлăхĕ Р. Килгор 1921 ҫулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче М. Гроув патне ҫапла ҫырать: "Ҫурлан 9-мĕшĕнче ҫырнă ҫырăвăр пирĕн пата отпуск вăхăтĕнче ҫитнĕ, ҫавна пула комисси ăна каярах пăхса тухрĕ.

Библи Ҫуртĕнче эпир Иван Яковлев мистера яланах сума сунă. Вăл Раҫҫейри пирĕн секретарьсенчен пĕрин (В. Кинăн. – *И.М.*) ҫывăх юлташĕ пулнă. Укҫа-тенкĕпе пулăшас тесен эпир ăна мĕнле ярса памаллине пĕлместпĕр. Енчен эсир хăвăр пĕр 10 кĕренкке стерлинг тăкаклама пултарайсан, каярахпа эпир ҫав укҫана Сирĕн ятăрпа тавăрса панă е кунти счетăр ҫине куҫарнă пулăттăмăр", – тенĕ.

И.Я. Яковлевăн Англири тусĕсем уншăн чăнласах пăшăрханнă, май килнĕ таран пулăшма тăрăшнă. Ҫав

хушăрах вырăнти влаç Чăваш наци обществинчи хăшпĕр йĕксĕксем хĕтĕртнипе пирĕн Вĕрентекенĕмĕртен мăшкăллама пăрахман. Ултавлă çăхавсене пула допроссем тунă, хваттерне ухтарнă. Хăй йĕркеленĕ тата пĕр улшăнмасăр 50 çул ытла ертсе пынă шкултан хăваласа кăларса янă. Айăплама тивĕçлĕ сăлтавсем тупайманнипе тарăхса, çав çынсемех унăн выльăх картин алăкне ватса кĕрсе ĕнине вăрласа кайнă. 1921 çулхи выçлăх хăрушлăхĕ çинчен илтнĕ акăлчансем И.Я. Яковлева пулăшусăр хăварма пултарайман. Вĕсенчен Америка урлă 10 долларлăх посылкăсем илнĕ хыççăн Яковлевсем, ашшĕпе ывăлĕ, БИБОна тав çырăвĕсем янă, пурлăх тĕлĕшĕнчен пысăк пулăшу панăшăн çеç мар, хăйсене манманшăн, хисепленĕшĕн, хавхалантарнăшăн чĕререн тав тунă. Çак йывăр вăхăтра та ватă Иван Яковлевич хăйшĕн çеç çунманни, хăйĕнчен ытларах нушаллă тăванĕсене пулăшма тăрăшни палăрнă. Илнĕ посылкăсене вăл виççе пайлама, пĕр пайне – Н.И. Ильминскин 80 çулхи арăмне, Екатерина Степановнăна, тепĕрне тăван хĕрне Лидия Некрасовăна ярса пама ыйтать.

Библи обществипе çĕнĕрен йĕркеленнĕ çыхăну Шур сухала çав тери хавхалантарнă. Ун чухне вăл 74 çулта пулнă ĕнтĕ. Чун юратнă ĕçне малалла тăсас шухăшĕ куç хупма памасăр пуçне пăралама тытăнать. Библие куçарас шанăç чĕрĕлет. 1922 çулхи кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче Лондона янă тав çырăвĕнче те вăл хăйĕн тертлĕ пурнăçĕ çинчен мар, Авал хунă Сăмахăн кĕнекисене куçарасси çинчен çырать. Çырăва акăлчанла çырнă, эпир ăна чăвашла илсе паратпăр: “Раççей, Чĕмпĕр, Чăваш институчĕ.

Хисеплĕ господасем, Эсир Хăвăрăн хаклă пулăшăвăра ман патма яни пирки эпир вырăс Раштавĕ умĕн хыпар илтĕмĕр. Ырă кăмăлтан çакăн пек пысăк пулăшу панăшăн çеç мар тата унтан та питрех пахараххишĕн, Британин Мускаври представителĕ манăн кăмăл-туйăма çĕклентерсе хавхалантарнăшăн манран хамран тата çемьемрен чĕререн тухакан тав сăмахне йышăнсамăр. Пирĕн чухăн тата Турă маннă çĕр-шывра

çакнашкал тимлĕх палли мĕн тери паха пулнине хаклама та йывăр.

Ман валли янă укçана эпĕ тата та питрех нушаллисем хушшинче пайларăм – манăн юратнă вĕрентекенĕмĕн, аслă Николай Ильминскин тăлăха юлнă арăмĕнчен (Катерина Ильминскаяран, Хусан) тата Лидия Некрасовăран (Мускав, Петровский-Разумовский урамĕ) пысăк тав. Эсир ирĕк панипе çакна палăртма хăюлăх çитеретĕп, сакăр вунă çулхи Катерина Ильминская ытти кирек хăш вырăс çыннинчен те ытларах çак пулăшăва тивĕçлĕ. Вăл Николай Ильминскин юратакан арăмĕ çеç мар, унпа пĕрле пĕр ĕç тунă чăн-чăн çын пулнă, унăн ĕçне малалла тăсаканĕсемпе пиншер вĕренекенне ăшшăн йышăнса пурăннă кил-çурт вучахне сӳнме паман.

Ильминский ячĕ – Христос вĕрентĕвĕн çутине вырăс мар вак халăхсем хушшине саракан апостолăн ячĕ пекех миллионшар вырăс çыннишĕн тата уйрăмах Раççейĕн Тухăç пайĕнче пурăнакан тĕрлĕрен вырăс мар йăхсемшĕн таса та сăваплă ят. Тен, ăна пĕлсех те каймаççĕ пулĕ – çавăнпа та унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă статьяна асăнса хăварма ирĕк парсамăр. Ăна Мускав университечĕн докторĕ Алексей Яковлев (манăн ывăлăм) çырнă – “Восток и Запад”, 1913, июль. № 43.

Британипе Ют çĕр-шывсен Библи Обществипе 30 çул ытла çыхăну тытма тивĕçлĕ пултăм эпĕ, çавăнпа та вырăс пурнăçĕн иртнĕ хурлăхлă (синкерлĕ) çулĕсенче тунă ĕçсем пирки кĕскен те пулин хыпар яни Сирĕншĕн кăштах та пулин интереслĕ пулĕ тесе шутлатăп. Британипе Ют Çĕршывсен Библи Обществи 1910 çулта чăвашла кăларттарнă Çĕнĕ Сăмахпа Псаломсене чăвашсем пит те кăмăлласа йышăнчĕç теме пултаратăп, мĕншĕн тесен вĕсем ялсенче пурăнакан ахаль чăваш халхишĕн ăнланмалла пулса тухрĕç. Экземплярсен чылай пысăк пайне (20000 çаптарнă) хуплашкисене çĕлеттермешкĕн Петроградран Финляндие ăсатнăччĕ, халĕ вĕсем тĕрĕс-тĕкел тăрасса шанатăп.

Иртнĕ 25 çул хушшинче кăна эпĕ Авал хунă Сăмаха куçарас енĕпе тăрăшрăм. 1914 çулта Моисейĕн 5 кĕнекине кăларма хăтлантăм, шел те, çак ĕç 1917-1922

çулсенчи синкерлӗ вӑхӑта пула 19-мӗш листа тӗлӗнче чарӑнса ларчӗ, 20-мӗш листине наборланӑ хыççӑн ("Хисеп кӗнекин" 19-мӗш сыпӑкне) салатса пӑрахрӗç. "Хисеп кӗнекин" вӗçӗ тата "Второзакони" ал çырӑвӗнче упранаççӗ, вӗсем пичете хатӗр. Виçӗ экземпляртан пӗрне – çаптарнӑ 19 листана – ятарласа упрама сире ярса парас терӗм. Тата çакна хушса каласшӑн, хальхи вӑхӑтра тӗрлӗ çӗрте упранакан кӑларӑмсене эпӗ БИБОна ярса панӑ пулӑттӑм. Маларах эпӗ Иов, Иисус (Навин. – *И.М.*), Руфь кӗнекисене чӑвашла куçарса çаптарнӑччӗ..." Иртнӗ 5 çул хушшинче манӑн ку ӗçе вӗçлеме нимӗнле май та пулмарӗ. Пурнӑç условийӗсем çапла майӗпен лайӑхланса пырсан, куçару ӗçне çӗнӗрен йӗркелесе яма пулатех-тӗр. 75 çула çитсе пынӑ май хам çине çав тӗрлӗ пысӑк ӗç илме хӑюлӑх çитерейместӗп. Енчен те эсир мана туслӑ пулӑшу пама хирӗç пулмасан, ӗçе хӑвӑртлатма май пулӗччӗ. Пулӑшу пирки каласан, укçа мар, апат-çимӗç посылкисем кирлӗ (Америкӑн Пулӑшу Администрацийӗ 10 долларлӑх 1 посылка ярса панӑччӗ, унӑн штаб-хваттерӗ Мускавра Спиридоновкӑра, Америка миссийӗ ертсе пыракан секцийӗ Лондонра). Тӑлмачӑсен штачӗ эпӗ ертсе пынипе Авал хунӑ Сӑмаха малалла куçарма пуçӑнтӑр тесен (малтанласа ал çырӑвӗпе), уйӑхне пӗр 3-5 посылка çителӗклӗ пулнӑ пулӗччӗ.

Иван Яковлевран тата тепӗр хут чӗререн тухакан тав сӑмахне йышӑнсамӑр.

Иван Яковлев".

Çак çырӑва БИБОна 1922 çулхи нарӑсӑн 24-мӗшӗнче Моисейӗн Пилӗк кӗнекин вӗçленмен куçарӑвӗн копийӗпе пӗрле (куçару Хисеп кӗнекин 18 сыпӑкӗн 5 стихӗ таран) Британин Мускаври коммерци миссийӗ урлӑ ярса панӑ.

БИБО И.Я. Яковлев çырӑвӗ çине ӑшшӑн хуравланӑ: "Иван Яковлев профессора. Чӑваш институчӗ. Чӗмпӗр.

Хисеплӗ Яковлев профессор!

Сирӗн кӑрлачӑн 24-мӗшӗнче янӑ çырӑвӑра илсе вулама кӑмӑллӑ пулчӗ. Эпир Сире пама пултарнӑ пӗчӗк

çеç пулăшăва Эсир çав тĕрлĕ пысăк хак панине пĕлсен эпир питĕ савăнтăмăр.

Эсир Авал хунă Сăмаха чăвашла куçарас енĕпе ĕçлени пирки эпир тахçанах пĕлетпĕр тата Эсир хăвăр шутăрпа çаптарнă Пилĕк кĕнеке гранкисемшĕн тав тăватпăр. Пичетлеттернĕ экземплярсене те пирĕн Обществăна ярса пама сĕнни Эсир пире ырă суннине пĕлтерет. Вĕсене ярса памалли майсем тупăнсан, эпир Сирĕн куçарăвăрсене йышăнма хавас, анчах та халĕ лару-тăру лăпкă маррине пула нимех те тума май çук.

Хальхи вăхăтра эпир Сире укçа-тенкĕпе пулăшма пултараймастпăр пулсан та манăн ку ĕçе малалла тăсас килет. Ал çырăвĕсене хăвăр патăрта упраса е пирĕн пата упрамашкăн ярса панă май Эсир Авал хунă Сăмаха куçарса хатĕрлес енĕпе малалла ĕçлеме пултарайăр-ши. Хамăрăн секретаре, мистер Дэвидсона эпĕ Кĕнекене сарас ыйтăва тишкерме хушатăп. Енчен те вăл чăнласах кирлине ĕнентерме пултарайсан, упир унпа хаваспах усă курнă пулăттăмăр. Мистер Дэвидсон çавăн пекех пĕтĕм ыйтупа доклад хатĕрленĕ. Эпир Сире кăмăлтан ырă суннине шантаратăп.

Чăнласах Сирĕн.

Издательство управляющийĕ".

Ку çырăва чăваш патриархĕ патне БИБОн издательство пайĕн управляющийĕ Р.Килгор 1922 çулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче çырнă.

Яковлев та Британин коммерци миссийĕ урлă "енчен те эсир ку ĕçпе çыхăннă кулленхи тăкаксене саплаштарма, урăхла каласан, секретарь ĕç укçине, çыру хатĕрĕсене парса тăма пултарайсан", хăй те çаплах тăвасшăн çунни çинчен хыпарлать.

1918 çулта БИБОн Раççейри агентствине хупнă хыççăн пирĕн çĕршывра пурăнакан халăхсен чĕлхине куçарнă Библи кĕнекисене çак обществăн Финляндири филиалĕ Гельсингфорс хулинче кăларса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Чĕмпĕрте çаптарса кăларнă Евангелин темиçе пин кĕнекине хуплашкисене туса çĕлеттермешкĕн шăпах çавăнта ăсатнă. Маларах çак филиалăн секретарĕнче Коэн хушаматлă акăлчан ĕçленĕ, 1922 çулта – В. Дэ-

видсон. Вĕсем иккĕшĕ те Иван Яковлев ĕçĕсене аван пĕлнĕ тата вăл ĕмĕр тăршшĕпех тĕн литературине куçарас ĕçре вăй хунине пысăк хак панă.

1922 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Р. Килгор В. Дэвидсона çапла çырса пĕлтернĕ: "Сире эпĕ Яковлев профессор патне янă çыру копине ярса паратăп. Эсир ас тума тивĕç, вăл – мĕн виличченех общество правленийĕн хисеплĕ членĕ. Кин ун пирки яланах ырăпа çеç çыратчĕ. Вăл чăвашла куçарнă Çĕнĕ Сăмаха пичетлесе кăлартăмăр эпир. Ун чухне условисем аванччĕ те вăл Авалхи Сăмаха та куçарма сĕнчĕ. Хальхи вăхăтра Авалхи Сăмах халăх хушшине анлăн сарăлассăнах туйăнмасть, анчах та, тен, каярахпа çав куçарупа усă курмалли майсем уçăлĕç. Ку ыйтупа хăвăрăн шухăшăра пĕлтерсен аван пулмалла. Шансах тăратăп, кĕнекепе усă курма май килейсен, куçарăва аллa илес тесе пирĕн Комитет Яковлев профессора укçатенкĕ енĕпе пулăшма хавас пулĕ".

Авал хунă Сăмаха куçарса пĕтерес тĕллевпе БИБО И.Я. Яковлевăн опычĕпе тата пĕлĕвĕсемпе туллин усă курма тăрăшнă. Анчах ку вăхăтра И.Я. Яковлев тăтăш чирлесе тăракан ватă çын пулнă ĕнтĕ, ун çумĕнче малтанхи пек чунне парса, хавхаланса ĕçлекен чăвашсем те юлман.

Хăйĕн аса илĕвĕсенче палăртнă тăрăх, И.Я. Яковлев Авал хунă Сăмах кĕнекисенчен Псалтире çеç хăй куçарнă: "Эпĕ Псалтире чăвашла куçартăм. Ăна эпĕ хамах темиçе хутчен тӳрлетсе çĕнетрĕм. Çавна май мана Федор Данилов (чăваш, ĕçкелеме юратаканскер) тата Константин Иванов (чăваш, поэт, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренчĕ вăл, анчах курсран вĕренсе тухаймарĕ) пулăшрĕç. Псалтирĕн юлашки редакцине эпĕ Иванов пулăшнипе питĕ те лайăх якатса çитертĕм.

Пĕтĕмĕшле илсен, куçару ĕçне эпĕ (çак тата ытти кĕнекесене куçарас ĕçе) питех те нумай хутшăннă, уйрăмах – Çĕнĕ Сăмахпа Псалтире куçарас ĕçе.

Чăвашла куçарусем тунă чухне мана çак çынсем пулăшу панă: Маккавейсен, Иисус Навин, Руфь, Юдифь, Товит, Сирах кĕнекисене куçарма – чăвашран

тухнӑ священник Петр Васильевич Васильев (халӗ те пурӑнать-ха) пулӑшрӗ. Библин 1, 2, 3, 4 кӗнекисене (Моисейӗн пилӗк кӗнекине) куҫармашкӑн хамӑн тӑван Иван Степанов пулӑшрӗ, вӑл та пурӑнать-ха (Степанов Иван Степанович 1897 ҫулта Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ, 1901 ҫулта И.Я.Яковлевӑн аппӑшӗн хӗрне Татьяна Савельевна Савельевӑна качча илнӗ. 1897-1907 ҫулсенче тӗрлӗ ялти шкулсенче вӗрентнӗ, 1907-1919 ҫулсенче Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ. – *И.М.*).

Ҫӗнӗ Сӑмах кӗнекисене куҫарнӑ чухне мана ҫавсем те тата ытти чӑвашсем те пулӑшнӑ (хӑшне-пӗрне мана та пуҫланӑ ӗнтӗ). Ҫавна май эпӗ кашни меллӗ самантпа, кашни тӗл пулупа усӑ курма тӑрӑшаттӑмччӗ.

Чӑваш шкулӗнчи преподавательсенчен куҫару ӗҫӗнче мана Чӑваш шкулӗн священникӗ Иван Дормидонтов тата, кӑштах ҫеҫ, шкулти тепӗр священник Василий Никифоров пулӑшнӑ.

Ҫапла калама пултаратӑп, куҫару ӗҫӗнче эпӗ нумай, калама ҫук нумай вӑй хунӑ. Халӗ те, акӑ, Библие чӑвашла куҫарас енӗпе ӗҫлетӗп. 4-мӗш кӗнекене (Хисеп кӗнекине) пичетлеҫҫӗ. Ӑна, ҫавӑн пекех Библин пичетлесе кӑларман ытти пайӗсене те, тахҫанах куҫарнӑ. Эпӗ ӑна пӗрре мар пӑхса тухса тӳрлетнӗ, ытти тӗрлӗ ҫынсем, ҫав шутра вӗсемпе пӗрле хам та хутшӑнса темиҫе хутчен те редакциленӗ. Пилӗк кӗнекерен пурне те (Моисейӗн пилӗк кӗнекине) пичетлесе кӑларас килет. Хам ҫине эпӗ чи кирлине – редакцилессипе корректурӑна илтӗм. Анчах кӗнеке ҫаптарасси питӗ вӑраххӑн пулса пырать, ӗҫӗ виҫесӗр хаклӑ (унчченхинчен вӑтӑр хут хаклӑрах). Куратӑр пулӗ ӗнтӗ, ватлӑхра та эпӗ, ку чухнехи лару-тӑрура та юратнӑ ӗҫе пӑрахмастӑп”.

И.Я. Яковлев ертсе пынипе тӑлмачӑсен ушкӑнӗ Авал хунӑ Сӑмахран пурӗ 12 кӗнеке, Моисейӗн 5 кӗнекине — Пултарни, Тухни, Левит, Хисеп, Ас тутарса калани, Иисус Навин, Руфь, Товит, Иов кӗнекисене, Псалтирь, Сирах ывӑлӗн Иисусӑн Ӑслӑлӑх кӗнекине тата Маккавейсен пӗрремӗш кӗнекине куҫарнӑ. Ку вӑл Авал хунӑ Сӑмахӑн пӗтӗм калӑпӑшне илсессӗн 33,8 процентпа танлашать,

апла пулсан тепӗр 66,2 процентне куçармалла пулнӑ. Анчах та çак шута Хисеп кӗнекин вӗçӗ тата Ас тутарса каланин ("Второзаконин") чӑвашла ал çырӑвӗсем кӗмеççӗ. Унсӑр пуçне И.Я.Яковлев аллинче ытти нумай-нумай ал çырӑвӗсем (черновиксем) упраннӑ. Акӑ мӗнле аса илет вӑл хӑйӗн "Манӑн пурӑнӑç" кӗнекинче çав куçарусем пирки: "Чӑвашсене манӑн пӗтӗм Библие чӑвашла куçарса парас килет. Ку таранччен ун пек куçару пулман-ха. Библин уйрӑм пайӗсене эпӗ хам та куçарнӑ, ыттисен куçарӑвӗсене тӳрлетсе хатӗрленӗ. Çавна май манӑн тӗн пӗлӗвӗсене сарас тӗллев çеç мар, халӑхӑн культура пӗлӗвне ӳстерес тӗллев те пулнӑ. Урӑхла каласан, чи малтанах Библирен чӑваш халӑхне ырӑ витӗм кӳме пултаракан кӗнекесене куçарма палӑртаттӑмччӗ. Çак тӗллевпе, йӗркипе йӑлтах куçармасӑр, эпӗ Маккавейсен кӗнекине (патриотла туйӑмсемне çирӗплетме пулӑшакан кӗнеке вырӑнне хурса), ваттисем уйрӑмах кӑмӑллакан Сирах кӗнекине, Турӑ янӑ йывӑрлӑхсене тӳссе ирттернӗ чухне çирӗп тата тӳсӗмлӗх кӑтартма вӗрентекен Иов кӗнекине тата "Юдифь", "Руфь" ятлӑ пӗчӗк кӗнекесене куçартӑм.

Пӗтӗм ӗмӗр тӑршшӗпех ӗмӗтленсе пурӑннӑ пек Библие йӗркипе тата йӑлтах чӑвашла куçарса кӑлариччен пурӑнса çитерейместпӗр пулӗ, тесе шутлатӑп. Халӗ манра Библие куçарнӑ черновиксем нумай. Анчах вӗсене пӑхса тухса тӳрлетмелле-ха...

Манӑн тата тепӗр пысӑк ӗмӗтӗм пур. Анчах вӑл пурнӑçа кӗнине те курса пулмасть пулӗ. Ку вӑл – чиркӳсенче служба ирттернӗ чухне вуламалли чӑвашла куçарнӑ кӗнекесене пурне те пӗрле пухса Святейший Синодӑн вырӑсла кӑларӑмӗнчи йӗркепе çӗнӗрен пичетлесе кӑларасси".

Тӗрӗссипе, И.Я. Яковлев чӑвашла куçармалли Библи кӗнекисене тӑлмачӑсене йӑлтах сыпӑкӑн-сыпӑкӑн валеçсе панӑ пулнӑ. Анчах Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче хӑйӗнче халиччен "чӑваш турри" вырӑнне хурса хисеплесе тӑнӑ И.Я. Яковлева хирӗçле шухӑш-кӑмӑл ӳсме пуçлани, ватӑ Шурсухалӑн сывлӑхӗ хавшаса пыни тата пӗрремӗш тӗнче вӑрçи пуçланнӑ хыççӑн пӗтӗмӗшле ла-

ру-тăру улшăнни те куçару ĕçне сӳрĕклентернĕ. Халиччен тăлмачăсене православи миссионер обществин Хусанти куçару комиссийĕ урлă укçа-тенкĕпе е ытти майсемпе (тĕслĕхрен, чăваш прихучĕсенче авантарах вырăна ĕçе вырнаçтарса) хавхалантарнă пулсан, малашне çак ĕçĕн ертӳçи нимĕнле çăмăллăхсем пирки те шантарма пултарайман. Çитменнине Лондонри Библи обществипе те çыхăну татăлать.

Хăйĕн аса илӳсен кĕнекинче И.Я. Яковлев чăваш халăх поэтне К.В. Иванова ырăпа çеç аса илет, вăл чаплă поэт тата куçаруçă пулнине палăртать. Константин Иванов 1914 çулхи кĕркунне йывăр чирлесе ӳкнĕ хыççăн чӳк уйăхĕнче сипленме тесе тăван ялне Слакпуçне тухса кайнă. Аслă Вĕрентекен ыйтнипе вăл Моисейĕн пилĕк кĕнекин куçарăвĕсене пăхса тухса тӳрлетме тата куçару ĕçне малалла тăсас тĕллевпе ытти хушусем те илнĕ. 1915 çулхи пуш уйăхĕнче К.В. Иванов йывăр чире çĕнтереймесĕр çĕре кĕрет, Моисейĕн Пиллĕкмĕш кĕнекине куçарса пĕтереймест. Çакăн хыççăн, И.Я. Яковлев унăн ашшĕ-амăшĕнчен тата тăванĕсенчен Константин Васильевичăн ал çырăвĕсене, пĕтĕм архивне Чĕмпĕр чăваш шкулне тавăрса пама ыйтнă. Поэтăн шăллĕ, Квинтилиан, ун чухне Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Куçару ал çырăвĕсене вăл Иван Яковлевича илсе килсе панă, анчах пиччĕшĕн тулли архивне ашшĕ-амăшĕн килĕнчех хăварма шутланă. Граждан вăрçи çулĕсенче К.В. Ивановăн тăван çĕршывĕнче хаяр çапăçусем пынă, унăн ашшĕ-амăшĕн кил-çуртне шурă гвардеецсем темиçе хутчен те ухтарнă-тустарнă. Çакăн хыççăн поэтăн архивĕ пăч çухалнă. Куçару ал çырăвĕсем çине К.В. Иванов ниçта та алă пусман. Вĕсене И.Я. Яковлев хăй аллипе пачах тĕкĕнмесĕр çаплипех Лондона ярса панă. Октябрьти революци хыççăнхи синкерлĕ кунсенче (1922 çулхи январьте БИБОна янă çырура асăннă пек) ал çырăвĕсемпе те инкек сиксе тухасран сыхланнă пулинех. И.Я. Яковлев еткерлĕхне тĕпчекен паллă ăсчах Н.Г. Краснов палăртнă тăрăх, Моисейĕн Пиллĕкмĕш кĕнекин «Ас тутарса калани» текен пайĕн (“Второза-

кониe") куçару ал çырăвĕсем 38 страницăна яхăн тата Хисеп кĕнекин вĕçĕ (миçе страница пулни паллă мар) паянхи кунччен БИБО архивĕсенче упранаççĕ.

1922 çул пуçламăшĕнче БИБОра Библие тата тепĕр çын чăвашла куçарма пиkenни, çав çын Германире пурăнни çинчен хыпар илеççĕ. Хыпалансах вăл кам, мĕнле çын пулнине тĕпчеме тытăнаççĕ. "Яковлев профессор" (БИБО представителĕсем ăна çапла чĕннĕ – *И.М.*) çулĕсем нумайланса пынă май халсăрланнăçемĕн халсăрланнă вăхăтра шăпах унăн куçару ĕçне малалла тăсма пултаракан чăваш тупăнни ăнăçлă пуласса шаннă-тăр Библи Обществинче. Кăштах вăхăт иртсен шыраса тупаççĕ çав чăваша. Вăл пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче нимĕçсем патне тыткăна лекнĕ Роман Иванов ятлă хутла пĕлекен çын пулнă. Германире Библи колледжĕнчен вĕренсе тухсан Вернигород хулинче икĕ çул хушши пасторта ĕçленĕ, çав хушăрах пĕр-икĕ Евангелие чăвашла куçарнă. Ун чухне вăл Раççейре И.Я. Яковлев Библин Çĕнĕ Сăмахне тулли кĕнекен куçарса кăларнине те, Сăваплă çырусене малалла куçарас енĕпе ĕçленине те пĕлмен пулас. Чăвашсен шутĕнчен хăй çак ĕçе пуçăнакан пĕрремĕш çын тесе шутланă. "Тĕрлĕ çăл куççенчен илтнĕ тăрăх, Библие БИБО 300 тĕрлĕ чĕлхене куçарнă; ĕненекен чăвашсене эпĕ хăйсен тăван чĕлхипе Библи куçарса пама пултарайсан мĕн тери телейлĕ пулнă пулăттăм! Çапла вара Сирĕн вăрăм списокăра тата тепĕр чĕлхе – 301-мĕш чĕлхе – кĕнĕ пулĕччĕ», – çырнă Р. Иванов БИБОна. Сăмах май, çырăвне вăл нимĕçле çырнă.

Тахçантанпах тăван çĕр-шывĕнче пулман çын Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Библие куçаракансен ушкăнĕ ĕçленине те, Çĕнĕ Сăмаха тата Авал хунă Сăмахăн хăш-пĕр пайĕсене уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларнине пĕлмен.

Библи обществинче ĕçлекенсем хăйĕн квалификацийĕ мĕнле шайра пулнине тĕшмĕртмен чăвашпа асăрханулăрах пулма кирлине тавçăрса илеççĕ, унпа тачă çыхăну тытма пăрахаççĕ. Çапла вара Германие тыткă-

на лекнĕ чăваш Библие чăвашла куçарас ĕçре тивĕçлĕ йĕр хăварайман.

1918 çулта БИБОн Раççейри агентствине хупнă хыççăн пирĕн çĕр-шывра пурăнакан халăхсен чĕлхипе Библие малалла та пичетлеме ыйтакан пачах пулман. Раççейре тĕне хирĕçле кĕрешӳ пынă условисенче халиччен пичетленнĕ кĕнекесене те халăх хушшине сарма йывăр пулнă. Сăмахран, чăвашла пысăк тиражпа кăларнă Евангели те сутăнса пĕтеймен. Çавăнпа та Лондонра Авал хунă Сăмаха куçарнăшăн "Яковлев профессора" укçа-тенкĕпе пулăшмашкăн кăштах тăхтама шутланă. Çакăн пирки ун патне, ватă çыннăн кăмăлне хуçас марччĕ тесе, сăпайлăн çырса пĕлтернĕ. Хăйсем пурпĕрех ĕçе пăрахма хушман, хăçан та пулсан чăвашла ал çырăвĕсемпе усă курма май килессе шаннă.

Ĕç-пуç çапларах килсе тухни 80 çула çитсе пыракан Иван Яковлевича та канăçсăрлантарнă. Палăртнă ĕçĕсене туса çитерейменни унăн ăш-чикне вăркатнă. Çавăнпах-тăр чăваш халăхне панă Халалĕнче вăл çапла пилленĕ: "Эпĕ туса пĕтерейменни ĕçсене эсир туса пĕтерĕр. Авал хунă Сăмаха – Этемсен Турăпа пĕрлешсе пурăнасси çинчен каланă Аслă Сăмах кĕнекисене – вĕçне çитиччен куçарса пĕтерсе, Туррăмăрăн Сăваплă Çыруне пĕтĕмпех чăваш халăхне парăр. Вырăс патшалăхийĕн Хĕвел тухăçĕ енче пурăнакан йышлă халăхсене Христос вĕрентĕвĕпе çутăлтарас ĕçе тăрăшса ĕçлĕр".

Пĕтĕмлетӳ: И.Я.Яковлевпа БИБО хушшинчи çыхăну 50 çула пынă. Çав тапхăрта Библи обществи Библие 299 чĕлхепе пичетлесе кăларнă пулнă. Пирĕн аслă Вĕрентекенĕмĕр, ĕмĕр тăршшĕпех чăваш халăхне çутта кăларассишĕн тăрăшнă И.Я.Яковлев чăвашла куçарнă Евангели, Сăваплă Çырăвăн ытти пайĕсем Библи 300-мĕш чĕлхене куçнине кăтартса параççĕ. Апла пулсан чăваш чĕлхи – Библин 300-мĕш чĕлхи – чи авалхи Пурнăç кĕнекине хальхи чĕлхепе калаçтаракан пуян чĕлхесен шутне кĕнĕ.

И.Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем ĕмĕр тăршшĕпех чăн кăмăлтан, нимĕне хапсăнмасăр, мĕн

пур халĕпе тăрăшнине пула чухăн тата малашлăхсăр тесе тиркенĕ чăваш чĕлхи хăйĕн халăхне цивилизаци тĕнчине илсе тухнă. И.Я. Яковлевăн тĕн кĕнекисене чăвашла куçарассипе çыхăннă пикенчĕкĕ 1870 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тымар ярса, вĕрентекенсемпе вĕренекенсенĕн терчĕпе, вĕсенĕн вăйĕпе çĕкленсе патварланса пынă. Чĕмпĕрти шкулта учительте ĕçленĕ чăвашсенчен куçару ĕçне хутшăнман çын пулман та. Урăх çĕрте вĕреннĕ çынсенчен ку ĕçе пĕр çын та ермен. Кашни куçарăва шкул учителĕсемпе пĕрле ларса вуланă, йывăр самантсенче вырăнти чăвашсем вăл е ку ăнлава ансатрах мĕнле каланине пĕлес тесе маттуртарах ачасене те хутшăнтарнă çав канашлусене. Çакăн хыççăн тин куçарăва Иван Яковлевичпа пĕрле пăхса тухнă. И.Я. Яковлев вара вăхăчĕ сахал пулин те чăвашла куçарусене пит хытă тимлесе вуланă. Текст тĕрĕслĕхне те, чăвашла текстăн ансатлăхне те, чĕлхе янравлăхне те тĕплĕн тишкернĕ. Пĕр куçарăва та пăхмасăр ирттермен. Пысăк хевтеллĕ, хыт тӳсĕмлĕ çынсем çеç çапла ĕçлеме пултарнă чăвашла кĕнекесемпе. Унсăр пуçне хăйсен тивĕçне Турă тивлечĕ вырăнне хурса йышăнни тата çак ĕçе чунтан юратни çеç пулăшнă вĕсене çакнашкал хăватлă ĕç тума. Ырă ятлă пулас, чапа тухас, çынсене куçран пăхтарас тесе ĕçлемен вĕсем, тăван халăха тĕнче культурин шайне çĕклесе тĕнче çутине кăтартасшăн пулнă. Çавăнпа та Библии кĕнекисене куçарма хутшăннă тăлмачăсем пурте чăваш культурин историйĕнче паллă вырăн йышăнма тата пысăк чыса тивĕçлĕ.

Вĕсен хушшинче анатри чăвашсем те, тури-вирьял чăвашĕсем те, республикăн вăтам тăрăхĕнчен тухнă чăвашсем те пулнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕренсе, пĕрле ĕçлесе вĕсем пĕр чĕлхе тупнă. Амăшĕн сĕчĕпе вĕренсе ӳснĕ чĕлхене тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсен калаçу чĕлхинчи уйрăм сăмахсемпе пуянлатса чăвашсем валли пĕр чĕлхе, илемлĕ калаçу-çыру чĕлхи туса хунă. Хăйсем хатĕрленĕ чăваш кĕнекисене тăван тăрăхри чăвашсем ăнланса йышăннине курса чĕререн хĕпĕртенĕ. Куçару ĕçне хутшăнни вĕреннĕ чăваш

çыннисене хăйсене те чăвашла хайлав-юмах, сăвă-поэма, тĕпчев-тишкерӳ çырма хавхалантарнă. Тăлмачă-сем хăйсем тĕллĕн илемлĕ литература произведенийĕсем çыра пуçланă, çавна май чăваш литература чĕлхин никĕсне хывнă.

Çакна татăклăн каласа хăварар, 1997 çул вĕçленнĕ тĕле Сăваплă Çырусене тĕнчери 2197 чĕлхене куçарса пичетлесе кăларнă. Çав шутра пĕтĕм Библие йăлтах – 363 чĕлхепе, Çĕнĕ Сăмаха – 799 чĕлхепе тата уйрăм кĕнекисене 926 чĕлхепе кăларнă. Библи обществисен пĕрлешĕвĕн ертӳçисем шутланă тăрăх, Сăвапă Çырусене куçаракан тăлмачăсен ĕçĕ вĕççĕр-хĕрсĕр, мĕншĕн тесен лингвистсем палăртнă тăрăх, тĕнчере 6000 тĕрлĕ чĕлхепе калаççаççĕ.

Пирĕн вăхăтра тинех И.Я. Яковлевăн ĕçне малалла тăсакансем тупăнчĕç. Библи обществин Раççейри фили-алĕн представителĕсем йĕркелесе тата ертсе пынипе Библие йăлтах чăвашла куçарса пĕтерчĕç. Редакцилес-сипе çыхăннă йывăр çĕклеме Е.Н. Лисина хăй çине илме килĕшнĕ. Халех мăнаçланма пултаратпăр, Раççйре пурăнакан вырăс мар халăхсен йышĕнче эпир, чăваш-сем, пĕтĕм Библие тăван чĕлхепе вулама пултаракан пĕрремĕш халăх пулса тăтăмăр.

Библи кĕнекисене чăвашла куçарса кăларни тăван халăхăн пĕтĕмĕшле культуришĕн те калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ: тăван чĕлхепе тухнă тĕн кĕнекисем халăха чăвашла кĕл тума вĕрентнĕ, çĕнĕ чăваш çырулăхĕн тĕнчине илсе тухнă. Библи кĕнекисем чăвашла тухни, çĕнĕ çырулăх йĕркеленни чăваш чĕлхин аталанăвĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланнине пĕлтернĕ тата Раççей импе-рийĕнчи мĕн пур этноссене вырăслантарма хăтланнă условисенче чăвашсен тăван чĕлхине сыхласа хăварма пулăшнă. Чăвашла тĕн кĕнекисем халăх хушшине ан-лăн сарăлни чăваш литература чĕлхине йĕркеленсе çирĕпленме май панă тата çавăнпа пĕр вăхăтрах халăх ăнлавĕнче этнос, культура, чĕлхе пĕрлĕхлĕхĕпе хăй тĕллĕнлĕхĕ пирки тĕвĕленнĕ шухăша вăйлатса çирĕплетнĕ.

## Тĕп литература

1. Краснов Н.Г. И.Я.Яковлев и его потомки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 352 с.

2. Мукина И.В. И.Я.Яковлев çинчен хунă чăн сăмах / И.В. Мукина. – Шупашкар: Руссика, 1998. – 250 с.

3. И.Я. Яковлев. Моя жизнь: Воспоминания /вступ. статья Л.П. Куракова, археогр. предисл. Г.Н. Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г.Краснова. – М.: Республика, 1997. – 696 с.

## Хушма литература

1. Верещагин Е.О. Древнейших переводах Библии, а также о переводе на современный русский язык / Е.О. Верещагин // Азия и Африка сегодня. – 1993. – № 11.

2. Рижский М.И. История переводов Библии в России / М.И. Рижский. – М.: Наука, Сибирское отделение. – Новосибирск, 1978.

3. Геллей Г. Библейский справочник / Г. Геллей. – СПб., 1996.

4. Родионов В.Г. 1800-1820 ç.ç. Чăвашсен çыруллă сăмахлăхĕ / В.Г.Родионов. – // Хыпар. – 1997, юпа, 202 №.

5. Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии. – Казань, 1890.

6. Пирĕн Туррăмăр Iисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмах. – Чĕмпĕр, 1911.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. И.Я.Яковлев тĕрлĕ çулсенче куçарнă Евангелисен чĕлхине танлаштарса чăваш литература чĕлхинче тĕнчиркӳ стилĕ йĕркеленсе пынине кăтартса парăр.

2. Библие куçаракансем чăваш литература чĕлхине никĕслекенсем тесе çирĕплетме пултаратпăр-и? Хăвăрăн шухăшăра тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

3. Тĕрлĕ çулсенче тухнă букварьти илемлĕ текстсен йышĕнче Библи кĕнекисенчен илнĕ калавсене тишкерĕр, вĕсен чĕлхе уйрăмлăхĕсене палăртăр.

7 сыпăк

# ТĂВАН ХАЛĂХШĂН ТУНĂ ИСТОРИЛЛЕ ЧАПЛĂ ĔÇСЕМ

Иван Яковлевич Яковлев (1848-1930) историе чăваш халăхне çутта кăларас енĕпе чаплă ĕçсем тунипе кĕрсе юлнă. Çав кăткăс та нумай енлĕн аталаннă сыннăн ĕçне-хĕлне хăй пурăннă вăхăтрах, чылай чухне, хире-хирĕçле хак панă. Паллă ăсчах-тĕпчевçĕ В.Д. Димитриев историк палăртнă тăрăх, ун çинчен çыракан авторсем пурте ăна хăйсен социаллă пурнăç, идейăпа политика тĕлĕшĕнчи позицийĕсене тĕпе хурса тишкернĕ, халĕ те çавăн пекех хаклаççĕ. Авторсенчен нумайăшĕ И.Я. Яковлев пирки çырнă чухне унăн ĕçĕсене пĕтĕмĕшпе пăхса тухман, уйрăм тĕслĕхсене çеç илсе кăтартнă: 1) аслă держава шовинисчĕсем ăна национализмла сепаратизмшăн айăпланă; 2) эсерсен наци юхăмĕн представителĕсем вăл вырăссем майлă тăрать, реакционер тата чăвашсен тăшманĕ шутланать тенĕ; 3) вырăссемпе чăвашсен демократла интеллигенцийĕ, чăваш хресченĕсем 1917 çулччен пирĕн патриарх чăвашсене çутта кăларас, культурăна аталантарас енĕпе ĕçленине хапăл туса ырланă.

1917-1922 çулсенче унăн ĕçĕсем çине хире-хирĕçле пăхни палăрать, çав тапхăрта ăна В. Ленин хӳтĕленĕ, пысăк пулăшу панă. 1928 çулта, И.Я. Яковлев çуралнăранпа 80 çул çитнине паллă тунă кунсенче, Раççейĕн тата Чăваш енĕн халăха вĕрентес ĕçĕн ертӳçисем, Чăваш Республикин общественноçĕ вăл чăвашсене çутта кăларас тĕлĕшпе çур ĕмĕр хушши ĕçленине лайăх енчен палăртнă. 30-мĕш çулсенче Яковлев çине тӳртĕн пăхасси вăйланать. Ăна «Христос тĕнĕн миссионерĕ», Чĕмпĕрти чăваш шкулне вара – «миссионерсене хатĕрлекен центр» тесе шутлакансем тупăннă, çакă вăл истори чăнлăхĕпе пачах та çыхăнса тăмасть. 1948 çулта  И.Я. Яковлевăн ĕçне-хĕлне тĕрĕс хак парасси вăй илет. Анчах ун хыççăн та 40 çул хушши вăл çут ĕçĕнче тĕн вĕрентĕвне мала хуни

çинчен калаçма юраман. Юлашки вăхăтра тин çакăн çине тимлĕрех пăхма тытăнчĕç.

Çĕр виçевçи пулса И.Я. Яковлев, Раççейре крепостла правăна пăрахăçланă, 60-мĕш çулсенчи буржуалла реформа – капитализм хутшăнăвĕсене аталантармалли анлă майсем уçса панă реформа – пуçланнă хыççăн ĕçлеме тытăннă. Çав реформа, пĕр енчен, наци ăнланулăхне, наци аталанăвĕ патнелле ăнтăлассине чĕртсе янă, тепĕр енчен, халăхсем хушшинчи экономика çыхăнăвĕсене, вĕсем пĕр-пĕринпе тачăрах хутшăнассине вăйлатнă, нацисем çывăхланасси патне илсе пынă.

И.Я. Яковлев чăваш çырулăхне туса хурас ĕмĕтпе пурăнни «Христос тĕнĕ майлă çутта кăлармалли» шухăша пăхăнса тăман, çĕр виçевçĕре ĕçленĕ çулсем пирки вăл хăйĕн «Аса илĕвĕсенче» çапла çырать: «çĕр виçев ĕçĕпе виçĕ кĕпĕрнери тĕрлĕ вырăна, тĕрлĕ сийри халăх (вырăс, чăваш, тутар, ирçе) пурăнакан вырăнсене кайса, тĕрлĕ халăхăн шухăш-кăмăлне, йăли-йĕркипе, уйрăмлăхсемпе паллашса çӳрени воспитани тата çут ĕç тĕлĕшĕнчен манăн пурнăçра тарăн йĕр хăварнă, çакă вăл яланах хамшăн тăван чăвашсем патне илсе çитернĕ, эпĕ вĕсене ытти халăхсемпе танлаштарма пултарнă, çав вăхăтран асăннă вырăнсене çӳренĕ май, манăн ăшăмра тĕн енĕпе иккĕленесси, шырасси çивĕчленнĕ... Тĕшмĕше яланах ĕненнĕ эпĕ, çĕр виçев училищинче вĕреннĕ вăхăтра та пурччĕ-ха çав ĕненӳ, çапах та иккĕленнĕ, пăтрашăннă... 1864 çулта, уделни ведомствин виçевçи пулса, Чĕмпĕр кĕпĕрнин Сызрань уесĕнчи Винновка салинче, Атăл тăрăх Самартан 40 çухрăм анатарах вырнаçнă салара ĕçлерĕм. Унччен те ман пуçăмра çак уçăмлах мар шухăш пулнă, ытти халăхсен хăйсен çырулăхĕ пур пулсан, мĕншĕн-ха манăн тăван чăваш йăхĕн çырулăх çук? Винновкăра пулса иртнĕ пĕр ĕç çав шухăша малалла вăйлатма пулăшрĕ». И.Я. Яковлев унта сивчирпе хытă аптранă, çавăн чухне, хăйне валли çĕр виçевçĕ шыраса, ун патне Долгорукова княгиня именийĕсен управляющийĕ, поляк çынни О.Л. Косинский пынă та хăй патне илсе кайнă. Темиçе эрне пурăннă ун патĕнче Яковлев. «Эпĕ Ко-

синскисем патӗнче пулни маншӑн чӑвашсене ҫырулӑх кирлипе ҫыхӑннӑ шухӑша тата ытларах ҫирӗплетрӗ, – ҫырать И.Я. Яковлев. – Эпӗ поляк чӗлхипе ҫырнӑ кӗнекесем пуррипе кӑсӑклантӑм. Вырӑсла ҫеҫ пӗлнӗ эпӗ. Унччен вырӑс тата тутар чӗлхипе кӑларнӑ кӗнекесене ҫеҫ курнӑ. Кунта вара сасартӑк поляксен те, вӗреннӗ ытти халӑхсенни пекех, хӑйсен тӑван чӗлхипе ҫырнӑ кӗнекесем пур иккенне пӗлтӗм. Мӗншӗн чӑвашсен ҫавӑн пек чӑвашла ҫырнӑ кӗнекесем ҫук-ши тесе шухӑшларӑм эпӗ. Маншӑн ӳкӗнмелле те кӳренмелле пулчӗ». И.Я. Яковлев, Косинскин именийӗнче ҫӗр виҫев ӗҫӗсене пурнӑҫласа, 400 тенке яхӑн илет. «Ҫав ӗҫ тата унпа ҫыхӑннӑ ӗҫ укҫи мӗн те пулин тума вӑй ҫитерес тесен, пӗлӳ илни, урӑхла каласан, гимназире тата университетра вӗренме кирлине ӗнентерчӗҫ. Вара ҫак шухӑш пуҫран тухма пӗлмерӗ: ун пек тӑвас тесен, манӑн Чӗмпӗре куҫмалла, унта гимнази пур, ҫавӑнта вӗренме кӗмелле». Малалла И.Я. Яковлев ҫапла палӑртать: «1865 ҫулта манӑн чӑваш халӑхне вуламалли тата ҫырмалли майсем туса парас туртӑм ҫирӗпленчӗ». Куратпӑр ӗнтӗ, И.Я. Яковлевӑн пурнӑҫри аслӑ тӗллевӗ малтан тӗн ӗҫӗ-хӗлӗн тулашӗнче йӗркеленнӗ.

### 7.1. Халӑха ҫутта кӑларас программа тӗрлӗ тапхӑрта аталанни

1. Чӗмпӗр гимназийӗнче вӗреннӗ вӑхӑтра, 1868 ҫулта, уйрӑм ҫын шкулӗ уҫса, Яковлев тӑван халӑха ҫутта илсе тухмалли тӗллевне пурнӑҫа кӗртме пуҫлать. Ҫав ҫулсенче, Н.И. Ильминский профессорпа тӗл пуличченех (вӗсем 1870 ҫулхи авӑн уйӑхӗнче тӗл пулнӑ), Яковлева ӑс-хакӑл тӗлӗшӗнчен Чӗмпӗр кӗпӗрнин Пӑва уесӗнчи училище канашӗн председателӗ А.И. Баратынский пуп пысӑк витӗм кӳнӗ. Вӑл хутшӑннипех **И.Я. Яковлев хӑйӗн ӗҫӗ-хӗлӗн пӗрремӗш программине** палӑртса хунӑ, ӑна 1870 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 25-мӗшӗнче Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи гимназин тата училищӗсен директорӗ И.В. Вишневский ячӗпе янӑ ҫырура палӑрт-

нă, унта вăл хăйĕн **халăха çутта кăлармалли тĕллевĕсене Христос тĕнне вĕрентессипе, вĕсем ислампа тутар пусмăрне хирĕç кĕрешессипе çыхăнтарнă.** Вырăссем хушшинче тахçантанпах, тенĕ И.Я. Яковлев хăй çырăвĕнче, «чувашенин» сăмаха мăшкăлласа тата кӳрентерсе калаççĕ, «çав халăх тĕттĕм те кăнттам-ха, анчах, ăна пăхмасăрах, тӳрĕ кăмăллă, ырă та ĕçчен халăх вăл, хальхи вăхăтра аваллăхран пыракан шухăшкăмăлпа тата йăла-йĕркепе пурăнать. Вăл тахçанах Раççей йышне кĕнĕ, çĕр аллă çула яхăн каяллах Христос тĕнне йышăннă, çапах та ку таранччене хăйĕн халăхне вырăссем витĕм кӳрессинчен сыхлать, вунă ĕмĕр каялла пулнă пекех, хăйĕн авалхи Киремет тĕнне ĕненет. Çакна та пăшăрханса палăртма тивет, Христос тĕнĕ чăвашсен хушшинче йăла-йĕрке тĕлĕшĕнчен çирĕпленме ĕлкĕреймен-ха, анчах та вĕсем хăйсем, пĕчĕк пайне шута илмесен, пурте тĕне кĕнĕ çынсем пек тата Христос тĕнне ĕненекенсем пек шутланаççĕ». Малалла И.Я. Яковлев киремете ĕненекен чăвашсем мăсăльмансен витĕмне çăмăллăнах кĕрсе ӳкнине, тутарланса кайнине, çакă халăх хушшинче чылаях сарăлнине уйрăммăн палăртать. «Хальхи вăхăтра чăвашсем, вырăссемпе танлаштарсан, тутарсемпе çывăхрах, паллах, ку хăйсемшĕнех сиенлĕ», – тет вăл.

В.Д. Димитриев профессор палăртнă тăрăх, монголтутар пусмăрĕ 315 çул хушши хĕссе тăнă тапхăрта пăлхар-чăвашсен тăваттă-пиллĕкмĕш пайĕнчен кая мар йышне пĕтерсе тăкнă. 1551 çулта чăваш халăхĕ мирлĕ майпа Раççей йышне кĕнĕ хыççăн та чăвашсем вырăсланни пулман, вĕсен чылай пысăк пайĕ (40 процента яхăн) тутарланнă, православипе патша тытăмне хирĕçле оппозицире тăракан ислам тĕнне йышăннă. Енчен те чăвашсем ислам тĕнне йышăнасси малалла та сарăлса пынă пулсан, чăваш этносĕ пĕтсе ларма пултарнă. Çакна ăнланнă пĕтĕм чăваш халăхĕн шăпи пирки шухăшлакан И.Я. Яковлев. Вăл шутланă тăрăх, киремет тĕнне мар, Христос тĕнĕн идеологине тĕпе хурсан çеç чăвашсене тутарланассинчен сыхласа хăварма май килĕ. Малалла Иван Яковлевич «чăвашсене шкулсем уçса

панипе тата вĕсенче чăваш хушшинчен тухнă çынсем тăрăшса ĕçленипе кăна çутта кăларма тата культура тĕлĕшĕнчен вырăссемпе çывăхлатма май пулнине» ĕнентерме тăрăшать, çавăнпа Чĕмпĕрте хăй уçнă чăваш шкулне пурлăхпа та, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен те пулăшма ыйтать.

Хусан университетне кĕнĕ хыççăнхи малтанхи кунсенчех, 1870 çулхи авăн уйăхĕн 3-5-мĕшĕсенче, И.Я. Яковлев тĕне кĕнĕ тутарсен Хусанти шкулĕн пуçлăхĕпе Н.И. Ильминскипе паллашать, çĕрĕ-çĕрĕпех унпа чуна уçса калаçать. Н.И. Ильминский Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсене этнос тĕлĕшĕнчен вырăслантарасшăн пулман, вăл, вырăс мар халăхсен чĕлхине сыхласа хăварса, вĕсене чиркÿ кĕллисем тата шкул вĕрентĕвĕ урлă «ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен вырăслантарма» тăрăшнă. Н.И. Ильминский тăрăшнипех 1870 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче патшалăх канашĕ Раççейри вырăс мар халăхсен тăван чĕлхипе пуçламăш шкулта вĕрентнĕ çĕрте усă курма ирĕк панă.

2. Н.И. Ильминскипе калаçни тата тĕне кĕнĕ тутарсен Хусанти шкулĕн ĕçĕпе паллашни И.Я. Яковлева хăйĕн чăваш халăхне çутта кăлармалли программин тĕллевĕсене тарăнраххăн палăртса хума пулăшнă. Çавăн çинчен вăл 1870 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче Хусан вĕренÿ округĕн попечителĕ П.Д. Шестакова çырса пĕлтерет. Унта И.В. Вишневский патне çырса янă тĕп шухăшсенех палăртнă, анчах чылай шухăша тарăнлатнă, **программăн çĕнĕ тĕллевĕсене** кăтартса панă. Çав çырура ислам тĕнĕпе çывăхланнин хăрушлăхне тата чăвашсем пĕтсе пырасса тĕплĕн никĕсленĕ. Яковлев çакна кăтартса парать: «тĕне кĕнĕ тутарсемпе чăвашсене Магомет тĕнĕ витĕм кÿресси питĕ хăвăрт вăйланса пырать. Пирĕн тăрăхра Магомет тĕнĕ мулласен хăй тĕллĕнлĕхлĕ тата лайăх çирĕпленнĕ тытăмĕ шутланать, Магомет тĕнне ĕненекенсем мулласене çав тери хисеплеççĕ, мулласем халăха çывăх. Ырлăх-пурлăх Магомет тĕнĕ аллинче. Вĕсем хулари суту-илĕвĕн пысăк пайне, ялсенчи, хăйсем чăвашсемпе тата вырăссемпе хутăш пурăнакан вырăнсенчи вак-тĕвек суту-илĕве пĕтĕмпех

хӑйсен аллине ҫавӑрса илнӗ. Ӑс-тӑн аталанӑвӗ тӗлӗшӗнчен илсен, Магомет тӗнне ӗненекен тутарсем хӑйсемпе юнашар пурӑнакан вырӑс хресченӗсенчен ҫӳлте тӑраҫҫӗ, ку енӗпе чӑвашсем нумай кайра тӑни ҫинчен калаҫмалли те ҫук. Магомет тӗнне тытакан арҫынсемпе хӗрарӑмсем пурте пекех хутла пӗлеҫҫӗ, паллах, вырӑсла вӗреннипе мар...» Акӑ мӗншӗн ислам витӗмӗ пысӑк. Наци лару-тӑрӑвне тӗпе хурса, И.Я. Яковлев ҫав тӗллевсене палӑртать, чӑвашсене ислам майлӑ ҫавӑрассине тата тутарлантарассине хирӗҫ тӑрас тесен, пӗлӳлӗхпе тата ӑс-тӑн аталанӑвӗпе ҫыхӑнман Киремет тӗнӗн идеологийӗ кӗрешме пултарайманнине асра тытса, **тӑван чӗлхепе чиркӳре кӗлӗ туса тата шкулта вӗрентсе, чӑвашсене Христос тӗнӗ майлӑ ҫавӑрмалла; чӑваш ачисен валли шкулсем уҫмалла, унта чӑваш учителӗсем вӗрентчӗр; чӑваш ҫырулӑхне туса хумалла, тӗн литературине, ытти литературӑна чӑвашла куҫармалла; хӑй уҫнӑ Чӗмпӗр шкулне пулӑшса, чӑваш учителӗсене хатӗрлес ӗҫе йӗркелемелле**». Ҫак программӑна малашне те лайӑхлатса, анлӑлатса пынӑ. Тӗслӗхрен, И.Я. Яковлевӑн педагогика тытӑмӗнче вӗрентӗве куллен-кунхи ӗҫсене пурнӑҫлама хӑнӑхтарас тӗллевпе йӗркелеме палӑртса хунине чылай енчен вырӑссен паллӑ педагогӗн, Чӗмпӗрти чӑваш шкулне пур енӗпе те пулӑшнӑ И.Н. Ульяновӑн педагогикӑри шухӑшӗсемпе ӗҫӗсенчен илнӗ.

И.Я.Яковлевӑн халӑха ҫутта кӑлармалли ӗҫӗсенче яланах «пирӗн чӑваш ӗҫӗ» сӑмахсене ҫине-ҫинех асӑннӑ, вӑл **чӑваш халӑхне наци тӗлӗшӗнчен ҫӗклентерессине пысӑка хунӑ.** Иван Яковлевич хӑй ҫапла ҫырнӑ, хӑйӗн ӗҫӗ-хӗлӗн малтанхи ҫулӗсенченех вӑл пӗтӗм чӑваш халӑхӗшӗн ырӑ ӗҫ тума, чӑвашсене ырлӑх кӳрес тесе, вӗсене ҫӗр ҫинчен вершук, икӗ вершук чухлӗ те пулин ҫӳлелле ҫӗклеме шутланӑ. «Манӑн тивӗҫӗм питӗ явaплӑ, хам ҫине илнӗ ӗҫе пурнӑҫлама вӑйӑм ҫитеймӗ. Николай Иванович, юптармасӑр-тумасӑр ҫапла ҫеҫ калама пултаратӑп, чӑвашсене юрататӑп эпӗ, вӗсене чунчӗререн ыр сунатӑп. Чӑвашсене ырлӑх кӳрессисӗр пуҫне урӑх тӗллев пулман ман пурнӑҫӑмра...», – ҫапла

пĕлтернĕ вăл Н.И. Ильминский патне 1883 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче çырнă çырура. Чаплă патриот, тăван халăха чун-чĕрин пĕтĕм ăшшипе юратакан çын И.Я. Яковлев наци тĕлĕшĕнчен ансăр шухăшлă пулман, ытти халăхсене тӳсмесĕр тăма пултарайман. Вăл чăваш нацине çĕклентерессишĕн, халăхсене çывăхлатассишĕн тăрăшнă.

3. Хĕвел тухăç Раççейри вырăс мар халăхсене çутта кăларас тĕллевпе Н.И. Ильминский хатĕрленĕ системăна тĕпе хурса, И.Я. Яковлев чăваш халăхне чăнласах çутта кăлармалли программа палăртса хурать, унăн тытăмĕ, пĕтĕмĕшле илсен, çакăн пек: пуçламăш шкулта малтанхи икĕ çул тăван чĕлхепе вĕрентмелле, ун хыççăн, чăваш чĕлхипе усă курса, вырăсла вĕрентсе пымалла, пуçламăш училищĕсенче тăватă çул (вырăссен – виçĕ çул пулнă) вĕрентмелле, учительсене, тĕпрен илсен, чăвашсенчен хатĕрлемелле, тĕн, вĕрентӳ, ăслăлăхпа çут ĕç литератури, ытти йышши литература кăлармалла, пуçламăш тата икĕ класлă училищĕсем уçмалла, туса лартмалла, вĕренекенсене кулленхи ĕçсем валли хатĕрлемелле. И.Я. Яковлев учительсемпе шкулсем урлă пĕтĕм чăваш халăхĕн хуçалăхпа культура шайне ӳстерме палăртнă. И.Я. Яковлев тытăмĕпе Атăлпа Урал тăрăхĕнчи ытти халăхсем хушшинче те усă курнă.

Çапла вара Раççейре халăха çутта кăлармалли çĕнĕ системăна «Яковлев системи» тесе йышăннă. Вăл Ильминский системинчен чылай енĕпе уйрăлса тăнă. И.Я. Яковлев Ильминский вĕренекенĕ пулнă пулин те XIX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенчех халăха çутта кăлармалли прогрессивлă система туса хатĕрленипе çеç çырлахман, çутĕç пĕлтерĕшне чылай анлăрах тата тарăнрах ăнланнипе те палăрса тăнă. И.Я. Яковлев системи Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене культурăпа çутĕç тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк витĕм кӳнĕ. Ильминский хăйĕн системипе ялти шкула священник ертсе пыракан миссионер вучахĕ туса хурассишĕн тăрăшнă, чăвашсене çутта кăлараканĕ – ялти шкула чăнчăн культура центрĕ – сад-пахчасемпе, алăсти мастер-

скойĕсемпе чапа тухнă, халăх учителĕ ертсе пыракан культура центрĕ туса хурассишĕн.

Ильминский системипе танлаштарсан, чăвашсене çутта кăлараканĕн системи наци хăй евĕрлĕхĕпе палăрса тăракан система пулнă, çавăнпа та ăна чăнласах «Яковлев системи» теме пултаратпăр. Хăйĕн системине И.Я. Яковлев Раççейри мĕн пур халăхсен интересĕсем пĕр евĕрлĕ пулнине шута илсе йĕркеленĕ.

Иван Яковлевич халăхсен пурте пĕрешкел тата пĕр тан пулмалла тесе шутланă. Хăйĕн «Букварĕнче» çапла çырнă вăл, «Вырăссем, тутарсем, чăвашсем – пурте пĕр çынсем». Чăвашсем ытларах вырăссемпе хутшăннă. Экономика тата политика аталанăвĕ енĕпе вырăс халăхĕ чăвашсенчен, Раççейри ытти хăш-пĕр халăхсенчен çӳлте тăнă.

И.Я. Яковлев халăха çутта кăларас ĕçĕн тата вăл чăвашсене вĕрентмешкĕн туса хатĕрленĕ тытăмĕн пысăк пĕлтерĕшĕ вăл чăваш халăхĕн аталану малашлăхĕн пĕртен-пĕр тĕрĕс çул-йĕрне уçса панипе çыхăннă. Хальхи условисенче вырăссемпе тата ытти халăхсемпе туслă пулсан кăна чăваш халăхĕ наци тĕлĕшĕнчен çĕкленме, хуçалăха вăйлатса пыма тата тăван чĕлхе никĕсĕ çинче культурăна аталантарма пултарать. Чĕмпĕрти А.В. Годнев педагог 1908 çултах Иван Яковлевич Яковлев пирки çапла çырнă: «Эпĕ чăваш тата вырăс халăхĕсем хушшинчи çыхăнусен çул-йĕрĕн тата уйрăмлăхĕн питĕ кирлĕ ыйтăвне çав тери ăнăçлă татса панă тесе шутлатăп. Çак икĕ халăха истори пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăнтарнă, вĕсен культура тата экономика интересĕсем пĕрешкел, вĕсен, ырă кăмăллă кӳршĕсем пулса, пĕрлехи аталанушăн ăнлануллăн ĕçлемелле, туслăн та килĕшӳллĕн ĕçлени вĕсене пĕрлехи ӳсĕм тума май парать. Çав шухăша эпĕ пĕтĕмĕшпех тĕрĕс тесе кăна мар, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен те паха тесе шутлатăп».

Чăвашсене вырăс халăхĕн культура шайне çити çĕклесси, тăван халăха вырăс культурипе, вырăс халăхĕпе çывăхлатасси Яковлевăн чи хаклă тĕллевĕ пулнă. И.Я. Яковлев татăклăнах çапла каланă: «Раççей патшалăхĕнче пурăнакан ытти халăхсем вырăс халăхĕн

аслӑ ҫемйине усрав ача пулса мар, пӗр тан ачасем пулса ҫирӗппӗн кӗме тивӗҫлӗ. Чи малтан вӑйпа пусармалли кирек-мӗнле шухӑша та, нумай хутчен чи япӑх ӗҫсем патне илсе ҫитернӗ шухӑша, пӑрахӑҫламалла». «...сахал йышлӑ халӑхсене вӑйпа вырӑслатма тӑрӑшнине нихҫан та ырламан эпӗ, унтан та ытларах хам нихҫан та ҫавӑн пек майсемпе усӑ курман» – ҫак сӑмахсене те И.Я. Яковлев 1917 ҫултах каланӑ.

Тутарлантарнине е тата вӑйпах вырӑслантарнине, чӑвашсене этнос тӗлӗшӗнчен вырӑссемпе пӗрлештерессине хирӗҫ кӗрешес ӗҫре Яковлевпа унӑн вӗренекенӗсем **«ӑс-хакӑл тӗлӗшӗнчен вырӑсланмалли»**, урӑхла каласан, чӑвашсем Христос тӗнне алла илмелли **шухӑша тӗп вырӑна хунӑ.** «Эпир ӑс-хакӑл тӗлӗшӗнчен вырӑссем пулма, вырӑсла шухӑшлама тата туйма тивӗҫлӗ, ҫавӑнпа пирӗн вырӑс культурин шайне ҫӗкленмелле. Чӑвашсен культурине хӑйсем ӑнланакан тӑван чӗлхе пулӑшнипе ҫеҫ ҫӗклеме май килет», – тенӗ Иван Яковлевич. Хӑйӗн ӗҫӗ-хӗлӗн пуҫламӑшӗнчех Яковлев вырӑс мар халӑхсене «вырӑссен лайӑххи мӗн пур, ҫавсене пурне те хӑнӑхтарни, ҫав хушӑрах хӑйсен историпе наци тӗлӗшӗнчен лайӑххине пурне те упраса хӑварни кирлӗ», текен шухӑша мала хунӑ.

## 7.2. Чӑваш халӑхӗн наци ҫӗкленӗвӗн юхӑмӗ вӑй илни

И.Я. Яковлев пуҫарнӑ ӗҫрен чӑваш халӑхӗн наци ҫӗкленӗвӗн юхӑмӗ, вӑл вырӑссемпе тата Раҫҫейри ытти халӑхсемпе пӗр тан пулассишӗн, ҫывӑхланассишӗн пыракан юхӑм, хускалнӑ. Чӑваш тата вырӑс интеллигенцийӗн, хресченсен ҫӗршер, каярахпа пиншер представителӗ хутшӑннӑ ҫав юхӑма. Ана И.Я. Яковлев ертсе пынӑ. Наци ҫӗкленӗвӗшӗн, тӑван чӗлхешӗн тата наци культуришӗн, ытти халӑхсемпе пӗр тан пулассишӗн, вӗсемпе ҫывӑхланассишӗн пыракан юхӑм нацин ирӗклӗх юхӑмӗн прогрессивлӑ форми пулса тӑрать.

И.Я. Яковлев тата унӑн йышлӑ вӗренекенӗсем чӑвашсен наци ҫӗкленӗвӗн, вӗсен ытти халӑхсемпе

çывăхланассин тĕллевĕсене Раççейĕн ун чухнехи социаллă пурнăçпа экономика, политика тата патшалăх тытăмĕн условийĕсенче культурăпа çут ĕç хатĕрĕсемпе тата меслечĕсемпе ĕçе кĕртсе пынă.

И.Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем чăваш нацине çĕклес, ытти халăхсемпе çывăхланас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсенче 1) тăван чĕлхепе усă курса шкулта вĕрентес ĕçе тĕп вырăна хунă. Чăваш хресченĕсем хушшинче çут ĕçне вăйлатасси, çапла майпа вĕсен хуçалăхпа культура шайне ӳстересси çине тимлĕ пăхнă.

2) Вырăс графикине тĕпе хурса иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче чăваш алфавитне туса хатĕрлени тата чăвашсен çĕнĕ çырулăхне – çут ĕçне, литературăна тата халăх культурине аталантармалли питĕ кирлĕ майсем туса панă çырулăха – пуçарса яни И.Я. Яковлев чăваш нацине çĕклес, ăна ытти халăхсемпе çывăхлатас тĕлĕшпе пурнăçланă тава тивĕçлĕ ĕç шутланать.

Çĕнĕ çырулăхпа усă курма пуçланă хыççăн И.Я.Яковлев ертсе пынипе 1872-1917 çулсенче чăвашла пурĕ 675 кĕнеке пичетлесе кăларнă. 1872-1880 çулсенче 21 кĕнеке, 1881-1890 çулсенче 37 кĕнеке, 1891-1900 çулсенче 145 кĕнеке, 1901-1910 çулсенче 291 кĕнеке, 1911-1917 çулсенче 184 кĕнеке пичетленнĕ. Яковлев халăха çутта кăларас, унăн культура шайне çĕклес ĕçре кĕнеке пĕлтерĕшне питĕ пысăка хунă. «Ырă кĕнеке ăслă çынпа пĕрех. Ăслă çынпала ялан пĕрле тăраймастăн, кĕнекене ялан ху патăнта тытса тăмалла»,– тесе çырнă вăл хăйĕн пĕрремĕш букварĕнче.

Кĕнекесен авторĕсене тата куçаруçăсене вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчех вĕрентсе хатĕрленĕ. Хусанти университетра вĕреннĕ çулсенче вăл А.В. Рекеева вĕренекенсене куçару ĕçне хăнăхтарасси пирки кăтартусем панă: «Ачасене тăтăшах вырăсларан чăвашла куçарттар, вара вĕсем вырăсла та, чăвашла та тĕрĕс калаçма вĕренсе çитĕç, унтан та пахи – вĕсем пурăна киле çак ĕçе çине тăрсах туса пырсан чăвашсемшĕн усăллă та кирлĕ кĕнекесене ăста куçарма пултаракан тăлмачсем пулса тăрĕç», – тесе çырнă вăл пĕр çырăвĕнче. Чă-

нах та, Яковлев шкулӗнчен пултаруллӑ тӑлмачӑсем, паллӑ кӗнекеҫӗсем А.В. Рекеев, П.В. Васильев, А.П. Петров, К.П. Прокопьев, К.С. Сергеев, Ф.Д. Данилов, В.Н. Никифоров, А.И. Иванов, Ф.И. Иванов, Н.И. Кузьмин, Ф.Т. Тимофеев, Д.Ф. Филимонов тата нумай-нумай ҫыравҫӑ вӗренсе тухнӑ.

1868 ҫулта, гимназире вӗреннӗ чухне, И.Я. Яковлев Чӗмпӗрте чӑваш шкулне уҫнӑ, Чӗмпӗр кӗпӗрнинче халӑх училищисен инспекторӗ И.Н. Ульянов тӑрӑшнипе 1871 ҫулта ӑна патшалӑх тытса тӑмалла тунӑ. Хусан университетӗнчен вӗренсе тухсан, 1875 ҫулта И.Я. Яковлева Хусан вӗренӳ округӗнчи чӑваш шкулӗсен инспекторӗ пулма уйӑрса лартаҫҫӗ, ҫапах вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулне, учительсем хатӗрлекен шкул пулса тӑнӑскере, ертсе пыма та пӑрахмасть. Ҫав шкул ҫумӗнче 1878 ҫулта хӗрарӑмсен уйрӑмне уҫнӑ, никӗсре тӑракан, сӑнавлӑ пуҫламӑш шкул ӗҫленӗ. И.Я. Яковлев шкул валли лайӑх ҫуртсем лартнӑ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ, интернат-шкул шутланса, учительсене педагогикӑн малта пыракан тытӑмне тӗпе хурса хатӗрленӗ, ӗҫе ятарлӑ тата эстетика тӗлӗшӗнчи вӗрентӳпе тачӑ ҫыхӑнтарнӑ. Вӗренекенсем интернат-шкулта чӑваш ялӗнчи йӑла-йӗркене тытса вӗреннӗ тата пурӑннӑ, ял ҫыннисем пек тумланса ҫӳренӗ, хӑйсене пӗтӗмӗшпех хӑйсем тытса тӑнӑ. Чӑвашсен пуҫламӑш шкулӗсенче тата хресченсем хушшинче ӗҫлеме, чӑваш нацине ҫӗклентерес тӗлӗшпе ӗҫлеме 1000 ытла учителе вӗрентсе кӑларнӑ ҫав шкул. Чӗмпӗр шкулне пултаруллӑ ачасене, ытларах чухӑн ҫемьесенчи ачасене, вӗренме илнӗ. (Яковлев ялти пуянсен ачисем шкул пӗтерсен учительте ӗҫлемӗҫ, предприниматель, суту-илӳ ӗҫӗпе ҫыхӑнӗҫ тесе шикленнӗ).

Шкултан вӗренсе тухакан учительсем кӑмӑл-сипет енчен таса, педагогика ӗҫне лайӑх пӗлекен, йӗркеллӗ, тӳрӗ кӑмӑллӑ, сапӑр, тӑван халӑха ҫутта кӑлармалли аслӑ ӗсе чунтан парӑннӑ ҫынсем пулнӑ. Хӑй вӗрентсе кӑларнисенчен пӗр пайне Иван Яковлевич тӗн семинарийӗсене кӗме пулӑшнӑ, унтан вӗренсе тухсан, вӗсем аслӑ шкулсене кӗме, е чӑваш прихучӗсенче пуп пулма

пултарĕç тесе шутланă. Пуçламăш училищĕсене пупсем ертсе пынă, çавăнпа вĕренĕве мĕнле йĕркелесе пырасси вĕсенчен килнĕ. Иван Яковлевич чăваш прихучĕсен пупĕсене уйăрса лартас ĕçе хутшăнни часăчасах епархи епископĕсемпе тата уессен тĕн правленийĕсемпе, вырăс тĕн çыннисемпе хирĕçесси патне илсе çитернĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернисем хушшинче гимнази курсĕшĕн экстерн йĕркипе экзамен тытса аслă шкула вĕренме кĕрекенсем те пулнă.

И.Я. Яковлев, учительсен уессенчи çуллахи курсĕсене уçса, вĕсен ăсталăхне ӳстерсе пымалли лайăх йĕрке туса хунă. 1919 çулхи чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче В.И. Ленин патне янă çырура Яковлев çакна палăртать: «Шкул программи, пурнăçпа йăла-йĕркен никĕсĕ çинче вырăс тата чăваш халăхĕсене çывăхлатма пур майпа та пулăшасси эпĕ туса хунă шкулăн тĕп тĕллевĕ пулнă». Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ пĕтĕмĕшпех чăвашсене вырăссемпе, ытти халăхсемпе çывăхлатас çул-йĕрпе пулса пынă, унта чăвашсем кăна мар, вырăс, ирçе-мăкшă, тутар ачисем те вĕреннĕ. Яковлев тĕрĕслесе тăракан пуçламăш тата икĕ класлă шкулсем те çав тĕллеве тытнă. Шкулсенче вĕренекенсем вырăс чĕлхине лайăх алла илччĕр тесе нумай тăрăшнă. Вырăс чĕлхин пĕлтерĕшне ăнланса, Яковлев 1904 çулта çапла çырнă: «Халĕ, ĕçлекен çынсем ытларах та ытларах кирлĕ чухне, вак халăхсемшĕн вырăс чĕлхи çутă пек, сывлăш пек кирлĕ пулса тăрать». Вырăс чĕлхине шкулта тăван чĕлхепе çырма-вулама хăнăхнă хыççăн вĕренме пуçланă. Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухакансем, тăван чĕлхене çеç мар, вырăс чĕлхипе литературине çав тери лайăх пĕлсе, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăннă, чăваш ялĕсенчи пуçламăш шкулсенче вырăсла калаçма вĕрентесси питех те ăнăçлăн пурнăçланса пынă.

3) Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ пулса, Яковлев округа кĕрекен Хусан, Чĕмпĕр, Самар тата Саратов кĕпĕрнисенче министерствăна пăхăнса тăракансемпе пĕрлех земствăсен, чиркӳ прихучĕсен шкулĕсемпе училищисен ĕçне нумай вăй

хунă. Вуншар та çĕршер ялта чăваш хресченĕсемпе тĕл пулса И.Я. Яковлев вĕсене çĕнĕ училищĕсем мĕн тери кирлĕ пулнине ăнлантара-ăнлантара панă. Çак тĕллевпех ертсе пыракан органсемпе, земство управисемпе, тĕн правленийĕсемпе, учительсемпе тата хресченсемпе çыру урлă тачă çыхăну тытнă. Çапла И.Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем хутшăннипе Атăл тăрăхĕнче тата Урал енче 400 ытла чăваш училищи уçăлнă. Çĕнĕрен уçакан училищĕсенчен нумайăшне И.Я. Яковлев çурт-йĕр лартма пулашнă, пурлăх тата çĕр лаптăкĕсем уйăрас тĕлĕшпе хресченсен общинисемпе калаçса татăлнă, укçа-тенкĕ, строительство материалĕсем, çурт-йĕре туса лартакансене шыраса тупас ыйтусене татса панă.

4) И.Я. Яковлев шучĕпе, «чăвашсене вырăс халăхĕ йышăннă Христос тĕнĕпе çывăхлатни» те вĕсене вырăссемпе тачăрах хутшăнмашкăн, ислам тĕнне пăхăнса, этнос пĕтсе ларассинчен сыхланмашкăн пулăшма тивĕçлĕ. Ку енĕпе сахал мар ĕçленĕ вăл. Иван Яковлевич тăрăшнипе тата ертсе пынипе Евангелисене, Çĕнĕ Сăмаха, Турă саккунне, псалтире, ытти чылай тĕн кĕнекине (Часослова – сехетсерен вуламалли кĕлĕ кĕнекине, Апостола, Октоиха – эрнесерен вуламалли кĕнекине, Требника, Чиновника – архиерей кĕнекине, Канонника – ирхи, каçхи кĕлĕсене, Месяцеслова) чăвашла куçарнă. 40 ытла кĕнекерен тăракан Авал хунă Сăмаха куçарас енĕпе ĕçлеме тытăннă, унти 13 кĕнекене куçарса пĕтернĕ, Моисейĕн пилĕк кĕнекине (Пятикнижие) куçарнă, унăн уйрăм пайĕсене пичете хатĕрлесе çитернĕ пулнă.

29 кĕнекерен тăракан Çĕнĕ Сăмах – тĕнче литературин шедеврĕ – чăвашла 20 пин экземплярпа пичетленсе тухни чăваш чĕлхишĕн, чăваш культуришĕн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ событи пулнă. Çав вăхăт тĕлне чăвашла Çĕнĕ Сăмах тĕнчере 300-мĕш чĕлхепе пичетленнĕ кĕнеке пулнă. «Библие хăйĕн тăван чĕлхипе вулакан халăх нихăçан та çĕр пичĕ çинчен çухалмĕ», – тесе хавхалантарнă И.Я. Яковлев хăйĕн вĕренекенĕсене.

Ҫакӑн хыҫҫӑн тинех «Чӑваш чӗлхи чухӑн чӗлхе, вӑл нихӑҫан та кӗнеке чӗлхи пулаймасть, чӑваш чӗлхи ытти литература чӗлхисен йышӗнче пӗр тан правallӑ чӗлхе пулас ҫук», – тесе ҫухӑрашакан шовинистсен ҫӑварӗсем хупӑннӑ.

5) Хӑйне пулӑшакансемпе пӗрле И.Я. Яковлев вӗренӳ кӗнекисем кӑларас, илемлӗ литература, истори, медицина, ял хуҫалӑх, ҫут ҫанталӑк, меслетлӗх, музыка литературине чӑвашла куҫарса кӑларас тӗлӗшпе ҫав тери пысӑк ӗҫ пурнӑҫланӑ. 100 ытла кӗнекепе брошюра кӑларнӑ. Яковлев кӗнекисем халӑхӑн пӗлӳ вӑйне пысӑклатма, хуҫалӑхпа культура тӗлӗшӗнчен ҫитӗнӳсем тума, тӗнче курӑмпа наци ӑнланулӑхне аталантарма, халӑхӑн санитарипе гигиена лару-тӑрӑвне лайӑхлатма, чӑвашсене вырӑссемпе тата ытти халӑхсемпе ҫывӑхлатма пулӑшнӑ. Хӑйӗн кӗнекисенче, тухса каланисенче, педагогика ӗҫӗ-хӗлӗнче И.Я. Яковлев урӑ пурнӑҫ йӗркине сарма тӑрӑшнӑ, табак туртнин сиенне кӑтартса панӑ. 1890-1900 ҫулсенче чӑвашла тухнисенчен уйрӑмах «Эрех ӗҫсе ӳсӗрӗлни ҫинчен», «Ачасене шатра каснӑ вӑхӑтра епле усрамалли ҫинчен», «Чума ҫинчен», «Эрех ҫынна пӗтерекен вилӗм», «Трахома тиекен куҫ чирӗ», «Ӗҫке ернӗ ҫынсем ҫинчен» ятлӑ брошюрӑсене асӑнма пулать. 1903-1916 ҫулсенче «Сборник популярных листов по медицине Пироговского общества врачей на чувашском языке», «Усал чир ҫинчен», «Епле халертен хӑтӑлмалла», «Эрех этем ӗмӗрне кӗскетет», «Чӑваш ачин вунна ҫитичченхи пурнӑҫӗ», «Внутренне состояние сердца (чӑвашла)», «Ачасене епле вӗрентсе ӳстересси ҫинчен», «Ачасене пӑхса ӳстересси ҫинчен», «Ӗҫке ернӗ ҫынсем ҫинчен», «Халӑха сывлӑха сыхлама вӗрентекен комиссийӗн иккӗмӗш кӗнеки» тата ыт.те. (пӗтӗмпе 40 брошюра) ытла пичетленсе тухнӑ. Вӗсем халӑх хушшине медицина пӗлӗвӗсем сарас, ӗмӗрхи тӗшмӗшлӗхпе кӗрешес, ҫапла вара халӑх культурине ҫӗклес тӗлӗшпе калама ҫук пысӑк ӗҫ тунӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ Чӗмпӗрти санитари бюровӗн пуҫлӑхӗ Е. Касторский ҫав брошюрӑсем пирки ҫапла ҫырнӑ: «Чӗмпӗр кӗпӗрнин управи, Пирогов обществи тата И.Я. Яковлев пӗрле вӑй хурса тӑрӑшнине пула

халĕ чăвашла чăн-чăн популярлă медицина литератури пур, вăл чăвашсен пурнăçĕнче чăннипех çĕнĕ тапхăр пуçланнине пĕлтерет».

Чăваш халăхĕ авалтанпа çĕр ĕçлесе, выльăх-чĕрлĕх пăхса, хурт-хăмăр тытса пурăннă. Анчах çĕр ĕçне авалхи меслетсемпе туса тăнă, выльăх-чĕрлĕхне, хурт-хăмăрне ытларах вĕрӳ-суру чĕлхипе «сипленĕ», хут пĕлмен пирки наука вĕрентĕвĕпе усă курайман. 1900 çулсенче И.Я. Яковлев халăх хушшине ял хуçалăх ăслăлăхĕн пĕлĕвне сарассишĕн хыпса çунать. Унăн вĕренекенĕ К.П. Прокопьев 1903 çулта «Çулталăк кĕнеки» кăларма тытăнать. Ку календарь кăларăмĕсенче санитарипе гигиена тата ытти ăслăлăх ыйтăвĕсемсĕр пуçне ял хуçалăхне аталантарас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, хурт-хăмăр пăхас, сад ӳстерес ыйтусемпе çырнă статьясем тупса вулама пулать. 1905-1915 çулсенче «Çĕр ĕçлекен», «Тырă-пулă тăвасси çинчен», «Çĕрпе пĕлĕт çинчен калаçни», «Сахал çĕрлĕ хресченсене мĕнле майпа пулăшмалли çинчен», «Вĕлле хурчĕсем», «Тырă вăрлăхĕпе ăна епле акасси çинчен», «Хресчен хирĕнче курăк акасси çинчен», «Хирте тырă мĕнле ӳсет», «Волоколам уясĕнчи çĕр ĕçлекенсем хăйсен пурнăçне епле аванлатни çинчен», «Çĕре епле ĕçлесен аван пуласси çинчен», «Выльăх-чĕрлĕх чирлесен епле имлемелли çинчен», «Чтения по пчеловодству» (чăвашла), «Тырă лайăх пултăр тесен мĕнле вăрлăх акас пулать», «Как от болота хорошую пользу получить» (чăвашла), «Кормление молочного скота и переработка молока» (чăвашла), «Улма йывăçĕ çинчи вĕтĕ симĕс пыйтăна епле пĕтересси çинчен» тата ыт.те. пичетленнĕ. Хăшпĕр кĕнекисем 2-3 хут çапăнса тухнă.

1905-1907 çулсенче обществăпа политика ыйтăвĕсемпе çырнă брошюрăсем те чылаях тухнă, вĕсен шутĕнче, «Китай», «Япония çĕрĕпе Япония çыннисем çинчен», «Автономия и единство России» (чăвашла), «Политические партии» (чăвашла), «Высочайшие манифесты 6 авгута, 17 октября и 3 ноября 1905 года, объяснения к ним» (чăвашла), «Халăха ирĕк парса ытти çынсемпе танлаштарасси çинчен», «Куланайпа ак-

цизсем çинчен», «Патшалăхсене тытса тăмалли майсем», «Халăх хушшинчен суйланă çынсемпе халăха мĕнле ирĕклĕхсем тата ытти кирлĕ япаласем çинчен», «Земство çинчен», «О чиновниках в инородном правлении» (чăвашла), «Хальхи самана», «Что нужно для выборов» (чăвашла), «Халăхран суйласа янă çынсем» тата ытти нумай-нумай брошюра пичетленнĕ.

6) И.Я. Яковлев кăларнă вĕренӳ кĕнекисенчен, хăйне евĕрлĕ калавсенчен чăвашсен илемлĕ литератури çуралнă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ И.И. Иванов, И.Н. Юркин (ăна начар вĕреннĕшĕн шкултан кăларса янă, çавăнпа вăл пурнăçĕ тăршшĕпех И.Я. Яковлева хăйĕн тăшманĕ тесе шутланă), Г.И. Комиссаров, А.В. Княгинина, Т.С. Семенов-Тайăр çыравçăсем пулса тăнă. Чăваш поэзийĕн чаплă классикĕн К.В. Ивановăн, паллă поэтăн Н.В. Шупуççыннин таланчĕ Чĕмпĕр шкулĕнче аталаннă. Пулас çыравçăсем Трубина Мархви, С.М. Лашман, Н.К. Патман тата ыттисем унтах вĕреннĕ. И.Я. Яковлев «Чăваш юмах-халапĕ» ятпа чăваш поэзийĕн хăйне евĕрлĕ хайлавĕсене – М.Ф. Федоровăн «Арçури» балладине, К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине, Н.В. Шупуççыннин «Янтрак янтравĕ» поэмипе ытти хайлавĕсене пичетлесе кăларнă. Чĕмпĕр шкулĕнче чăвашсен малтанхи композиторĕсем Ф.П. Павлов, С.М. Максимов, Г.Г. Лисков, музыка тĕпчевçи В.П. Пазухин, чăваш театрне йĕркеленĕ И.С. Максимов-Кошкинский драматург, математиксемпе педагогсем Н.М. Охотниковпа П.М. Миронов, историк тата этнограф М.П. Петров, чĕлхе тĕпчевçисем Т.М. Матвеевпа Ф.Т. Тимофеев (Тимухха Хĕветĕрĕ) тата ыттисем ӳссе çитĕннĕ.

7) И.Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем чăваш хресченĕсем хушшинче ал ăсти ĕçĕсене, ял хуçалăхĕн паха культурисене сарасси пысăк пĕлтерĕшлине ăнланнă. Ку тĕллеве И.Я. Яковлев нимрен малтан учительсем тата ялти шкулсем урлă пурнăçласа пынă. Чăннипе илсен, Чĕмпĕр шкулĕн вĕренӳ планĕнче ял хуçалăхĕн вăтам шкулĕн курсĕ пулнă, унта çут çанталăка тата ял хуçалăх ăслăлăхне вĕрентнĕ. XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш

çулĕсенчен тытăнсах пулас учительсем шкул мастерскойĕнче атăç, тимĕрçĕ, столяр тата токарь ăсталăхне алла илнĕ, 90-мĕш çулсенчен тытăнса вара шкул ферминче уй-хир ĕçĕн, выльăх-чĕрлĕх, пахча çимĕç, улмаçырла тата хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçĕн малта пыракан чи лайăх меслечĕсене хăнăхнă. Шкултан вĕренсе тухнисем ялти чылай училищĕре ал ăсти мастерскойĕсем уçнă, шкул çумĕнчи кăтартуллă ял хуçалăх лаптăкĕсем туса хунă, вĕренекенсемпе хресченсене хуçалăх ĕçĕн çĕнĕ меслечĕсене хăнăхтарнă, çĕр ĕçĕн культурине ӳстерме пулăшнă.

Чĕмпĕр шкулĕн хĕрарăмсен уйрăмĕнче вĕренекенсене ал ĕç тума, кĕпе-тумтир касса çĕлеме хăнăхтарнă. Шкулта ĕçлеме тытăнсан, вĕсем унта вĕренекенсемпе хресчен хĕрарăмĕсене хăйсен ăсталăхне панă. Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнисем хресченсене кил-çурта таса тытма, санитарипе гигиена йĕркине пăхăнма хăнăхтарнă.

8) Яковлевăн чăваш нацине çĕклемелли программинче халăха эстетика тĕлĕшĕнчен воспитани парасси паллă вырăн йышăннă. Чĕмпĕр шкулĕнчи ачасене юрлама, сĕрме купăс калама лайăх вĕрентнĕ. Ăста музыкантсем ертсе пынă арçынсен, хĕрарăмсен хорĕсем, хутăш хор, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çавăн пекех хĕлĕхлĕ инструментсен, вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ, симфони оркестрĕ ырă ят илнĕ, вĕсене шкулта кăна мар, Чĕмпĕр хулинче те лайăх пĕлнĕ. Шкултан вĕренсе тухакансем хор йĕркелеме, ăна ертсе пыма пултарнă. Ялти училищĕсенче ĕçлесе, хорсене ертсе пынă вĕсем, музыкăна, юрра-кĕвве халăх хушшине сарнă. Ялти училищĕсем çумĕнче библиотекăсем ĕçленĕ, хресченсене валли вулав çурчĕсем уçнă, халăха хаçат-журнал, кĕнеке вуласа кăтартассине йĕркеленĕ. Чĕмпĕр шкулĕнче «Патшашăн панă пурнăç» оперăн пĕр пайне чăвашла куçарса лартнă. К.В. Иванов поэт ăста ӳнерçĕ те пулнă. Вăл ӳкерчĕк урокĕсем ирттернĕ, асăннă оперăна лартмашкăн сценăна сăрласа илемлетнĕ, вăл ӳкернĕ темиçе картина упранса юлнă.

9) Иван Яковлевич хресченсемпе ялан çыхăну тытнă, вĕсен нуши-тертне пĕлсе тăнă. Чĕмпĕр шкулĕнче те, ялти

шкулсене тĕрĕслесе çӳренĕ чухне те йышăннă вăл хресченсене, социаллă пурнăç ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе ырă та кирлĕ канашсем панă, хысна, уделни çĕрĕсемпе помещиксен çĕрне илме, строительство материалĕсем, ял хуçалăх хатĕрĕсемпе машинисем туянма, кивçен вăрлăх илме тата ытти енĕпе пулăшнă. Хресченсене юридици канашĕсем панă, влаç органĕсем хĕснипе çыхăннă ĕçсене пăхса тухнă чухне судра хӳтĕленĕ. Вăл пĕччен чăваш хĕрарăмĕсен ачисем валли приютсем, çуллахи тапхăрта шкулсем çумĕнче ача сачĕсем, аманнă çар çыннисене сиплекен лазаретсем уçнă. Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен тĕп чăваш шкулĕ – пĕтĕм чăваш халăхĕн çурчĕ, чăвашсене пулăшу паракан общество, хресченсене пур енлĕ пулăшакан банк, юридици, право ыйтăвĕсемпе пулăшакан центр, Чĕмпĕре килекен чăвашсене чарăнмалли, çĕр каçмалли çурт, çунса кайнă чăвашсемшĕн вăхăтлăх усрав çурчĕ пулнă.

10) Яковлев шкулĕ воспитани панисен хушшинче обществăпа çар деятелĕсем, патриотсем сахал мар. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи тата граждан вăрçи çулĕсенче шкулта вĕренекенсенчен чылайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе фронта тухса кайнă, И.С. Космовский полк командирне çитнĕ. Шкулта вĕреннĕ Т.С. Кривов, Д.С. Эльмен тата ыттисем обществăпа патшалăх ĕçĕсенче пысăк вырăнсем йышăннă.

Çут ĕçĕнче, ăслăлăхра ырă ята тивĕçнĕ В.К. Магницкий, Н.В. Никольский, Н.И. Ашмарин, В.А. Ислентьев педагог, Чикме тата Етĕрне уесĕсенчи халăх училищисен инспекторĕ Ф.Н. Никифоров тата ыттисем И.Я. Яковлев пуçарса янă чăваш наци çĕкленĕвĕшĕн пынă юхăмра паллă вырăн йышăннă.

И.Я. Яковлевăн чăваш нацине çĕклес тĕлĕшпе пурнăçлакан пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ питех те пысăк йывăрлăхсене çĕнтернипе çыхăннă, ăна реакцилле шовинистсем – халăха вĕрентес ĕç министрĕсем, Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕсем, Хусан архиепископĕ Палладий тата Чĕмпĕр епископĕ Никандр, ытти тĕн представителĕсем вĕçĕмсĕр тапăннă, сепаратизм майлă тăрать, чăвашсене вырăссенчен уйрăм тытма, чăваш наци патшалăхĕ туса

хума тăрăшать тесе тата ытти сăлтавсемпе айăплама хăтланнă. Çавнашкал айăпланине хирĕçлесе, Яковлев пĕрмаях çакна çирĕплетнĕ: «Истори, культура, географи условийĕсем чăвашсене политика тата патшалăх тĕлĕшĕнчен вырăс халăхĕнчен, Раççейрен уйрăлма май памаççĕ. Пачах урăхла, вырăс халăхĕ умне истори ыйтăвĕсем тухса тăрсан, чăвашсем нумай асап тӳснĕ, аслă вырăс халăхĕ хăй вăхăтĕнче вĕсен паттăрлăхĕпе çухатăвĕсене ăнланса ăна пулăшма тивĕçлĕ».

Хайне сепаратизм тата национализм тĕлĕшĕнчен айăплакансен умĕнче тӳрре тухма тăрăшса Иван Яковлевич тепĕр чухне ӳстеререх, тĕрĕсех мар калани те пулнă. 1912 çулхи чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕнче халăха вĕрентес ĕç министрне ăнлантарса панинче çапла çырнă: «Пирĕн вак халăхсем хăйсен йĕри-тавра пурăнакан вырăс халăхĕнчен нумай кая юлнă, ăс-хакăлпа пурлăх тĕлĕшĕнчен чылай чухăнрах, çавăнпа вĕсем енчен унашкал нимĕнле шухăшлани те пулма пултараймасть... Вĕсем – аслă вырăс халăхĕн пĕчĕк çулташĕсем кăна, унăн истории çулĕпе пăхăнса пĕрле утаççĕ, унăн телейĕ – вĕсен телейĕ, унăн хурлăхĕ – вĕсен хурлăхĕ, унăн пуласлăхĕ – вĕсен пуласлăхĕ». Иван Яковлевич çакăн пек сăмахсемпе те усă курнă: «Пирĕн тухăçри вак халăхсене политика тĕлĕшĕнчен нимĕнле хăй тĕллĕнлĕх те пӳрмен, вĕсен наци хăйне евĕр аталанăвне шырама та кирлĕ мар». «Вырăс историйĕ Раççейри мĕн пур халăхсем валли, çав шутра истори енĕпе уйрăм пулнисем – поляксем, Остзей крайĕнчи нимĕçсем тата ыттисем валли те вырăс халăхĕпе пĕтĕмпех пĕрлешсе каяс ыйтăва каялла таврăнмалла мар кăларса тăратнă. Вырăс халăхĕ вăл – пысăк вăй, унăн истории тĕллевĕ умĕнче Раççей анлăшĕнче пурăнакансем пурте пуç тайма тивĕçлĕ». Çак сăмахсене те вăлах каланă: «Наци чăрсăрлăхне аталантарса, чăвашсем, çармăссем, вотяксем тата ыттисем валли автономи туса хурасси çинчен ĕмĕтленни вăл кирлĕ мар ĕçшĕн вăйхала тата тимлĕхе пĕтерни, вак халăхсен кун-çулĕпе выляни пулĕччĕ». Хăйĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕнче И.Я. Яковлев чăвашсем этнос тĕлĕшĕнчен вырăсланас-

сине яланах хирĕç тăнă пулин те, вăл час-часах тахçан-тахçан пуласлăхра чăвашсем вырăссемпе пĕрлешсе каясси çинчен çырнă, анчах çавăн сăлтавĕсене уçса паман. Унран вĕреннĕ, унăн ĕçне малалла туса пынă М.П. Петров (Тинехпи), хăй 1916 çулта Н.И. Ильминский çинчен çырнă кĕнекере, пĕрлешсе каймалли сăлтавсене çапла ăнлантарса панă: Христос тĕнĕн шухăшĕсем тăван чĕлхепе сарăлса пынăçемĕн «вак халăхсем хăйсем харпăр хăйĕн вăйĕпе туса хунине пурне те пăрахăçлаççĕ, хăйсем çирĕплетнĕ йăла-йĕркене, хăйсем хăнăхнă кăмăл-сипете, пурнăçра яланах тĕп вырăна хунă хăйсен принципĕсене тата тĕнчене хăйсем мĕнле ăнланнине манаççĕ. Çакăн вырăнне вĕсем вырăс халăхĕн Христос тĕнĕпе çыхăннă шухăшĕсене, унăн наци йăли-йĕркипе уйрăмлăхĕсене хăнăхса пыраççĕ, çапла вара вак халăхсен йăхĕсем хăйсен йышĕпе малти ăс-хакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен, ĕненӳ тĕлĕшĕнчен вырăс халăхĕпе çывăхланмалли пĕрремĕш, чи кирлĕ утăм тăваççĕ, кайран, çитес вăхăтра, гражданла тата культурăри пĕрлехи пурнăçшăн аслă державăа халăхĕпе пĕтĕмĕшпех пĕрлешеççĕ». Ахăртнех, Иван Яковлевич та Христос тĕнĕ витĕм кӳнипе чăвашсен этнос енĕпе вырăссемпе пĕрлешсе кайма май килессине çавăн пек ăнланнă пулĕ.

Чăваш халăхне çутта кăларакан хăйĕн кулленхи ĕçĕнче чăвашсене вырăслатас енĕпе нимĕн те туман пулин те, чăваш наци юхăмĕн представителĕсем, ахăртнех, вăл каланă сăмахсене тĕпе хурса, И.Я. Яковлева, çавăн пекех Н.И. Ильминские те, чăвашсене вырăслатма тăрăшакансем тесе сăмах сарнă.

Пĕтĕмлетӳ: И.Я. Яковлев халăха çутта кăларас енĕпе ĕçленин историлле пĕлтерĕшĕ çакăнта пулать:

1) чăвашсене çутта кăлармалли тытăма (системăна) туса хатĕрлесе, çав тытăма пурнăçласа, шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне пысăк пахалăхпа туса пынă, вĕренекенсене пурнăçра кирлĕ, тĕрлĕ енлĕ çирĕп пĕлӳ парса пынă, чăваш шкулĕсенче ĕçлеме чăвашран пин ытла вĕрентекен хатĕрленĕ;

2) чăвашсене ислам тĕнне йышăнтарасси, вĕсем тутарланса пырасси, авалхи халăх пĕтсе ларасси патне илсе çитересси чарăннă; кунпа пĕрлех чăвашсене этнос тĕлĕшĕнчен вырăслатмалли аслă держава политики те ăнăçман;

3) çур ĕмĕр хушшинче чăваш халăхĕн наци çĕкленĕвĕ чылай çӳллĕ шая çитнĕ, вăл, вĕрентекен ĕмĕтленнĕ пек, вершук е икĕ вершук чухлĕ кăна мар, пĕр сыпăк таранах çĕкленнĕ, чăваш çырулăхĕ йĕркеленнĕ, халăх хутла пĕлесси 12 процента яхăн çитнĕ, наци интеллигенцийĕ пулса тăнă, чăвашсен хуçалăх ĕçĕпе хăнăхăвĕ лайăхланса пынă, вĕсен йăлари культури кăштах лайăхланнă, чăваш чĕлхиллĕ литературăн тĕрлĕ енĕсен, çав шутра илемлĕ литература, кĕнеке кăларас ĕç, профессиллĕ наци искусствин – музыка, театр, ӳнер искусствин пуçламăшĕ çуралнă, халăхăн наци ăнланулăхĕ çирĕпленнĕ;

4) чăваш халăхĕ ăс-хакăл, культура, экономика енĕпе вырăссемпе, Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемпе çывăхланас, чăвашсем Христос тĕнĕн вĕрентĕвĕсене тата вырăс культурине, вырăс чĕлхине алла илес тĕлĕшпе паллă улшăнусем пулса иртнĕ, чăваш халăхĕн обществăпа политикăри хастарлăхĕ ӳснĕ.

Çапла вара Иван Яковлевич Яковлев революцичченхи çур ĕмĕр тапхăрĕнче чăваш халăхĕн ертӳçи пулнине хăйĕн ĕçĕсемпе кăтартса панă, çак ĕçре вăл хăюллă, пĕтĕм чунне парса ĕçленĕ. Çак асăннă ĕçсенче Иван Яковлевич пур çĕрте те хăй ертӳçĕ, вĕрентекен пулнă.

Тĕнче культурин историйĕнче И.Я. Яковлев пек çынсем сахал пулнă. Çавăнпа ăна хăй вăхăтĕнче пурăннă чăвашсем «Чăваш Ломоносовĕ», «Чăваш Лютерĕ», «Чăваш Моисейĕ», «Чăваш Турри» тесе хакланă.

Ахальтен мар ĕнтĕ И.Я. Яковлевăн вĕренекенĕ, пирĕн паллă тĕпчевçĕ, чĕлхеçĕ, 31 чĕлхе пĕлнĕ В.Г. Егоров профессор пурăннă чухне хăй 93 çул тултарнă ятпа ирттернĕ уявра хăйне мухтаса каланине хирĕç çапла хуравланă: «Пĕр чăваш та Иван Яковлевич шайне çитеймест. Илтрĕр-и, пĕри те, нихăçан та...»

## Тĕп литература


1. Димитриев В.Д. Об историческом значении просветительной деятельности И.Я.Яковлева / В.Д. Димитриев // Изв. Акад. Наук ЧР. 1993. – № 1.

2. Димитриев В.Д. И.Я. Яковлевăн халăха çутта кăларас ĕçри историллĕ пĕлтерĕшĕ / В.Д. Димитриев // Хыпар. – 1998, ака, 25.

3. Димитриев В.Д. Просветитель чувашского народа И.Я. Яковлев: сб. ст. / В.Д. Димитриев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2002.– 140 с.

4. Краснов Н.Г. Иван Яковлев и его потомки / Н.Г. Краснов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 352 с.

5. Мукина И.В. И.Я.Яковлев çинчен хунă чăн сăмах / И.В. Мукина.– Шупашкар: Руссика, 1998. – 250 с.

6. Петров Н.П. Чăваш çырулăхĕ / Н.П. Петров. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1971. – 64 с.


## Хушма литература


1. Александров Г.А. Иван Яковлевич Яковлев: фрагменты жизни / Г.А. Александров. – Чебоксары: Изд-во «Чувашия», 1997. – 194 с.

2. Александров Г.А. Чувашские интеллигенты. Биографии и судьбы / Г.А. Александров. – Чебоксары, 2002. – 212 с.

3. Волков Г.Н. Судьба патриарха. Роман-эссе / Г.Н. Волков. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1998. – 350 с.

4. Волков Г.Н. Жизнь, смерть, бессмертие патриарха / Г.Н. Волков. – Чебоксары, 2004. – 350 с.

5. Вопросы яковлевоведения. Труды Института И.Я. Яковлева. – Вып. 1. – Чебоксары, Изд-во Чуваш. ун-та, 1999.

6. Жиркевич А.В. Мои встречи с И.Я. Яковлевым. Из дневника за 1916-1924 гг. /сост. и коммент. Г.А. Александрова. – Чебоксары: Руссика, 1998. – 467 с.

7. Земляков А.Е. Проблема связи воспитания с жизнью в истории чувашской школы и педагогики: монография / А.Е. Земляков. – Чебоксары: Чувашгоспедуниверситет им. И.Я.Яковлева, 2004. – 290 с.

8. Земляков А.Е. Яковлевоведение: учеб. пособие для студентов педагогических учебных заведений / А.Е. Земляков. – Чебоксары: Чувашгоспедуниверстет им. И.Я.Яковлева, 2006. – 2003 с.

9. Плечов Г.Н. Вараксарская чувашская женская трудовая община: феномен просветительно-педагогической теории и практики И.Я. Яковлева / Г.Н. Плечов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1999. – 150 с.

10. Таймасов Л.А. Христианизация чувашского народа в первой половине Х1Х века: монография / Л.А. Таймасов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2005.

11. Тенюшев И.Я. Свет яркой звезды / И.Я. Тенюшев. – Чебоксары, Фонд И.Я.Яковлева, ЧИЭМ СПбГПУ. – 214 с.

12. И.Я. Яковлев в воспоминаниях современников. – Чебоксары, 1968.

13. Яковлев И.Я. (Саламбек). Симбирская учительская школа и его роль в просвещении чувашей / И.Я. Яковлев (Саламбек). – Чебоксары, 1959.

14. Яковлев И.Я. Письма / И.Я.Яковлев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1985. – 366 с.

15. Яковлев И.Я. Из переписки. Ч. 1 / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1989. – 320 с.

16. Яковлев И.Я. С думой о народном просвещении. Из переписки. Ч. 2 / И.Я. Яковлев. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1998. – 438

17. И.Я. Яковлев и проблемы яковлевоведения: сб. ст. – Чебоксары: ЧГИГН, 2001. – 144 с.

## Зачет валли хатĕрленĕ ыйтусем

1-мĕш тур ыйтăвĕсем

1. Чăвашсене çутта кăларакане И.Я. Яковлев хăçан тата ăçта çуралнă?

2. Иван Яковлевича мĕншĕн Яковлев хушамат панă?

3. И.Я. Яковлев мĕнле çемьере ӳссе çитĕннĕ?

4. И.Я. Яковлев пуçламăш пĕлӳ ăçта илнĕ? Çав тапхăрти пуçламăш пĕлӳ системи çинчен мĕн пĕлетĕр?

5. И.Я. Яковлев чи малтан алла илнĕ професси унăн пурнăçне мĕнле витĕм кӳнĕ ?

6. Чĕмпĕрти гимназие вĕренме кĕнĕ чухне пирĕн Вĕрентекен миçе çулта пулнă?

7. Н.И. Ильминский, И.Я. Яковлев, В.А. Белилин... Чăваш халăх историне мĕнле паллă ĕçпе кĕрсе юлнă?

8. И.Я.Яковлев хатĕрленĕ пирвайхи чăваш букварĕ мĕн ятлă пулнă тата вăл миçемĕш çулта кун çути курнă?

9. 1875 çулта И.Я. Яковлев пурнăçĕнче мĕнле паллă событи пулса иртнĕ?

10. И.Я. Яковлев хăçан тата кама качча илнĕ, унăн мăшăрĕ пирки мĕн пĕлетĕр?

11. Чĕмпĕрти тĕп чăваш шкулĕ хăçан учительсем хатĕрлекен шкул пулса тăнă?

12. И.Я.Яковлев чикĕ леш енчи мĕнле çĕр-шывсенче пулса курнă тата унта мĕнле тĕллевсемпе çӳренĕ?

13. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ют çĕр-шывран килнĕ мĕнле паллă çынсем пулса курнă, вĕсем çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?

14. И.Я. Яковлев тĕн кĕнекисем куçарни çинчен мĕн пĕлетĕр? Унăн çак ĕçĕ мĕнле тĕллевсемпе çыхăннă?

15. 1909 çулта К.В. Ивановпа пĕрле чăваш ачисем валли мĕнле кĕнеке хатĕрлесе кăларнă?

16. Хăйĕн чăваш халăхне панă халалне хăçан çырнă тата унта мĕнле паллă çын ятне асăннă?

17. Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕнче мĕнле паллă çынсем вĕреннĕ?

18. А.И. Яковлев ашшĕ çинчен çырнă кĕнеке мĕн ятлă тата пирвайхи хут вăл хăçан пичетленсе тухнă?

2-мĕш тур ыйтăвĕсем

1. И.Я. Яковлевăн амăшĕ мĕн ятлă тата мĕнле хушаматлă пулнă?

а) Яковлева;
ă) Пахомова;
б) Васильева.

2. И.Я. Яковлевăн пиччĕшĕсем миçе пулнă?

а) пĕрре те пулман;
ă) виççĕ;
б) иккĕ.

3. И.Я. Яковлевăн тăван ялĕнче пуçламăш шкул миçемĕш çулта уçăлнă?

а) 1871;
ă) 1868;
б) 1875.

4. Кăнна Кушкинче уçăлнă шкулта ĕçленĕ пĕрремĕш учитель?

а) Алексей Рекеев;
ă) Игнатий Иванов;
б) Мĕтри Юманĕ.

5. И.Я.Яковлев тăван ялĕнче хĕрсен училищине те уçнă. Миçемĕш çулта?

а) 1886;
ă) 1895;
б) 1900.

6. И.Я.Яковлев миçере гимназие вĕренме кĕнĕ тата тӳрех миçемĕш класра вĕренме пуçланă?

а) 16-ра 3-мĕш класа;
ă) 19-та 5-мĕш класа;
б) 17-ре 4-мĕш класа.

7. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ ĕçлеме пуçланă çул?

а) 1868;
ă) 1871;
б) 1848.

8. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕрремĕш учителĕ пулма Çутĕç министерстви кама çирĕплетнĕ?

а) И.Я.Яковлева;
ă) В.А.Калашникова;
б) А.В.Рекеева.

9. Чĕмпĕрти тĕп чăваш шкулĕн хĕрсен уйрăмĕ уçăлнă çул:

а) 1877;
ă) 1878;
б) 1891.

10. Е.А. Яковлева Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче миçемĕш çулта ĕçлеме пуçланă?

а) 1891;
ă) 1874;
б) 1878.

11. И.Я. Яковлев çырнă пĕрремĕш тĕпчев ĕçĕ?

а) «Çулталăк кĕнекине» рецензилени;
ă) «Чăвашсен учӳк уявĕ»;
б) Букварь вали çырнă «Предуведомление».

12. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторĕпе И.Н.Ульяновпа пирĕн Вĕрентекенĕмĕр хăçан паллашнă тата унпа туслă пурăннă çулсем?

а) 1869 – 1886 çç.;
ă) 1870 – 1891 çç.;
б) 1848 – 1886 çç.

13. Хăйĕн вĕренекенĕсемпе пĕрле И.Я.Яковлев 1872-1919 çулсенче чăваш букварĕн миçе кăларăмне хатĕрлесе кăларнă?

а) 15 кăларăмне;
ă) 33 кăларăмне;
б) 45 кăларăмне.

14. И.Я. Яковлев чăваш çырулăхĕн виçĕ вариантне хатĕрлени паллă, чăваш алфавичĕн пĕрремĕш варианчĕ миçе сас паллирен тăнă?

а) 25 сас паллирен;
ă) 47 сас паллирен;
б) 37 сас паллирен.

15. Аса илӳсен «Манӑн пурӑнӑҫ» кӗнекинче «Манӑн вӗрентекен» ятлӑ сыпӑк пур, И.Я. Яковлев кама хӑйӗн вӗрентекенӗ тесе шутланӑ?

а) А.И. Баратынские;
ӑ) Н.И. Ашмарина;
б) Н.И. Ильминские.

16. И.Я. Яковлев Библирен мӗн ятлӑ кӗнекине чи малтан куҫарнӑ?

а) Иоанн ҫырнӑ Евангелие;
ӑ) Матфей ҫырнӑ Евангелие;
б) Лука ҫырнӑ Евангелие.

17. И.Я. Яковлевпа унӑн мӑшӑрӗн миҫе ача пулнӑ?

а) 5 ача;
ӑ) 3 ача;
б) 1 ача.

18. Чӑваш патшалӑх университетӗнче И.Я. Яковлевпа И.Н. Ульянов музейӗ хӑҫан уҫӑлнӑ?

а) 1998 ҫулта;
ӑ) 1968 ҫулта;
б) 1991 ҫулта.

29. «Прометей из чуваш» кӗнеке авторӗ кам?

а) Краснов Н.Г.;
ӑ) Кураков Л.П.;
б) Волков Г.Н.

## Вопросы для самостоятельной работы

1. Из воспоминаний И.Я.Яковлева: «Ильминский свел меня с Василием Алексеевичем Белилиным, с русским, из мещан города Казани. Он занимался с Ильминским восточными языками, будучи в этой области знаний очень даровитым, особенно по части усвоения звуковых законов языков. По поручению Ильминского, я и Белилин на каникулах в 1871 и 1872 годах делали совместные экскурсии в деревню Кошки и другие чувашские селения.

Но скоро мы с ним разошлись, так как дело дорогого мне народного образования он стал замеши-

вать политику. Вот какой диалог в конце концов произошел у меня с Белилиным:

Белилилн: «Иван Яковлевич! Вы постоянно хотите переводить на чувашский язык религиозные, нравственные, богослужебные книги, священные книги, молитвенники и прочее. Это ваша цель? Первая и последняя?»

Что ответил И.Я.Яковлев Белилину?

2. Из воспоминаний И.Я.Яковлева: «Когда я вырос, то меня неудержимо тянуло, влекло на родину, в деревню Кошки. Ильминскому, которому удалось познакомиться с языком чуваш этой деревни, нравился тамошний выговор. И он, считавший, что в основу для всех чуваш, говорящих с разными местными особенностями и оттенками, должен быть положен один какойӑлибо чувашский говор, останавливался как на самом подходящем для такой цели говоре крестьян чуваш деревни Кошки. Я так часто толковал с ним о месте моей родины, что Николай Иванович в шутку употреблял даже такие выражения: «…»

С каким городом сравнивал Ильминский родину И.Я.Яковлева?

3. Из воспоминаний И.Я.Яковлева: «Я присутствовал при кончине Ильминского. Когда Ильминскому было плохо, то я находился в Казани, откуда поехал в командировку. Узнав, что Николаю Ивановичу плохо, я сейчас же вернулся в Казань. Менее за полчаса до кончины Николай Иванович сказал мне следующие слова: «…»

Что говорил Н.И.Ильминский И.Я.Яковлеву перед своей смертью?

4. И.Я.Яковлев в своей книге «Моя жизнь» вспоминает: «Я и два моих товарища 1 сентября 1970 года поехали в Казань, где и наняли себе общую квартируӗ Но мы прожили вместе недолго. А затем разошлись». Эти друзья по Симбирской гимназии в

свое время помогали ему в организации занятий в его чувашской школе. О ком идет речь? Назовите фамилии друзей И.Я.Яковлева по Симбирской гимназии.

5. В 1907 году по распоряжению попечителя Казанского учебного округа Деревицкого был исключен из Чувашской школы весь первый класс – за противогосударственную пропаганду. В число исключенных, к сожалению, попал и воспитанник-чуваш, ничего общего с этой пропагандой не имевший, а, напротив, консервативно настроенный. Это был симпатичный, скромный, красивый по наружности, богато, всесторонне одаренный юноша, обладавший не только логической способностью но и эстетическими талантами. Это был поэт и прекрасный переводчик…

Кто этот юноша, о ком так тепло вспоминает И.Я. Яковлев?

6. В Симбирской чувашской школе один из учеников, чуваш, окончивший курс ее в 1879 году, обратил на себя внимание выдающимися способностями по математике. Будучи в школе он делал самостоятельные открытия области математики. Одновременно с преподаванием в школе он стал самостоятельно заниматься математикой по программе гимназического и даже университетского курсов. Тут у него уже женатого явилось стремление – держать экзамен на аттестат зрелости восьмого класса гимназии. Главное затруднение заключалось в том, что он не знал ни новейших, ни древних языков. По моей просьбе Володя Ульянов, в то время юноша лет шестнадцати, давал ему уроки по новым и древним языкам бесплатно. Этот одаренный чуваш в 1888 году блестяще выдержал экстерном экзамен на аттестат зрелости и в том же году поступил на математический факультет Казанского университета. О каком известном человеке идет речь? Назовите фамилию этого человека.

7. В книге «Моя жизнь» И.Я.Яковлев много вспоминает об Ашмарине Н.И.: «К числу интересных лиц, посещавших меня в Симбирской чувашской школе, следует причислить и Николая Ивановича Ашмарина». Кто такой Н.И. Ашмарин? Какие известные труды Ашмарина знакомы вам?

8. И.Я. Яковлев за период многолетней педагогической деятельности испытал не только широкое общественное признание, но и пережил тяжелые времена прямых нападок и преследований со стороны врагов просвещения и его просветительской системы и личных недругов. Таковым была массированная газетная травля его в 1906-1911 годах.

Гавриил Федоров (Алюнов), Дмитрий Петров (Юман), Иван Юркин. Все они учились в Симбирской чувашской школе и были учениками И.Я.Яковлева, а также инициаторами и авторами клеветнических статей против И.Я.Яковлева. Что вы знаете об этом? Расскажите по-подробнее об их деятельности.

9. «Будучи на третьем курсе Московского университета, сын мой представил сочинение на философскую тему и на 4 курсе получил за него серебряную медаль. Он продолжает увлекаться исследованиями по древнерусской истории, используя в качестве материалов старые архивы, хранящиеся в кремлевских дворцовых башнях.»

Вопрос: О ком вспоминает И.Я. Яковлев? Расскажите, что вы знаете об этом сыне чувашского просветителя?

## Темы рефератов:

1. Чувашский государственный университет им. И.Н. Ульянова – верный продолжатель благородных начинаний И.Я.Яковлева в новых условиях.

2. Академик Л.П. Кураков – достойный продолжатель просветительских традиций И.Я. Яковлева.

3. История факультета чувашской филологии и культуры ЧувГУ им. И.Н. Ульянова. Родной язык – могучее средство народного воспитания.

4. Музей И.Н. Ульянова и И.Я. Яковлева в Чувашском государственном университете – очаг культуры для школьников, студентов, преподавателей.

5. «Завещание И.Я. Яковлева чувашскому народу» в моем восприятии.

6. Образ И.Я. Яковлева в чувашской литературе.

7. Формирование духовной культуры и нравственности у учащихся на примере СЧУШ.

8. Роль устного народного творчества в изучении родного языка в СЧУШ.

9. Народный учитель в представлении чувашского просветителя.

10. И.Я. Яковлев в оценках деятелей культуры и государства.

11. История школы, открытой И. Я. Яковлевым.

12. Продолжение традиций И.Я. Яковлева в современной школе.

13. Воспитанники СЧУШ – наши земляки.

14. Использование идей Яковлева в современной школе.

15. Трудовое воспитание как продолжение традиций СЧУШ.

16. Эстетическое воспитание в СЧУШ и его развитие в наши дни.

17. Народные традиции в СЧУШ и в современной школе.

18. Методика преподавания русского языка в СЧУШ.

19. Воспитание нравственности в СЧУШ и в наши дни.

20. И.Я. Яковлев и христианство.

21. Создание нового чувашского алфавита и первых учебных книг.

22. Выразительные обороты речи и выражения в первой чувашской книге для детей.

23. Яковлевская традиция использования фольклорного материала на уроках родного языка и литературы.

24. Влияние Н.И. Ильминского на становление и развитие личности чувашского просветителя.

25. И.Я. Яковлев – переводчик религиозной литературы.

26. Е.А. Яковлева – первый педагог чувашских девушек в СЧУШ.

27. Ученики И.Я.Яковлева – вдохновители и организаторы национального подъема чувашского народа.

28. И.Н.Ульянов – соратник и друг И.Я. Яковлева.

29. Портрет просветителя И.Я. Яковлева по описаниям его сына А.И. Яковлева.

30. Потомки И.Я. Яковлева.

31. Историческое значение просветительной деятельности И.Я.Яковлева.

## ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани..........3
1 сыпăк. И.Я. ЯКОВЛЕВĂН ЧУН ХАЛАЛĔ – ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ĂС–ХАКĂЛНЕ ТАТА КĂМĂЛ–СИПЕТНЕ АТАЛАНТАРАКАН ПИЛ ..........6
1.1. Халала çырнă вăхăт пирки..........6
1.2. Чун халалĕ çырма кам пулăшнă..........10
1.3. Халал сюжечĕ тата çичĕ пилĕн юрату философийĕ..........13
2 сыпăк. АСЛĂ ВĔРЕНТЕКЕНĔН ĂС–ТĂНĔПЕ ÇЫНЛĂХĔ ТУПТАННĂ ТАПХĂР..........23
2.1. Ачалăх..........23
2.2. Удел училищинче..........27
2.3. Уезд училищинче тата çĕр виçевçисен класĕ..........36
2.4. Гимназире..........45
2.5. Университетра..........50
3 сыпăк. ЧĂВАШ КУЛЬТУРИНЕ ЧĔРТСЕ ТĂРАТАКАН ÇĂЛ КУÇ....57
3.1. Шкул аталанăвĕн çул-йĕрĕ..........57
3.2. Чăваш наци шкулĕн никĕсĕ..........63
3.3. Чăваш хĕрĕсене вĕрентес ĕç..........73
3.4. Чăваш ачисен пирвайхи вĕрентекенĕсем..........80
4 сыпăк. И.Я. ЯКОВЛЕВ – ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПЕДАГОГĔ..91
4.1. Тĕнчери халăхсен ăс-тăн пуянлăхне хисеплесси..........91
4.2. И.Я. Яковлевăн педагогика идейисем, унăн халăха çутта кăлармалли вĕрентӳ системи..........96
4.3. Чăваш шкулĕсен инспекторĕн ĕçĕ-хĕлĕ..........110
5 сыпăк. И.Я.ЯКОВЛЕВ ЧĂВАШСЕН ÇĔНĔ ÇЫРУЛĂХНЕ ЙĔРКЕЛЕНИ..........118
5. 1. Алфавит – халăхсене тĕнпе ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен çывăхлатмалли хатĕр..........118
5.2. Чăваш çырулăхĕн çĕнĕ тапхăрĕ..........120
5.3. Сасăсен йышне тĕпчесе палăртни..........124
5.4. Çĕнĕ графика принципĕсем..........128
5.5. Çĕнĕ çырулăх орфографийĕ..........133
5.6. И.Я. Яковлева çырулăх тума пулăшакансем..........143
5.7. Çĕнĕ çырулăхăн пĕлтерĕшĕ..........148
6 сыпăк. ЧĂВАШ ЧĔЛХИ – СĔМ АВАЛХИ ПУРНĂÇ КĔНЕКИСЕН ЧĔЛХИ..........158
6.1. Библи чĕлхи тата авалхи куçарусем..........158
6.2. Вырăсла Библин кĕске историйĕ..........161
6.3. Христианла культура çутăлăхĕшĕн..........165
6.4. Патриархăн юлашки ĕмĕчĕсем..........182
7 сыпăк. ТĂВАН ХАЛĂХШĂН ТУНĂ ИСТОРИЛЛЕ ЧАПЛĂ ĔÇСЕМ..........203
7.1.Халăха çутта кăларас программа тĕрлĕ тапхăрта аталанни.......205
7.2. Чăваш халăхĕн наци çĕкленĕвĕн юхăмĕ вăй илни..........211
Зачет валли хатĕрленĕ ыйтусем..........226

*Учебное издание*

**Мукина Ираида Васильевна**

ЯКОВЛЕВОВЕДЕНИЕ
(уроки духовной культуры и нравственного воспитания)

Учебное пособие

Редактор *О.А. Хлебкова*
Компьютерная правка *В.А. Мукина*

Подписано в печать 02.11.2009. Формат 60x84/16.
Бумага газетная. Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Усл. печ. л. 12,42. Уч. изд. л. 11,7. Тираж 300 экз. Заказ № 668 .

Чувашский государственный университет
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15